*ВАРНАВА (Кедров)*

*митрополита асӑнса*

# Чӑваш Ен мана юратрӗ

Шупашкар, 2022



ШУПАШКАР ТАТА ЧĂВАШ

МИТРОПОЛИЧĔ

САВВАТИЙ

ПИЛЛЕНИПЕ

**УДК 253 ББК 86. 372. 24 - 3,8**

**Чăваш Ен мана юратрĕ.** – Шупашкар, 2022. – 216 с., ил.

*Кĕнекене Шупашкар тата Чăваш митрополитне Варнавăна (1931-2020 çç.) халалланă. Ăна Турă çĕр çинчи ятарлă ĕç валли суйласа илни мĕн ачаранах паллă пулнă. Кĕнеке унăн пурнăç çул-йĕрне сăнарласа кăтартать. Вăл священниксен тата чиркĕве çӳрекенсен владыкăпа çыхăннă асаилĕвĕсенчен, унăн пурнăçĕпе сăваплă ĕçĕсем çинчен каласа панинчен тăрать.*

*Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава – Вырăс Православи Чиркĕвĕн чи паллă иерархĕсенчен пĕри. Таса пурăнăçлă Сергий Радонежский кĕлтуса пурăннă вырăнта ăс пухса çирĕпленнĕскер, Свято-Троицки Сергиева Лаврăра 20 çул ытла Турра ĕçлесе пурăннăскер, вăл 43 çул Шупашкарпа Чăваш епархине ертсе пычĕ, ку тĕнчерен 2020 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче, 89 çулта куçса кайрĕ.*

*Чунсен кĕтӳçне мĕнпур халăх сума суса хисеплени, унăн ятне асрах тытни çак кĕнекене кăларас шухăш патне илсе çитерчĕ.*



*«...Чиркӳре тата Турăпа пĕрле яланах çăмăл! Турра юратăр, çывăх çыннăрсене юратăр, Евангели вулама тăрăшăр, Турă ӳкĕчĕсене пăхăнса пурăнăр, çынсене кӳрентересрен асăрханăр, пурне те юратма тăрăшăр, сире те пурте юратчăр. Вара сирĕн пĕтĕмпех лайăх пулĕ, Турă та сирĕнпе пулать, пулăшать, тĕрек парать, çăлать...»*

*ВАРНАВА, Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ*



*Шупашкар тата Чăваш*

*митрополичĕ*

*Савватий*

**Маншăн вăл чи хисеплĕ çын, чи ырă тĕслĕх пулнă**

Варнава владыкăпа эпĕ пĕчĕк чухне паллашнă. Ун чухне вăл тин кăна Чăваш Ене килнĕччĕ. Вăл килнĕ хыççăн эпĕ темиçе эрне алтаре кĕме хăраса пурăнтăм. Чиркĕве кайма та шикленеттĕмччĕ. Варнава владыка умĕн ĕçленĕ Вениамин архиепископ манпа питĕ ăшшăн калаçатчĕ. Пирĕн çыхăнăва вата аслашшĕпе пĕчĕк ача хутшăнăвĕсемпе танлаштарма пулатчĕ. Анчах вăл маншăн асатте пек çеç пулман, вăл манăн çывăх тус пулнă. Çакă питĕ савăнтаратчĕ. Эпĕ ăна питĕ хытă юрататтăмччĕ. Вăл вилнине чăтса ирттерме вара мана çав тери йывăр пулчĕ. Варнава владыка килсен аттепе анне мана каларĕç: «Вăл çамрăк, хитре, йăрăс пӳллĕ»,– терĕç. Эпĕ вара хурланса: «Ман асатте ăçта-ши? Кирлĕ мар мана çамрăк владыка»,– тесе шутлаттăм. Манăн атте, Геннадий пачăшкă, эпĕ хытă кулянни çинчен ăна каланă пулмалла. Пĕррехинче шăматкун каçхине атте мана алтаре илсе кĕчĕ. Эпĕ алтарĕн çурçĕр енчи пайĕнче Варнава владыкăран 4-5 метр аяккарах тăратăп. Ăна эпĕ пĕрремĕш хут куратăп, хам хăратăп, çав вăхăтрах интереслĕ те. Сасартăк вăл хăй вырăнĕнчен тăчĕ те ман пата утса пычĕ. Эпĕ пăлханса ӳкрĕм: ман пата владыка килет. Урăх владыка.

Аптранипе ним тума та пĕлместĕп. Вăл ман паталла çывхарсах пырать. Эпĕ: «Мĕн пулать ĕнтĕ халь?»– тесе шутлатăп. Вăл вара пĕшкĕнсе: «Сережа, эсĕ манран ан хăра, эпĕ сана Вениамин владыка пекех юратăп»,– терĕ. Малтан эпĕ çухалсах кайрăм, шак хытса тăтăм. Çак туйăм ĕмĕрлĕхех асăмра юлчĕ. Вăл Турă Амăшĕн Хусанта курăннă таса сăнне ряса кĕсйинчен кăларчĕ те мана пачĕ. Çав самантра  эпĕ чун уçăлса кайнине, ăшра темĕнле çутă та ăшă туйăм çуралнине сисрĕм. Паллах, пăлханнипе, кăмăл çĕкленнипе эпĕ ăна нимĕн те калаймарăм. Вăл вара ман çине пăхрĕ те, пуçне сулса кулса илчĕ, мана куçран тинкерчĕ. Ун пек йăл кулса пуçне сулма вăл анчах пĕлетчĕ.  Эп хам вырăна кайса тăтăм, служба мĕнле иртнине те астумастăп. Ура çинче тăнă пек мар, çĕр çийĕн вĕçнĕ пек туйăнчĕ мана. Киле кайсан пӳрте чупса кĕтĕм те, аннене калатăп: «Анне, анне, Варнава владыка мана Вениамин владыка пекех юрататăп терĕ!» Çакă вăл манăн ачалăхри Варнава владыкăпа паллашнипе çыхăннă чи асра юлмалли самант пулчĕ. Кайран эпир иксĕмĕр мĕнле паллашнине унпа темиçе хутчен те асилсе сӳтсе явнă.

Ача чухне тата яшлăх вăхăтĕнче эпĕ владыка мана пĕр-пĕр япăх енчен курасран питĕ хăраттăмччĕ. Лайăх пулма тăрăшаттăмччĕ. Чарусăр пулман эп, ытти арçын ачасенчен ытлах уйрăлса тăман, анчах лара-тăра пĕлмен. Ашкăнма тытăнсан атте е анне: «Эс халь мĕн хăтланнине владыка пĕлсен?»– тесессĕн тӳрех чарăнаттăмччĕ. Вăл маншăн чи хисеплĕ çын пулнă.

Эпĕ  çитĕнсе çитсен те унăн сумĕпе хисепĕ маншăн тĕксĕмленмерĕ. Манăн владыкăна службăсем иртерме питĕ пулăшас килетчĕ, анчах совет саманинче 18 çула çитиччен стихарь тăхăнма пиллеместчĕç. Пурте шар курма пултарнă. Çавăнпа та халĕ стихарь тăхăннă ачасене курсан çакă мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине вĕсене ăнлантарса паратăп.

Çар хĕсметĕнче тăнă чухне эпĕ мĕнле çул суйласа илесси пирки нумай шутларăм. Киле таврăнсан, мана стихарь тăхăнма сĕнчĕç, анчах эпĕ тăхтас терĕм, хамăн чун туртăмне ăнланса илесшĕн пултăм. Вара архиерей хорне йышăнма ыйтрăм. Малалла мĕнле çул-йĕрпе утассине пурнăç хăйех кăтартасса кĕтме пуçларăм. Анчах çак самант питĕ хăвăрт çитрĕ.

Манаха кĕрес шухăш патне çитме мана нумай вăхăт кирлĕ пулмарĕ. Вăт аттепе аннене тата владыкăна ÿкĕте кĕртме вара çăмăл пулмарĕ. Владыкăна питех ÿкĕтлемерĕм те, анчах вăл та тÿрех пиллемерĕ. Вăл пĕтĕмпех витĕр курса тăни çинчен ахальтен каламаççĕ çав. Тен, мана тĕрĕслесе пăхасшăн пулчĕ. Мĕншĕн тесен хăшне-пĕрне манаха кĕме вăл хăйех сĕнни çинчен эпĕ илтнĕ. Кунта вара эпĕ хам пырса ыйтрăм, вăл вара мана тăхтама хушрĕ. Çамрăк çыншăн икĕ эрне вăл питĕ нумай вăхăт пек туйăнать. Икĕ эрне иртсе кайрĕ, эпĕ урăх кĕтме пултарайманран владыка патне каллех çак ыйтупа пытăм: «Эсир мана шухăшлама хушрăр, эпĕ икĕ эрне шухăшларăм, унтанпа нимĕн те улшăнмарĕ». Çав самантран вăл ман хута кĕме пуçларĕ. Аттепе аннене вара нумай ÿкĕтлемелле пулчĕ. Владыкăна та калаттăмччĕ: «Тен, вĕсем пил пани кирлĕ мар, Эсир пиллени те çитет?». Вăл: «Çук, çук, Сережа, ун пек май килмест, аçупа аннÿ пиллĕхĕ кирлĕ»,– тетчĕ. Çакă чылай вăхăта тăсăлчĕ. Анне чи юлашкинчен парăнчĕ. Эсĕ кун пек çине тăнине нихăçан та курман, эппин, сана çакă чăннипех те питĕ кирлĕ, терĕ. 1989 çулхи августăн 20-мĕшĕнче владыка мана манаха кĕртрĕ.

Эпĕ суйласа илнĕ çул çине тăрасси унпа çыхăннăран хам çинчен каласа паратăп. Çакна эпĕ нихăçан та манмастăп. Хамăрăн хисеплĕ ватăна, Варнава владыкăна, сума суса хаклас туйăм манра питĕ пысăк. Хам игумен, архимандрит пулнă вăхăтра эпĕ унпа пĕрле прихутсене, Турăпа çыхăннă таса вырăнсене нумай çÿренĕ. Калаçнă май час-часах вăл ман пата пĕрремĕш хут утса пынине аса илеттĕмĕр. Вăл

парнеленĕ пĕчĕк турăша халĕ те упратăп, вăл эпĕ кĕлтăвакан вырăнта ытти турăшсемпе пĕрлех тăрать. Совет саманинче тимĕрпе эрешлесе туса кăларнăскер вăл. Эпĕ ăна пиллесе панă хаклă япала вырăнне усратăп.

Эпĕ владыкăна çынлăх енчен пĕлетĕп, тахçанах хăнăхнă, хăш-пĕри, тен, ун çинчен лайăхах пĕлмест те. Пирĕн хутшăнусем яланах питĕ кăмăллă пулнă. Çак ăшăлăх кайран та, эпĕ урăх çĕре, Бурятине ĕçлеме кайсан та, упранса юлчĕ. Мускавра архиерейсен соборĕсенче тата ытти канашлусенче тĕл пулаттăмăрччĕ. Вăл мана яланах калатчĕ: «Савватий владыка, эпир санпа пĕрре те вăрçăнман вĕт. Мĕнле туслă пурăннă эпир санпа». Чăнах та çавăн пекех пулнă. Паллах, вăл мана ăса кĕртсе ятланă самантсем те пулнă. Анчах мана тарăхса вăрçни, кӳрентерсе хур туни нихăçан та пулман. Эпĕ те вăл вĕрентсе каланисене яланах ăша хума тăрăшаттăмччĕ. Унăн пурнăçĕн юлашки çулĕсенче пирĕн хутшăнусене «ашшĕпе ывăлĕн» çыхăнăвĕпе танлаштарма пулатчĕ. Тус-юлташла çыхăну мар паллах, урăхларах каламалла. Анчах темĕнле питĕ ăшă хутшăну, пĕр-пĕрне ăнланни. Тен, манăн та ĕçлесе пынă май хăнăху килчĕ пулĕ. Хăш чухне пĕр-пĕр уявпа саламлама шăнкăравлаттăмччĕ те, сехет çуршар калаçаттăмăрччĕ. Вăл манран епархинче ĕçсем мĕнле пыни çинчен ыйтатчĕ, эп каласа параттăмччĕ. Вăл: «Мĕнле ăнланатăп сана. Санăн та, владыка, манăнни пекех-и вара?»– тетчĕ. Вара хăйне пăшăрхантаракан япаласем çинчен калама пуçлатчĕ. Ун чухне пирĕн хутшăнусем урăх шая куçнă ĕнтĕ.

Владыка ку тĕнчерен куçса кайни маншăн питĕ пысăк хуйхă пулчĕ. Çакна ниепле те йышăнас килмерĕ. Пĕлетĕр-и, пирĕншĕн, Чăваш Ен çыннисемшĕн, Варнава владыка тата Чăн тĕн пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пекех шутланнă. Вăл чăн-чăн улăп! Чăваш Енпе Варнава владыкăна пĕр-пĕринпе нихăçан татăлми çыхăну пĕрлештерсе тăнăн туйăнатчĕ. Сасартăк акă – эпир кашни çыннăн хăйне уйăрса панă вăхăчĕ

пуррине ăнланса илетпĕр. Эпир çитĕннĕ çынсем вĕт-ха, пурнăçра çухату чылай пулнă, нумай çывăх çын пирĕнтен уйрăлса кайнă. Кунта вара çын вилĕмне пĕрремĕш хут курнă пек туйăнчĕ. Тĕлĕнмелле...

Тата унпа сывпуллашма килейменни мана çав тери хурлантарчĕ. Вăл вăхăтра пандеми пулнăран пысăк хуласем хушшинчи çыхăнусене чарнăччĕ. Пирĕн патра самолетсем кашни кун вĕçместчĕç. Малтан Улан-Удэрен Мускава кунне темиçе рейс пулнă. Пандеми вăхăтĕнче хăшпĕр кунсенче пĕр рейс та пулман. Пĕчĕк самолетсем яратчĕç, анчах билетсем илме май çукчĕ, тата вĕсем питĕ хаклăччĕ. Çавăнпа та владыкăпа сывпуллашса ăна ĕмĕрлĕх пурнăçа ăсатнине эпĕ тӳрĕ эфирта, онлайн мелĕпе çеç сăнама пултартăм.

Çакăн пек пулнă пирĕн владыкăпа иксĕмĕрĕн пурнăç. Манăн ăна кунта пурăнакан халăхăн асĕнче ĕмĕрлĕхе хăварас килет. Мĕншĕн тесен çак çын маншăн кăна хаклă мар – вăл Чăваш Енри чăн тĕн историйĕн пĕр пысăк пайĕ пулса тăрать.

# «АКĂ ЭПĔ ТАТА МАНĂН АЧАСЕМ...»



Çак статьяна пуçлама калама çук йывăр. Владыка çинчен иртнĕ вăхăтра çырма тивнине ăнланса тăрсах пуçламалла. Анчах... Вăл пуça уснине ырламан пулĕччĕ. Вăл хăй яланах кайма ăнтăлнă çĕре – Турă патне кайнă-çке. Пирĕн владыка пек тӳрĕ пурăнăçлă çынсем хăйсем мĕншĕн пурăннине, вĕсен çулĕ ăçталла пулнине питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ, вĕсен çĕр çинчи çул-йĕрĕнче ăнсăртран нимĕн те пулса иртмест. Пирĕн вара, кĕçĕннисен, çылăхлисен, унăн тĕслĕхĕ çинче вĕренмелле те вĕренмелле.

Варнава митрополит пек çынсем, паллах, Турă шухăшласа хунипе çуралаççĕ. Унăн йăхĕ вырăссен пĕрремĕш патши Михаил Федорович Романов вăхăтĕнчех пуçланнă. Рязань çĕрĕнчи Высокое салинче Иоанн Богослов ячĕпе лартнă чиркĕвĕн престолĕ умĕнче пĕр-пĕрне ылмаштарса 300 çул Кедровсен йăхĕнчи священниксем тăнă. Варнава святитель Турра ĕçлесе пурăнни вара çак мухтавлă йăхăн тӳпи, унăн кăшăлĕ пулса тăнă.

Митрополитăн паспорт çинчи ячĕ – Владимир Викторович Кедров. Вăл çураличчен икĕ çул маларах священниксен йăхĕ владыкăн аслашшĕ – Иоанн протоиерей çинче вăхăтлăха татăлнă. Ăна арестлесен пĕтĕм ял кăшкăрса, макăрса пачăшкăна илсе каякан çуна хыççăн

чупнӑ. Влаҫра тӑракансем ӑна священник санне пӑрахса тӗнрен тунма хушнӑ, Иоанн атте паллах килӗшмен, лагерьте асапланса вилнӗ. Чиркӳре унӑн ывӑлӗн – Варнава владыкӑн ашшӗн Виктор Кедровӑн ӗҫлеме пуҫламалла пулнӑ. Хӑйне арестличчен вӑл диакона тухма хатӗрленнӗ.

Тӗншӗн ҫирӗп тӑрса, уншӑн асап тӳсекенсенчен тӳрӗ пурӑнӑҫлӑ ҫын ҫуралать. Шӑпах ҫапла пулса тухнӑ та. Евдокия Петровна Кедрова алӑри виҫӗ пӗчӗк ачапа тӑрса юлнӑ, тӑваттӑмӗш ачипе йывӑр ҫын пулнӑ. Аслӑ шӑматкун ӑна тытса кайма килнӗ, халӑх тӑшманӗн ҫемйине Казахстан ҫеҫенхирне пӗтме ярасшӑн пулнӑ. Ҫав вӑхӑтра хӗрарӑм ҫӑмӑлланма пуҫланӑ, амӑшӗпе ачисене ҫакӑ ҫеҫ ҫӑлса хӑварнӑ, вӗсене килтех хӑварнӑ. Мӑнкун каҫӗ Евдокия кӗҫӗн ывӑлне ҫуратнӑ, ӑна Владимир ятлӑ хунӑ.

Ачалӑхӗ йывӑр пулнӑ унӑн. Ҫемье сивӗ мунчара пурӑннӑ, хушӑксенчен ҫил вӗрнӗ, юр кӗнӗ, тӑрринчен шыв аннӑ. Ҫумӑр ҫунӑ чухне ачасем алӑк патне кайса тӑнӑ е ырӑн ҫине пуҫтарӑнса ларнӑ, ҫапла майпа килти чи типӗ вырӑнта пытанма тӑрӑшнӑ. Хӗлле хутса ӑшӑтма вутӑ пулман, пӳртре шыв та шӑнса ларнӑ. Чи хаяр сивӗсенче вара витре ҫурӑлса каясран ӑна сакайне антарса лартнӑ. Амӑшне ниҫта та ӗҫлеме илмен. Хӗсӗрленине тӳсекен ҫемье чухӑнлӑха кӗрсе ӳкнӗ, ҫиме нимӗн те пулманнипе пулас владыкӑн ыйткаласа ҫӳреме тивнӗ. Шкулта ытти ачасем унран йӗкӗлтесе кулнӑ, кӳрентернӗ. Пулас святитель куҫӗ умӗнче унӑн мӑн аслашшӗсем кӗлӗсем ирттернӗ чиркӗве аркатнӑ. Вӗсен ҫурчӗ чиркӳ ҫумӗнчех пулнӑран, вӑл чансене илсе пӑрахнине, иконостаса салатнине, чиркӳ маччинче ылтӑн шыранине, турӑшсене, пачӑшкӑ тумӗсене ҫунтарнине чӳречерен курса тӑнӑ.

Пурнӑҫри тем тӗрлӗ хӗн-асапа Турра ӗненнипе ҫеҫ чӑтса ирттерме май пулнӑ. Чиркӳпе ҫыхӑннӑ мӗнпур япалана ҫемьерен туртса илнӗ. Темиҫе пӗчӗк турӑш анчах упранса юлнӑ... Кӗлтума ачисене амӑшӗ вӗрентнӗ. Хӑшпӗр кӗлле

Володя пăхмасăрах пĕлнĕ, хăй сăмахĕсемпе те кĕлтунă. Пĕррехинче вăл усал чăн-чăнах пуррине хăй çинче туйса илнĕ. Вăл килте пĕчченех кĕлтунă вăхăтра мачча çинче асар-писер шăв-шав çĕкленнĕ, такам сиксе тапăртатнă, çихĕрнĕ, маччаран çӳп-çап тăкăнма пуçланă. Володя кĕлтума чарăнсанах пуç çиййĕнчи урăм-сурăм айкашу лăпланнă...

Таврара Турă Амăшĕн «Всех скорбящих Радость» сăнĕ ячĕпе Рязаньте лартнă пĕртен-пĕр чиркӳ пулнă. Унта çитме 25 çухрăм утнă. Ку вăл масар çинчи чиркӳ пулнă. Çуллахи вăхăтра унтах çĕр каçнă. Карта тытнă вилтăпри тупнă та, арçын ача тĕмеске çине выртса çывăрнă, амăшĕ ăна выçă йытăсем тапăнасран сыхланă. Ирпе-ирех Турă Юнне сыпма кайнă.

Унăн ачалăх çулĕсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче иртнĕ. Вăл окопсем, танксене чаракан канавсем чавнă. Çĕр çине бомбăсем ӳкни, фашистсен тискерлĕхĕ – пĕтĕмпех ун куçĕ умĕнче пулса иртнĕ. Тата вăл кăкăр çинчи пĕчĕкçĕ йывăç хĕрес вилĕмрен çăлса хăварнине курнă. Çавăн пекех халăхра ĕненӳ çирĕпленсе пынине асăрханă. Пачăшкă кунне темиçе çĕр çынна шыва кĕртсе ят хунине, ĕненекенсем Мăнкун кунĕ куличсене кĕлтуса тасатма чиркĕве йышлăн пынине курнă. Чиркӳре çынсем шăнăçманнипе ирхи кĕлле, йывăç çине турăш вырнаçтарса, вилтăприсем çинчех ирттернĕ... Кăшт çитĕнсен вăл алтарьте литургие купи-купипе çырса панă асăнтармалли хутсене вуласа священнике пулăшнă.

Пĕчĕк чухне амăшĕ ăна Рязаньти телейлĕ суккăр Пелагея патне илсе кайнă. Пелагея арçын ачан пуласлăхĕ чиркӳпе çыхăннине тӳрех туйса илнĕ, Евдокийăна ывăлне уйрăмах упрама хытарса каланă. Чун куçĕпе витĕр курса тăракан суккăр хĕрарăм  пулас архиерейшăн ăс парса вĕрентекен пулса тăнă, ун патне вăл кайран час-часах кайса çӳренĕ. Пĕррехинче Пелагея ăна хăйĕн хăнисене пиллеме ыйтнă, çапла майпа унăн пулас анлă çул-йĕрне кăтарса панă.

Çав вăхăтра чиркӳре нимӗнле пĕчĕк сан та илмен именчĕклĕ каччă вăл хушнине пурнăçланă.

Шкул пĕтернĕ хыççăн Владимир Рязань облаçĕнчи Бахмачеево салинчи чиркĕвĕн пономарĕ пулса тăнă. Унта унăн тăванĕ, тин çеç лагерьтен таврăннă Петр Смирнов протоиерей ĕçленĕ. Пĕр ялтан тепĕр яла 8 çухрăм каймалла пулнă. Владимир службăна кирек епле çанталăкра та çуранах çӳренĕ. Пĕррехинче хĕллехи тĕттĕм ирхине юр хӳсе лартнă çулпа пынă чухне вăл икĕ кашкăр курнă. Вĕсем, сукмакăн икĕ енĕпе хурал тăнă евĕр, чиркĕве службăна каякан йĕкĕте ирттерсе янă та хăйсен çулĕпе чуптарнă...

Кĕçех ăна Рязань архиепископĕ Николай (Чуфаровский) хăй патне иподиакона илнĕ. Рязаньте, Бориспа Глеб ячĕпе лартнă соборта, Варнава митрополитăн манах пурнăçĕ пуçланнă.

Çак соборта пулса иртнине вăл ĕмĕрĕпе астуса пурăннă.  Ку вăл Аслă кĕçнерникун, вуникĕ Евангели вуланă хыççăн, Ырă хыпар пĕлтернĕ кун умĕн пулса иртнĕ (çав çул вăл шăпах Аслă эрнекуна килнĕ). Владимир Кедров ун чухне 19 çул та тултарман. Чиркӳ картишĕнчен ăна пакунлă çынсем тытса кайнă. Милицинче ăна чиркĕве çӳреме пăрахатăп тесе калакан хут çине алă пусма хушнă. Итлеттерес тесе икĕ милиционер ăна вăрахчен хĕненĕ, пĕвертен çапнă, анчах та вăл ыратнине пачах та туйман. Унăн чунĕ савăнăçпа тулнă, мĕншĕн тесен çакă шăпах Çăлаканăмăр пĕтĕм тĕнче çылăхĕшĕн асапланнине аса илнĕ  вăхăтра пулса иртнĕ. Турă тӳснĕ асапсем ăна хăйне хĕн кăтартнине чăтса ирттерме вăй-хăват панă.

Ир пулсан вара кабинетри çынсен умне кăвак çӳçлĕ шурă тумтир тăхăннă ватă старик тухса тăнă. Вăл милиционерсене çамрăка пĕр тăхтаса тăмасăр ирĕке кăларма хушнă. Хăй вара куçран çухалнă. Владимира кăларса янă, вăл вара чиркĕве Туррăн Ӳчĕпе Юнне ăша илме кайнă.

Çак пулăм хыççăн пилĕк çул иртсен Турă хăй суйласа

илнӗ çыннине тӗнче пурнăçӗнчен уйăрнă: ăна валли Троице-Сергиева Лаврăна кайма çул уçăлнă. Амăшӗн пилне илме кăштах чееленме тивнӗ. Владимир ăна авланма шутлани çинчен каланă, амăшӗ тарăхса кайсан вара мăнастире кайма хатӗрленни пирки хыпарланă. Амăшӗ ывăлне çав вăхăтрах, ӗç-пуç мӗнле килсе тухассине пӗлмесӗрех, пил панă.

1955 çулхи декабрӗн 10-мӗшӗнче Лавра наместникӗ Пимен (Извеков) архимандрит, каярахпа Патриарх, ăна Варнава Апостол ячӗпе манаха кӗртнӗ. Çак ят «Савăнтаракан ывăл» тенине пӗлтерет. Мăнастирте вăл 21 çул пурăннă. Кӗлӗсене чи малтан çитсе тăнă, пӗр служба та сиктермен. Унта вăл тӗрлӗ ӗç тунă, малтан посохпа тăнă, ризничие пулăшнă, кайран нумай çул Лавра наместникӗн тивӗçӗсене пурнăçланă.

Çирӗм ултă çулта чухне вăл Мускавпа Коломна митрополичӗн Макарий святителӗн çӗрмен ӳтне кăларнă çӗре хутшăннă.

Лавра наместникӗнчен вăл митра тума вӗреннӗ. Вӗсенчен пӗрне Пӗрремӗш Алексий (Симанский) Патриарх валли Святейший хăй ыйтнипе çӗленӗ, вăл Варнава манаха питӗ хисепленӗ.

Пӗр каçра «Чăн Таса Турă Амăшӗ преподобнăй Сергие курăннин службине» çырнă. Çак текстпа ку уява паллă тунă чухне халӗ те усă кураççӗ. Хăй çамрăк чухне вăл Лаврăра Ливан Тăвӗсен митрополичӗпе Илия Карампа пӗрле кӗлтуни те  пулнă, унăн аллинчен архиерейсене паракан паллăна – панагийăна – илнӗ. Çак митрополит 1941 çулта СССР Тăван çӗршывăн Аслă вăрçинче çӗнтерессине малтанах каласа хунă. Варнава архимандрит патне ятарласа, унпа паллашас тесе, Серафим (Тяпочкин) пынă.  Серафим атте вăл шăпах хăватлă ӗçсем тăвакан Николай святойăн турăшӗпе иртӗнсе ташланăран хускалмасăр хытса тăнă Зоя аллинчен турăша каялла илекенни пулнă. Владыка Одессăри святой Кукшăна та лайăх пӗлнӗ. Святой Афанасий (Сахаров) архиерей хушса

хăварнипе ăна тирпейлесе пытарма хатĕрленĕ. Ĕненӳ хăватне çирĕплетес тесе Афона Паисий Святогорец патне кайса çӳренĕ. Иоанн Крестьянкин аттепе нумай тĕл пулса калаçнă, вăл çакăн çинчен аса илни Тихон (Шевкунов) митрополитăн «Несвятые святые» кĕнекине те кĕнĕ. Ăна Крым çĕрĕнчи Лука (Войно-Ясенецкий) святительпе пĕрле служба ирттерме те тӳр килнĕ.

1970 çулта Варнава архимандрит Лаврăн благочиннăйĕ пулса тăнă. Тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхе малти вырăна хураканскер, таса чунлăскер, вăл чиркӳ пурнăçне хутшăнакан влаç тытăмĕнчи тӳресене майлă шăлман. Турра хирĕçле контролерсем иноксене Лаврăран кăларса яма хушнине уççăн хирĕçленĕ, хăрушсăрлăх тытăмĕнче ĕçлекенсемпе пĕр çулпа утма килĕшмен. Паллах, çакăн пек благочиннăй влаçрисене тивĕçтермен. Лаврăна çĕнĕ наместник килсен Варнава архимандрита картиш шăлса пурăнма хушнă. Архиерей мантине тăхăниччен вăл Лаврăн тĕп соборĕ умĕнчи лаптăка çур çул пĕр ӳпкевсĕр тасатса тăнă.

Пимен Патриарх унăн аллине архиерей туйине тыттариччен Варнава владыкăн шкулĕ çапларах пулнă. Архиерей ĕçĕпе çыхăннă пуласлăх пирки çамрăк инока пирвайхи хут 1956 çултах, хăй манаха кĕнĕ çулхине, вăрттăн паллă пулнă. Шăпах çавăн чухне Лаврăра Шупашкарăн икĕ пулас архиерейĕ – Вениамин епископ тата Варнава манах – пĕртен-пĕр хут тĕл пулнă. 1973-1976 çулсенче Шупашкарпа Чăваш епархийĕн пуçлăхĕ пулнă Вениамин (Новицкий) владыка çав çул, 12 çул лагерьте ларнă хыççăн, тин çеç ирĕке тухнă пулнă. Яланхиллех кĕлле пуринчен малтан килнĕскекр, чиркӳре Варнава инок тĕрме сăнĕ çапнă çынна асăрханă. Вĕсем кĕлĕ вăхăтĕнче юнашар тăнă, çавăнпа та ăна лайăх сăнаса астуса юлма май пулнă. Иккĕмĕш хут вĕсем çав кунах трапезнăйĕнче тĕл пулаççĕ – ун чухне вара Вениамин владыка епископ тумĕпе пулнă. Çапла Шупашкарпа Чăваш кафедринче Турă ирĕкĕпе кашни хăй

вăхăтĕнче ĕçлесе пурăнас икĕ архиерейăн çулĕсем пĕр самантлăха пĕрлешнĕ.

Тепĕр паллă вара каярах килнĕ. Хăй ăс парса вĕрентсе пыракан çамрăк çын Варнава атте валли Шупашкарти Введени соборĕн сăнӳкерчĕкне илсе килнĕ. «Тен, хăçан та пулин кирлĕ пулĕ»,– тенĕ вăл ăна панă чухне...

Виççĕмĕш паллă та – чи пĕлтерĕшли – пулнă ун пурнăçĕнче. 1976 çулта Шупашкарта, Пукрав кунĕнче, Вениамин владыка ку тĕнчерен куçса кайнă. Çакна пĕлмен Варнава архимандрит çĕрле малашлăх çинчен пĕлтерекен тĕлĕк курнă. Çак тĕлĕкре вăл Таса Синод ларăвне хутшăннă, унта хăйне Шупашкар архиерейне лартни çинчен илтнĕ...

Архиерее ăна 1976 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче Лаврăра кĕртнĕ. Алă хураканĕсем Мускав тата Пĕтĕм Русь Патриархĕ Пимен (Извеков), Крутицăпа Коломна митрополичĕ Серафим (Никитин), Волоколамск архиепископĕ Питирим (Нечаев), Рязаньпе Касимовск епископĕ Симон (Новиков), Орелпа Брянск епископĕ Глеб (Смирнов) пулнă. Варнава епископа архиерей туйине панă чухне Патриарх ăна çапла вĕрентсе каланă: «Турă халăхне юрат, ӳкĕтлесе çылăх каçарттарса, сăмахпа лăплантарса сипле, чирлекене, хур тӳсекене, ĕмĕте çухатнине хӳтĕле, вара Ырă Турă сана пулăшĕ». Çак хушупа кайнă та ĕнтĕ владыка хăйĕн чун кĕтĕвĕ патне.

Варнава митрополит пурĕ виçĕ вырăнта çеç: Рязань çĕрĕнче, Троице-Сергиева Лаврăра тата Чăваш Енре пурăннă. Çур ĕмĕрне яхăн вăл Шупашкарта ирттернĕ. Шăпах çак чи пысăк пĕлтерĕшлĕ, чи яваплă тапхăрта вăл пайта шырамасăр, хăйне шеллемесĕр вуншар çул Турра, чиркĕве, çынсене парăнса ĕçлесе пурăннă.

1976 çулта Варнава владыка 45-ре пулнă. Вăл, вырăс çынни, тĕпрен илсен чăвашла – уншăн ют чĕлхепе – калаçакан халăх патне килнĕ. Вăтăр пилĕк прихутран пурте

тенĕ пекех ялти чиркӳсенче. Введени соборĕн çуррине музей залĕсем йышăннă. Патшалăх тытăмĕнче ĕçлекенсемпе пĕр чĕлхе тупма çăмăл мар. Акă мĕн кĕтнĕ Варнава епископа Чăваш çĕрĕнче. Пĕчченех, кунта никама та палламанскер, вăл пĕр Турăра çеç шанчăклă тĕрек курнă. Малтанхи кунсенчех чиркӳ йĕркине çирĕп тытса, парти ертӳçисем хушнипе пурăнма килĕшменнине кăтартса панă.

Чăваш епархийĕшĕн Варнава епископ тĕн енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйпа пĕрремĕш хут тĕл пулса калаçни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса юлнă. Архиерее çакăн пек хушса каланă: чиркӳсем тăрăх çӳремелле мар, парти тытăмĕнче ĕçлекенсем ирĕк памасăр священнике кĕртме тата тĕн семинарине вĕренме яма юрамасть. Уполномоченнăй патне чиркӳпе çыхăнман тумпа çеç пымалла. Чи малтанах вара епархи секретарьне тата Введени соборĕн настоятельне ĕçрен хăтарса вĕсен вырăнне влаçрисем сĕннĕ çынсене лартмалла. Çĕнĕ архиерей хушса каланине хирĕç пĕр шутласа тăмасăр çапла хуравланă: епархи пуçлăхĕ пулнă май, унăн прихутсене кайса çӳремеллех. Кама ĕçрен хăтарас, кама вырнаçтарас, вĕренме ярас ыйтусене вăл хăй татса парĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем пурте унăн ĕçченĕсем, хальхисем тата пулассисем. Чиркӳпе çыхăнман тумтир унăн тахçантанпах çук, çавăнпа та архиерей патне уполномоченнăй хăй килсе çӳретĕр. Калаçăва вăл çак сăмахсемпе вĕçленĕ: «Халех эпĕ Мускава, Синода каятăп та, хама архиерей ĕçĕнчен хăтарма ыйтатăп. Кунта епархи пуçлăхĕ мансăрах пур, пĕтĕм ĕçе уполномоченнăй туса пырать». Тепĕр виçĕ кунтан влаç тытăмĕнчисемпе килĕшӳ патне пырса тухнă. Владыкăна: «Эпир Сирĕнпе лайăх ĕçлĕпĕр. Эсир хăвăр çыннăрсене сутмастăр, апла пулсан Эсир – лайăх çын!»– тенĕ.

Паллах, çакă мĕнпур йывăрлăх хыçа юлнине пĕлтермен. Çав вăхăтра тĕне хирĕç питĕ вирлĕ кĕрешнĕ. Çапах Турра хирĕçле влаç тем пек тăрăшсан та, атеистсем

халăха Чăваш çĕрĕнче «чи юлашки пупа» ниепле те кăтартайман. Мĕншĕн тесен Чиркӳ пуçĕнче çирĕп ĕненӳллĕ, вăйлă характерлă, каялла чакман, чăн-чăн кĕлтăвакан çын тăнă. Çĕрлесерен вăл Турра аслăлакан проповедьсем çырнă, вĕсене хăйех машинкăпа çапнă. Ирпе ирех вара Введени соборне службăна васканă е республика тăрăх çула тухса кайнă. Çынсем хăйсен архиерейне кĕтнĕ. Вăл вара вĕсем патне час-часах начар çулпа: çуран, лавпа, грузовикпе е тракторпа пырса çитнĕ. Вăл ирттерекен службăсене пухăннă халăха вара пушар машинисемпе хăваласа салатса яни те пулнă...

Ĕненĕве упраса хăварнă е чăн тĕнпе пурăнма пуçланă нумай-нумай çын ун хыççăн Турă патне пынă. Çак йышра шурă тутăрлă кинемисем çеç мар, пулас священниксемпе архиерейсем, чиркӳ ĕçченĕсен ашшĕ-амăшĕ пулас çынсем, вăл вăхăтра хăйсен мĕн тери пысăк тивĕçе пурнăçлама тивессе пĕлме пултарайман вырсарни шкулĕсемпе православи класĕсен пулас вĕрентекенĕсем, каярахпа чиркӳ хорĕнче юрлакан, чиркӳ тăвакан çынсем пулнă.

Чăн тĕншĕн йывăр çав çулсенче пирĕн çĕршывра аркатма ĕлкĕреймен чиркӳсене хупма пуçланă. Чăвашра вара пĕр чиркӳ те хупăнман. Ку çеç те мар, вăл епархие ертсе пыма пуçланăранпа икĕ çул çитсен архиерей тăрăшнипе чиркӳ уçăлнă. Пăрачкав районĕнчи Козловка салинче Турă курăннă ятпа лартнă чиркӳре, вăл 17 çул хупăнса тăнă хыççăн, 1978 çулта çĕнĕрен кĕлĕсем ирттерме пуçланă.

1988 çулта пирĕн çĕршывра Русь православи тĕнне йышăннăранпа 1000 çул çитнине савăнăçлă паллă турĕç. Халăх ĕненӳ патне таврăннă самана пуçланчĕ. Вăхăта сая ямасăр, владыка чиркӳсене юсаса çĕнетес тата çĕнĕрен хăпартас ĕçе тытăннă. Ун çумĕнче шанчăклă та пултаруллă пулăшакансем пулнине палăртмалла. Вĕсенчен пĕри – Введени соборĕн настоятелĕ Илия Карлинов протоиерей – Çĕнĕ Шупашкарта чиркӳ тума сĕннĕ. Совет саманинче,

влаçра атеистсем тăнă вăхăтра та сăвапшăн тăрăшакан икĕ хастаршăн чăрмав пулман. Турă ячĕпе тата чĕрери ĕненӳ çулăмĕпе вĕсем хăйсен ĕçне пуçланă. Пĕрле вырăн шыранă. Темиçе çĕрте пулнă хыççăн юлашкинчен владыка пĕр лаптăка суйласа илнĕ. Кунта чиркӳ ӳссе ларсан вăл хула варринчи чи илемлĕ вырăн пулса тăрасси пирки иккĕленӳ пулман. Çакă вăл Чăваш Республикин историйĕнче наци автономине йĕркеленĕренпе 70 çул иртнĕ хыççăн туса лартнă пĕрремĕш чиркӳ пулнă. Ăна Русе шыва кĕртекен, апостолсемпе тан святой Владимир аслă князь ячĕпе лартнă. Çавăн пекех Владимир вăл владыкăн хӳтĕлевçи шутланать, мĕншĕн тесен çуралсан ăна шăпах çак ята панă.

Çирĕммĕш ĕмĕрти 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çĕршыв ĕненӳсĕр пурăннă тĕттĕмлĕхрен тухма пуçланă. Патшалăх Чиркĕве çичĕ теçетке çул хушшинче упранса юлнă кĕлĕ çурчĕсене тавăрса пама тытăннă. Чи малтанах Чăваш епархине Шупашкарти Свято-Троицки мăнастир çурчĕсем каялла куçнă. Совет тапхăрĕнче тустарса пĕтернĕ чиркӳсемпе манахсен келйисенче пукане театрĕ, студентсен общежитийĕ, хваттерсем, кĕнеке упрамалли пӳлĕмсем, сарайсем, гаражсем, водолазсен станцийĕ вырнаçнă пулнă. Тĕрĕссипе мăнастире çĕнĕрен тума тивнĕ. Унта вара миллионшар тенкĕ кирлĕ пулнă. Паллах, епархин ун чухлĕ укçа пулман. Раççей Президенчĕ Борис Ельцин Шупашкара килсен Варнава владыка унран пулăшу ыйтнă.

Епархи пуçлăхне пысăк хăнана кĕтсе илме чĕннĕ. Чей ĕçме вăхăт çитсен, никам та Президентпа юнашар ларма хăю çитереймен. Борис Ельцин вара архиерее: «Владыка, кунта пурте манран хăраççĕ, тен, Эсир мана тиркеместĕр, юнашар ларатăр?»– тенĕ. Сĕтел хушшинче кăмăллă калаçу çыхăнса кайнă, ун хыççăн вара владыка Президент патне хăйне пăшăрхантаркан ыйтупа пыма шутланă. Тĕлпулу вĕçленсен архиерей Борис Ельцина ăсатма кайнă. Аэропортра вăл мăнастире çĕнĕрен хута яма пулăшу кирлине каланă, çакăн

çинчен ыйтса çырнă хут панă. Темиçе кунран епархи шучĕ çине вăл вăхăтшăн питĕ нумай укçа куçнă.

1996 çулта Шупашкар Иккĕмĕш Алексий Патриарха кĕтсе илнĕ. Историшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çак пулăм тĕлне Чăваш Енĕн тĕп хули калама çук улшăнса илемленнĕ. Хулан кивĕ вырăнĕсенче юсаса çĕнĕрен хута янă чиркӳсем мăнаçлăн курăнса ларнă. Вĕсем патне Чиркӳ патне хывнă Çул тăсăлнă. Çав çулпа Патриарх хыççăн пин-пин çын утса пынă. Ĕлĕкхи вăхăтсенчи пекех Атăл çийĕн каллех чан сасси сарăлнă...

Патриархпа юнашар вара, хăйне чăн-чăн манах пек сăпайлă тытса, Варнава владыка утса пынă. Шăпах вăл тăрăшнипе ĕнтĕ çак вырăн хăйĕн илемĕпе, мăнаçлăхĕпе пурне те тыткăнланă. Пурте чаплă хăнана кĕтсе илме хатĕрленсе вĕткеленнĕ вăхăтра ăслă архиерей пĕтĕмпех шутласа хунă.

Вăл тунă икĕ ĕçе ун чухне никамах та сиссе юлман. Анчах вĕсем чиркӳшĕн те, ĕненекенсемшĕн те çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ, хăват паракан ĕçсем пулнă. Музейран Введени соборне хăйĕн малтанхи вырăнне Турă Амăшĕн «Владимирская» таса сăнĕ таврăннă. Вăл Шупашкарăн чи хаклă сăвалă япали шутланать, унпа Хусан архиепископĕ Гурий святой архиерей 16-мĕш ĕмĕрте крепость-хула никĕслеме пилленĕ. Хула çыннисемшĕн çак турăш яланах чуна çывăх пулнă. Малтан вăл йывăç чиркӳре упраннă. Çав чиркӳ çуннă чухне пĕртен-пĕр çак таса сăна анчах çулăмран çăлса хăварнă. Хулара кашни çулах ăна çĕклесе утасси йăлана кĕнĕ пулнă. XX ĕмĕрте турăша музея илсе кайнă. Варнава архиепископ таса сăна хăйĕн вырăнне тавăрма шутланă. Музей ĕçченĕсене çакă пысăк хăна килессипе çыхăннă тесе ăнлантарнă... Патриарх кайнă хыççăн турăша каялла тавăрма вăхăт çитсен архиерей музей ĕçченĕсене: «Манăн ĕненекенсене мĕн калас, таса сăнсене чиркӳрен салатнине мĕнле ăнлантарас?»– тенĕ. Музей ĕçченĕсен

турăша Шупашкарпа Чăваш епархине яланлăха пама ирĕк ыйтса Мускава çырупа тухма тивнĕ. Халĕ вăл хăйĕн вырăнĕнче, республикăри тĕп чиркĕвĕн иконастасĕнче тăрать.

Владыка халăх хисеплекен тата тепĕр турăша – хăватсем тăвакан Николай аттен таса сăнне – Свято-Троицки мăнастире тавăрса панă. Вăл нумай çул Мускавра реставрацире пулнă пек шутланнă. Тĕрĕссипе вара мастерской путвалĕнче тăнă. Ĕненекенсемшĕн çак турăш мĕн тери хаклă пулнине пĕлнĕрен, владыка, чаплă хăна килессипе сăлтавласа, çак таса сăна мăнастире тавăрма пултарнă...

Çакăн хыççăн Святейший Патриархсем Чăваш Ене тата икĕ хутчен килсе кайнă. 2001 çулта – Иккĕмĕш Алексий Патриарх, 2015 çулта – Кирилл Патриарх. Çак пиллĕхлĕ кунсем тĕлне Варнава владыка яланах çĕнĕ чиркӳсен никĕсĕсене хывма хатĕрленсе тăнă. Çапла майпа Чăваш Енĕн кашни районĕнче пиншер ĕненекене пĕрлештерекен чиркӳсем çĕкленнĕ.

Чăваш епархийĕнче 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче пĕрин хыççăн тепри чиркӳсем ӳссе ларнă. Владыка ĕçленĕ тăватă теçетке çул хушшинче прихутсен шучĕ сакăр хут ӳснĕ. Ялсемпе хуласенче, больницăсенче, тĕрмесенче кĕлĕ çурчĕсем уçăлнă. Чиркӳсем тăвасси халĕ те пĕр кун та чарăнмасть.

Çичĕ мăнастир çĕнĕрен çĕкленчĕ. Улатăрти арçынсен Свято-Троицки тата хĕрарăмсен Николаевски мăнастирĕсене, хĕрарăмсен Çĕрпӳри мăнастирне паломниксем йышлăн çӳреме пуçларĕç. Шупашкарти арçынсен Свято-Троицки тата хĕрарăмсен Спасо-Преображенски мăнастирсем Турра юрăхлă ĕçсемпе пурăнакансене пĕрлештерсе тăракан чăн-чăн центрсем пулса тăчĕç, Каршлăхра Александр Невский ячĕпе арçынсен мăнастирне тата Шурутра хĕрарăмсен Иверски мăнастирне çĕнĕрен туса хута ячĕç.

Çĕнĕрен хăпартнă тата юсаса çĕнетнĕ чиркӳсенче ĕçлеме çĕршер священник кирлĕ пулчĕ. Çав вăхăт тĕлне владыка хыççăн утнă Турра ĕненекен çамрăксем те ӳссе çитĕннĕ ĕнтĕ. Вăл ăс панипе нумайăшĕ хăйсен пурнăçĕнче Турра ĕçлесе пурăнас çула суйласа илнĕ. Варнава владыка Шупашкарта тĕн училищи уçнă. Абитуриентсене хăй экзамен тыттарнă, вĕренсе тухакансене те хăйех çул кăтартнă. Епархи чиркĕвĕсенче ĕçлекенсене пурне те тенĕ пекех вăл хăй алă хурса священнике кĕртнĕ. Тивлетлĕ архиерей патне çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен Турăшăн ĕçлеме ĕмĕтленекен священниксем килнĕ. Çăлăнăç шыракансене пĕр ывăнмасăр вĕрентсе, хăй тавра вăл кĕлтуса пурăнакансен пысăк йышне пухнă.

2012 çулта вăл Канашра тата Улатăрта çĕнĕ епархисем йĕркелеме Таса Синодра ыйту тăратнă. Çапла вара Чăваш митрополийĕ туса хунă, Варнава митрополит унăн пуçлăхĕ пулса тăнă.

Вăл ертсе пынипе тăватă архиерей çитĕннĕ: Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Савватий, Канаш тата Тăвай епископĕ Стефан, Улатăр тата Пăрачкав епископĕ Феодор, Череповец тата Белозерск епископĕ Игнатий. Варнава митрополитран вĕсем çирĕп ĕненсе кĕлтума, хăйсен кĕтĕвĕсемшĕн ăшă кăмăлпа тăрăшма, çивĕч ăспа ертсе пыма вĕреннĕ.

Чăваш халăхĕн Варнава митрополита вăл çине тăнипе, кĕлтунипе Библие чăвашла куçарнишĕн тав тумалла. Çынсене çакăн пек меллĕ пулсан, чăвашла вулаччăр, тесе шутланă владыка. Ку ыйтупа вăл Патриархине темиçе хутчен те тухнă, анчах ăнлану кĕтсе илейменнипе çак кăткăс ыйтăва çĕнĕрен те çĕнĕрен çĕкленĕ. Çак куçарăва чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлев тума пуçланă. Ун хыççăн чăваш халăхĕ Таса Çырăва тăван чĕлхепе вулама тытăниччен пĕр ĕмĕр иртнĕ. Çак сăваплă ĕçе вырăс архиерейĕ вăхăтĕнче вĕçне çитерчĕç.

Владыка пуринчен ытла ахаль çынсемшĕн, чиркĕве çӳрекенсемшĕн, ĕненекенсемшĕн те, ĕненменнисемшĕн те, тĕрĕс çулпа утакансемшĕн те, çухалса кайнисемшĕн те пăшăрханнă, вĕсене пурне те чунтан юратнă. Вăл пĕр йăларан нихăçан та пăрăнманни яланах асра. Апат кĕлли хыççăн вăл архиерей амвонĕ çине чиркĕве килнисене пил пама тухатчĕ. Унта темиçе çĕр çын таран та пулма пултарнă. Анчах чирлĕ, ывăннă, тата выçă ватă чи юлашки çын ун патне пыричченех чăтнă. Кашниех, чи хаклă таса япала пек, вăл пиллесе панă хут çинчи турăша хăй çумне тытнă. Савăнтаракан Ывăл никама та чун тĕрекĕсĕр хăварма пултарайман.

Архипастырĕн чĕре ăшши пурин валли те çитнĕ. Ун патне кирек кам та пыма пултарнă. Епархи управленийĕн çуртĕнче унăн ĕç пӳлĕмĕ умĕнче архимандритсемпе министрсене, ялти пачăшкăсемпе депутатсене, туяллă кинемисене, çамрăк çынсене курма тӳр килетчĕ. Вĕсем пурте, хăйсене канăç паман ыйтăва татса парасшăн, тата пил илес тесе хумханса кĕретчĕç унăн кабинетне. Вăл никама та сирсе яман, пулăшу е канаш ыйтакана, пурнăçри йывăр лару-тăрăва лекнĕ  кашни çынна йышăннă. Вĕсемшĕн Турă умĕнче тата çĕр çинчи пуçлăхсен умĕнче хута кĕнĕ. Унăн кĕлли хăвачĕпе чи хăрушă чиртен сывалакансем те, тухтăрсем шанчăк паман хĕрарăмсем хырăм ӳкесрен çăлăнса юлни те, çуратни те пулнă. Тата нумай-нумай ырă ĕç пулса пынă вăл тăрăшнипе.

Варнава владыка хаяр та пулма пултарнă, кашни пуçарăвах пил паман. Архиерей хытах ятланă çынсем тен сахал мар пулнă. Çав вăхăтрах вăл ун патне килекен ăçта тата кам пулса ĕçленине те, унăн çитĕнĕвĕсем çине те пăхса тăман. Пысăк çĕрте ĕçлекене те, ырă ĕçсемпе палăрнă çынна та тĕрĕс сăмаха куçран тӳррĕн каланă. Анчах вăл ăса вĕрентсе хыттăн каланине нумайăшĕ йӳçĕ эмел  ĕçсе сипленни вырăнне йышăннă. Мĕншĕн тесен чун кĕтӳçипе тĕл

пулнӑ хыҫҫӑн кашниех унран тивлет илсе унӑн кӗллин хӑватне туйнӑ.

Митрополит уйрӑмах ачасене юратнӑ. Вӑл кӗлӗсем ирттернӗ чиркӳсене вӗсем йышлӑн пынӑ. Ашшӗ-амӑшӗ, аслашшӗ-асламӑшӗсем хӑйсен ачисене унран пил илтерме тӑрӑшнӑ. Унӑн пичӗ ӑшӑ кулӑпа ҫуталса каятчӗ, вӑл кашни ачана куҫӗсемпе хӗвел пайӑрки пек ыталаса ҫупӑрлатчӗ. Вӑл пилленипе юлашки ҫирӗм ҫул хушшинче ачасен Раштав тата Мӑнкун уявӗсем, тӗрлӗрен фестивальсем, форумсем, конкурссем, ҫамрӑксен тӗн вулавӗсем иртрӗҫ. Ҫак мероприятисене хутшӑннӑ пиншер ача дипломсем илнӗ. Вӗсене шутне пӑхмасӑр, чӑтӑмлӑн, пӗр ӳпкевсӗр Варнава митрополит алӑ пусса панӑ. «Ачасене хӗрхенмелле, ӑшӑлӑх памалла, юратса ӳстермелле, вӗсем ҫакна туяҫҫӗ, астӑваҫҫӗ, ыттисене те каласа параҫҫӗ,– тетчӗ вӑл. – Ачасене юратмалла, вара вӗсем те сана юратӗҫ, эсӗ кӑтартнӑ ҫулпа кайӗҫ...» Эпир пурте унӑн ачисем, ҫавӑнпа ҫак ҫула пире те кӑтартас тесе вӑл питӗ тӑрӑшатчӗ.

Владыка ывӑнма пӗлмесӗр кӗлтунӑ. Кашни ҫулах вӑл Таса Ҫӗре (Иерусалима) кайса ҫӳренӗ. Черетлӗ ҫулҫӳрев умӗн чиркӗве ҫӳрекенсене хӑйшӗн кӗлтума яланах ыйтнӑ, хӑй те вӗсемшӗн кӗлтӑвасси ҫинчен каланӑ. Чӑннипех те ҫапла, ватӑлса ҫитсен те вӑл аякри ҫулҫӳревре кашни кунах Литурги тунӑ. Пирӗншӗн вӑл Турӑ тупӑкӗ ҫинче, Вифлеемра Христос ҫуралнӑ ҫӗр витере, Фавор тӑвӗ ҫинче, Турӑ Амӑшӗн Гефсиманири тупӑкӗ ҫинче, Мария Магдалина пурӑннӑ вырӑнта, Вырӑссен тӗн миссийӗнче, Елеон тӑвӗ ҫинче, Ҫӳлти (Горний) мӑнастирте кӗлтунӑ...

Ҫакӑнта, Таса Ҫӗр ҫинче, унпа темиҫе хутчен те тӗлӗнмелле пулӑм – чӑн тӗнпе пурӑнакансем ӑна хӑват теҫҫӗ – пулса иртнӗ. Ун куҫӗ умӗнче янкӑр хӗвеллӗ кун Фавор тӑвӗ ҫинчи чиркӗве пӗлӗт аннӑ, вӑл таса тумламсем курнӑ. Иерусалим Патриархӗпе Диодорпа кувуклийӑра пулнӑ чухне Тивлетлӗ Ҫулӑм аннине курнӑ. Кӑвак ҫулӑм Турӑ Тупӑкӗ

çинче çуталса кайсан вăл чи малтан Патриарх çуртинчен хăй çуртисене çутнă. Пĕррехинче вăл Иордан шывне кĕлтуса тасатнă. Унпа пĕрле священниксемпе паломниксем пулнă. Вĕсем унта пулнă хăвата хăйсен куçĕпе курнă. Владыка Евангели вулама пуçласан шывран пулăсем пуçĕсене кăларнă. Вĕсем, салтаксем пек, ункă евĕр вырнаçса тухнă, вуласа пĕтернĕ хыççăн тин шыв айĕнче çухалнă.

Варнава митрополит кĕлтунин хăватне Раççей тулашĕнче те пĕлеççĕ. Унăн чун хастарлăхĕн чапĕ пĕтĕм православи тĕнчипе сарăлнă. Иерусалимри тата Афонти мăнастирсенче пурăнакансем ун çинчен вăл пурăнннă чухнех уççăн святой тесе каланă. Грецири, Италири, Египетри, ытти çĕршыври чиркӳсенче Чăваш Енрен кайнă паломниксене аслă ватăç патĕнчен пулнăран пуçа тайса, хапăл туса кĕтсе илнĕ, таса вырăнсене, святойсен çĕрмен ӳчĕсене кăтартнă.

Вăл хăй вара яланах сăпайлăхĕпе уйрăлса тăнă, чăн-чăн манах пекех, ăна нимĕн те ытлашши кирлĕ пулман. Мĕн пуррине пĕтĕмпех чиркӳсем тума панă. «Ĕмĕр тăршшĕпех эпĕ Турă хыççăн пыратăп»,– тесе каланă вăл. Çак çулпа вăл архиерейăн çăмăл мар хĕресне йăтса утнă. Юлашки çулсенче ватă çын йывăр чирсемпе асапланнă, темиçе хутчен те пурнăçпа вилĕм хушшинче тăнă. Анчах Турă вăл Çӳлти Атте патне хывнă мухтавлă та тивлетлĕ çулпа утакансен йышĕ татах та ӳстĕр тесе кашнинчех унăн пурнăçне сыхласа хăварнă. Хĕресе йăтса утма çулсерен йывăрлансах пынă, апла пулин те владыка чăтатчĕ, йăвашшăн куллен кунах пире: «Турăпа яланах çăмăл»,– тесе калатчĕ. Вăл нихăçан та отпускра пулман. Чирлесен больницăна выртатчĕ те, кăшт самайлансанах чиркĕве службăна васкатчĕ. Кам та пулин ăна кану çинчен аса илтерме хăю çитерсен, е çăмăл мар ĕçе пăрахма пил ыйтсан, яланах: «Хĕресе хăвармаççĕ, ун çинчен антараççĕ!»– тетчĕ. Унран çак сăмахсене илтекенсем, Турă пулăшсан, Кĕтӳçĕ пекех, хăйсен Хĕресне хăвармĕç, сăваплă ырă ĕçĕсене вăйран кайиччченех пурнăçласа пырĕç.

Варнава митрополитӑн Хӗреспе утнӑ ҫул-йӗрӗ 2020 ҫулхи июнӗн 1-мӗшӗнче вӗҫленчӗ. Архипастыре пытарас умӗн Пукравпа Татиана чиркӗвӗнче кӗлтурӗҫ. Шӑпах Пукрав кунӗнче владыкӑна архиерее лартасси ҫинчен пӗлтернӗ пулнӑ. Хӑй каласа хӑварнипе ватӑҫа таса пурӑнӑҫлӑ Сергий Радонежский ячӗпе лартакан собор алтарӗ умне пытарнӑ. Пурӑннӑ чух владыка Лаврӑн пӗр пӗчӗкҫӗ кӗтесне Шупашкарта туса лартма ӗмӗтленнӗ. Хӑй Чӑваш Ене ҫак святой ирӗкӗпе килнине, вӑлах ӑна пурнӑҫ тӑршшӗпе пулӑшса пынине ҫирӗп ӗненнӗ владыка.

Хамӑр мӗн тери тӳрӗ пурӑнӑҫлӑ, сӑвапшӑн тӑрӑшакан ҫынпа юнашар пурӑннине, Турӑ пире мӗн тери юратса ҫакӑн пек Владыка ярса панине пирӗн пурин те ӑспа ӑнланса илмелле. Паллах, эпир вӑл хӑй вырнаҫнӑ тӗрӗс ҫӗртен, Туррӑн аслӑ вырӑнӗнчен пире хӳтлӗх, пулӑшу патӑр тесе кӗлтӑвӑпӑр. Вӑл яланах пирӗнпе, эпир унӑн кӗтӗвӗ, вӑл халӗ те пире Турӑ ҫулӗпе илсе пырать. Мӗншӗн тесен унӑн тӗп тӗллевӗ – Турӑ патне пырсан: «Акӑ эпӗ тата манӑн ачасем!»– тесе каламалла.

Чунтан хурланнине ҫӗнтерсе тата ҫухатушӑн кулянса, вӗҫӗ-хӗррисӗр юратнӑ Владыка пире мӗн вӗрентнине астуса, ҫакӑн пек таса пурӑнӑҫлӑ ҫын тӗслӗх кӑтартса юнашар пурӑннишӗн савӑнса, Турра тав тӑвар.

**Зинаида Паршагина**

# «ПИРĔН ÇЕМЬЕН ВĔРЕНТЕКЕНĔ»



*Калуга тата Боровск митрополичĕ Климент тата Шупашкарпа Чăваш митрополичĕ Варнава*

Турă манăн аннене чир ярса пачĕ. Маншăн, эпĕ ун чухне çичĕ-сакăр çулта пулнă, тата манăн виçĕ пĕртăваншăн ку питĕ йывăр тĕрĕслев пулчĕ. Анчах Турă пĕтĕмпех кирлипе парать. Анне чирĕ урлă пирĕн ĕненӳ çирĕпленчĕ, тăтăшах Лаврăна таса пурăнăçлă Сергий атте патне çӳреме пуçларăмăр, унти манахсемпе туслашрăмăр. Ку вăл Хрущев вăхăтĕнче чиркӳ çыннисене хĕсĕрленĕ тапхăрта пулнă. Лаврăра тивлетлĕ манахсем тăрăшса кĕлтуса пурăнатчĕç, вĕсем патне чун канăçлăхĕ шыраса пулăшу ыйтма нумай çын

пырса ҫӳретчӗ. Пӗрре вырсарникун эпир пиччесемпе пӗрле мӑнастире Литурги кӗллине килтӗмӗр. Успени чиркӗвӗ патнелле утнӑ май, эпӗ айккинчи ҫул тӑрӑх пысӑках мар хура сухаллӑ, шурӑ Хӗрес ҫакнӑ ҫамрӑк иероманах пынине куртӑм. Эпӗ ун патне пил илме чупса пытӑм та: «Батюшка, манӑн чирлӗ аннешӗн кӗлтӑвӑр-ха. Вӑл Мария ятлӑ»,– терӗм. Вӑл мана пил пачӗ те, тӑсарах сасӑпа: «Юрать. Эсӗ вара мӗн ятлӑ?»– терӗ. Эпӗ хуравларӑм та, хӗпӗртенӗскер, пиччесем патне пытӑм. Манах аннешӗн алтарьте кӗлтусан вӑл сывалатех текен туйӑм чӗрере ҫирӗпленчӗ. Пиччесене пачӑшкӑна аннешӗн кӗлтума ыйтни ҫинчен каласа парсан манӑн аслӑ пичче Николай (халӗ вӑл протоиерей): «Эсӗ вӑл мӗн ятлине пӗлетӗн-и? Вӑл Варнава иероманах»,– терӗ. Варнава атте лӑпкӑ, сӑпайлӑ, яланах ӑшпиллӗччӗ. Ҫав ҫулсенче вӑл пире, ҫамрӑксене, ӑса вӗрентсе пулӑшса пыратчӗ. Лаврӑна аннесӗр кайсан вӑл кашнинчех, ун патне пил илме пырсан: «Аннӳ хӑйне мӗнле туять?»– тесе ыйтатчӗ. Ун патне аннепе пӗрле пырсан вара: «Аннӗре упрӑр, Турӑ ӑна сывлӑх патӑр тесе кӗлтӑвӑр»,– тетчӗ.

Пирӗн ҫемьере ҫакӑн пек йӗрке пулнӑ: чиркӗве службӑна кайсан вилнисемшӗн тата чӗррисемшӗн кӗлтума кашниех хӑй хут ҫырса панӑ. Ҫав пӗрремӗш тӗлпулу хыҫҫӑн эпӗ Варнава иероманах ятне яланах Тихон (Агриков) игумен (каярахпа архимандрит) ячӗпе юнашар ҫырма пуҫларӑм. Тихон атте пирӗн ҫемьен ӑс парса вӗрентсе пыраканӗ пулнӑ. Варнава аттепе Тихон аттен келйисем юнашарччӗ. Варнава атте, ризничий пулнӑ май, чиркӗве маларах ҫитетчӗ. Эпир вара, ун патне пил илме пырсан, час-часах Тихон атте хӑҫан килесси ҫинчен ыйтаттӑмӑр. Вӑл вара: «Батюшка чирлемест, кӗҫех килет»,– тесе хуравлатчӗ. Пирӗн пӗтӗм ҫемье Тихон атте патӗнче ҫылӑх каҫарттаратчӗ. Вӑл Лаврӑра ӗҫлеме пӑрахсан хӑй кайиччен пире Варнава архимандрит патне ҫылӑх каҫарттарма ҫӳреме пиллесе хӑварчӗ. Ҫав вӑхӑтранпа

Варнава атте пирĕн çемьене тĕрĕс вĕрентсе пыракан пачăшкă пулса тăчĕ.

Çав çулсенче Варнава атте пирĕн пата час-часах пырса çӳретчĕ, анне вара: «Ку пирĕн чи хаклă хăна»,– тетчĕ. Вăл килни пирĕншĕн яланах пысăк савăнăç пулнă. Ун патне священниксем, Турра ĕненекенсем калаçса ларма килетчĕç. Эпир Алексейпе иксĕмĕр, сĕтел çинчен вĕри чей ан татăлтăр тесе, сăмаваршăн яваплăччĕ. Ăна килсе лартаттăмăр та, сĕтел хĕррине вырнаçса ларса вĕсем калаçнине итлеттĕмĕр. Калаçу, тĕпрен илсен, Христос çыннин пурнăçĕ тавра, ĕненĕве мĕнле упраса хăварасси пирки, ĕненӳшĕн ĕçре хĕсĕрлесен çыннăн хăйне мĕнле тытмалли çинчен пыратчĕ. Варнава атте яланах чăтăмлă пулма тата кĕлтума чĕнсе калатчĕ, хăй вăл кĕлтума уйрăмах юрататчĕ. Лаврăра чухне вăл пĕр служба та сиктермен, манахсемпе пĕрле тăвакан кĕлле яланах кайнă.

Варнава аттепе калаçнă чухне священниксем час-часах чиркӳре кĕлĕ тумалли йĕркепе тата çынсемпе мĕнле пĕр чĕлхе тупмаллипе çыхăннă ыйтусем хускататчĕç. Пулас владыка чиркӳ уставне тата кĕлĕ ирттерес йĕркен уйрăмлăхĕсене питĕ лайăх пĕлетчĕ. Эпир, çамрăксем, çакна курса тĕлĕнеттĕмĕрччĕ те, ăмсанаттăмăрччĕ те. Пĕррехинче пурте тухса кайсан эпĕ унран: «Батюшка, Эсир чăннипех чиркӳ уявĕсене пурне те астăватăр-и, кашни кун кĕлĕ мĕнле ирттермеллине пĕлетĕр-и?»– тесе ыйтрăм. Вăл, сăпайлăскер, ман умра, 13 çулхи ача умĕнче, именсе кăштах пĕлетĕп тесе хуравларĕ. Эпĕ вара çаплипех лăпланмастăп: «Тĕрĕслеме юрать-и?»– тетĕп. Чупса кайса календарь илсе килтĕм те, ахаль кунсене суйласа ыйтма пуçларăм: «Июнĕн 18-мĕшĕнче мĕнле уяв? Августăн 6-мĕшĕнче? Сентябрĕн 16-мĕшĕнче вара?»– тата ытти те. Вăл вара çав кун асăнакан святойсен ячĕсене тĕп-тĕрĕс каласа пычĕ, хăçан полиелей служби, хăçан мухтав кĕлли, хăçан ахаль кĕлĕ ирттермеллине

палăртрĕ. Унăн тарăн пĕлĕвĕнчен çавăн чухне эпĕ хытах тĕлĕнтĕм.

Варнава атте нумай çул Лаврăра пурăнни, тата, чи кирли, вăл хăйне пирĕнпе яланхиллех ансат тытни пирĕн кил-йыша унпа çывăхлатрĕ. Вăл пирĕншĕн тĕрĕс вĕрентекен пачăшкă анчах мар, тăван пулса тăчĕ. Эпир пĕтĕм ыйтăва унпа сӳтсе яваттăмăрччĕ. Унăн пилĕпе эпĕ çара кайичченех тĕн семинарине вĕренме кĕтĕм. Эпĕ çар хĕсметĕнче пулман, анчах тĕн семинарине кĕрессипе çыхăннă иккĕленӳллĕ шухăшсене каласан, вăл мана: «Документсене пар, сана йышăнаççĕ»,– терĕ. Совет саманинче салтак çулне çитнĕ çамрăка семинарие илни пулманпа пĕрех, анчах та вăл кĕлтунипе мана тӳрех Мускаври тĕн семинарийĕн иккĕмĕш класне илчĕç. Кайран, тепĕр икĕ уйăхран, мана çара чĕнсе илчĕç паллах, анчах икĕ çул сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Эпĕ Серпухов çывăхĕнче службăра тăнă, вара мана 3-4 уйăхра пĕрре шăматкунпа вырсарникун киле яратчĕç. Киле çитсенех, эпĕ Лаврăна таса пурăнăçлă Сергий аттене кĕлтума каяттăмччĕ, Варнава аттепе тĕл пулаттăмччĕ.

Çартан таврăнсан эпĕ семинарире малалла вĕрентĕм. Унти пурнăç йĕрки мăнастиртинчен уйрăлса тăрать пулин те, эпĕ хаклă пачăшкăпа тĕл пулма яланах вăхăт тупаттăмччĕ. Вĕренӳ çулĕсенче унпа калаçнисем мана ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен ӳссе чунпа çирĕпленме пулăшрĕç. Академин пĕрремĕш курсĕнче вĕреннĕ чухне эпĕ унран манаха кĕме пил ыйтрăм. Çакăн пирки эпĕ ачаранпах ĕмĕтленнĕ. Вăл çапла хуравларĕ: «Халь мар. Эсĕ лайăххрах вĕрен, академи пĕтер, кандидат диссертацине çыр, вара тин манаха кĕр. Манах пек эсĕ халĕ те пурăнма пултаратăн. Анчах мăнастире кайсан вĕренĕве кирлĕ чухлĕ вăхăт уйăраймăн, е унти йĕркене тытса пыраймăн. Манахсен те вĕреннĕ çынсем пулмалла. Халĕ вăхăчĕ çавнашкал: манах пулни тумтирте çеç палăрса тăмасть, вăл пурнăç». Çын тĕрĕс вĕрентсе пыракан пилĕпе пурăнни мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине халĕ

эпĕ ăнланатăп, владыка çавăн чух каланă сăмахсем вара унăн ăслăлăхне тата ытларах çирĕплетсе параççĕ.

1976 çулта, Туррăн Таса Амăшĕ Хӳтĕленине халалланă уяв кунĕ, Шупашкар архиепископĕ Вениамин (Новицкий) вилнĕ. Вăл çирĕп йĕркепе пурăнакан архиерей пулнă, Чиркӳ интересĕсене хӳтĕленĕ, священниксене, ĕненӳпе пурăнакансене пулăшса тăнă. Сталин репрессийĕсен çулĕсенче 10 çул Колымара лагерьте irttерnĕ, ăна 1955 çулта тин ирĕке кăларнă. Малтан вăл Омск епархине ертсе пынă, кайран Иркутск епархине, хăйĕн пурнăçĕнчи юлашки виçĕ çулне вара Шупашкар епархине ертсе пынă. Шупашкарта пурăнакан ĕненекенсем ăна питĕ юратнă, хисепленĕ. Вăл пурнăçран уйрăлнă хыççăн Пимен Патриарх Синода Шупашкар епископĕ пулма Варнава архимандрита лартма сĕннĕ. Чăваш халăхĕ тарăн ĕненӳпе пурăннине, чăвашсем хăйсен чиркĕвĕсене хакланине тата питĕ таса, ырă пурнăçшăн тăрăшнине Патриарх пĕлнĕ. Ун пек çынсене чи аслă священник çеç мар, чăн-чăн кĕлтăвакан, Чăн тĕне хӳтĕлекен, юратакан ашшĕ кирлĕ пулнă. Варнава архимандрита 1976 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче епископа кĕртнĕ, ноябрĕн 30-мĕшĕнче вара Троице-Сергиева Лаврăн таса пурăнăçлă Сергий чиркĕвĕнче Шупашкар тата Чăваш епископĕ пулма алă хунă.

Вуншар çул ĕçлесе пурăннă вăхăтра вăл халăх чăн-чăн архипастыре унăн тарăн ĕненĕвĕшĕн, чунне парса, евангелире каланă пек, Турра тата çынсене юратассине пĕрремĕш вырăна хунăшăн хисепленине кăтартса панă. Çакна вăл тунă ĕçсем уççăнах çирĕплетеççĕ: Чăваш митрополийĕнчи юсаса çĕнĕрен хута янă чиркӳсемпе мăнастирсем, хăтлă тĕн шкулĕ, чиркĕве çӳрекен çамрăксен пысăк йышĕ. Вăл çынсене юратса, Раççей пуласлăхĕшĕн пăшăрханса каланă архипастырь сăмахĕ итлекенсен чĕрисене хускатнă. Халь пурăнакан çын ĕмĕрлĕх пурнăçра çăлăнăç туптăр тесе владыка çитĕнекен ăрăва тӳрĕ çулпа

утма, çемьесенче Христос вĕрентнĕ йĕркене тытса пыма, ашшĕ-амăшне ачасемпе тĕрĕс хутшăнусем йĕркелеме, пурнăçа, ĕненĕве хаклама вĕрентнĕ.

Шупашкар епархине ертсе пынă вăхăтра Варнава владыка тавра пĕр шухăшлă çынсем нумай пухăннă, унăн ĕçне малалла тăсакансем те чылайăн çитĕннĕ. Пурнăçри кирек епле лару-тăрура та курăнакан тарăн ĕненĕвĕ, вăл Турра юратни, тăрăшса кĕлтуни тата чиркÿре службăсем ирттерни, çынсене витĕмлĕ пулăшу пани владыкăна пĕлекенсемшĕн Христос вĕрентнĕ пек пурăннин ырă тĕслĕхĕ пулса тăнă.

Каярахпа мана та епископа кĕртрĕç. Америкăра ĕçлесе пурăннă чухне те, тăван çĕршыва килсен те кашнинчех унпа тĕл пулса калаçма, чуна кирлĕ пулăшу илме тăрăшаттăм. Мана Калуга кафедринче ĕçлеме шансан, Варнава владыка Калугăна чылай пырса çÿрерĕ. Калуга çыннисем вăл вĕсене хисеплесе Оптинăра, Шамординăра, Тихон мăнастирĕнче, Малоярославецри Хура Утрав мăнастирĕнче, Свято-Троицки тĕп чиркÿре, Калуга çĕрĕнчи тата ытти нумай чиркÿре службăсем ирттернине астăваççĕ.

Хаклă Варнава владыкăн пурнăç çулĕ темиçе саманана: Сталин, Хрущев, аталаннă социализм, çĕнйĕркелÿ, совет влаçĕ хыççăнхи тапхăрсене тата хальхи – 21 ĕмĕрти пурнăçа – пĕрлештерсе тăрать. Анчах, вăхăчĕ кирек епле пулсан та, вăл Христос ĕненĕвне тата Унăн Чиркĕвне юратнине хăйĕн чĕринче ĕмĕрĕпех упранă. Ĕненÿпе пурăнни владыкăна чаплă çынсемпе – тĕне хытă тытакансемпе, Лаврăра Турра юрăхлă ĕçсемпе пурăнакан манахсемпе, паллă проповедниксемпе, чиркÿ деятелĕсемпе: ку тĕнчерен кусса кайнă Пĕрремĕш Алексий (Симанский), Пимен (Извеков), Иккĕмĕш Алексий (Ридигер) Патриархсемпе; Чăн тĕншĕн асап тÿснĕ Лука (Войно-Ясенецкий) тата «Раççей çĕрĕнче çуталса кайнă святойсене кĕлтумаллин» авторĕсенчен пĕринпе Афанасий (Сахаров) святой архиерейсемпе; Ярославль архиепископĕпе

Димитрий (Градусовпа), Рязань архиепископӗпе Николай (Чуфарскипе), Шупашкар архиепископӗпе Вениамин (Новицкипе), Иосий (Евсенок) тата Серафим (Тяпочкин) схиархимандритсемпе, Феодорит (Воробьев), Тихон (Агриков), Кирилл (Павлов) архимандритсемпе тата ытти нумай ҫынпа тӗл пултарнӑ.

Вӗсем пурте, митрополит-владыка пекех, Вырӑс Ҫӗрӗн игуменӗн тупӑкӗ умӗнче ӑспа ҫирӗпленсе чуна кирлине тупнӑ. Вӗсен ҫирӗп ӗненӗвӗ тата Чиркӗве парӑнни пирӗн ҫӗршывра та Турӑ халӑхне упраса хӑварнӑ, кӗлтуса пире тата пирӗн хыҫҫӑн пурӑнакансене кашни куна ӗмӗрлӗх пурнӑҫшӑн ирттерме вӗрентнӗ, май туса панӑ.

**Калуга тата Боровск митрополичӗ Климент**

***Редакцирен:*** *Калугӑпа Боровск митрополичӗ Климент, Вырӑс Православи Чиркӗвӗн Издательство канашӗн Председателӗ, ВПЧ Аслӑ Чиркӳ Канашӗн пайташӗ, Калугӑри тӗн семинарийӗн ректорӗ, халӑх хушшинче – Герман – Мария Алексеевна Капалинан (Мария схиманахиньӑн) виҫҫӗмӗш ывӑлӗ. Унӑн аслӑ ывӑлӗ Николай Пафнутий ятпа манаха кӗнӗ. Иккӗмӗш ывӑлӗ Виталий Василий архимандрит пулса тӑнӑ, Солнечногорскра ӗҫлесе пурӑннӑ, 2006 ҫулта ҫӗре кӗнӗ. Мария схиманахиньӑн тӑваттӑмӗш ывӑлӗ Алексий – Тюменьпе Тобольск митрополичӗ Димитрий, Тобольскри тӗн семинарийӗн ректорӗ.*

*Мария Капалина Варнава иероманах кӗлтунипе сывални ҫинчен «Владыка кӗллисемпе» сыпӑкра вулӑр.*

# ПИРĔН ЫРĂ ÇЫННĂМĂР



*Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ  ВАРНАВА*

## Варнава митрополитӑн
## ҫутӑ сӑнарне асра тытса

Варнава владыка Шупашкарпа Чӑваш епархине хӗрӗх виҫӗ ҫул ҫурӑ ертсе пынӑ. Ҫак тапхӑрта ун ячӗпе Шупашкар епархийӗн ҫеҫ мар, пӗтӗм Чӑваш Республикин пурнӑҫӗ ҫыхӑннӑ. Высокопреосвященнейший Варнава митрополит Чӑваш Ен халӑхӗшӗн те, чиркӳ ҫыннисемшӗн те юратакан ашшӗ пулнӑ. Вӑл пурнӑҫран уйрӑлса кайни унран вӗренсе пыракансемшӗн калама ҫук пысӑк ҫухату пулчӗ.

Турӑ ирӗкӗпе манӑн хаклӑ владыкӑпа юнашар чылай вӑхӑт пулма тӳр килчӗ. Халь эпӗ час-часах иксӗмӗр калаҫнисене, унӑн ырӑ сӑмахӗсене, тӗрлӗ лару-тӑрура хӑвна мӗнле тытмаллине вӗрентнине, унӑн манӑҫми куллине аса илетӗп. Унпа калаҫакансем пурте унӑн чунри ӑс-хакӑл пуянлӑхне туйса тӑнӑ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн эпир мӗн тери пысӑк ҫухату тӳснине сисетпӗр. Варнава владыка архиерей пулнӑ вӑхӑт Вырӑс Православи Чиркӗвӗ ҫӗнӗрен чӗрӗлсе ҫеҫке ҫурнӑ тапхӑрпа ҫыхӑннӑ. Вӑл тӑрӑшнипе Чӑваш ҫӗрӗнче арканнӑ вуншар чиркӗве ҫӗнӗрен хӑпартнӑ, Шупашкарта, Ҫӗрпӳре, Улатӑрта, Каршлӑхра, Шурутра мӑнастирсем уҫнӑ.

Хӑй питӗ тӑрӑшакан манах пулнӑран, владыка манахсене ашшӗ пекех юратнӑ, вӗсемшӗн тӑрӑшнӑ. Ун патне хӑйсен ыйтӑвӗсемпе мӑнастирсен наместникӗсем, игумен йӑсем пынӑ. Вӑл яланах мӑнастирсен пурнӑҫӗпе кӑсӑкланнӑ, вӗсен нушисене ӑнланса пулӑшу панӑ.

Митрополит владыка Турра юратнӑ, ҫав юратӑва пире те пиллесе хӑварнӑ. Вӑл Чиркӗве юратнӑ, пӗтӗм вӑй-халнеуншӑн ӗҫлесе пурӑнассине панӑ, пире те ҫавӑн пекех юратма чӗнсе каланӑ. Вӑл хӑйӗн кӗтӗвне юратнӑ, ҫынсемпе пӗр тан калаҫнӑ, вӗсен хуйхи-суйхине ӑнланнӑ. Унӑн ӗҫ пӳлӗмӗн алӑкӗ ахаль ҫынсемшӗн те, пуҫлӑхсемшӗн те яланах уҫӑ пулнӑ. Хӑш чухне ҫав ҫынсем общество пурнӑҫӗнчи тата

политикăри лару-тăрăва тĕрлĕрен хаклать. Кашнин валлиех вăл ырă сăмахсем тупма пултарнă. Унăн чĕринче пурин валли те юрату çителĕклĕ пулнă. Вăл кашнинех ăнланма хатĕр пулнă, яланах кĕлĕ хăватне шаннă. Çулĕсем чылай пулин те, владыка кашни эрнерех темиçе служба ирттеретчĕ, кĕлтунинче вăй-хал тата пурнăç çулĕпе утма çирĕплĕх тупатчĕ.

Варнава владыкăпа пĕрле эпир 2020 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче, Мăнкун эрнинчи ытларикун, вăл 89 çул тултарнă кун, юлашки хут кăнтăрлахи кĕлĕ ирттертĕмĕр. Архипастырĕн кăмăлĕ лайăхчĕ, сывлăхĕ те чиперехчĕ. Инкек пуласса нимĕн те систермерĕ. Эпĕ ăна юлашки хут курнă, пĕрле апат кĕлли ирттернĕ, Христосăн Ӳчĕпе Юнне пĕр савăтран ăша илнĕ иккен. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Турă ăна ĕмĕрлĕх вырăна чĕнсе илчĕ.

Эпир хамăрăн хаклă Владыкăна, аттене, пирĕншĕн кĕлтăвакана яланах асра тытăпăр. Турă унăн ирĕкпе е ирĕксĕр тунă çылăхĕсене каçарса чунне Çӳлти Патшалăха илтĕр, пирĕн чĕремĕрсенче уншăн кĕлтуса пурăнмалăх ĕмĕрлĕх асаилӳ хăвартăр.

**Канашпа Тăвай епископĕ Стефан**

***

## «Тен, архиерей пулăн…»

Варнава владыка пур çынна та юратнине ун патне пыракансем кашниех туйнă. Унсăр пуçне, хăй çакна йышăнман пулин те, вăл малашлăха курса тăни çинчен те каласа хăварас килет. Çакнашкал самант пулчĕ: Варнава владыка мана манах пулма тата Тĕн Академине вĕренме кĕме пиллерĕ. Эпĕ мана çакă мĕн тума кирли çинчен ыйтма

пуçласан, владыка çапла хуравларĕ: «Тен, архиерей пулăн!» Çапла пулчĕ те.

Тата Варнава владыка пулăшма тăрăшнине уйрăмах палăртса хăварас килет. Пĕррехинче, владыка Улатăрти Свято-Троицки мăнастире килсен, унта Мордовири Ключевски мăнастирĕн наместникĕ те пулнă, вăл Турă Амăшĕн Хусанта курăннă таса сăнне парса яма ыйтнă, Туррăн Чăн Таса Амăшĕ тĕлĕкре курăнса çапла тума хушрĕ тенĕ. Варнава владыка вара: «Турă Амăшĕ мана та курăнчĕ, çав-çав пырсан, Мана ăна парса ан яр терĕ»,– тенĕ. Çапла вара ыйтаканăн пушăллах кайма тивнĕ. Ĕмĕр асăнатпăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Улатăрпа Пăрачкав епископĕ Феодор**

***

## «Йывăç панагия туса пама ыйтăр, вăл çăмăлрах»

Мана Варнава митрополит çинчен калама çăмăл мар, мĕншĕн тесен Аслă Преосвященствопа çыхăннă туйăмсене тивĕçлипе палăртма тата шухăшăмсене уçса пама çĕр çинче сăмахсем те тупассăн туйăнмасть. Çапах та... Варнава владыка Чăваш Еншĕн тунă ырă ĕçсем ун çинчен сăмахсăрах калаççĕ. Вăл тăрăшнипе миçе çын чунĕ çăлăнса юлни вара çын чĕринчи шухăша пĕлекен Христоса çеç паллă!

Варнава митрополитăн пурнăçĕ нихăçан та çăмăл пулман, анчах вăл çав йывăрлăха çăмăллатмалли меслет тупнă – Турăпа çеç пурăнмалла. «Турăпа пурăнма çăмăл»,– тетчĕ владыка час-часах. Çӳлти Аттене ача пек таса чĕрепе, ĕненсе юратнипех вăл пурнăçри тата архипастырь ĕçĕнчи пăтăрмахсене тивĕçлипе чăтса ирттерме пултарнă пуль. Тата унра çирĕплĕхпе юрату, ăслăлăхпа ансатлăх тĕлĕнмелле килĕшӳллĕн çыхăнса тăратчĕç. Турă паракан тӳрĕ кăмăл вăл: «Ансат çĕрте ангел нумай». Çав ансатлăха Турă парать. Тата

çакна палăртса хăварни питех те вырăнлă: Варнава митрополит шӳтлеме юрататчĕ. Пархатарлă, пуян ăс-халлă çынсен çеç пур çак туйăм. Мана архиерее кĕртес ыйту çĕкленсен, эпĕ паллах хатĕр пулман çак яваплăха йышăнма. Владыка умне чĕркуçленнĕ те, йĕретĕп: «Священник хĕресĕ йывăр. Архиерей çакса çӳрекен турăш тата йывăртарах ĕнтĕ. Ăна йăтаймасăр ӳкетĕп те вилетĕп». Вăл вара: «Эсир йывăç панагия туса пама ыйтăр, вăл çăмăлрах»,– тесе хуравларĕ. Çакăн пек ăслă хурав хыççăн хирĕçлесе нимĕн те калаймастăн. Вăл яланах çаплаччĕ: хăйĕн сăмахне калать те, пирĕн пурнăçламалла. Каялла çул çук. Архипастырь çапла тунинче унăн ăс-хакăл пуянлăхĕ те, çирĕплĕхĕ те палăратчĕ.

Владыкăна пытарнă хыççăн эпир ăна нумай çул пулăшса пурăннă Сергия схиманахиньăпа тата Тихвински мăнастирти Серафимăпа Варвара манахиньăсемпе унăн келйинче тирпейленĕ чухне ытти япаласем хушшинче кивĕ йывăç панагия (архиерей кăкăрĕ çинче çакса çӳрекен пĕчĕкçĕ турăш) тупрăмăр. Тĕлĕнмелле, çакă вăл Варнава митрополит хăй пурăннă вăхăтра усă курнă япаласен йышĕнчи шута илмен пĕртен-пĕр панагия пулнă. Хисеплĕ ватăпа калаçнине аса илсе, эпĕ ăна вăл мана юлашкинчен пиллесе панă парне пек йышăнтăм. Матушкăсем хирĕç пулмарĕç. Пĕррехинче Череповец епархийĕн священникĕсемпе ирттернĕ тĕлпулура эпĕ вĕсене çакăн çинчен каласа патăм. Енчен те вĕсем манăн кăкăр çинче çак панагийăна асăрхарĕç пулсан, эппин, мана чăтма çук йывăр, мана вĕсен ăнланăвĕ, пулăшăвĕ, вĕсем маншăн кĕлтуни нихçанхинчен ытларах кирлĕ пулнине палăртрăм. Питĕ йывăр самант килсе тухсан тӳрех йывăç панагия çакатăп. Хальлĕхе епархи çуртĕнчи манăн пӳлĕмре Варнава митрополит сăнĕ чи хисеплĕ вырăнта тăрать, унăн çутă сăнарĕ вара яланах манăн чĕрере.

**Череповец тата Белозерск епископĕ Игнатий**



*сулахайран сылтӑмалла:*
*Череповец тата Белозерск епископӗ Игнатий,*
*Канаш тата Тӑвай епископӗ Стефан,*
*Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ Варнава,*
*Улатӑр тата Пӑрачкав епископӗ Феодор*

## Вăл хăйшĕн мар, Турăшăн тата Чиркӳшĕн пурăннă

Варнава владыкăпа юнашар ирттернĕ нумай çулсенчен кашни куна мĕнпе те пулсан уйрăлса тăнă пек сăнарлама пулать. Ирхине вăл яланах будильниксĕр тăнă. Кирлĕ вăхăтра пырать те малтанах шăппăн: «Николай, тăр»,– тесе вăратать, каярахпа хытăрах чĕнет. Кашни ир кĕлтунинчен пуçланатчĕ. Кун йĕркине çирĕп палăртса хунă, владыкăн канмалли кунсем пулман. Пилĕк кун епархинче ĕçлетчĕ, шăматкунпа вырсарникун служба ирттеретчĕ. Ăна чиркӳре служба пынă вăхăтра пĕр-пĕр мероприятие чĕнсен, вăл ниçта та каймастчĕ. «Кĕлĕ ирттересси малти вырăнта пулмалла»,– тетчĕ яланах. Иерусалима кайсан владыка унта кашни кунах служба ирттеретчĕ.

Ăна пур Патриарх та, пур архиерей те хисеплетчĕ. Пĕррехинче сăваплă çулăм илме эпир владыкăсăр кайрăмăр. Ириней Патриарх патне пытăмăр. Эпир Варнава владыка патĕнчен пулнине пĕлсен, унăн сăнӳкерчĕкне кăларчĕ те турăша чуптунă пек чуптурĕ.

Хăйĕн мĕн пуррине, ăна темĕн чул парне кӳрсен те, пирĕн архиерей пĕтĕмпех чиркĕве паратчĕ. Хăйшĕн мар, Турăшăн тата Чиркӳшĕн пурăннă. Ĕмĕр асăнмалла пултăр!

**Шупашкарти Пукравпа Татиана соборĕн настоятелĕ   Николай Иванов протоиерей**

## Мана ун патĕнче иподиаконра ĕçлеме питĕ килĕшетчĕ

Варнава владыкăна пĕрремĕш хут курнине аса илетĕп. Ку вăл 1976 çулхи декабрьте, Филарет Милостивый кунĕнче пулчĕ. Мана унпа вăл вăхăтра Троице-Сергиева Лаврăри тĕн шкулĕнче вĕренекен  Михаил Иванов протоиерей паллаштарчĕ. Кайран, владыка Шупашкара килсен,  мана унăн службисенче иподиаконра ĕçлеме питĕ килĕшетчĕ.

1978 çулта Варнава владыка мана хăй патне келейнике илчĕ, эпир кашни ир Введенски кафедральнăй собора апат кĕлли ирттерме каяттăмăрччĕ. Владыка унта парне вырăнĕ умĕнче, «Херувимсен юрри» пуçламăшĕнчех, чĕррисене те, вилнисене те аса илсе кĕлтăватчĕ. Служба хыççăн епархи çуртĕнче вара священниксене анчах мар, чиркĕве çӳрекенсене пурне те йышăнма пуçлатчĕ.

Чĕнсе ярсан, Варнава владыка пĕр прихода та архиерей служби ирттерме каймасăр тăман. Литурги вĕçленсен шыв кĕлтуса тасатса молебен  ирттернĕ хыççăн вара яланах пурте пĕрле чиркӳ тавра хĕрес йătса çаврăннă. Варнава владыка служба хыççăн Введени соборĕнче те, ытти приходсенче те кафедра çине тăрса чиркĕве пынă çынсене яланах пил паратчĕ. Ĕмĕр аса илсе пурăнар! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Çĕнĕ Шупашкарти апостолсемпе тан**
**святой Владимир князь  ячĕпе лартнă чиркӳ настоятелĕ**
**Гурий (Данилов) архимандрит**

## Унăн рясинчен çакланасшăн пултăм

Владыкăпа Иерусалимра 1993 çулта Мăнкун кунĕ пĕрремĕш хут тĕл пулнă хыççăн манăн пĕтĕм пурнăç урăх еннелле çаврăнса кайрĕ. Варнава владыка паломниксен йышĕнче Таса Çĕре пынă. Çакă пирĕншĕн кĕтмен çĕртен пулчĕ, эпир вăл килессе пĕлмен. Пирĕн мăнастир питĕ пĕчĕкчĕ, эпир унта ултă çын анчахчĕ, кашниййĕнех тĕрлĕ ĕç пурнăçламаллаччĕ. Акă ĕнтĕ владыка килчĕ. Çав вăхăт тĕлне пирĕн Мăнкун иртсе кайнăччĕ, грексемпе католиксен униат мăнастирĕсенче Мăнкуна эрне маларах паллă тăваççĕ. Эпир Мăнкун эрни ирттеретпĕр, владыка вара Асап эрнинче... Эпир тĕрлĕ чĕлхепе калаçнă, анчах чун тĕпĕнче, чĕре туйнипе пĕр-пĕрне ăнланса йышăнтăмăр. Вăл мана яланах çапла калатчĕ: «Сана эпĕ пĕрре курсах юратрăм»,– тетчĕ. Эпĕ те ăна мĕнпур кăмăлтан юратнине туяттăмччĕ. Манăн келья ытти манахсем пурăнакан корпусран уйрăм вырăнтаччĕ, пысăк мар вăл, урлăш-тăршшĕ икĕ метр çеç пулнă, кравать те çукчĕ, тенкелсем анчахчĕ. Владыка çакна курсан: «Кунта кам пурăнать?»– тесе ыйтрĕ. «Эпĕ»,– тетĕп. Вара ун чухне вăл: «Эсĕ чăн тĕн çынни, санăн православи чиркĕвне куçмала»,– тесе каларĕ.

Мăнкун владыкăпа çыхăннă питĕ кăсăклă япала пулса иртрĕ. Вăл пирĕн мăнастире Христос Чĕрĕлсе тăнă çутă уяв кунĕ умĕн пынăччĕ. Çĕрле вăл кĕлĕ ирттерессине эпĕ пĕлнĕ, çавăнпа та службăна хутшăнассишĕн питĕ çунаттăмччĕ. Хальхинче кăмăл туртăмĕ уйрăмах пысăк пулчĕ, анчах та халăх çав тери йышлă пулнăран Туррăн Тупăкĕ патне лекме майĕ те çукчĕ. Тăраççĕ çапла пурте, Патриарх иртсе каясса кĕтеççĕ. Малта студентсем утаççĕ, вĕсем хыççăн священниксем, çак самантра Патриарх тухать, унпа юнашар пирĕн Варнава владыка пырать. Ним шутласа тăмасăрах эпĕ полицейскисем хушшипе хĕсĕнсе кĕтĕм те унăн рясинчен

ярса тытрăм. Çавăн пек эпир унпа пĕрле Турă Тупăкĕ патне утса çитрĕмĕр. Паллах, служба тĕлĕнмелле хăватлă иртрĕ, ун пек службăра эпĕ унччен нихăçан та пулманччĕ.

Кайран эпĕ çакна час-часах асилеттĕмччĕ. «Владыка, Эсир Çӳлти Патшалăха куçса кайнă чухне Сирĕн рясăран çакланса Сирĕнпе пĕрле кайсан мĕнле лайăх пулмалла!»– теттĕмччĕ.

Çав ĕç пулса иртнĕ хыççăн эпир владыкăпа Мускавра, Иккĕмĕш Алексий Патриархăн ангел кунĕнче Турă курăннă ятпа лартнă Соборта тĕл пултăмăр. Эпĕ ăна куртăм та: «Варнава владыка!»– тесе чĕнтĕм. Вăл, мана кĕтнĕ пекех: «О!  Эсĕ кунта-çке! Питĕ лайăх!»– терĕ. Вара çав эрнерех эпĕ Иккĕмĕш Алексий Патриарх пилленипе Православи Чиркĕвĕпе пĕрлешсе унăн йĕркипе пурăнма пуçларăм. Владыка мана яланах пулăшса пыратчĕ. Малтанхи вăхăтра Шупашкара килсен эпĕ темиçе хутчен те ун патĕнче çĕр каçнă. Вăл мана иероманаха кĕме алă хунă, Чăваш Ене килнĕ чухне эпĕ иеродиакон пулнă. Владыка мана хĕрхеннĕ пулмалла.  «Санăн кунта никам та çук вĕт, никам патне кайса та чунна уçса калаçаймастăн»,– тетчĕ. Мана çăмăл маррине ăнланнă вăл, маншăн ашшĕ хăйĕн ачишĕн пăшăрханнă евĕр пăшăрханатчĕ. Эпĕ унăн чăтăмлăхĕнчен яланах тĕлĕнеттĕмччĕ. Владыка мана çапла каларĕ: «Эп хам пурнăçра мĕн чул тӳснине пĕлесчĕ сан...  Эс хăвна мар, Турра çеç шан!» Çакна илтсен, манăн ăшри туйăмсем пĕтĕмпех вырăна ларчĕç. Вăл мана лăплантарчĕ, çирĕплĕх пачĕ. «Йывăрлăхсем пĕтĕмпех хыçа юлĕç, çакна чăтса ирттерсе ямалла, вара пĕтĕмпех лайăх пулĕ»,– терĕ. Эп ун патĕнчен хавхаланса, çунатланса тухрăм. Владыкăн çавăн пек хастарлăх пурччĕ – вăл лăплантарма тата хăватлантарма пултаратчĕ! Ахальтен мар ĕнтĕ унăн ячĕ те «савăнтаракан ывăл»  пек куçать. Унăн йăвашлăхĕнчен эпĕ тĕлĕнеттĕмчĕ, вĕçне çитичченех унран вĕренсе пытăм.

Акă вара пирĕн владыка чирлерĕ. Паллах, ăна упрамалла пулнă, халăх хушшинче çӳреме ирĕк памалла пулман, анчах та вăл çине тăрсах службăсем ирттернĕ! Мăнкун эрнинче, йăлана кĕнĕ йĕркепе, эпир Варнава владыкăна ытларикун, Турă Амăшĕн Иверски таса сăнĕн кунĕнче кĕтрĕмĕр. Анчах çав çул çак уяв унăн çуралнă кунĕпе пĕр килнĕ. Вăл вара уява тата çуралнă кунне Каршлăхри Александр Невский ячĕллĕ мăнастирте ирттерес тенĕ, унта нумаях пулмасть шăпах çак иконăн чăн-чăн копине илсе килнĕ пулнă. Владыка мана асăрхаттарчĕ: «Василий атте, кăçал Мăнкун эрнинче сан патра служба ирттерместĕп, Феодосий атте патне каятăп»,– терĕ.

Мăнкун эрнин иккĕмĕш кунĕнче владыкăн святой Владимир князь ячĕпе Çĕнĕ Шупашкарта лартнă соборта служба ирттермелле пулнă. Унта вара Игнатий епископ ковид пирки карантина лекнĕ, çавăнпа та каяссине пăрахăçланă. Владыка вара мана калать: «Эсĕ Турă Амăшĕ умĕнче мана ӳпкелерĕн пуль, Вăл эс пăшăрханнине пĕлнĕ, сан патра служба ирттерĕп». Çакă вăл Мăнкун эрнинчи тунтикун, владыка Шупашкарти арçынсен мăнастирĕнче юлашки хут кĕлĕ ирттерни пулчĕ.

Проповедьре владыка сарăлсах пыракан чир тата эпидеми вăхăтĕнче халăха лăпкăрах пулма чĕнсе каларĕ. Ун чухне вăл: «Эсĕ те чирлетĕн...»,– тесе манпа килсе тухас хăрушлăх çинчен асăрхаттарчĕ. Хăй больницăра выртнă чухне вара ман пата шăнкăравларĕ, çылăх каçарттарасшăн пулнине пĕлтерчĕ. Анчах ун чухне пире хĕрлĕ зонăна кĕртместчĕç. Владыка хăй калас тенине пĕтĕмпех пĕрле илсе кайрĕ. Эпир унпа пĕр вăхăтра вилĕмпе кĕрешнĕ. Мĕншĕн тесен владыка пурнăçран уйрăлса кайнă кун мана та, ковидпа хытă чирлекенскере, реанимацине куçарнă.

Тахçан Иерусалимра Мăнкун чухне эпĕ унăн рясинчен çакланса унпа пĕрле Турă Тупăкĕ патне утса çитрĕм, халĕ те,

чирленĕ вăхăтра, унăн мантийĕнчен çакланса унпа пĕрле Çӳлти Патшалăха вĕçсе кайма ĕмĕтлентĕм.

Владыка, Илия пророк пекех, Турă патне пĕлĕте çĕкленчĕ, мана лăплантарма вара пиллесе ряса хăварчĕ. Ăна эпĕ халь ялан тăхăнса çӳретĕп. Турă ирĕкĕпе эпĕ кунтах юлтăм. Варнава владыкăна, вăл вĕрентнисене аса илмесĕр пĕр кун та иртмест.

**Шупашкарти арçынсен Свято-Троицки мăнастирĕн наместникĕ Василий (Паскье) архимандрит**

***

## Владыкăн юлашки пилĕ

2020 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче эпир, Шупашкар епархи управленийĕнче ĕçлекенсем тата священниксем, Варнава владыкăпа сывпуллашрăмăр. Çакă пирĕн юлашки тĕлпулу пулнине тата вăл пире юлашки хут пил панине никам та шутлама пултарайман...

Ĕç кунĕ вĕçленсен Варнава владыка тухса кайиччен йăлана кĕнĕ йĕркепе пурне те пиллетчĕ. Вăл хăйĕн кабинетĕнчен тухсан эпир пил илме пĕр рете тăтăмăр, вăл ыран, майăн 1-мĕшĕнче, çĕршывра уяв, анчах епархи управленийĕ ĕçлет, терĕ. «Эсир пурте ĕçе тухатăр, эпĕ вара килместĕп. Манăн хамăн ĕçсемпе каймалла». Паллах, архиерей çапла майпа пирĕнпе, епархи ĕçченĕсемпе, сывпуллашни çинчен эпир шутлама та пултарайман. Пирĕнпе çапла сывпуллашнă, пилленĕ хыççăн вăл хăйĕн ĕç пӳлĕмне урăх таврăнмарĕ...

Тепĕр икĕ эрнерен пире Варнава митрополит больницăра пулнине, ăна тухтăрсем куçран вĕçертмесĕр пăхса тăнине пĕлтерчĕç. Владыка чирленĕ. Тĕрĕссипе, 2020 çулхи май уйăхĕ Турра ĕненекен Чăваш Енри мĕнпур çыншăн Турă сăнанă вăхăт пулчĕ. Малтан Введенски кафедральнăй соборăн священникĕсем, кайран унта юрлакансем чирлерĕç.

Приходсенче ĕçлекен пачăшкăсем, чиркĕве çӳрекенсем, манахсем чирлени çинчен хыпарсем килме пуçларĕç. Июнĕн 1-мĕшĕнче Варнава митрополит вилсе кайнă текен хыпар уяр кун аслати кĕрленĕ пек килсе çапрĕ. Çакна ĕненме питĕ йывăр пулчĕ, мĕншĕн тесен, çулĕсем нумай пулин те, Варнава владыка чунпа хастарччĕ, çивĕч ăс-тăнлăччĕ. Вăл пĕрмаях шӳтлетчĕ, таса пурăнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе хăпартакан чиркĕвĕн аялти хутне кĕлтуса тасатма хатĕрлесе çитерессшĕнччĕ.

**«Преподобнăй Сергий патĕнче хамăн ĕçсене пуçларăм, – тетчĕ Варнава митрополит, – преподобнăй патĕнчех вĕçлетĕп».**

Архиерей вилни çинчен хурлăхлă хыпар çав кун телефон шăнкăравĕсем тата смс-хыпарсем урлă питĕ хăвăрт сарăлчĕ. Христос Çуралнă ячĕпе лартнă чиркӳре Литурги хыççăн эпир тин çеç ку тĕнчерен куçса кайнă владыкăшăн кĕлĕ ирттертĕмĕр. Лития вăхăтĕнче сасартăк эпир, чиркӳре ĕçлекенсемпе унта çӳрекенсем, хамăр тăлăха юлнине туйса илтĕмĕр. Мĕншĕн тесен чи çывăх та çутă çын уйрăлса кайрĕ. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайрĕ, эпир вара унран нумай япалана ыйтса пĕлеймерĕмĕр, тен, каçару та ыйтаймарăмăр пуль.

Владыка пирĕнпе пĕрле чухне эпир çавна хаклама та пĕлмен, ачасем ашшĕ пирки шутланă пек вăл яланах пирĕнпе пулассăн туйăннă. Пĕтĕмпех лайăх пулнă, мĕншĕн тесен ашшĕ ачисемшĕн тăрăшнă, чăтнă, юратнă вĕсене. Сасартăк эпир унсăр тăрса юлтăмăр. Пирĕншĕн, Чăваш Енри чăн тĕнпе пурăнакансемшĕн пуриншĕн те, вăл кам тата мĕн пулнине халь тин туйса, ăнланса илетĕн. Варнава владыка икĕ саманана çыхăнтарса тăнă. Вăл авалхи Лаврăра манахсемпе тата ĕненекенсен чунĕсене çăлассишĕн тăрăшакан священниксемпе пĕрле пурăннă вăхăтри хастарлăха та упраса хăварма пултарнă, çав вăхăтрах Христос ячĕшĕн чăн тĕне хытă тытакан пулнă.

Вăл пурăннă чухне каланă сăмахсемпе унăн канашĕсем паянхи кун уйрăмах хаклă. Халĕ вара, вăл ку тĕнчерен куçса кайнă хыççăн, Турă умĕнче пирĕн хута кĕрекен хутшăнчĕ. Варнава митрополит пурăннă чухне хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче пурне те йышăннă пулсан, халĕ вара, ĕмĕрлĕх пурнăçра, пушшех те, вилтăприйĕ çине пыракансен ыйтăвĕсене йышăнса, Атте Турă патне çитерет.

**Сергий Пушков протоиерей**

***

## Манăн пĕтĕм пурнăç унăн пиллĕхĕпе иртет

Мускаври Тĕн Академийĕн студенчĕ пулнă чухнех эпĕ Варнава владыка патне çылăх каçарттарма çӳреттĕмччĕ. Владыка çамрăкранпах ăслăлăхĕпе уйрăлса тăратчĕ, ялан кирлĕ ырă канашсем паратчĕ. Манăн пĕтĕм пурнăç, студент çулĕсенчен пуçласа эпĕ асатте пуличченех, унăн пиллĕхĕпе иртсе пынă.

1986 çулта эпĕ кандидат диссертацине хӳтĕлес умĕн пил илтĕм, кĕлтума ыйтрăм. Тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухаймасран питĕ хăрарăм. Ун чухне чиркӳре юсав ĕçĕсем пыратчĕç, килте виçĕ пĕчĕк ача, хатĕрленме те вăхăт пулман. Анчах владыка мана: «Ан кулян, Михаил атте, питĕ чаплă хӳтĕленетĕн акă!»– терĕ. Çаплах пулчĕ. Эпĕ шухăшласа илтĕм вара: «Акă вăл, чăн-чăн кĕлĕ!»

Тата тепĕр пулăм çинчен аса илес килет. Александр атте хăйĕн хреснашшĕн арăмне пытарма кайма ирĕк ыйтма пынă. Апрель уйăхĕ, машинăна çуллахи урапасем çине куçарнă. Владыка: «Çывăх тăван-и, сан каймаллах-и?»– тесе ыйтать. Çавăнтах хăйех хуравлать: «Каймалла мар!» Ирхине чĕркуççи таран юр çуса лартрĕ. Çапла вара çула тухма май килмен...

1997 çулхи çу кунӗсенче эпӗ отпуска тухма хатӗрленеттӗмччӗ. Юлташсем мана машинăсемпе Хура тинӗс хӗррине кайма чӗнчӗç. Отпуск августăн 1-мӗшӗнче пуçланмалла. Эпӗ Варнава владыка патне пил илме пырсан, вăл: «Мӗскер, августăн 1-мӗшӗнчех тухса каятăр-им?»– тесе ыйтрӗ. «Туссен августăн 15-мӗшӗ тӗлне каялла таврăнмалла, çавăнпа та пирӗн пӗр кун та çухатас килмест»,– тетӗп. Владыка вара: «Илья пророк кунӗ вара мӗнле?»– тесе аса илтерчӗ. Эпӗ вара хам отпускра пулни çинчен каларăм. Владыка ман çине тимлӗн пăхса илчӗ те: «Асту, Илья пророк вăл хаяр!»– тесе асăрхаттарчӗ.

Çав сăмахсене хăлхана чикмесӗр, августăн 1-мӗшӗнче эпир çула тухрăмăр. Çул çинче чарăнса пӗр-пӗр чиркӗве службăна кӗрес тенӗччӗ, май пулмарӗ. Краснодар крайне çитрӗмӗр. Трасса çинче машинăсем сахал пулин те, сасартăк грузовик урапи айӗнчен чышкă пысăкăш чул вӗçсе тухрӗ те малти кантăка водитель енчен пырса çапăнчӗ. Кантăкӗ çӗмӗрӗлчӗ, ман юлташăн вара машинăна çывăхри мастерской патне çити буксирпа сӗтӗрсе кайма тиврӗ. Çапла вара пирӗн кану вăхăчӗ виçӗ куна чакрӗ те. Эпир шăпах çав виçӗ кунпа усă курма шутланăччӗ. Малалла кайсан, эпӗ машина тикӗс кайманнине сисрӗм. Стартер юсавлă мар иккен. Ку каллех пирӗн кану вăхăтне чакарчӗ. Вăт çапла, владыка каланине итлемесӗр, икӗ кун маларах каяссишӗн тăватă кун сая ятăмăр!

Владыкăна эпӗ мана вӗрентсе пынишӗн, мана шаннăшăн тав тăватăп. Вăл пилленипе эпӗ Христос Чӗрӗлнӗ ятпа лартнă чиркӳ настоятелӗ пулнипе пӗрлех 22 çул Шупашкар епархийӗн тӗн училищине ертсе пытăм.

**Михаил Иванов протоиерей**

## Унпа тĕл пулни маншăн шăпа парнеленĕ паллă пулăмсенчен пĕри

Варнава владыкăпа çыхăннă вăхăтсене аса илетĕп те, Турра чунтан тав тăватăп. Тĕлĕнмелле майпа мана, тивĕçсĕрскере, Турă туса пыракан ĕç Виç-ипостаçлĕ Таса Турă тата преподобнăй Сергий атте ячĕпе никĕсленĕ мăнастире çул кăтартнă. Тĕн енне эпĕ 1989-1990 çулсенче туртăнма пуçларăм, майĕпен ĕненӳ çирĕпленсех пычĕ, кайран чăн тĕн чиркĕвĕн çынни пулса тăтăм.

Ĕненӳ ыйтăвĕсемпе эпĕ ун чухне хамăн мăнаккапа, Галина (Степанова) матушкăпа, калаçаттăмччĕ. Пĕррехинче вăл мана Афонти мăнастирсем, Троице-Сергиева Лавра, унти ватăсем çинчен каласа пачĕ. Çак калаçу хыççăн тата «Добротолюбие» кĕнекен пĕр томне вуласа тухсан, ман чунра манах пулас кăмăл çуралчĕ. Тата кăштах вăхăт иртсен пĕр-пĕр ватă манахпа тĕл пулас шухăш канăçсăрлантарма пуçларĕ.

Лаврăра ун чухне ĕненекенсене тĕрĕс вĕрентсе пурăнакан паллă аттесем – Кириллпа Наум – пурччĕ. Турă мана вĕсем патне пĕрремĕш хут 1991 çулта илсе çитерчĕ... Пĕрре çапла Галина матушка патне пырсан: «Манăн Лаврăри ватă патне каймалла»,– тетĕп. Вăл вара: «Вăт ыран Михаил (Степанов) атте шăпах Мускава кайма хатĕрленет, сана пĕрле илет»,– тесе хуравларĕ. Ун чухне çавнашкал «тĕл килнинчен» тĕлĕнтĕм.

1991 çулхи кĕркунне. Çитрĕмĕр эпир Сергиев Посада, вокзалтан мăнастир еннелле утатпăр. Аякран пăхмалли тӳреме çитрĕмĕр те, пĕр самантра куç умне асамлă тĕлĕнтермĕш вырăн тухса тăчĕ... Пурнăçра пĕрремĕш хут çак мăнаçлă Лаврăна куратăп... Чун калама çук хĕпĕртесе кайса савăнăçпа тулчĕ. Мана çакă çĕр çинчи пек мар, Пĕлĕт çинчи пек туйăнчĕ. Лаврăна кĕрсен, эпĕ ку таранччен пĕлмен, пачах урăх тĕнчене лекрĕмĕр... Чуна темĕнле

ăнланмалла мар, çĕрпе çыхăнман шăплăхпа савăнăç çаварса илчĕ. Манахсене пирвайхи хут куртăм. Вĕсем мана çĕр çинчи пурнăçран аякра тăнăн туйăнчĕç, мăнаçлăн курăнчĕç. Темшĕн пурте çӳллĕ пек, çĕр çине пусса мар, сывлăш тăрăх шăппăн та лăпкăн утнăн туйăнчĕ.

Михаил атте мана Сергий аттепе (архимандритпа, Варнава владыкăн çывăх тусĕпе) паллаштарчĕ, вăл вара Наум атте патне илсе кайрĕ. Хам пурнăçра пĕрремĕш хут мăнастирти аслă ватăпа тĕл пултăм... Вăл сан çине пăхнă чух чунунта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех курнăн туйăннăран, чĕре хытăрах тапма тытăнчĕ. Кирлĕ ыйтусене татса панă хыççăн Михаил атте мана илме пычĕ. Наум атте ăна хăй патне чĕнсе илчĕ те мана Варнава владыка патне илсе кайма каларĕ.

Лаврăран таврăнсан эпир Михаил аттепе владыка патне çул тытрăмăр. Унпа Введени соборĕнче, таса пурăнăçлă Сергий Радонежский приделĕнче пĕрремĕш хут тĕл пултăмăр. Тĕлĕнмелле, владыка та Наум атте пекех сăнаса, витĕр курнă пек пăхать. Михаил атте ман çинчен каласа панине итленĕ хыççăн тата эпĕ вăл ыйтнисене хуравласан, владыка мана алтарник пулма тата епархи управленийĕнче хуралçăра ĕçлеме пил пачĕ. Владыка йышăнакан кабинетра шалта тата тепĕр пĕчĕк пӳлĕм пурччĕ, мана çавăнта вырнаçтарчĕç те. Çĕрле епархи управленине хураллаттăм, ирсерен Литурги вăхăтĕнче алтарьте пулăшаттăм. Владыка кашни кунах чиркĕве службăна килетчĕ. Вăл пĕр апат кĕллине сиктернине те астумастăп, чирлесен е епархири ытти чиркӳсене служба ирттерме кайсан анчах пымастчĕ. Проскомиди вăхăтĕнче вăл хăйĕн кĕтĕвне, çывăх çыннисене тата ăна кĕлтума ыйтнисене пурне те асăнатчĕ.

1991-92 çулсенче эпĕ епархи управленийĕн хуралçин ĕçĕсене тата Варнава владыка çумĕнчи алтарник тивĕçĕсене пурнăçласа пытăм. Вăл манахăн çирĕп йĕркине тытса пыни,

шалтан яланах пуçтаруллă пулни, кĕлтăвас туйăмпа пурăнни тата çав вăхăтрах ăслă архиерей пулни асра юлчĕ. Çак тапхăрта манăн Лаврăри манахсен йышне кĕрес шухăш тĕппипех çирĕпленчĕ, ун чухне унта ĕненекенсене тĕрĕс вĕрентсе пыракансем тата аслă ватăсем нумайччĕ. Эпĕ Лавра манахĕ пулма ĕмĕтленни тата ăнтăлни çинчен владыка пĕлнĕ. Вăл пилленипе эпĕ семинарине вĕренме кĕме документсем тăратрăм, Турă пулăшнипе çав çулах мана унта илчĕç.

Варнава владыка преподобнăй Сергий Радонежские асăнмалли кунсенче – июлĕн 18-мĕшĕнче тата октябрĕн 8-мĕшĕнче – Троице-Сергиева Лаврăна кашни çулах килетчĕ. Тата вăл яланах Иоанн Богослов апостола асăнмалли кун, октябрĕн 9-мĕшĕнче, Литурги ирттерме юлатчĕ.

Çапла 1994 çулта, Иоанн Богослов апостол уявĕнче, Лаврăн Трапезнăй чиркĕвĕнче владыка апат кĕлли ирттерчĕ, эпир Евгений Федоровпа (халĕ вăл протоирей) ăна пулăшрăмăр. Кĕлĕ хыççăн эпĕ владыка патне пил илме пытăм, вăл манран: «Хăçан Лаврăна кĕретĕн?»– тесе ыйтрĕ. «Акă халь наместник аттерен Лаврăри манахсен йышне кĕртме пил илес тесе килтĕм»,– тетĕп. Владыка çав самантрах Феогност архимандрит патне пырса: «Наместник атте! Илĕр ăна Лаврăна! Эпĕ ăна лайăх пĕлетĕп. Вăл ман патра иподиакон пулнă, Лаврăна лекес тесе семинарине кĕчĕ»,– терĕ. Наместник атте, владыка ыйтнине шута хурса, манран эпĕ миçемĕш курсра вĕреннине ыйтрĕ. «Виççĕмĕшĕнче»,– тесе хуравларăм. Наместник: «Виçĕ курс пĕтер, вара Лаврăна илме ыйтса çыр»,– терĕ. Çак сăмахсем хыççăн владыка, наместник атте тата Лаврăри манахсем Панагия йĕркипе апат çиме кайрĕç. Эпир, Евгений Федоровпа иксĕмĕр тата Лаврăри манахсен йышĕнчи алтарник, алтарьте юлтăмăр, пĕтĕмпех тирпейлерĕмĕр те апат çиме кайрăмăр, унта владыкăпа тĕл пултăмăр. Вăл мана: «Лаврăна килме

ыйтса çыр, эпĕ наместник аттепе калаçрăм, вăл сана манахсен йышне илет!»– терĕ.

Çак кун манăн пурнăçра Лаврăпа тата пирĕн святой Сергий аттепе çыхăннă чи пĕлтерĕшлĕ кун пулса тăчĕ! Варнава владыка манăн пурнăç çулĕнче тĕл пулни вара шăпа парнеленĕ чи паллă самантсенчен пĕри.

**Турра тата Варнава владыкăна тав туса**
**Троице-Сергиева Лавра манахĕ**

*******

**«Ку турăш чи асли пулĕ»**

2018 çулхи кĕркунне Варнава митрополит пирĕн мăнастире Турă Амăшĕн таса Афон Тăвĕ çинче упранакан «Иверская» сăнĕн чăн копине пиллесе пачĕ. Турă Амăшĕн таса сăнне çырнă çĕре владыка хăй те хутшăннă. Вăл Греци ăстисене телефонпа таса сăна мĕнле çырмаллине каласа тăнă, тĕрлĕ йăнăшсене тӳрлетнĕ, çакă çулталăка тăсăлнă. Таса икона хатĕр пулнă хыççăн эпир владыка пилленипе Афона кайрăмăр. Унта манахсемпе пĕрле кĕлтуса Турă Амăшĕн хăватсем тăвакан «Иверская» таса сăнĕ умĕнче Акафист вуларăмăр, ун çумне хамăрăн копине тытрăмăр. Вара 2019 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче, Хăватсем тăвакан святой Николай кунĕнче, тĕрĕс ĕненекен святой Александр Невский мăнастирне йĕркеллех таврăнтăмăр. Владыкăна хамăр килни çинчен хыпарласан вăл çитес вырсарникун пирĕн мăнастирте архиерей служби ирттересси çинчен пĕлтерчĕ. Турă Амăшĕн «Иверская» таса сăнне чуптусан, владыка вăй кĕнине тата ыратакан урине самаях çăмăл пулнине туйса илнĕ. Вăл ирхине çак ура çине пусайманнипе аран-аран утнă.

Туррăн Ӳчĕпе Юнне ăша илнĕ хыççăн владыка пире пурне те чĕнсе илчĕ те çапла কаларĕ: «Çак икона пирĕн патра

чи асли пулĕ тата ăна Чăваш Енре çеç мар, ытти çĕрте те нумайăшĕ хисеплĕç!» Çавăн пекех владыка ăна кун пирки Туррăн Таса  Амăшĕ Хăй каланине пĕлтерчĕ. Варнава владыка пире тĕрĕс вĕрентекен тата пирĕншĕн пуриншĕн те кĕлтăвакан пулнă та, çапла юлать те! Хамăрăн хаклă Варнава владыкăна ĕмĕр асăнса пурăнар!

**Александр Невский мăнастирĕн настоятелĕ**
**Феодосий (Шитов) игумен**

***

## Вăл мĕнле каланă, яланах çавăн пек пулатчĕ

1976 çулхи августран эпĕ Варнава владыкăн шоферĕ пулнă. Владыка Троице-Сергиева Лаврăна питĕ юрататчĕ, çулталăкра сахалтан та икĕ хут унта таса пурăнăçлă Сергий Радонежский уявне каятчĕ. Унта пынă пур архиерей та, 1-2 кун пурăнсан, каялла каятчĕç. Пирĕн владыка вара 1-2 эрне пурăнатчĕ. Ăна вăл Лаврăра пурăннă вăхăтранпах пĕлекен манахсем çавăн чухне мана темиçе хутчен те: «Владыкăна итле, хакла ăна, вăл тĕлĕнмелле, çав тери ăслă çын. Яланах вăл мĕнле калать, çавăн пек пулать»,– тесе каланă. Владыка хăйĕн малалла мĕн пулассине пĕлес пултарулăхне май пур таран пытарма тăрăшатчĕ. Хăш чух вара, вăл каланă пек пулса тухсан, Турă ирĕкĕпе çапла пулчĕ тетчĕ. Пĕррехинче эпир преподобнăй Сергий Радонежский уявĕнчен Шупашкара таврăнатпăр. Октябрь уйăхĕ тăрать, йĕпе-сапа, шăнтма та пуçланă. Çула тухас умĕн владыка: «Паян вăраххăн, асăрханса каймалла»,– терĕ. Хайхи Чулхуларан иртсен çулăн пĕр лаптăкĕнче КамАЗ пысăк хăвăртлăхпа иртсе кайса эпĕ пыракан йĕр çине  тухрĕ. Эпĕ: «Турă çырлах!»– тесе кăшкăрма анчах ĕлкĕртĕм, машинăна йĕпе шуçлак çул хĕрринелле пăрса ятăм. Вăраххăн кайнине пула çеç чарăнма пултартăм. Çав вăхăтра владыка тĕлĕрсе пынă.

Çул çине тухса малалла кайсан вăранчĕ те мана: «Каларăм вĕт паян вăраххăн каймалла тесе, эс асăрхануллă пулни пире çăлса хăварчĕ»,– терĕ. Çакнашкал лару-тăру çул çинче нумай пулнă.

Владыка ачаранпах кинемисене юратнă, мĕншĕн тесен вĕсем ăна пĕчĕк чухне йывăр выçлăх çулсенче вилесрен хăтарса хăварнă. Вĕсенчен пĕри – Баулина Мария – вăл çуралнă Высокое салинчен инçех мар ялта пурăннă. Пĕррехинче тăван ялне кайсан владыка çав кинеми патне кĕрсе тухма сĕнчĕ. Вăл çак хĕрарăм ăна ача чухне выçлăх çулсенче пулăшни, çăкăр çитерни çинчен каласа пачĕ. Çулне пĕлменнипе эпир тĕрĕс мар кайнă, ял патне урăх енчен пырса тухрăмăр. Пирĕн çула пысăках мар юханшыв пӳлчĕ. Сарлакăшĕ пĕр 10 метра яхăн, тарăнăшĕ пилĕк таран. Шăпах юханшывăн тепĕр енĕпе çав кинеми пырать. Владыкăпа иккĕшĕ вĕсем шыв урлă кăшкăрса калаçма пуçларĕç. Эпĕ кинемие ку енне йăтса каçма сĕнтĕм, пиллеме ыйтрăм. «Пиллетĕп, каç»,– терĕ владыка. Эпĕ хывăнтăм, владыка пилленипе чирлемессе пĕлсе пĕр иккĕленмесĕрех пăрлă шыв урлă каçрăм. Кинемие ĕнсе çине лартрăм та ку çырана йăтса каçартăм. Владыкăпа ватă хĕрарăм калаçрĕç, иртнине аса илчĕç. Кайран вĕсем сывпуллашрĕç те эпĕ кинемие каялла йăтса каçрăм.

Пĕрре паломниксемпе Таса Çĕре çулçӳреве кайсан эпир Гефсиманире Туррăн Таса Амăшĕн тупăкĕ патне чăнкă картлашкасемпе анатпăр. Ун чухне владыкăн çулĕсем чылайччĕ ĕнтĕ. Владыка майсăр пусрĕ те, темиçе картлашка урлă вĕçсе кайса ӳкрĕ. Анчах темиçе çеккунтранах пĕр сурансăр-кăваксăр çĕкленчĕ те малалла кайрĕ, мана Ангелсем пулăшрĕç терĕ. Хаклă Варнава владыкăна ĕмĕр асăнса пурăнар!

**Михаил Степанов протоиерей**

## Эпĕ ăна тӳрех палларăм

Варнава владыкăна эпĕ 6 çултанпах пĕлнĕ. Çакă тĕлĕнмелле паллах, тата нимле майпа та пулма пултарайман. Мĕншĕн тесен эпĕ Алтайра çуралса ӳснĕ, унта вара пĕр православи чиркĕвĕ те пулман. Анчах Турра ĕненекен çынсем пурччĕ, вĕсем 70 çула яхăн чиркӳре пулман. Вĕсем пĕрле кĕлтума пухăнатчĕç, юрлатчĕç, хăйсемех шыв кĕлтуса тасататчĕç. Эпĕ те унта пулнă. Часах вулама вĕреннĕскер, литературăпа кăсăкланаттăмччĕ, çав шутра чиркӳ пурнăçĕпе Турра кĕлтăвас йĕрке çинчен çырнă кĕнекесем вулаттăмччĕ. Вăл вăхăтра ку енĕпе пĕтĕмпех атеистла литература пулнине каламалла. Пĕррехинче манăн алла Троице-Сегиева Лаврăри манахсен пурнăçне, паллах ĕнтĕ, тӳнтер енĕпе сăнарласа кăтартакан пĕчĕкçĕ брошюра лекрĕ. Унта илсе кăтартнă пĕр тĕслĕх уйрăмах асра юлчĕ: Варнава çамрăк иероманах карантина пăхăнмасăр халăха пĕр кашăкпа сыптарать. Мана çакă питĕ килĕшрĕ, эпĕ вара ĕненекен кинемисенчен: «Мĕнлерех вăл, Варнава священник?»– тесе ыйтма пуçларăм. Пĕр 15 çултан эпир аттепе тата аннепе пĕрле Чăваш Ене куçса килтĕмĕр. Çĕрпӳри тата Шупашкарти чиркӳсене çӳреме пуçларăм. 1977 çулта Илия пророк праçникĕнче эпĕ яланхиллех Введени соборне кайрăм. Кафедра çинче епископ тăрать. Юнашар тăракансенчен вăл мĕн ятлине ыйтрăм та, «Варнава»,– тесе хуравларĕç. Эпĕ тӳрех ăна палларăм: ку вăл шăпах эпĕ ача чухне вуланă кĕнекери Варнава священник, эпĕ ун çинчен малтанах пĕлнĕ. Турă мана унпа пĕр вăхăталлах Чăваш çĕрне илсе çитернĕ.

Университетра историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ чухне эпĕ Введени соборне пĕр сиктермесĕр çӳреттĕмччĕ. Служба йĕркине пĕлеттĕмччĕ, панихидăра юрлакансене пулăшаттăмччĕ, кайран клирос çинче те юрлама пуçларăм. Университетра вĕренме пăрахма тиврĕ,

мана çара илчĕç, анчах тӳрех мар, мĕншĕн тесен эпĕ пачăшкăсемпе хутшăннăран шанчăксăр шутланнă пулмалла. Çар хĕсметĕнче икĕ çул пултăм. Унтан таврăннă-таврăнман Введени чиркĕвне кайрăм, мана юрлакансен штатне тата Варнава владыкăн иподиаконĕ пулма илчĕç. Анчах тĕп тивĕç манăн клирос çинче вулассипе юрласси пулнă. Мана темиçе хутчен те тĕн семинарине вĕренме кайма сĕнчĕç. Эпĕ вара архиерейпе тата Введени соборĕн священникĕсемпе хутшăнни маншăн тĕн заведенийĕсенче вĕреннинчен чылай усăллăрах пулĕ тесе шутларăм. Варнава митрополит çакна питех ырламарĕ, анчах чиркӳре ĕçлени мана священник пулма май парĕ тесе килĕшрĕ. Эпĕ 1990 çулта священник пулса тăтăм.

Аслă Прерсвященствăна, халĕ вăл Турă патшалăхĕнче ĕнтĕ, мана 30 çул хушши Шупашкарпа Чăваш епархийĕнчи ансат мар лару-тăруллă, ĕçсем йывăррăн пулса пыракан приходсене те ертсе пыма яваплăх панăшăн тав тăватăп.

**Киприан (Кулаков) игумен**

***

## Вичкĕн ăслă хăватлă ватă

1983 çулта мана Варнава владыка Мускаври тĕн семинарине вĕренме кайма пиллерĕ. Эпĕ тӳрех çухалса кайрăм, вĕренме кĕрейместĕп, унта нумай пĕлмелле, манран пулмасть тетĕп. Владыка: «Сана лайăх рекомендаци çырса паратăп, вĕренме кĕретĕнех»,– терĕ. Çапла пулчĕ те. Семинарирен вĕренсе тухнă хыççăн вăл мана хăй патне Введени соборне илчĕ, эпир вара Варнава владыкăпа 34 çул пĕрле ĕçлесе пурăнтăмăр.

Çакнашкал интереслĕ пулăм аса килет. Эп ун чухне Введени чиркĕвĕнче анчах ĕçлеме пуçланă. Аслă шăматкун

çĕрлехи кĕлле кайма çыварнă та юлнă. Сиксе тăтăм, пăхатăп, ĕлкĕрейместĕп пуль тетĕп. Ун чухне эпĕ Кăнтăр поселокĕнче пурăнаттăмччĕ. Часрах машина çине лартăм та пысăк хăвăртлăхпа Собора вĕçтертĕм. Çул çинче автоинспекци ĕçченĕсем мана чарчĕç, анчах мĕншĕн çавăн пек хăваланине ăнлантарсан малалла кайма ирĕк пачĕç. Чиркĕве çитрĕм, анчах служба пуçланнă та ĕнтĕ. Владыка патне пытăм та, вăл мана: «Мĕн, сана гаишниксем тытса чарчĕç-им?»– тет. Эп тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм: çакăн пирки вăл мĕнле пĕлме пултарнă-ха? Пулса иртнине нумайччен аса илсе пурăнтăм. Кайран, ытти священниксемпе те, прихожансемпе те пурнăçра çакнашкал самантсем пулнине пĕлсен, тĕлĕнме пăрахрăм. Вăл малашлăха куракан мĕнле хăватлă ватă пулнине ăнланса илтĕм! Ĕмĕр-ĕмĕрех асра, пирĕн хаклă владыка! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Шупашкар тата Чăваш епархийĕн духовникĕ**
**Вениамин Пегасов протоиерей**

***

### Протестантсене хулана кĕртмен

Ку 1990 çулта пулса иртрĕ. Эпĕ ун чухне Шуваловăри (Санкт-Петербург) Çăлаканăн алăпа туман сăнĕ ячĕпе лартнă чиркӳре алтарникре ĕçлеттĕмччĕ. Настоятель пилленипе эпир хамăрăн чиркӳре чăн тĕнпе çыхăннă информаци – протестантсем вĕрентсе каланине хирĕçле листовкăсем – пичетленĕччĕ. Ун чухне протестантсем теплоход тара илнĕ те, Атăл тăрăх кайнă май пур хулана та кĕрсе хăйсен кĕнекисене, ĕненĕвне халăхра сарасшăн пулнă.

Эпир хамăрăн чиркĕве çӳрекен Людмилăна Шупашкара поездпа ăсатрăмăр, Варнава владыкăна хулана протестантсем пырасси çинчен пĕлтерме каласа ятăмăр. Вара вăл протестантсем пынă кун хула çыннисене пирĕн

листовкăсене валеçме владыкăран пил илме пынă. Владыка питĕ тимлĕ итленĕ те чиркĕве çӳрекенсемпе пĕрле хăй çав теплоход патне каятăп тенĕ. Чăн тĕнпе пурăнакансем протестантсене Атăл çыранĕ çине кăларас мар тесе питĕ нумайăн пухăннă. Çынсем пурте владыка хăй вĕсемпе пĕрле килнĕшĕн савăннă. Теплоход пристаньре чылай вăхăт тăнă, анчах пĕр пассажир та тухайман. Ун чухне Шупашкар протестантсене хăйĕн çĕрĕ çине кĕртмен пĕртен-пĕр хула пулнă.

Людмила Варнава архиепископ пилленипе хĕрарăмсен Шупашкарти Спасо-Преображенски мăнастирĕнче Сергия игуменья патĕнче юлнă. Матушка Санкт-Петербурга Варнава владыка, Геннадий протоиерей, Аполлинарий протоиерей тата Илия протоиерей ячĕсене çырнă чĕррисен сывлăхĕшĕн асăнтармалли кĕнеке ярса пачĕ.

Çав вăхăтранпах, 1990 çултан пуçласа, эпĕ хамăн кĕлĕсенче Варнава владыкăна тата ытти священниксене асăнатăп. Манăн манах пурнăçĕ Варнава владыка пилленипе пуçланчĕ. Çӳç касса манаха кĕртекенĕ Иероним (Шурыгин) архимандрит пулчĕ, ун чухне вăл иероманахчĕ. Мана иероманаха кĕме вара 1995 çулхи çулла Введени чиркĕвĕнче алă хучĕç. Варнава владыка ячĕ нихăçан та ан манăçтăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Вениамин (Куликов) игумен**

***

Эпĕ Варнава владыкăна мана тĕрĕс вĕрентсе пыракансенчен пĕри тесе хисеплетĕп. Хăш чухне ун патне кайсан çеç чуна хумхантаракан ыйтусен тĕрĕс хуравне тупаттăмччĕ. Вара ун патĕнчен çунатланса, чунри савăнăçпа, лăпланса тухаттăмччĕ. Варнава владыкăн хăшпĕр канашне халĕ те асра тытатăп, çавсемпе пурнăçра усă куратăп.

Ăна тăван епархишĕн тата ун патне чуна кирлĕ пулăшу ыйтма пыракан кашни çыншăн тунă ырă ĕçсемшĕн чĕререн тав тăватăп. Унăн ятне ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла пултăр.

**Арçынсен Шупашкарти**
**Свято-Троицки мăнастирĕн Кĕçĕн Чурашри (Етĕрне районĕ) хуçалăхĕн настоятелĕ Тихон (Першев) игумен**

***

## Пире çăлăнăç çулĕпе илсе пыма тăрăшнă

Пирĕнтен уйрăлса кайнă Варнава митрополитпа эпĕ хам 11 çулта чухнех паллашнă. Эпĕ ун чухне вăл пирĕншĕн тăрăшнине, пире хӳтĕленине лайăххăн ăнланман та. Çулсем иртнĕçемĕн вара владыка пире çăлăнăç çулĕпе ертсе пыракан юратакан атте пек туйăнма пуçларĕ. Çакă мана 1988 çулхи декабрьте священнике кĕртнĕ хыççăн уйрăмах сисĕнетчĕ. Эпĕ хам пурнăçра çакнашкал пире нихăçан та ашшĕн хӳтлĕхĕсĕр хăварман Аслă Архипастырь пулнишăн савăнатăп, Турра тав тăватăп. Вăл эпир ăс-хакăл енчен аталаннă май чунпа çирĕпленсе пынине курса тăратчĕ.

Владыка мана Шупашкарта приход йӗркелесе чиркӳ тума пиллесен малтан кăштах тĕлĕнтĕм. Анчах, владыка кун пек пиле ахальтен паманнине пĕлсе, хушнă ĕçе тума тытăнтăм. Чăн та, Шупашкара пĕрре те килсе курман меценат часах тĕлĕнмелле майпа тупăнчĕ. Вăл пулăшнипе кĕлĕ çурчĕ туса лартрăмăр.

Владыкăн таса кĕллисемпе пирĕн туслă приход пуçтарăнчĕ. Халĕ те, вăл пирĕнпе юнашар çуккине йышăнма йывăр пулсан та, шухăшпа унпа калаçнă чух эпĕ вăл пулăшнине яланах туятăп.

Вăл пире пурне те Çӳлти Патшалăха кĕме пулăшасса, унта эпир Турăпа пĕрле пуласса шансах тăратпăр.

**Шыва Кĕртекен Иоанн ячĕпе Шупашкарта лартнă чиркӳ настоятелĕ Петр Федоров протоиерей**

***

Варнава владыка ку тĕнчерен куçса кайнăранпа икĕ çул çитет. Анчах унпа çыхăннă çутă асаилӳсем манăн чĕрере ĕмĕрлĕхе юлĕç. Вăл кĕлтуни, чуна кирлишĕн тăрăшни питех те çитмест. Анчах вăл пирĕншĕн, хăй вĕрентсе пынă ачисемшĕн, кĕлтăвасса шанатпăр. Ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла пултăр! Çӳлти Патшалăх сана, владыка!

**Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти**
**Туррăн Таса Амăшĕн Пукравĕн чиркĕвĕн настоятелĕ**
**Алексий Чумерин протоиерей**

## Тăхтавсăр Литурги

Варнава владыка маншăн яланах ырă тĕслĕхчĕ. Эпĕ ун патне яланах хама канăç паман ыйтусемпе пыраттăмччĕ. Вăл питĕ тимлĕ итлетчĕ, ашшĕ ывăлне вĕрентнĕ евĕр час-часах ырă канаш паратчĕ. Хăш чухне вара ятласа та илетчĕ, çирĕплĕхне кăтартатчĕ, пĕр-пĕр ĕçе эпĕ шухăшланă пек тума пил памастчĕ. Çав вăхăтрах унăн пулăшма ăнтăлакан кăмăлĕ, ăс-хакăл пуянлăхĕнчен килекен йăвашлăхĕ, уçă чунĕ туйăнса тăратчĕ. Унăн пурнăçĕ – Турă ĕçĕсене туни, халăхшăн тăрăшни! Çакă вăл мана лайăх енне улшăнма хистекен, унăн кĕлĕ хăватне туйма май паракан, кăмăла çемçетсе Турра мухтама чĕнекен пĕр чарăнми Литурги.

**Турă Амăшĕн «Йывăрлăхран кăларакан» таса сăнĕ ячĕпе лартнă чиркӳри клирик Сергий Ермолаев протоиерей**

***

## Пурне те йăпанăç кӳнĕ

Варнава владыкăн сăнарĕ аса килсен, чи малтанах чĕре тав туйăмĕпе тулать. Халĕ эпĕ утакан священник çул-йĕрĕ çине тăма пил панăшăн тав. Тимлĕхĕшĕн, ыркăмăллăхĕшĕн тав. Ун чухне кĕлтуса пулăшу панăшăн та, халĕ те, владыка Турă Престолĕ умĕнче тăнă чухне, пирĕншĕн, хăйĕн кĕтĕвĕшĕн, кĕлтунишĕн тав.

Мана тĕрĕс вĕрентсе пыракан пачăшкăпа, Геннадий Антонов протоиерейпа, Варнава митрополит патне пĕрремĕш хут кайнăранпа 14 çул çитрĕ. Астăватăп, владыка эпĕ ăна

хамăн пурнăç çинчен, Христос халăхĕ хушшине мĕнле кĕни çинчен каласа панине тимлĕн итлерĕ, мана священнике кĕме хатĕрленме пиллерĕ. Тепĕр çулталăкран, 2008 çулта, Мăнкун праçникĕн юлашки кунĕнче, митрополит мана диакона кĕртрĕ, июлĕн 21-мĕшĕнче вара, Турă Амăшĕн Хусанти таса сăнĕн кунĕнче, пресвитер пулма алă хучĕ. Çавăн хыççăн Турă ирĕкĕпе, Варнава владыка пилленипе эпĕ 9 çул Введени чиркĕвĕн клирикĕ пултăм. Манăн хамăн Архипастырьпе час-часах кĕлтума, унăн аллинчен Туррăн Ӳчĕпе Юнне илме май пулчĕ. 2015 çулта эпир çемьепе хулан çĕнĕ микрорайонне куçса килтĕмĕр. Унта 2008 çултах, микрорайона никĕслеме пуçласан, Варнава владыка çĕнĕ чиркӳ пулас вырăнти Хĕресе кĕлтуса тасатрĕ. 2016 çулта вара чиркĕве тума пуçларĕç. Çакăншăн мĕнпур халăх савăнчĕ. Варнава митрополит кĕлтунипе тепĕр 4 уйăхранах Шупашкарăн Çĕнĕ хула микрорайонĕнче Вырăс çĕрĕнче çуталса кайнă мĕнпур святой ячĕпе лартнă чиркĕве кĕлтуса тасатрăмăр, унта кулленех службăсем иртме пуçларĕç. Владыка мана çак çĕнĕ чиркĕвĕн настоятелĕ пулма пиллерĕ. Паянхи кунчченех эпĕ çавăнта ĕçлетĕп, хамăр районта пурăнакансемпе чиркӳре пĕрле кĕлтуса Христосăн Ӳчĕпе Юнне парнене кӳнипе савăнăça пайлатăп.

Владыкăна аса илнĕ май, вăл çынна итлеме яланах хатĕр пулнине, унăн хуйхи-суйхине ăнланнине, кирек кама та: священник-и вăл, ахаль çын-и – пулăшма тăрăшнине палăртас килет. Унăн пĕлĕт çинчи хута кĕрекенĕ – «савăнтаракан ывăл», Варнава апостол пулнă. Владыка хăй вара çĕр çинче ун патне пыракансене пурне те, çав шутра мана та, йăпатса лăплантарма пĕлетчĕ. Священникре ĕçленĕ май владыка патне пулăшу ыйтма пĕрре мар кайнă. Пурнăçри йывăр лару-тăрура, ĕçре анчах мар, çемьере те тĕрĕс утăм тума унăн ырă канашĕ, вăл кĕлтуни питех те кирлĕччĕ. Вăл мана итлеме, пулăшма килĕшменнине пĕрре те астумастăп.

Халĕ, владыка ку тĕнчерен уйрăлса Турă патне кайнă пулин те, эпир унăн кĕлли пулăшнине туятпăр. Çӳлти Атте хăйĕн шанчăклă чури, Варнава митрополит кĕлтунине илтет, йышăнать, вăл тархасланипе пире пулăшать, чунсене лăплантарать.

Введени чиркĕвĕнче амвонран халăха вĕрентсе калнă чухне владыка кашнинчех хăйĕн çыннисене пăрахмастăп, Турă патне пурте пĕрле каятпăр тетчĕ. Паянхи кун эпир уншăн кĕлтăватпăр, вăл вĕрентсе калană сăмахсене аса илсе хавхаланатпăр, владыка пире хăйĕн кĕллисĕр хăвармастех пулĕ тетпĕр, ку пурнăçра хӳтĕлесе, Турă умне тăрсан та пирĕн хута кĕрессе шанатпăр.

**Вырăс çĕрĕнче çуталса кайнă мĕнпур святойсен ячĕпе**
**Шупашкарта лартнă чиркӳ настоятелĕ**
**Андрей Евсеев священник**

***

## Çынсене ашшĕ пек ăшшăн юрататчĕ

Анне мана мĕн пĕчĕкренех Турă Амăшне чиркĕве илсе кĕнĕ ятпа Шупашкарта лартнă тĕп чиркĕве архиерей ирттерекен службăсене илсе каятчĕ. Совет влаçĕ Чиркӳ çине мĕнле пăхнине эпĕ шкул çулĕсенчех туйса илнĕ. Турра ĕненекенсене хĕсĕрленĕ тапхăрта кашни регионтах тĕн енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсем пулнă, вĕсем çамрăксен пурнăçне тĕрĕслесех тăнă. Шкул ачисен, пионерсемпе комсомолецсен чиркӳсене уççăн çӳреме юраман. 1988 çулхи июнь уйăхĕнче Мускавра Вырăс Православи Чиркĕвĕн

Пухăвĕ иртнĕ. Ун хыççăн пĕтĕм çĕршывĕпех епархисенче Раççей Христос тĕнне йышăннăранпа 1000 çул çитнине паллă тума пуçларĕç. Çав уяв иртсе кайсан совет влаçĕ Чиркӳ çине урăхла пăхма пуçларĕ. Владыка кĕлтунипе тата тăрăшнипе Введени чиркĕвĕн лаптăкĕнче епархи управленийĕн хальхи çуртне туса лартрĕç, стройкăна ертсе пыраканĕ Михаил Степанов протоиерей пулнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче тĕнпе çыхăннă объектсем тума ирĕк паман, çĕрне хуларан аякра, Карачура çăви çывăхĕнче, суйласа илме сĕннĕ.

1989 çулта, Христос Çуралнă уяв кунĕнче, Варнава владыка мана, çамрăк йĕкĕте, архиерей служби вăхăтĕнче иподиакон пулма чĕнчĕ. Çав самантран пуçласа владыка ку тĕнчерен куçса кайиччен эпĕ ун патĕнче малтан аслă иподиакон, 1993 çултан вара диакон пултăм. Эпир, çамрăксем, вăл служба мĕнле иртнине сăнаса унран ĕçлеме вĕренеттĕмĕр. Службăна пырса мĕнле хавхаланупа, юратупа кĕлтăватчĕ вăл! «Вилни е больницăна лекни анчах кĕлле килменнин, е кая юлнин сăлтавĕ пулма пултарать»,– тетчĕ пире владыка. Пурнăçĕн юлашки кунĕсенче те вăл службăсене сиктерместчĕ, кая та юлмастчĕ. Вăл пуриншĕн те тĕслĕх пулнă. Хăйĕнчен çирĕп ыйтатчĕ, çынсенчен те çавăн пекех ыйтатчĕ. Уйрăмах кĕлĕсем ирттермелли устава тĕрĕс тытса пымаллаччĕ, хăй вăл çак устава пăхмасăрах пĕлнĕ.

Варнава владыка чиркĕве çӳрекенсене хĕрхенетчĕ, вĕсемшĕн ашшĕ пек тăрăшатчĕ. Приходсене кайса кĕлĕсем ирттернисĕр пуçне, ĕç кунĕсенче владыка Тĕп Чиркӳре Литургире кĕлтăватчĕ, кайран епархине пынă çынсене йышăнатчĕ, кăнтăрла иртсен вара çĕмĕрсе аркатнă чиркӳ пур ялсене кайса çӳреме вăхăт тупатчĕ. Вĕсем Гурий (Данилов) келейникпе (хальхи архимандритпа, 3-мĕш округ благочиннăйĕпе) «Нива» автомобильпе çӳретчĕç, ун чухне асфальт сарнă çулсем питех пулман. Чиркĕве епархине панă

пулсан, унта юсав ĕçĕсем пыраççĕ пулсан, владыка  чиркӳ хатĕрĕсемпе тивĕçтеретчĕ, канаш парса пулăшатчĕ.

Варнава митрополит тăрăшнипе 2006 çулхи июнь уйăхĕнче хамăр республика çыннисем тата урăх регионсенчен килнисем Христос тĕнĕпе пурăнакансемшĕн чи чаплă, хаклă япала – Христоса Шыва Кĕртекен Малтан килекен Иоанн Святой Пророкăн çĕрмен сылтăм алли – умĕнче пуççапса кĕлтума пултарчĕç.

Варнава владыка Шупашкар кафедринче 44 çул ĕçленĕ тапхăрта епархине Вырăс Чиркĕвĕн пуçлăхĕсем виçĕ хутчен килнĕ. Вĕсем кӳршĕри республикăсене килсен вара владыка унта каятчĕ. Пĕр интереслĕ саманта питĕ лайăх астăватăп. Вăл 28 çул каялла юнашар регионта, унта Иккĕмĕш Алексий Святейши Патриарх ĕçлĕ тĕлпулăва килсен пулса иртнĕччĕ. Тĕлпулу вĕçленсен Патриарха аэропортра ăсатаççĕ. Вăл самолет çине ларчĕ, ăсатса яракансем саланма пуçларĕç, анчах Варнава владыка вĕсене: «Атьăр-ха самолет вĕçсе хăпариччен тăхтар»,– терĕ. Тĕлĕнмелле, самолет 20 минута яхăн вырăнтах тăчĕ, темĕн юсавсăр пулнине тупса палăртнă та борта ылмаштарнă. Самолет вĕçсе хăпарнă хыççăн владыка тата тепĕр сехет, вăл Мускавра анса лариччен кĕтме, çав вăхăта калаçса ирттерме сĕнчĕ.

«Самолет Мускавра анса ларсан тин Патриархăн ĕçлĕ çулçӳревĕ вĕçленет»,– терĕ владыка ăсатма пынă çынсене.

Митрополит владыка пуриншĕн те чун пархатарĕн çĕкленӳлĕхĕпе тата хумханса кĕлтунипе тĕслĕх пулса тăнă. Хăш чухне çынна нимле майпа та ӳкĕте кĕртеймесен, владыка тĕлĕнмелле тĕрĕс сăмахсем калатчĕ: «Эп айăпламастăп, вăл хăйех хăйне айăплать», «Турă суд тутăр», – тетчĕ. Владыка пуриншĕн те çывăх аслă священник, тĕрĕс вĕрентекен пулнă, ун патне яланах пил илме пырса чуншăн усăллă канаш илме пулатчĕ.

Мана вăтăр çул Аслă Вată хушнă ĕçсене туса пыма май панăшăн Турра тав тăватăп, Владыкăшăн, хамăн ырă вĕрентекеншĕн, кĕлтăватăп.

**Введени соборĕн клирикĕ**
**Валерий Краснов протодиакон**

***

## Ырă чĕреллĕ архипастырь

2001 çулта Варнава митрополит пилленипе эпĕ Шупашкарти тĕн училищине вĕренме кĕтĕм. Вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсенчех унăн пилĕпе алтарник тата иподиакон пулса тăтăм. Ĕçе савăнсах çӳреттĕмччĕ. Владыка яланах, пушă вăхăт пулсан, чуншăн усăллă литература вулатчĕ, чиркӳ ĕçĕпе çыхăннă хушусемпе, приказсемпе паллашатчĕ. Кĕлтăвас хастар кăмăла юрататчĕ, службăсене ирттерес йĕркене çирĕп пăхăнатчĕ, питĕ яваплăччĕ, яланах кĕлтăватчĕ. Çыннăн тĕрлĕ сăлтава пула иксе тухнă йывăр лару-тăрăвне ырă чĕреллĕ архипастырь юратакан ашшĕ пек ăнланма тăрăшатчĕ. Пĕррехинче çапла эпир Куславккана архиерей служби ирттерме каятпăр. Пирĕн машинăн харăсах икĕ урапи те шăтрĕç. Такси чĕнсе служба ирттермелли хатĕрсене унта куçарма тиврĕ. Çав вăхăтра пирĕн архипастырь малалла каясса йăвашшăн кĕтсе ларчĕ. Çакă пире хавхалантарчĕ те, лăплантарчĕ те, çул çинче иксе тухнă пăтăрмахран хăтăлма пулăшрĕ.

Владыка яланах хăйĕн кĕлтăвас хастар кăмăлне пирĕн пата çитерме, пурнăçри кăткăс пулăмсене çĕнтерсе çăлăнăç çулĕпе илсе пыма тăрăшатчĕ.

**Епархи управленийĕн администраторĕ**
**Евгений Феклистов**

## Владыка хӑй мана ҫулӑм пачӗ

Эпӗ мӗн пӗчӗкрен чиркӗве ҫӳреме юрататтӑм, мӗншӗн тесен мана ҫуралнӑранпах ҫапла хӑнӑхтарнӑ. Ҫак самант аса килет. Ҫутӑ Мӑнкун кунӗнче ҫынсем пурте чиркӗве Христос Чӗрӗлсе Тӑнин Аслӑ уявне килнӗ, Тивлетлӗ ҫулӑм илсе килессе кӗтеҫҫӗ. Варнава владыка чиркӗвӗн кайри, анӑҫ енчи пӳлӗмне Тивлетлӗ ҫулӑма кӗтсе илме тухрӗ. Вӑл ҫулӑмпа утса пынӑ чухне эпӗ тӑнӑ та, ун ҫине пӑхатӑп. Владыка мана асӑрхарӗ те Тивлетлӗ ҫулӑмпа ҫурта тивреттерчӗ. Мӗнле пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ ҫакӑ маншӑн, мана владыка хӑй ҫулӑм тивретме пачӗ! Варнава владыка пилленипе эпӗ 7 ҫул ӗнтӗ алтарник пулса ӗҫлетӗп. Малтан, ача чухне, эпӗ Христосшӑн асап тӳссе вилнӗ Раҫҫейри ҫӗнӗ святойсен ячӗпе лартнӑ чиркӗве ҫӳреттӗмччӗ. Владыка мана асӑрхарӗ те Введенски тӗп чиркӗве чӗнчӗ. Ҫапла эпӗ ку чиркӗве кӗтӗм.

Варнава владыкӑна ӗмӗр асӑнса пурӑнар! Ҫӳлти Патшалӑхра пултӑр!

**Шупашкарти Введени соборӗнчи Иван иподиакон**

***

Варнава владыка пилленипе эпӗ Мускаври Тӗн Академийӗпе семинарийӗн турӑшсем ӳкерме вӗрентекен шкулне кӗтӗм. 1996 ҫулта унтан вӗренсе тухсан владыка мана Шупашкарта иконопись кружокне ертсе пыма пил пачӗ. Ҫав вӑхӑтранпа паянхи кунччenex эпӗ унта тӑрӑшатӑп.

Вӑл кӗлтунипе эпир турӑшсем ҫырас ӗҫе ӑнӑҫлӑ вӗренсе пыратпӑр. Унпа ҫыхӑннӑ асаилӳсем пирӗншӗн сӑваплӑ! Пӗлӗт ҫинче те вӑл пирӗншӗн кӗлтунине ӗненетпӗр.

**Нина Степанова**

# ЧИРКӰ ПАТНЕ ХЫВНӐ ҪУЛ



Ҫыннӑн ҫӗр ҫинчи пурнӑҫӗ ӗмӗр пӗтми тӑсӑлмасть. Omnes una manet nox. «Пурне те пӗр ҫӗрлехи каҫ кӗтет», – тенӗ авалхи ҫынсем. Анчах Пултаракан пирӗнтен кашнинех хамӑр хыҫҫӑн ырӑ ӗҫсем хӑварма май парать. Ҫавӑн пек ӗҫсене кура Ӗмӗрлӗх пурнӑҫа куҫакансене ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ӑрусем яланах чӗререн тав туса ырӑпа аса илӗҫ.

Шупашкарпа Чӑваш митрополичӗн Варнавӑн ӗненӳпе пурӑнакан халӑхшӑн тунӑ ырӑ ӗҫӗсем иксӗлми. Вӑл Чӑваш ҫӗрӗнче нумай ҫул ывӑнма пӗлмесӗр, тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Ҫав вӑхӑтра совет саманинче хур курнӑ мӑнастирсем, чиркӳсем ишӗлчӗк куписенчен ҫӗкленчӗҫ, ҫӗнӗ чиркӳсем ӳссе ларчӗҫ.

Ырă архипастырь кĕлтунипе тата унăн ăслă канашĕсене ăша илсе пин-пин çын тĕрĕслĕх тупнă, Турă çулĕ çине тăнă. Хаклă владыкăн кулленхи çăмăл мар ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕн çырса кăтартас пулсан темиçе пысăк том кĕнеке пулĕччĕ.

Анчах, ман шухăшпа, Аслă Преосвященствăн пурнăç çулĕнче те, паянхи Чăваш Енĕн летописĕнче те Шупашкарта Чиркӳ патне Çул хывни чи паллă вырăн йышăнать. Ку вăл Хĕрлĕ Лапамран пуçланса Введени соборĕ, Михаил Архангел чиркĕвĕ, Турă Амăшĕн Успени чиркĕвĕ тата арçынсен Свято-Троицки мăнастирĕ патне илсе çитерекен, 600 метра тăсăлакан транспортпа çӳремелли тата çуран утмалли дамба çеç мар. Тата Мускав кĕперĕ урлă çӳрекен транспорт юхăмне чакаракан питĕ кирлĕ трасса та мар. Ку вăл – халăх чун ăс-хакăлĕ тĕлĕшĕнчен пуянланни, Ĕненӳ, Шанчăк тата Юрату патне, хамăрăн кăмăл-сипет тасалăхĕпе кунçул таппин çăлкуçĕ патне таврăнни.

Çĕнйĕркелӳ тапхăрĕ пуçлансанах Грузи режиссерĕ Тенгиз Абуладзе ӳкернĕ «Покаяние» фильма кăтартнине астăватăп. Картина мĕнпе вĕçленни чунра питĕ тарăн йĕр хăварать. Ватă, пурнăç курнă ăслă хĕрарăм кураканран: «Çул вăл чиркӳ патне илсе çитермест пулсан мĕн тума кирлĕ?»– тесе ыйтнăн туйăнать. Ку ыйту çак йĕркесене çыракана та шухăша ячĕ... Çавăнпа та, Чăваш Республикин халăх суйланă пĕрремĕш Президенчĕ пулса тăрсан, манăн малтанхи утăмсенчен пĕри вăл – Шупашкар варринче, хытхура пусса илнĕ шурлăхлă вырăнта, Чиркӳ патне мăнаçлă Çул тума йышăнни пулчĕ. Вăл халăх кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен тасалнине тата ӳкĕннине, тăван Чăваш Ен çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрса таса сывлăшпа сывлама тытăннине кăтартакан паллă пулса тăчĕ.

«Çынсен çимелли нимĕн те çук, вăл çулсем хывать, чиркӳсем тăвать»,– тесе мăкăртататчĕç тиркеме юратакансем. Хăшĕ-пĕри, уйрăмах хирĕç тăракансенчен, тăнлав тĕлĕнче пӳрне çавăрса кăтартакан та пулнă. Сăваплă

Çырура  каланине: «Этем çăкăрпа анчах пурăнмасть, вăл Турă çăварĕнчен тухакан кашни сăмахпа  пурăнать»,– тенине маннă вĕсем.

Пытармасăр каласан, çăмăл пулмарĕ, шухăшсем канăç памарĕç. Анчах Высокопреосвященнейший владыка пĕтĕм иккĕленĕве сирсе ячĕ. Вăл çак пуçарăва ырларĕ çеç мар, пур енĕпе те пулăшса пычĕ. Паллах, унăн сăмахĕ,  вăл ĕçе епле хаклани маншăн питĕ хаклă: *«Эпĕ лайăх астăватăп, Николай Федоров 1995 çулта Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ патне, апла пулсан, пĕтĕм чăваш халăхĕ патне «Чиркӳ патне илсе каякан çул тăвăпăр» ятпа пĕрремĕш çырупа тухрĕ. Ун чухне атеистсенчен нумайăшĕ çак сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланмарĕç. Президент вара акă мĕнле аслăран та аслă шухăш уçса пачĕ: иртнĕ йăнăшсемшĕн ӳкĕнме пуçламасăр эпир малашлăх валли цивилизациллĕ пурнăç  тăваймастпăр. Вара вăл хăйне çӳллĕ шайри пуçлăха суйланă халăха  хăйĕн тĕслĕхĕпе  Ырлăх, Ĕненӳ, Юрату шухăш-тĕллевне мала хурса вăй хунине кăтартса пачĕ. Чиркӳ патне чăнах та çул хыврăмăр – вуншар чаплă чиркӳ туса лартрăмăр, мăнастирсене çĕнĕрен çĕклерĕмĕр. Вĕсен никĕсĕсене ятран чул хума, кайран престолĕсене кĕлтуса тасатма Мускавпа Пĕтĕм Русь Патриархĕ Иккĕмĕш Алексий хăй килнĕччĕ.*

*Чăваш Енри хуласемпе ялсенче кивĕ чиркӳсене юсаса хута  яраççĕ, çĕннисене хăпартаççĕ. Тăван çĕрĕнче истори астăвăмне упраса хăварас тĕлĕшпе хăй тӳпине хывнă çын вăл нихăçан та астăвăмшăн хаклă палăксене аркатас çĕре хутшăнмасть. Ку енĕпе совет влаçĕн пĕлтерĕшĕ пысăк, Николай Федоров республикăра шăпах çав çулсенче унăн тытăмĕнче ĕçлесе пурăнчĕ».*

2000 çулхи çулла Раççей Президенчĕ Владимир Путин Кремлĕн Пысăк керменĕнче, Георгий залĕнче Шупашкар тата Чăваш митрополитне Варнавăна  наукăпа техника енĕпе Раççей Федерацийĕн Патшалăх премине парса чысланине палăртма питех те кăмăллă. Çак пысăк наградăна илме

Чăваш Енĕн тĕп хулин кивĕ пайне çĕнĕ сăн кĕртсе илемлетес ĕçе хутшăннă çынсем тивĕçлĕ пулчĕç.

Чĕрĕк ĕмĕр каялла, 1996 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче, эпир Вырăс Православи Чиркĕвĕн Предстоятелĕпе, Мускав тата Пĕтĕм Русь Святейший Патриархĕпе Иккĕмĕш Алексийпе Чиркӳ Çулне уçса хĕрлĕ хăю касрăмăр. Тахçан пăрахăç пулнă вырăн тĕлĕнмелле майпа улшăнса çĕнелнĕ. Кӳлемĕн (заливăн) тĕкĕр пек çутă шывĕ, тапса тăракан фонтансем, ылтăн тăрăллă чиркӳсем Чăваш Енĕн тĕп хулине, Шупашкара, килекен хăнасене тата кунта пурăнакансене илĕртеççĕ.

Чиркӳ Çулĕ республика пурнăçĕнчи паллă пулăмсене: Христоса ĕненекенсен паллă святойĕн, Турра Шыва кĕртекен Иоанн Пророкăн сылтăм аллин пайне хунă пĕчĕкçĕ арчана илсе килнине, Турă Амăшĕн Хусанти таса сăнĕн тата Халăхсен пĕрлĕхĕн кунĕнче пĕрремĕш хут хĕрес йăтса утнине астăвать. Ун чухне малтан пыраканни Савватий епископ пулчĕ, халĕ вăл Чăваш митрополийĕн пуçлăхĕ.

«Турă Вăл – вилнисен Турри мар, чĕррисенĕн Турри,Уншăн пурте чĕрĕ»,– тесе вĕрентет Çăлакан. Хăйĕн çĕр çинчи ывăнмасăр туса пынă ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн хаклă Варнава владыка пирĕншĕн халĕ те Турă патне хăйĕн ăшă кĕллисене çитерекен ырă кăмăллă, тăрăшакан кĕтӳçĕ. Чиркĕве илсе пыракан çул çинче тĕрĕслĕх шыракансемшĕн вăл яланах ăслă вĕрентекен пулса юлать.

**Чăваш Республикин пĕрремĕш Президенчĕ**
**Николай Федоров**

# УН ПИЛĔПЕ ĔНЕНӲ ÇУЛĔ ÇИНЕ ТĂТĂМĂР



## Пĕтĕм ĕçе унăн пилĕпе пуçлаттăм

Варнава владыкăпа эпир 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче паллашрăмăр. Эпĕ ун патне венчете тăрас, ачасене тата арăма Татьянăна тĕне кĕртесси пирки калаçса татăлма пытăм. Тӳрех владыкăн ырă çутă вăйне, вăл шӳтлеме пултарнине, унăн ăшă кăмăлне туйса илтĕм. Çакăн хыççăн эпĕ Введени чиркĕвне час-часах çӳреме пуçларăм. 1994 çулта Чăваш Республикин Патшалăх Канашне депутатсене суйлас умĕн эпĕ унран пиллĕх илсе хамăн кандидатурăна та тăратрăм, вара Чăваш Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш пухăвĕн депутачĕ пулса тăтăм.

Хамăн ĕçсене пуçлас умĕн ялан тенĕ пекех эпĕ унран пиллĕх илнĕ. Вăл пилленипе 10 çул ĕнтĕ эпĕ Иерусалимран Туррăн тивлетлĕ Çулăмне илсе килетĕп, çакăншăн хама телейлĕ туятăп. Варнава владыка маншăн пуян ăс-халлă, ырă кăмăллă, çутă çын, юлташ, вĕрентекен, канаш паракан пулнă. Вăл ĕмĕр асăнма тивĕçлĕ! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Раççей Патшалăх Думин депутачĕ**
**Анатолий Аксаков**

## Унпа калаҫнӑ хыҫҫӑн ӗненӳ ҫирӗпленет

Варнава владыка питӗ ӑслӑ та тӳрӗ чунлӑ, хӑюллӑ ҫын пулнӑ, вӑл малалла ҫирӗп утӑмсем тума, кирек епле ҫӗнӗ пуҫарура та чиркӳ ӗҫченӗсене анчах мар, ытти ҫынсене те пулӑшма ӳркенмен. Вӑл чӑн тӗнпе пурӑнаканӑн тӗнчекурӑмне уҫҫӑн палӑртатчӗ, унпа калаҫнӑ хыҫҫӑн кӑмӑл ӗненӳ енне ҫаврӑнатчӗ.

Варнава владыкӑна эпӗ нумай ҫул пӗлнӗ, анчах та юлашки виҫӗ ҫул ҫеҫ унпа таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме тӳр килчӗ. 2019 ҫулта эпӗ Чӑваш кӗнеке издательствин директорӗнче ӗҫлеме пуҫларӑм. Манӑн ачасем валли Библи калавӗсен чӑвашла тата вырӑсла кӗнекине кӑларас шухӑш ҫуралчӗ. Ҫак ӗҫе пурнӑҫа кӗртес тесен манӑн кӑмӑл анчах ҫителӗксӗр пулчӗ. Библире ҫырнӑ текстен автор прависене хӳтӗлекен Раҫҫей Библи Обществинчен ирӗк ыйтмалла. Унсӑр пуҫне, ӗненекенсемшӗн ку кӗнекене кӑларма Варнава митрополит пиллени пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине те эпӗ ӑнланнӑ. Мана ҫак ӗҫе пурнӑҫлама методика пулӑшӑвӗ, пӗр шухӑшлӑ ӗненекен ҫынсем кирлӗ пулчӗҫ. Вара 2019 ҫулхи ҫуркунне эпӗ владыка патне пиллӗх илме кайрӑм. Владыка мана йышӑнчӗ, ҫак шухӑша питӗ ырларӗ. Проекта сӳтсе яврӑмӑр, вӑл мана тӳрех Игнатий епископпа тата Максим аттепе паллаштарчӗ. Шухӑшӗ ҫав тери лайӑх, ӑна пӗрле пурнӑҫлар терӗ. Ку вӑл пуҫламӑшӗ пулчӗ, унӑн пиллӗхӗпе вара ӗҫӗ те малалла хӑвӑрт кайрӗ.

Паллах, малтан эпир РБО-на ҫырса ятӑмӑр, унтан ҫакӑн пек хурав килчӗ: кӗнеке кӑларма ирӗк паратпӑр, анчах тиражӑн 10 процентне социаллӑ хӳтӗлев учрежденийӗсенче пурӑнакан ачасене уйӑрса памалла. Калавсене чӑвашла паллӑ ҫыравҫӑ, Библие чӑвашла куҫараканӗ Ева Лисина куҫарчӗ. Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн ӗҫченӗ Антонина Ильинична Мордвинова мана чиркӳсене илемлетекен Иван Васильевич Александров

художникпе паллаштарчӗ. Вӑл вара кӗске вӑхӑтрах Кивӗ Халал валли иллюстрацисем хатӗрлерӗ. Ҫӗнӗ Халал иллюстрацийӗсем вырӑнне Чӑваш Енри чиркӳсенчи ӳкерчӗксемпе усӑ куртӑмӑр. Пирӗн ӗҫе кӑмӑлпах хутшӑнакан тепӗр ҫын, нумай ҫул вырсарни шкулне ертсе пыракан Максим Подшибякин иерей, ачасем вӗренекен тӗп кӗлӗсен кашни предложенине тӗплӗн ӑнлантарса ҫырса пачӗ. Тата эпир православишӗн Чӑваш ҫӗрӗнчи чиркӳсенче упранакан чи пысӑк пӗлтерӗшлӗ 20 таса япалапа та паллаштарас терӗмӗр. Вӗсем ҫинчен Антонина Ильинична Мордвинова ҫырса пачӗ.

Декабрь уйӑхӗнче кӗнеке хатӗр те пулчӗ. Кӗнекен курӑмлӑх пӗрремӗш экземплярне илсе, эпӗ Варнава владыка патне кайрӑм. Ку 2019 ҫул вӗҫӗнче пулчӗ, эпӗ унпа юлашки хут тӗл пулнӑ иккен. Эпӗ кӗнекене кӑтартрӑм, ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен каласа патӑм. Владыка пӑхса тухрӗ, ҫак издани ӑна питӗ килӗшрӗ. Вӑл издательствӑна, кӗнеке кӑларас енӗпе ӗҫленӗ пӗтӗм ушкӑна тав турӗ. Чӑнах та, епархипе гуманитари институчӗсӗр эпир ҫак ӗҫе тӑваймастӑмӑрччӗ. Ҫак кӗнекене вӑл тулли кӑмӑлпа йышӑнчӗ. Тиражӑн пӗр пайне эпир вырсарни шкулӗсене патӑмӑр. Ҫак тӗлпулура маншӑн тата тепӗр паллӑ самант пулчӗ. Владыка: «Манӑн та сире парне парас килет»,– терӗ те аллине темӗнле хутаҫ илчӗ. «Кӑна мана Иерусалимран илсе килсе панӑ»,– терӗ. Унтан Таса Ҫӗртен илсе килнӗ пӗчӗкҫӗ турӑш кӑларчӗ те пиллесе мана парнелерӗ. Вӑл маншӑн ҫав тери хаклӑ япала пулса тӑчӗ, килте хисеплӗ вырӑнта упранать. Ӗҫ тунӑ чухне, уйрӑмах вӑл йывӑррӑн каять пулсан, эпӗ яланах ун умӗнче кӗлтуса Турӑран пулӑшу ыйтатӑп.

Иртнӗ ҫул ачасем валли ҫырнӑ «Библи калавӗсене» Вырӑс Православи Чиркӗвӗн Издательство канашӗ Мускавпа Пӗтӗм Русь Патриархӗ Кирилл пилленипе ирттерекен «Просвещение через книгу» Уҫӑ конкурса тӑратрӗҫ. Эпир «Ачасемпе ҫамрӑксем валли кӑларнӑ чи

лайăх кĕнеке» номинацире иккĕмĕш степеньлĕ диплом илтĕмĕр. Варнава владыкăн тӳпи çакăнта, паллах, питех те пысăк, мĕншĕн тесен пĕтĕм ĕçе вăл пилленипе тата вăл пулăшнипе пурнăçларăмăр. Халĕ çак кĕнеке çемьесене, шкулсене саланать, ăна питĕ лайăх хак параççĕ.

**Чăваш Республикин культура, национальностьсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ Светлана Каликова**

## Çутă юписенчен пĕри

Кашни çын çĕр çине юрату тата çутă илсе килет. Кашни çыннах тĕттĕмлĕхпе пĕлменлĕхе çутатса яракан çуткăчпа танлаштарма пулать.

Варнава владыка – шыракансен тата асапланакансен чунĕсене хăйĕн ăшăлăхĕпе çутатса яракан çутă юписенчен пĕри.

Çак тĕнчене çутăрах пултарнă çынна хисеплетпĕр, тав тăватпăр!

**«Чăваш Енри хĕрарăмсен пĕрлешĕвĕн» председателĕ**
**Наталия Николаева**

***

Çакăн пек пулăма астăватăп: Сергий Овсянников священник (вăл Библие чăвашла куçарнă чухне богослови редакторĕ пулнă) ăнсăртран, хăй сисмесĕрех, митрополит Варнава çинчен: **«Вăл пулас Святой вĕт!»** – тесе каларĕ. Эпĕ те çаплах шутлатăп – Святой!

**Ĕмĕр-ĕмĕр юратса**
**Библие чăвашла куçараканĕ Ева Лисина**

## Çакăн пек кĕлтăвакан пурри вăл – Туррăн ырăлăхĕ

Эпир Варнава владыкăпа 2008 çулта паллашрăмăр, пирĕн хушăра тӳрех ăшă та туслă хутшăнусем йĕркеленчĕç. Владыка ман пата телефонпа шăнкăравласан унпа чылайччен калаçаттăмăр. Эпĕ ун патне епархине кайса çӳреме пуçларăм, вăл мана яланах Иерусалимран илсе килнĕ пĕр-пĕр пĕчĕкçĕ парне паратчĕ. Халĕ вĕсем маншăн пурте сăваплă япаласем, юратнă кĕлтăвакан çинчен аса илтереççĕ, пурнăçра пулăшса пыраççĕ. Пирĕн шухăш-кăмăл пĕрешкел пулни эпир владыкăпа пĕр кун, анчах 30 çултан тăракан уйрăмлăхпа, çуралнипе çыхăннă пулĕ. Вăл маншăн атте пекехчĕ: хăш чух çирĕппĕн те калатчĕ, анчах юратнине ытларах палăртатчĕ. Пĕррехинче, сăнӳкерчĕкре мана шăлаварпа курсан, хытах ятларĕ: «Хĕрарăмăн нихăçан та арçын тумĕпе çӳремелле мар!»– терĕ. Çавăнтанпа эпĕ шăлавар тăхăнмастăп.

Владыка яланах юнашар пулнă. Вăл халĕ те юнашарах. Эпĕ вăл кĕлтунине туйсах тăратăп. Пĕррехинче эпир паломниксемпе Петрпа Феврони святойсене питĕ хисеплекен Муром хулине кайса килтĕмĕр. Унта вĕсен çĕрмен ӳчĕсем те упранаççĕ. Çулçӳрев хыççăн эпĕ владыка патне пил илме кайрăм. Пирĕн тӳрĕ пурăнăçлă мăшăр ячĕпе Канашра часовня туса лартас кăмăл çуралчĕ. Вара тин çеç пĕрлешнĕ çамрăк мăшăрсем унта пырса çемье пурнăçĕпе нумай çул телейлĕ пурăнма пиллĕх илме пултарĕччĕç. Эпĕ çакăн пирки калама тытăнсанах митрополит пил пачĕ те: «Вăт Петрпа Феврони ячĕпе лартăр та. Республикăра ун пек чиркӳ çук. Анчах часовня мар, чиркӳ, алтарьпе пултăр»,– терĕ.

Владыка пиллени тĕлĕнтермĕшсем тăвать! Часовня-чиркӳ кĕске вăхăтра ӳссе ларчĕ, ăна тăвас ĕçе пĕтĕм хула хутшăнчĕ, никам та айккинче тăрса юлмарĕ. Пур предприятисенче те укçа-тенкĕ пухрĕç, учрежденисенче

ĕçлекенсем хăйсен сумлă тӳпине хыврĕç. Пенсионерсем те, пенсийĕсем пысăках мар пулин те, нухратне шеллесе тăмарĕç, хулари мăсăльмансем те пулăшрĕç. Çапла пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн халăхпа пĕрле чиркӳ турăмăр! Кĕлтуса тасатма митрополит хăй килчĕ, ку халăхăн чиркĕвĕ терĕ, мĕншĕн тесен ăна никĕсĕнчен пуçласа тăррине çитиччен халăхран пухнă укçапа хăпартнă.

Варнава владыка архиерей санне йышăнсан пирĕн хулара пĕрремĕш  хут пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула кĕнĕ. Мĕншĕн тесен республикăра чи малтан, Канаш хулинчи пĕр шкулта, православи класĕсем уçăлчĕç. Варнава митрополит ун чухне кашни вĕренекене пил пачĕ,  çак пуçарушăн питĕ савăнчĕ. Владыка ачасен çитĕнĕвĕсемпе кăсăкланатчĕ, вĕсемпе тĕл пулма юрататчĕ, православи класĕсенче пĕлӳ илекенсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн яланах пил паратчĕ. Хăш чухне православи класĕсене хупас хăрушлăх та килсе тухатчĕ. Анчах кашнинчех, самаях иртĕхнĕ хыççăн, усал каялла чакатчĕ. Владыка пилленĕ вĕт!  Унсăрăн епле-ха? Акă ĕнтĕ пĕрремĕш «чĕкеçсем»  аслă классенче вĕренме пуçларĕç. Нумайăшĕ хăйсен ашшĕ-амăшне чиркĕве илсе пычĕç.

Мана унăн çумĕнче лайăхчĕ. Туррăн мĕн тери пысăк ырăлăхĕ вăл – юнашар çакăн пек кĕлтăвакан пурри!

2012 çулта мана хула ертӳçине суйларĕç. Çак ĕçе тытма манăн пĕрре те кăмăл çукчĕ. Çавăнпа та килĕшиччен владыка патне кайса канашлама шутларăм. Вăл вăхăтра хулара лару-тăру питĕ кăткăсчĕ, урăх вариантсем пулман, ыйтăва хăвăрт татса памаллаччĕ. Владыка пиллерĕ, анчах çапла асăрхаттарчĕ: «Санăн йывăр хĕрес йăтса утма тивет. Йышăнмалла, ĕçлемелле, чăтмалла»,– терĕ.  Ĕçрен хăтарма ыйтса заявлени çырма хатĕр самантсем пулсан, каллех владыка патне каяттăм. Каялла чакма пиллеместчĕ вăл: «Хĕрес çинчен анмаççĕ, ун çинчен антараççĕ»,– тетчĕ. Суйлав умĕн каллех ун патне пил илме пытăм.  Вăл мана:

«Сана ку мĕн тума кирлĕ? Суйлав лайăхах иртет, ан пăшăрхан. Анчах сана çакăншăн тав тумĕç, ĕçрен хăтарĕç»,– терĕ. Шăпах çакăн пек пулса тухрĕ те.

Пĕррехинче Мускавра Сретени мăнастирĕн магазинĕнче эпĕ кĕнеке туянтăм. Çĕрле поездпа пынă чух вуласа тухас тесе çӳхе кĕнеке анчах суйласа илтĕм. Унта пирĕн владыка çинчен çырнине вуласан питех те тĕлĕнтĕм!  Кĕнекере вĕсемпе юнашар ялта пурăннă, малашлăха куракан телейлĕ Полюшка çинчен каласа панă. Эпĕ акă мĕн вуласа пĕлтĕм: «Евдокия Кедрова ун патне икĕ çулхи ывăлне илсе пырсан, Полюшка хăва ăшă çил вĕрнипе хумханнă пек енчен-енне тайăлма пуçланă.  Кайран вара арçын ачан пуçĕ çине юратса хĕрес хывнă та: «Дуня, эсĕ ăна упра, вăл архиерей пулĕ!»– тенĕ. Чăнах та, юнашарти Высокое ялĕнчи Вова Кедров ӳссе çитĕннĕ, Троице-Сергиева Лаврăна кайнă, Варнава ятпа манаха кĕнĕ, кайран вара архиерей санне илнĕ». (Игорь Евсин. «Полюшка»).

Кайран эпĕ çакăн пирки владыкăна каласа патăм. Вăл телейлĕ Полюшка çинчен кĕнеке пичетленсе тухнăшăн питĕ савăнчĕ. Вĕсем çывăх тусĕпе ун патне кайса çӳреме питĕ юратнă иккен. Владыка, хăй çуралнă кĕтесе кайсан, яланах Полюшка вилтăпри çине кĕрсе тухнă.

Пирĕн митрополит малашлăха курса тăнă! Эпĕ вăл пулăшнипе нумай япала çине урăхла пăхма пуçларăм, вăл мана нумай канаш панă,  вĕрентнĕ. Унăн кашни сăмахĕ манăн чĕрере яланлăхах юлĕ.

**Людмила Иванова**

## Кӗнекене пиллерӗ

Иртнӗ ӗмӗрте репресси ҫулӗсенче манӑн асаттене Федор Алексеевич Анисова айӑпланӑ. Вӑл Муркаш районӗнчи Мӑн Сӗнтӗр салинче священник пулнӑ. Юлашки хут ун ҫинчен Улатӑр районӗнчи Первомайски поселокӗнче ҫырса хӑварнӑ. Унта ӗҫпе юсакан пӗрремӗш номерлӗ колони вырнаҫнӑ пулнӑ. Ҫак лагерьте чылай чиркӳ ӗҫченӗ вилнӗ, вӗсенчен тӑваттӑшне Христосшӑн асапланса вилнӗ Раҫҫейри ҫӗнӗ святойсен йышне кӗртнӗ. Эпӗ яланах асатте ӗмӗрлӗх канлӗх тупнӑ вырӑна ҫитсе курас пысӑк ӗмӗтпе пурӑнаттӑм. Ҫичӗ ҫул каялла Улатӑр хулине пӗрремӗш хут кайса курни манӑн чӗрере тарӑн йӗр хӑварчӗ. Унта аваллӑх паллисене упрани, ӗмӗрхи Раҫҫей Чӑн тӗн сывлӑшӗпе сывлани туйӑнса тӑрать. Эпӗ арҫынсен Свято-Троицки мӑнастирӗнче, Турӑ Амӑшӗн «Иверская» таса сӑнӗ ячӗпе лартнӑ чиркӳре пулса куртӑм.

2014 ҫулта эпӗ арҫынсен Шупашкарти Свято-Троицки мӑнастирӗн Мӑн Сӗнтӗрти хуҫалӑхне кайнӑччӗ. Ҫав кун Варнава владыка унта Виҫ–ипостаҫлӗ Таса Турӑ ячӗпе лартнӑ чиркӳре литурги ирттернӗ. Эпир унпа служба хыҫҫӑн апат вӑхӑтӗнче калаҫрӑмӑр. Варнава владыка Иоанн Крестьянкин аттепе тӗл пулса калаҫни ҫинчен ӑшшӑн аса илсе каласа пачӗ: «Эпӗ ӑна 50 ҫул пӗлнӗ вӗт, ун патне Печорӑна кайса ҫӳренӗ!». Хамӑрӑн калаҫура эпир Иннокентий митрополит вӗренекенӗн – Макарий Невскин (1835-1926) ӗҫӗ-хӗлӗ пирки сӑмах пуҫартӑмӑр. Вӑл пӗтӗм ҫӗршывра, уйрӑмах Алтайра, паллӑ пулнӑ, ӑна унта «апостол» тесе чӗннӗ. Эпӗ ун ҫинчен кӗнеке ҫырма хатӗрленни ҫинчен пӗлтертӗм, владыка пиллерӗ (хальхи вӑхӑтра Варнава владыкӑна тата Макарий митрополита халалланӑ кӗнеке пичете хатӗр). Ун чухне эпир владыкӑпа калаҫса чылай вӑхӑт, сехете яхӑн, ирттернинчен пурте

тӗлӗнчӗҫ. Пӗрремӗш тӗлпулу хыҫҫӑн эпӗ кашни килмессеренех унпа тӗл пулма тӑрӑшаттӑм. Эпир чылайччен калаҫаттӑмӑрччӗ, эпӗ ӑна хамӑн ӗҫсемпе паллаштараттӑмччӗ. Владыка хӑш-пӗр вырӑнсене тӳрлететчӗ, хушатчӗ.

Мана пулӑшнӑшан, кӗлтуса тӗрек панӑшӑн владыкӑна таса кӑмӑлпа, мӗнпур чунтан тав тӑватӑп!

**ҫыравҫӑ-историк, Раҫҫей писателӗсен Союзӗн пайташӗ**

**Лев Анисов**

***

## Кӗнекене пичете пачӗҫ

Эпӗ Варнава владыкӑпа юлашки хут 2020 ҫулхи мартӑн 16-мӗшӗнче тӗл пултӑм. Ман пата Мускавран тус-юлташ, Лев Анисов писатель килнӗччӗ. Вӑл ун чухне Макарий (Невский) ҫинчен кӗнеке ҫыратчӗ. Пӗр тӗлпулу вӑхӑтӗнче владыка хӑй Троице-Сергиева Лаврӑра манах пулнӑ чухне Псково-Печерски мӑнастирӗн пулас настоятелӗпе Алипий архимандритпа пӗрле Мускав тата Коломна святителӗн Макарийӗн ҫӗрмен ӳтне урӑх ҫӗре куҫарса пытарнӑ ҫӗре хутшӑннине аса илчӗ. Владыка пире ҫакӑн ҫинчен питӗ тӗплӗн каласа пачӗ. Лев Михайлович вара кӗнеке кӑларас ӗҫ йывӑррӑн пынишӗн пӑшӑрханнине пӗлтерчӗ. Владыка: «Кӗнеке тухать»,– терӗ.

Сывпуллашнӑ чухне владыка пире пиллерӗ, Турӑ Амӑшӗн «Иерусалимская» ятлӑ сӑнне асӑнмалӑх парнелерӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ҫулталӑк иртсен Лев Анисов шӑнкӑравласа кӗнекене пичете пани ҫинчен хыпарларӗ. Лев Михайлович ӑна пирӗн Варнава владыкӑна халалланӑ. Кӗнеке тухсан эпир Шупашкарта унӑн хаклавне ирттерме шухӑшлатпӑр.

**Олег Степанов**

***

Эпир Варнава владыкăпа 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче паллашрăмăр. Ун чухне эпĕ вăл пилленипе епархи управленийĕн çуртне тăвас ĕçе хутшăнаттăмччĕ. Çавăн пекех манăн фирма 2010-2011 çулсенче Хăватлă ĕçсем тăвакан Николай ячĕпе Гладков урамĕнче чиркӳ лартма укçа-тенкĕпе пулăшатчĕ. Варнава митрополита пире епархи çуртне тата чиркӳ тума шаннăшăн чунтан тав тăватăп. Тата пурнăçра владыкăпа тĕл пулма пӳрнĕшĕн Атте Турра тав тăватăп!

Эпĕ Варнава владыкăна пире пулăшас тесе кĕлтунăшăн тав тăватăп. Ĕмĕр асăнма пар! Çӳлти Патшалăх пултăр сана, хаклă владыка!

**11-мĕш трест управляющийĕ**
**Сергей Башмаков**

***

## Пысăк ĕç пуçличчен унăн вилтăпри çине каятăп

Манăн хамăн атте пурнăçĕнчи тĕлĕнмелле пулăм çинчен каласа парас килет. Варнава митрополит пилленипе вăл ватлăх çулсенче тĕне кĕнĕ.

Атте, Беспалов Виталий Петрович, 1928 çулта çуралнă, 12 çулта хăр тăлăха тăрса юлнă. Паллах, вăл хăйне тĕне кĕртнипе кĕртменни çинчен пĕлмен те, астуман та. Анчах манăн, унăн Турра ĕненекен хĕрĕн, хаклă аттеме ĕмĕрлĕх пурнăçа куçиччен питĕ тĕне кĕртес килетчĕ.

Эпир аннепе иксĕмĕр ăна чиркӳре шыва кĕме ӳкĕтленине вăл хирĕçлеместчĕ, анчах та эпĕ Варнава митрополитран кĕлтуса пулăшма ыйтиччен те килĕшмерĕ. Манăн 80 çула çитнĕ, инсульт чăтса ирттернĕ хаклă атте священникпе тĕл пулма мĕнле хатĕрленнине халĕ те астăватăп. Тĕне кĕрсен унăн сăнĕ еплерех çуталса кайрĕ! Нумай вăхăт чирленĕ хыççăн ĕмĕрлĕх пурнăça вăл тĕлĕнмелле çăмăллăн, çавăн пекех çуталса тăракан сăн-питпе куçса кайрĕ. Пирĕн хаклă Варнава митрополит кĕлтунипе тĕлĕнмелле хăватсем пулнине асра тытса, манăн çывăх юлташ-хĕрарăмăн ывăлĕ Мускавра хваттер туянма кредит илес умĕн ун патне пиллĕх ыйтма пынă. Владыкăран пил илнĕ хыççăн тепĕр уйăхран ăна ĕç укçи хушса пани çинчен пĕлсен эпир тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕмĕр!

Хаклă владыка пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа çулталăк çитрĕ ĕнтĕ. Анчах çĕнĕ ĕç пуçламассерен эпĕ хăнăхнă йăлапа унăн вилтăпри çине каятăп, унпа калаçатăп, канашлатăп, манăн çăлăнăçшăн кĕлтума ыйтатăп.

**Ачасен Шупашкарти 2-мĕш музыка шкулĕн**
**преподавателĕ Елена Ананьева**

***

Эпĕ арçынсен мăнастирĕнче ĕçлеттĕм. Варнава владыкăпа кашни тĕл пулмассерен çав тери савăнаттăм! Шăпах вăл пилленипе эпĕ 1985 çулта тĕне кĕтĕм. Хаклă Варнава владыкăн чунĕ Çӳлти Патшалăхра пултăр! Ĕмĕр асăнма пар!

**Иов Владимиров**

## Мӑнаҫлӑ чунлӑ Ҫын

Варнава владыка пилӗ маншӑн яланах питӗ паха пулнӑ! Анчах вӑл мана хулари 1-мӗш номерлӗ клиника больницин тӗп врачӗ пулса ӗҫлеме пиллени уйрӑмах пысӑк пӗлтерӗшлӗ тата хумханулла пулчӗ. «Ҫынсен ырлӑхӗшӗн ӗҫле, пулӑш вӗсене, санӑн пӗтӗмпех пулать!»– терӗ мана владыка. Малтан та, ун патне пил илме пырсан, эпӗ яланах унӑн пулӑшӑвне, тӗрекне туяттӑмччӗ. Вӑл питӗ лайӑх, ырӑ, вашават, ҫав тери ӑслӑ ҫын!

Эпӗ пурнӑҫра Варнава владыкӑна тӗл пулнӑшӑн Турра тав тӑватӑп! Мӑнаҫлӑ чунлӑ Ҫын! Унӑн ҫутӑ сӑнарӗ ялан асра!

**Антонина Иванова**

***

## Вӑл ҫӗр ҫинче ҫӳрет

Пӗрремӗш хут владыкӑна эпӗ 1976 ҫулта Введени чиркӗвӗнче Литурги кӗлли вӑхӑтӗнче куртӑм. Ҫак чиркӗве эпӗ владыкӑпа пӗрле кӗлтӑвас тесе 44 ҫул ҫӳрерӗм. Вӑл пилленипе эпӗ час-часах Турӑпа ҫыхӑннӑ таса вырӑнсене, чиркӳсемпе мӑнастирсене ҫӳреттӗм. Пур ҫӗрте те тенӗ пекех ӑна валли манран ҫырусем, святой шыв, просфорсем парса яратчӗҫ. Шупашкара таврӑнсан эпӗ пӗтӗмпех владыка патне ҫитерсе параттӑм. Варнава владыка мана ятарлӑ йӗркепе кӗлтума пиллерӗ. Халӗ эпӗ ҫурҫӗр иртсен 2 сехетре ҫурҫӗр кӗлли тӑватӑп, чӗррисемпе вилнисемшӗн Псалтирь вулатӑп, Туррӑн Таса Амӑшне 150 хут кӗлтӑватӑп, хама сыхласа усракан Ангела кӗлтӑватӑп, «Союз» телеканалпа ирхи тата каҫхи правилӑсене итлетӗп.

Владыка мана ҫапла калатчӗ: «Кам ҫулталӑкра 4 хутчен типӗ тытмасть, кам тунтикун, юнкун, эрнекун типӗ

кунсене пăхăнмасть, вĕсем хăйсене хăйсем Чиркӳрен уйăраççĕ». Мана, 94 çула çитнĕскере, Варнава валадыка Введени чиркĕвĕнче чи аслă ватă хĕрарăм тесе хисеплетчĕ. Вăл мана манаха кĕртесшĕнччĕ, анчах та ĕлкĕреймерĕ.

Халĕ эпĕ унăн вилтăпри çине каятăп та, вăл тупăкра выртман пекех, çĕр çинче çӳренĕ пек туйăнать. Эпĕ манăн çакăн пек шанчăклă тус, пурнăçра ĕçпе те, сăмахпа та пулăшакан ВЛАДЫКА пулнишĕн Çӳлти Аттене тав тăватăп.

**1924 ç.ç. Ираида Бессонова**

***

Чиркĕве эпĕ 1975 çултанпа çӳретĕп. Введени чиркĕвĕнче хăватлă, чаплă кĕлĕсем иртеççĕ. Турă Варнава митрополита мĕнпур службăсемшĕн çăлăнăç патăр. Вăл ĕмĕр-ĕмĕрех асра! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Римма**

***

Варнава владыка ăслă, ăшă куçĕсемпе пăхнине нихăçан та манас çук! Хамăрăн пуян ăс-халлă ватă пуçлăха чиркӳсенче тата ытти вырăнсенче курма тата илтме май пулнишĕн Турра тав тăватăп. Унпа тĕл пулса калаçни чуншăн яланах усăллăччĕ, ырă туйăм хăваратчĕ. 2011 çулта владыкăн 80 çулĕ тĕлне кĕнеке пухса хатĕрленĕ тапхăр уйрăмах асра юлчĕ. Ку вăл Варнава владыкăпа пурнăç тăршшĕнче тĕл пулнă, хутшăннă чиркӳ иерархийĕ, священниксем, ытти çĕрте ĕçлекенсем çырнă статьясен пуххи пулчĕ. Унта питĕ ăшă, чĕрене хускатакан асаилӳсем, чунри хăвата çирĕплетме пулăшнăшăн владыкăна тав туса

çырнисем кĕчĕç. Эпĕ хам Чăваш çĕрĕнче мăнастирсене çĕнĕрен хута яни çинчен очерк çыртăм.

Тĕлĕнмелле вăхăтчĕ ун чухне: таса вырăнсенче лампадăсем çĕнĕрен çуталма пуçларĕç, хуласемпе пушă вырăнсенче пурнăç çĕнелчĕ, çынсем ĕненӳ патне таврăнма пуçларĕç. Варнава владыкăпа çыхăннă асаилӳсем яланах пирĕн чĕресенче упранĕç!

**Ольга Сергеева**

***

## Иисус кĕллипе çӳре

Варнава владыкăпа тĕл пулса калаçни яланах питĕ çутă та тĕлĕнмелле ăшă туйăмсем хăваратчĕ. Ăна юлашки хут курни ĕмĕрлĕхе асăмра юлĕ. Введени чиркĕвĕнче эпĕ ун патне пил илме пытăм, вăл вара мана Иисус кĕллине ăшра каласа çӳреме пиллерĕ. Ун чухне ку кĕтмен çĕртен пулчĕ, анчах мана шăпах çакă кирлĕ пулнă тесе шутлатăп! Ĕмĕр-ĕмĕр асра!

**Турă чури Людмила**

***

Шел пулин те, эпĕ чиркĕве час-часах çӳреместĕп. Анчах Шупашкар чиркĕвĕсенчи пачăшкăсем мана питĕ килĕшеççĕ – ăшă кăмăллă, ăнланаççĕ, каласа панине итлеме пĕлеççĕ, пулăшма тăрăшаççĕ. Хамăрăн хаклă Варнава митрополита аса илсен, вăл мĕнле ырă чунлă, вашават пулнине, унпа яланах калаçас килнине палăртас килет. Икĕ çул каялла эпĕ хамăрăн педагогика университетĕнче

иконопись курсĕсене пĕтерме хатĕрленеттĕмччĕ. Хамăрăн хаклă владыкăшăн манăн питĕ пĕр-пĕр ырă ĕç тăвас килчĕ. Вара эпĕ вĕреннĕ вăхăтра икона ӳкернипе пĕрлех митрополита парне парас тесе Варнава апостол турăшне ӳкерме шутларăм. Пил илсе, çур çулта турăша хатĕрлесе çитертĕм те, ăна пама епархине кайрăм. Коридорта Варнава владыка мана йышăнасса кĕтсе ларатăп, турăш ăна килĕшмест пулĕ тесе кулянатăп хам. Владыка манăн иконăна илчĕ те, тепĕр пачăшкăна кăтартрĕ, вĕсене килĕшрĕ. Вара владыка: «Хальлĕхе ман пӳлĕмре пултăр, кайран вара, Сергий Радонежский чиркĕвне туса пĕтерсен, унта вырнаçтарăпăр»,– терĕ. Маншăн çакă чăн-чăн уяв пулчĕ! Эпĕ ӳкернĕ икона унăн кăмăлне кайрĕ! Халĕ эпĕ собора туса пĕтересси кĕтетĕп, унта хамăн турăша курма ĕмĕтленетĕп.

Тепĕр вĕренӳ çулĕнче кашнийĕнех уйрăм турăш ӳкермеллеччĕ. Мана Сергий Радонежский сăнне ӳкерме хушрĕç. Акă епле, ятарласа шутламасăрах çапла пулса тухрĕ! Сергий Радонежский икони халĕ Çĕнĕ Шупашкарти чиркӳре. Çакăншăн эпĕ çав тери савăнатăп.

Манăн çакна палăртас килет: пирĕн хулари чиркӳсем пурте ырăлăх кӳреççĕ, унта çӳрекенсемшĕн çакă питĕ усăллă. Хамăн пурнăçра пулса иртни аса килет: манăн хĕрĕм питĕ йывăррăн çуратрĕ. Эпĕ чиркĕве уншăн кĕлтума чупса кайрăм. Таврăнсан, врач мана пĕтĕмпех йĕркеллĕ иртсе кайни, хĕрача çурални çинчен пĕлтерчĕ. Мухтав Турра пуриншĕн те! Варнава владыкăна вара уйрăммăн пысăк тав! Çӳлти Патшалăх ăна! Паллах, вăл пирĕнпех!

**Валентина**

***

Манăн Варнава владыкăпа çыхăннă тĕлĕнтермĕшсем нумай пулнă. Вăл мана Хăватлă ĕçсем тăвакан Николай святителĕн çĕрмен ӳчĕн пайĕпе пил пачĕ! Эпĕ Турă çулĕ çине тăрасси унран нумай килчĕ.  2019-2020 çулсенче эпĕ унпа сахалтан та икĕ эрнере пĕрре тĕл пулаттăмччĕ. Владыкăна хамăн вĕрентекен тесе шутлатăп!  Вăл мана чиркӳпе çыхăнман нумай-нумай ĕç тума пиллерĕ, манăн вĕсене пурнăçламаллах. Ӳсен-тăранпа усă курса лампада валли çу туса хатĕрлемелле, вырăссен йăлипе вăй виçес  енĕпе ăмăрту ирттермелле. Унăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн асра! Чунĕ Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Евгений Николаев**

***

Варнава владыкăпа çыхăннă ырă асаилӳсем яланлăхах пирĕн чĕресене кĕрсе вырнаçрĕç! Ун патне чиркӳпе çыхăннă ыйтусемпе пырсан, яланах чунпа лăпланса, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пуласса шанса  таврăнаттăмччĕ. Чăнах та çавнашкалах пулса тухатчĕ, ĕç чиперех йĕркеленсе каятчĕ. Вăл вĕрентсе каланисем яланах пулăшатчĕç, халĕ те кăткăс лару-тăрура тĕрĕс çул суйласа илме май параççĕ. Владыкăна ĕмĕр асăнма пар!

**Ыркăмăллăх сестри тата миссионер-катехизатор**
**Альбина Степанова**

## Пăшисем те вилтăпри çине килнĕ

2020 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче, Святой Варнава апостол кунĕнче, Варнава владыкăн Сергий Радонежский ячĕпе лартакан соборпа юнашар вырнаçнă вилтăпри çине ирхи тăватă сехетре икĕ пăши – амăшĕпе пăрушĕ – килнĕ. Собора хирĕçле тарăн çырмаран вĕсем чĕркуçленсе хăпарнă, мĕншĕн тесен чăнкă вырăнта çўреме питĕ кансĕр. Пăшисем владыкăн вилтăпри умĕнче кĕлтунă евĕр вăрахчен тăнă.

Тепĕр кунне çавăн пекех ирхине вилтăпри çине пăши ĕни пĕччен килнĕ. Вăл унта чылайччен тăнă, тав тунă евĕр пуçне тая-тая илнĕ. Çакă пĕтĕмпех çĕнĕрен тăвакан чиркĕвĕн видеокамеринче упранса юлнă. Пăшисем пирĕн святой Варнава владыка патне пулăшу ыйтма килнĕ пекех йышăнма пулать çакна. Тен, пулăшăва кĕтсе илчĕç те пулĕ. Хаклă Варнава владыкăна Çўлти Патшалăх пултăр! Çутă сăнарĕ ĕмĕр-ĕмĕрех асра!

**Сергий Радонежский ячĕпе лартакан собор хуралçи**
**Сергей**

***

Варнава (Кедров) митрополит вăл – хăй пĕр самана. Вăл Шупашкарпа Чăваш епархине 44 çула яхăн ертсе пынă архипастырь. Кăçал епархине туса хунăранпа 75 çул çитнине паллă тăватпăр, апла пулсан, çак тапхăрăн çуррине вăл Варнава митрополит ертсе пынипе пурăннă, аталаннă. Эпир – хальхи çамрăксем – çав саманара çуралса ўсрĕмĕр. Эпĕ те хамăрăн Аслă Пуçлăх пурнăçĕпе çыхăннине ăнланса, çакăншăн питĕ савăнатăп!

**«Православные добровольцы Чувашии» пĕрлешўре тăракан**
**Илия Тумаков**

## Владыкăна хисепленине куртăм

2015 çулхи çулла Чăваш Ен Мускавпа Пĕтĕм Русь Патриархĕ Кирилл килессе кĕтетчĕ. Эпир, чăн тĕнпе пурăнакан волонтерсем, ăна кĕтсе илме хумханса хатĕрлентĕмĕр. Варнава митрополит Чăваш Енре Турра ĕненекен волонтерсен юхăмне йĕркелеме пилленĕ. Вăл православипе çыхăннă пуçарусене – Христос çуралнă ятпа тата Мăнкун ячĕпе ирттерекен фестивальсене, çамрăк богословсен вулавĕсене, ыркăмăллăх акцийĕсене, паломниксен çулçӳревĕсене ырлатчĕ, пиллетчĕ. Унта эпир те, Чăваш Енри волонтерсем, хастар хутшăнаттăмăрччĕ.

Чăваш Енре пурăнакансем Кирилл Патриарха чаплăн кĕтсе илчĕç, эпир «чĕрĕ коридор» туса тăрса тухрăмăр. Пирĕн йышра волонтерсем тата Чăваш митрополийĕнчи вырсарни шкулĕсенче вĕренекенсем пулнă. Чиркӳ патне çывхарсан Патриарх савăнăçлăн: «Мĕн чухлĕ яш-кĕрĕм! Мĕн чухлĕ яш-кĕрĕм! Мĕнле çамрăк, çутă сăнсем!»– терĕ савăнса. Иртен пуçласа сĕм çĕрлечченех эпир кĕлĕсене хутшăнтăмăр, чиркĕве çӳрекенсем пирĕн çине мĕнле хисеплесе пăхнине куртăмăр. Епархире пире кун каçмалăх бутылкăсемпе ĕçмелли шыв валеçсе пачĕç. Ман пата пĕр хĕрарăм пычĕ те епархирен панă кĕленчерен кăштах хăйне шыв ярса пама ыйтрĕ. Тен, çапла майпа унăн та çак пысăк уява çывăх пулас, хăйне унта хутшăннă пек туяс килчĕ пулĕ! Эпĕ ăна пуçламан кĕленче патăм, вăл вара çав тери савăнчĕ.

Ун чухне эпĕ çынсем владыкăна мĕнле хисепленине, юратнине хам куçпа куртăм. Эпир вара чиркĕве пынă çынсене епархипе çыхăнтаракан сыпăк пулса тăтăмăр. Хаклă Варнава владыка ĕмĕр-ĕмĕрех асра! Çӳлти Патшалăх пултăр!

**Санкт-Петербургри медицина университечĕн студентки**
**Наталия Ушанкова**



*Мускавпа Пĕтĕм Русь Патриархне Кирилла*
*2015 çулхи августра Шупашкарта кĕтсе илни*

## Чун пархатарĕ иксĕлми

1996 çулхи декабрь уйăхĕнче «Раççейри медицина пĕрлĕхĕ» обществăлла пĕрлешӳ, Чăваш Енри сывлăха сыхлас ĕç министерстви тата Шупашкарпа Чăваш епархийĕ медицина ĕçченĕсен кăмăл-сипет тасалăхне çирĕплетес тĕлĕшпе пĕрле тачă  çыхăнса ĕçлемелли çинчен Килĕшӳ турĕç. Вăл вăхăтра эпĕ Сывлăх Министерствинче тĕп специалист пулса ĕçленĕ, çавна май документсене хатĕрлес ĕçе хутшăннă, Варнава владыка алă пуснă çĕрте те пулнă. Çавăн чухне, владыка çумĕнче нумай вăхăт ирттермен пулин те, эпĕ унпа тĕл пулнă хыççăн манăн ăс-тăн тĕнчи пуянланнине, хам валли хӳтлĕх тупнине, тата «ăнлантарса памалла мар япаласем» пулса иртнине туйса илтĕм. Манра çĕнĕ туйăмсем çуралчĕç, ырă енне улшăнас кăмăл çĕкленчĕ. Владыкăпа час-часрах тĕл пулас, унран пил илес, унăн кĕллин хăватне туяс  килетчĕ.

Шăпах çавăн чухне эпĕ чуна пуянлатакан конференцисем, ыркăмăллăх акцийĕсем ирттерес, таса вырăнсене кайса çӳрес енĕпе пуçаруçă пулса тăтăм. Çамрăк богословсен регионсем хушшинчи пĕлӳлĕх фестивалĕсем, Раштав тата Мăнкун фестивалĕсем, «Çăлакан валли хатĕрленĕ чечексем» илемлĕх конкурсĕсем йĕркелерĕмĕр, Турă Амăшĕн «Милостивая» таса сăнĕ ячĕпе фонд уçрăмăр. Епархинче тата сывлăх министерствинче çак ĕç-пуçа ырларĕç, çамрăксене тата медицина ĕçченĕсене кăмăл-сипет тасалăхĕ енĕпе воспитани парас ĕç пахалăхĕ чылай ӳсрĕ.

Çирĕм çул ытла эпĕ Варнава владыка патне тĕрлĕ документсем, протоколсем, фонд Канашĕн йышăнăвĕсем, православи мероприятийĕсене хутшăнакансене памалли дипломсем çине алă пустарма тăтăшах çӳрерĕм. Владыка пирĕн фонд Канашĕн председателĕ пулнă.  Эпĕ шутласа пăхрăм та, çак тапхăрта владыка конкурссене хутшăнакансемпе çĕнтерӳçĕсем валли вунă пин ытла диплом

çине алă пуснă! Вăл мана яланах ăшă та çутă кулăпа пиллетчĕ. Хăш чухне пĕр харăс çĕр ытла хут çине алă пусмаллаччĕ, анчах та вăл мана çакăншăн нихăçан та ӳпкелеместчĕ, чăтăмлăн алă пусса хăйĕн пичетне лартатчĕ. Çак çулсенче пирĕн мероприятисене хутшăнакансен йышĕ 30 пинрен те иртсе кайрĕ. Вĕсем – Чăваш митрополийĕн вырсарни шкулĕсенче тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекен ачасем.

Паломниксен çулçӳревне кайма пил илнĕ чухне эпĕ кашнинчех унта мĕн те пулин тĕлĕнмелли, сăмахпа каласа ăнлантарма май çукки пулса иртессе пĕлсе тăраттăмччĕ. 2017 çулта Италире Александр атте, эпир Чăваш çĕрĕнчен пулнине пĕлсен, аллине çĕклерĕ те, çапла каларĕ: **«Ун пек ăслă ватăсене Раççейре пĕр алăри пӳрнесемпе шутласа тухма пулать, вĕсенчен чи хисепли – сирĕн Варнава владыка**! Сирĕн вăл утса çӳренĕ çĕре чуптумалла». Александр атте вăл – Троице-Сергиева Лаврăра пирĕн владыкăпа пĕрле ĕçленĕ священникĕн ывăлĕ.

Египетра, Синай тăвĕ çинчи Макарий Великий мăнастирĕнче, манахсем, эпир Варнава владыка кĕлтуса пурăнакан Чăваш çĕрĕнчен килнине пĕлсен, пирĕн пата пырса тăчĕç. Вĕсенчен пĕри — **Давид ятлă манах, ман пата пычĕ те, Варнава владыка умĕнче çĕре çити пуç тайса тав тума каласа ячĕ!**

Шупашкара таврăнсан эпĕ владыкăна: «Сире Иерусалимра, Италире, Афонра пĕлни, астуни пирĕншĕн паллă, эпир çакăнтан тĕлĕнместпĕр те. Анчах та аякри Африкăран, хăйăрлă шăрăх вырăнтан Сирĕн умра пуç тайнине пĕлтерни чăн-чăн тĕлĕнтермĕш!»– терĕм. Владыка нимĕн те хуравламарĕ, кулса илчĕ те пил пачĕ.

Шупашкарпа Чăваш митрополичĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ кун, 2021 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче, эпир «Чувашия меня полюбила» асăну кĕнеки валли материалсем пуçтарма тытăнтăмăр. Хăйсен владыкăпа çыхăннă асаилĕвĕсене, ун

çинчен каланă сăмахсене **11 çултан пуçласа 97 çула çитнĕ 160 ытла çын çырса пачĕ!** Эпĕ çынсен куçĕсем шывланнине темиçе хутчен те куртăм. Хăшпĕрисем, асаилӳсем капланса килнĕрен, пичĕсене аллисемпе хуплатчĕç, темиçе предложени те пулин çырса хăваратчĕç, Варнава владыка кĕлĕ ирттерекен чиркĕве çӳренишĕн Турра тав тăватчĕç. Хаклă владыка, Эсир пирĕншĕн, хăвăр кĕтĕвĕршĕн, халĕ те кĕлтунине эпир пĕлетпĕр. Эпир вара кунта пурте пĕрле Сирĕншĕн кĕлтăвăпăр! Çӳлти Патшалăхра пулăр, хаклă владыка! Сирĕн çутă сăнара яланах ăшшăн аса илĕпĕр!

Тата Варнава владыка çинчен кĕнеке пухса хатĕрлени çинчен пĕлсен, хисеплĕ ватă кĕлтунипе, унăн иксĕлми юратăвне пула ырлăх курнă çынсене çакăн пирки каласа е çырса кăтартнăшăн манăн чĕререн тав тăвас килет!

**тухтăр, «Раштав çăлтăрĕ» тата «Мăнкун савăнăçĕ» православи фестивалĕсен,**
**çамрăк богословсен регионсем хушшинчи фестивалĕсен проекчĕсене йĕркелекенĕ**
**Зоя Токарева**



*Шупашкарпа Чăваш митрополичĕ Варнава*
*Александр Невский ячĕпе лартнă арçынсен мăнастирĕнче,*
*Муркаш районĕ*
*2020 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕ*





*Шупашкарпа Чăваш митрополичĕ ВАРНАВА*



*Гурий святитель ячĕпе регионсем хушшинче иртекен пĕлӳлĕх вулавĕсем*
*Шупашкар, 2017 ç.*





*Варнава митрополитăн ĕç пӳлĕмĕнче, 2020 çулхи февраль*



*Варнава владыка 174-мĕш ача садне çӳрекенсемпе*
*Шупашкар, 2020 ç.*



*Варнава владыка Пукравпа Татиана чиркĕвĕ пулас вырăнта Хĕрес кĕлтуса тасатать*



*Таса пурăнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе лартакан собор пулас вырăна кĕлтуса тасатни*



*Пĕтĕм Раççейре «Турă Амăшĕн çăлтăрĕ айĕнче» ятпа
Владивостокран Мускава çити хĕрес йăтса утакансене Пукравпа
Татиана чиркĕвĕнче кĕтсе илни
Шупашкар хули, 2008 çулхи май уйăхĕ*

*Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ
ВАРНАВА пил парать*






*Пăшисем 2020 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Варнава владыкăн вилтăпри патне килеççĕ*
*Таса пурăнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе лартакан чиркӳ çумĕнче (сăнӳкерчĕкĕсем видеосăнав камеринчен)*





*Варнава митрополит пилĕ*



# ВЛАДЫКА КĔЛТУНИПЕ



***

Çак пулăм уйрăмах манăн асра юлнă. Пĕрре анне чĕрепе питĕ хытă аптăрарĕ (унччен унăн икĕ хутчен инфаркт пулнăччĕ). Манăн пичче Алексий (халĕ вăл Тобольск митрополичĕ Димитрий) тӳрех Лаврăна кайса Варнава аттене илсе килчĕ. Вĕсем пӳрте кĕнĕ чухне анне хускалаймасăр выртатчĕ. Варнава атте вăл пĕçернĕ кăшман яшкине юратнине пĕлекенскер, анне: «Батюшка, Эсир килтĕр, эпĕ вара Сире валли яшка та пĕçерейместĕп. Мана Турă Хăй патне чĕнет пулмалла»,– терĕ. Варнава атте ăна: «Сана унта кайма иртерех-ха. Ав мĕн чухлĕ ача санăн. Халĕ кĕлтăвăпăр та, сана сыптарăп, вара ура çине тăрăн»,– тесе хуравларĕ. Вăл шалти туйăмпа, питĕ тĕплĕн собор кĕлли турĕ, унăн йĕркине пĕрре те кĕскетмерĕ, çав вăхăтрах аннене çăмăллăх

пама ыйтса Турра тархасласа кӗлтурӗ, вара сыптарчӗ. Туррӑн Ӳчӗпе Юнне ӑша иличчен, «Эй, Турӑ, ӗненетӗп, ӗненнине каласа паратӑп...» кӗлле вуланӑ чухне анне Таса Парнесене йышӑнма тӑрса ларма пултарчӗ.

Варнава атте хӗрес чуптума парсан вара вӑл тӑчӗ, кравать пуҫӗнчен тытса, турӑшсем патне пырса чуптурӗ. Анне хӑйне лайӑхрах туйма пуҫларӗ, кухньӑна кайса, пачах та чирлемен пекех, хаклӑ хӑна валли апат хатӗрлерӗ.

**Калугӑпа Боровск митрополичӗ**
**Климент**

***

Пилӗк ҫул каялла манӑн тӑван тип пыр шыҫҫипе чирлерӗ, ӑна урӑх регионти онкологи центрне сипленме кайма хушрӗҫ. Эпӗ ӑна владыка патне пил ыйтма илсе кайрӑм. Владыка ӑна пиллерӗ те: «Мускаври телейлӗ Матронӑна кӗлтӑвӑр, вара пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулӗ. Онкологи центрӗнчен таврӑнсан упӑшкупа венчет тӑрӑр»,– терӗ. Ман тӑван мӑшӑрӗпе чиперех пурӑннӑ, анчах венчет тӑман. Вӑл упӑшкипе пӗрле онкоцентра кайнӑ. Унта ӑна сиплеме пуҫличчен тепӗр хут тӗрӗсленӗ те, нимӗнле рак та тупӑнман. Туллин, пур енлӗн тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн ӑна киле янӑ. Вӗсем киле савӑнса таврӑннӑ, анчах венчет тӑма васкаман. Владыка манран тӑван хӑйне мӗнле туйни ҫинчен, венчет тӑнипе тӑманни ҫинчен темиҫе хутчен те ыйтрӗ. Эпӗ ниепле те пуҫтарӑнаймаҫҫӗ тесе хуравларӑм.

Кӑштах вӑхӑт иртсен владыка мана вӗсене панӑ сӑмаха тытмасан чир таврӑнать тесе пӗлтерме каларӗ. Вара вӗсем тӳрех венчет тӑчӗҫ. Тӑван унтанпа тухтӑрсем патӗнче тӗрӗсленсех тӑрать, ун ҫумӗнче нимӗнле чир-чӗр те ҫук.

**Михаил Степанов протоиерей**

***

Варнава владыка больницăра выртатчĕ. Пĕррехинче ун патне Чăваш Республикин сывлăха сыхлас ĕç министрĕ килчĕ. Çав тĕлпулу вăхăтĕнче эпĕ те унта пулнă. Калаçу вăхăтĕнче министр пĕр хĕрарăмăн медицина кăтартăвĕсемпе çуратма юраманни çинчен каларĕ, анчах та Христос тĕнĕпе пурăнакан хĕрарăм ача пăрахма килĕшмест иккен. Министр владыкăран çак лару-тăрура мĕн тумалли çинчен канаш ыйтрĕ. Владыка, хĕрарăмăн сывлăхне лайăхрах тĕрĕслеме сĕннисĕр пуçне, хăйĕн пурнăçĕнчи пĕр пулăма аса илчĕ.

Пĕр священникĕн арăмĕ пĕрремĕш ачапа йывăр çын пулнă. Вăл хăйне питĕ кансĕр туйнă, анализĕсем те япăх пулнă, шалти органĕсем те ыратма пуçланă. Çак лару-тăрура Турра ĕненекен врачсем те, амăшĕн пурнăçне çăлса хăварас тесен çире пуррине татмалла мар-ши, тесе шутлама пуçланă. Хĕрарăма ӳкĕте кĕртес тесе владыкăран пулăшу ыйтас тенĕ. Вара ун патне сывлăха сыхлас ĕç министрĕ шăнкăравланă. Владыка яваплăха хам çине илетĕп, вĕсен пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать, аборт тума юрамасть тенĕ. Чăннипех те, каярахпа матушка хăйне лайăхрах туйма пуçланă, вăл тĕрĕс-тĕкелех сывă ача çуратнă. Кун пек тĕслĕхсем татах та пулнă. Владыка кирек епле кăтартусем пулсан та аборт тăвассине çав тери хирĕç пулнă.

**Шупашкарпа Чăваш епархийĕн**
**чиркĕвĕн ыркăмăллăх пулăшăвĕ паракан тата**
**социаллă ĕçлев пайĕн ертӳçи**
**Михаил Павлов протоиерей**

***

Эпӗ Варнава владыка манӑн ҫемьене кӑткӑс лару-тӑрура хӑйӗн кӗллипе, ӑшӑ сӑмахпа, йӑл куллипе пулӑшнине нихӑҫан та манса каймастӑп. Ун чухне медицина ҫине те шанчӑк сахалччӗ, пысӑк хуйхӑ килсе тухассӑн туйӑнатчӗ. Владыка пилленӗ хыҫҫӑн икӗ кун анчах иртрӗ, инкек хыҫа юлчӗ, врачсем пире пулӑшрӗҫ. Эпир ҫакӑн ҫинчен шутлама та пултарайман.

Чӑн-чӑн асамлӑх! Ҫак тӗлӗнмелле ӗҫ Варнава владыкӑн ансат та ырӑ сӑмахӗсенчен пуҫланчӗ: «Сирӗн пӗтӗмпех лайӑх пултӑр!»– терӗ вӑл.

**Раҫҫей ҫӗрӗнче ҫуталса кайнӑ мӗнпур святойсен ячӗпе**
**Шупашкарта лартнӑ чиркӳ настоятелӗ**
**Андрей Евсеев священник**

***

Икӗ ҫул каялла эпӗ Варнава владыкӑран операци тутарма пил илтӗм. «Турӑпа пӗрле пул, канӑҫлӑхпа ҫӳре, Турӑ пулӑшсан санӑн пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулӗ, анчах кӗлту, ан ӳркен»,– терӗ вӑл мана. Больницӑра эпӗ шанӑҫпа, лӑпкӑ чунпа операцие чӑтса ирттертӗм. Мухтав Турра! Варнава владыка пире чиркӳре кӗлӗ вӗҫленсен яланах лӑпкӑ та ырӑ туйӑмпа, ӑшшӑн пӑхса пиллетчӗ. Ӑна ӗмӗр-ӗмӗрех аслӑласа тӑрар! Чунӗ Ҫӳлти Патшалӑхра пултӑр!

**Турӑ чури Елена**

***

Варнава владыкӑна эпӗ вӑл епархине пӗрремӗш кун килсенех тӗл пултӑм, эпӗ унта ӗҫлеттӗмччӗ. Эпир унпа час-часах пурнӑҫ ҫинчен калаҫаттӑмӑрччӗ. Владыка хӑйӗн ача чухнехи ҫӑмӑл мар пурнӑҫне, ашшӗ-амӑшне аса илетчӗ, хӑй Троице-Сергиева Лаврӑра ӗҫлесе пурӑнни ҫинчен каласа паратчӗ. Владыка пӗтӗмпех лайӑх пултӑр тесе пирӗншӗн

пĕрмаях кĕлтăватчĕ. Эпир вăл пире хӳтĕленине, пурнăçра пулăшса пынине туйсах тăраттăмăрччĕ. Пĕррехинче эпĕ чирлерĕм. Владыка патне пытăм та, сывă марри, хама япăх туйни çинчен каларăм, ĕçлеме пултараймастăп терĕм. Владыка вара мана: «Мĕн? Эп халь сана чирлеме пил паманччĕ-çке!..»– терĕ.

Тĕлĕнмелле, эпĕ питĕ хăвăрт сывалтăм, малалла ĕçлерĕм. Владыка пире Турра яланах кĕлтумалла тетчĕ. Эпĕ çакăн пек малашлăха пĕлсе тăракан вичкĕн ăслă ватăпа пĕрле ĕçлеме тӳр килнишĕн кашни кунах Турра тав тăватăп! Çӳлти Патшалăхра, ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Турă чури Нина**

***

Эпĕ Введени чиркĕвĕнче уборщицăра ĕçлеттĕмччĕ. Пĕррехинче урамра ӳксе сылтăм алла хуçрăм. Анчах ĕçлемелле. Малтанхи икĕ кун чиркӳре тирпейлеме мана хĕрĕм пулăшрĕ. Больницăна кайрăм та, алă шăмми хуçăк, гипс хумалла терĕç. Чиркĕве кĕрсе Варнава владыкăран пил илтĕм. Тепĕр кунне больницăна кайрăм та, мана гипс хурса ямарĕç. Вара владыка пилленипе эпĕ малаллах ĕçлерĕм. Алă тӳрленчĕ, халь хăш алли хуçăк пулнине те астумастăп. Тем чул вăхăт иртсен больницăна алла тепĕр хут тĕрĕслеттерме кайрăм. Манпа пĕрле врач патне кĕмелли черетре эпĕ малтанхи хут килсен курнă çынсемех лараççĕ. Пĕрин шăмми ниепле те вырăна лармасть, теприн суранĕ халь те иртсе каймасть.

Ман алăсем çине пăхса врачсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç: гипссăрах питĕ лайăх тӳрленнĕ! Алла хуçманпа пĕрех! Эпĕ владыкăн таса чунне туяттăмччĕ, вăл пилленипе алăсем паянхи кун та чиперех, йĕркеллех. Ĕмĕр-ĕмĕрех асра! Çӳлти Патшалăх пултăр ăна!

**Зинаида Федорова**

## Операци тӑвассине пӑрахӑҫларӗҫ

Эпӗ медицина клиникинче сывлӑха тӗрӗслеттереттӗмччӗ. УЗИ тутарнӑ хыҫҫӑн гинеколог мана хамӑр больницӑри врач патне кайса вар-хырӑм операцине тутарма пӗтӗмӗшле анализ тата юнӑн биохими анализне пама хушрӗ, ун хыҫҫӑн мана операцие кайма направлени параҫҫӗ терӗ. Эпӗ питӗ кулянса ӳкрӗм, тепӗр поликлиникӑри УЗИ врачӗ патне кайрӑм, анчах унта та мана ҫавнах каларӗҫ, вӑраха тӑсма юрамасть, часрах операци тутармалла терӗҫ.

Варнава владыка вилтӑпри ҫинче эпӗ чунтан кӗлтурӑм, пулӑшма тархасларӑм, операцие кайма пил ыйтрӑм. Анализ валли юн патӑм, операци тӑвакан гинеколог патне стационара кайрӑм. Манӑн савӑнӑҫа, врач ҫак самантра васкасах операци тума кирлӗ мар, юн анализӗ лайӑхах терӗ, сывлӑха тӗрӗслеттерсе тӑма сӗнчӗ.

Турра тата Варнава владыкӑна мана пулӑшу панӑшӑн тав тӑватӑп!

**Турӑ чури Елена**

***

Манӑн пӗртӑванӑн хӗрӗ Пукравпа Татиана соборӗнче престол уявӗнче пулнӑ. Варнава владыка ирттернӗ службӑра Туррӑн Ӳчӗпе Юнне ӑша илнӗ хыҫҫӑн вӑл тытӑнчӑклӑ калаҫма пӑрахрӗ, сӑмахсене уҫҫӑн калама пуҫларӗ. Варнава владыка ирттернӗ службӑсенче пулма тӳр килнӗшӗн Турра тав тӑватӑп!

**Сергей Петров, 32 ҫ.**

## «Ыратать-и? Ыратмалла мар-çке...»

Иртнĕ ĕмĕрти сакăрвуннăмĕш çулсен пуçламăшĕччĕ. Эпир ун чухне çемьепе Набережные Челны хулинче пурăнаттăмăрччĕ. Çамрăк хулара КамАЗ завочĕ тăватчĕç. Паллах, ĕçлекен чиркӳсем унта çукчĕ. Эпĕ Введени чиркĕвĕнче сыпас тесе час-часах Шупашкара аттепе анне патне килеттĕмччĕ. Кашнинчех Варнава владыка патне епархине кĕрсе пил илеттĕмччĕ.

Çулла çитрĕ, шкулта черетлĕ каникулсем пуçланчĕç, эпĕ отпуска тухрăм. Эпир Шупашкара килтĕмĕр те хĕрпе иксĕмĕр  владыка патне кайрăмăр. Ытти чухне вăл пире Турă Амăшĕн пысăках мар таса сăнĕсене парнелетчĕ, хальхинче хĕрачана ăна хӳтĕлекен святойăн, мана – асап нумай тӳссе вилнĕ святой Пантелеймон сиплевçĕн иконисене парнелерĕ. Манăн чунра темĕнле шиклĕ пулса кайрĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче эпĕ питĕ начарланса кайрăм, час-часах хырăм ырататчĕ, анчах чăтма пулатчĕ. Манăн пуçра тӳрех çакăн пек шухăш вĕлтлетсе илчĕ: «Владыка ытахальтен нимĕн те тумасть. Манăн пĕр-пĕр йывăр чир пур пулмалла». Эпĕ Геннадий Прохоров гинеколог патне кайрăм, Тутарстанра пропискăра тăратăп пулин те, вăл мана йышăнчĕ, тимлĕн тĕрĕслерĕ, алăран çавăтса тенĕ пекех кабинетсем тăрăх илсе çӳрерĕ.  Рентген турĕç, хăвăртрах анализсем илчĕç. Анализсем лайăхах пулмарĕç, анчах та врач: «Пĕтĕмпех йĕркене кĕртме пулать!»– тесе лăплантарчĕ. Кайран онкологи диспансерĕн больницине маммолог патне шăнкăравласа ниме пăхса тăмасăр (чирлĕ çын урăх республикăран) пĕтĕм анализсене илме ыйтрĕ. Лешĕ килĕшрĕ. Вунă кун иртсен анализсем хатĕр пулчĕç, кăкăрсенче нимĕнле шыçă та çук. Çапла вара мана вар-хырăмри шыçă чирĕпе шута илчĕç. Эмелсем çырса пачĕç. Набережные Челны хулинче онколог çукчĕ. Хусана вĕçес килместчĕ. Çавăнпа Шупашкара онколог патне килеттĕмччĕ.

Варнава владыка Эстоние, Пюхтицăри хĕрарăмсен мăнастирне кайса килме пиллерĕ. Унта Турă Амăшĕ курăннă таса çăлкуç пулнă (халĕ те пур!). Çывăхри тата аякри облаçсенчен кунта тĕрлĕ чирпе асапланакан нумай çын килсе çӳренĕ, Туррăн Таса Амăшĕ вĕсене сыватнă. Эпĕ унта кайса çăлкуç шывĕпе çăвăнтăм, çав шыва ĕçрĕм. Çĕрлесерен Туррăн Таса Амăшне тата Пантелеймон Сиплевçĕне çулталăк хушши чĕркуçленсе кĕлтурăм. Сывалса çитес тесе тархасламарăм, тем пек йывăр пулсан та хĕрĕм 18 çула çитиччен пурнăçăма тăсма ыйтрăм. Вăл вăхăтра манăн упăшка чĕрепе чирлесе çĕре кĕнĕччĕ ĕнтĕ. Шупашкарта тӳрех владыка патне кайса пил илеттĕмччĕ, кĕлтуса пулăшма ыйтаттăмччĕ, вара тин врач патне каяттăмччĕ.

Пĕррехинче, тепĕр хут хăй патне пырсан, владыка манран: «Хăвăра мĕнле туятăр?»– тесе ыйтрĕ. Эпĕ ыратать тесе хуравларăм. Ыратни иртсе кайнăччĕ ĕнтĕ, анчах та çакă вăхăтлăх анчах пулассăн, кайран каллех ыратма пуçлассăн туйăнатчĕ. Владыка шарламарĕ, ман çине пăхрĕ те: «Ыратмалла мар»,– терĕ. Эпĕ вара: «Манăн чир иртсе кайма кам вара эпĕ, Туррăн ырăлăхне курма та тивĕçлĕ мар»,– тесе шутларăм. Хам çавах тархаслатăп: «Хамшăн мар, хĕрĕмшĕн йăлăнатăп: вăл хăр тăлăха тăрса ан юлтăрччĕ. Турăçăм, тархасшăн пурнăça тăсса пар. Хам чирлесен те, хĕрĕм пĕччен ан юлтăрччĕ»,– тетĕп. Владыкăна тепĕр хут ыратать тесе хуравларăм. Варнава владыка чĕнмесĕр тăчĕ те, кайран çирĕппĕн: «Ыратма кирлĕ мар»,– терĕ. Онколог патне кайрăм та, вăл мана тĕрĕсленĕ хыççăн: «Ăçта вара?..»– тесе ыйтрĕ. Эпĕ каллех хăраса кайрăм. Врач манпа çаплах ăшă кăмăлпа калаçать: «Шыçă ăçта кайса кĕнĕ?»– тет. «Ниушлĕ çук?»– тетĕп. Врач нимĕн те çук тесе хуравларĕ. Çавăн чухне вара эпĕ тинех ĕнентĕм: «Турă Амăшĕ чире сирчĕ!». Унтанпа нумай çул иртсе кайрĕ. Ытти чир-чĕр те тупăнчĕ. Анчах та эпĕ Турра сывалса çитес тесе тархасламан, Ăна тав тунă, чăтăмлăх ыйтса кĕлтунă.

Тахҫанах Шупашкара пурӑнма куҫса килтӗм. Варнава владыка мана шкулта мар, Введени чиркӗвӗнче ӗҫлеме пиллерӗ, унта 31 ҫул тӑрӑшрӑм. Тӗн училищи уҫӑлсан, владыка мана чӗнсе илчӗ те: «Пулас пачӑшкӑсене вӗрент»,– терӗ. Турӑ пулӑшнипе унта та 20 ҫула яхӑн ӗҫлесе пурӑнтӑм.

**Лидия Беловашкина**

***

**Вӑл кӗлтуни пулӑшрӗ**

Хамӑр ҫемьере 10 ҫул каялла пулса иртни ҫинчен каласа парас килет. Манӑн виҫӗ уйӑхри мӑнук кӗске вӑхӑт хушшинчех вӑйсӑрланса, начарланса кайрӗ. Эпӗ ӑна Варнава владыка уяв кунӗ ирттерекен службӑна илсе кайрӑм. Стефана йӑтса митрополит патне ҫу сӗртерме пырса тӑрсан, вӑл ача ҫине питӗ тимлӗн пӑхрӗ, кайран та эпир сак ҫине кайса ларичченех пире чылайччен сӑнарӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл чиркӗве пынӑ ҫынсене ҫупа сӗрсе тӑчӗ. Сасартӑк ачапа темӗнле ӑнланмалла мар япала пулса иртрӗ: вӑл пыр тӗпӗнчен темӗнле сасӑ кӑларчӗ те, макӑрса ячӗ. Эпӗ хӑраса кайрӑм, Стефана ачашласа лӑплантарма тытӑнтӑм. Ҫакӑн хыҫҫӑн мӑнук самайланчӗ, сывлӑхӗ ҫирӗпленчӗ.

Пирӗн пата Варнава владыка кӗлтунин пулӑшӑвӗ ҫапла майпа ҫитнине эпӗ тепӗр кунтан тин ӑнланса илтӗм. Ҫӳлти Патшалӑх тата ӗмӗр-ӗмӗр канлӗх пултӑр Варнава владыкӑна. Вӑл яланах пирӗнпе!

**Людмила Кадикина**

## Сывлăхшăн кĕлтума çырса патăм

Чиркĕвĕ эпĕ пĕчĕкренпех çӳретĕп. Николай архиерее те, Вениамин архиерее те астăватăп, кайран Варнава владыка ĕçлеме пуçларĕ. Варнава митрополит хама сыватни çинчен çырса кăтартас килет. Ку чăн-чăнах! Эпĕ çур çул юн кайнипе асаплантăм, ниепле те иртсе каймасть, тухтăрсем, шел пулин те, пулăшаймаççĕ. Вара эпĕ Варнава владыкăран пулăшу ыйтас терĕм. Епархине кайрăм, ун чухне вăл Герцен урамĕнче вырнаçнăччĕ, хамăн сывлăхшăн алтарьте кĕлтума ăна хут çырса патăм. Владыка мана пиллерĕ, вара эпĕ унран: «Ман ыран больницăна каймалла мар-и?»– тесе ыйтрăм. Вăл пуçне сĕлтсе каймалла марри çинчен систерчĕ те, эпĕ киле кайрăм. Тепĕр куннех манăн юн кайма чарăнчĕ, больницăна урăх çӳремерĕм, паянхи кунччченех хама лайăх туятăп.

Турра тата Варнава владыкăна сăваплă кĕлĕсемшĕн тата мана сывалма пулăшнăшăн тав тăватăп. Ĕмĕр-ĕмĕрех асра! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Галина Моисеева, 1947 ç. ç.**

***

Варнава владыка маншăн тăван атте пекех пулнă. Вăл ирттерекен службăсене эпĕ 2015 çултанпа çӳренĕ. Вăл вашават калаçатчĕ, нихăçан та каçхи тата ирхи кĕлĕсене сиктерместчĕ. Вăл мана святой пекех туйăнатчĕ. Хăш чухне ĕçсем ăнмасан, е вĕренӳре йывăрлăхсем пулсан эпĕ владыкăна маншăн кĕлтума ыйтаттăмччĕ, унăн кĕллисем мана яланах пулăшатчĕç.

Владыка мана пулăшнă пĕр тĕслĕхе илсе кăтартатăп. Ку 2017 çулта пулса иртрĕ. Варнава митрополит ирттерекен вырсарникунхи служба умĕн эпĕ чирлерĕм, чиркĕве каяймастăп пуль тесе шутларăм. Владыкăна маншăн кĕлтума

ыйтрăм, хам та кĕлтурăм, тепĕр кунне сывалтăм та! Çав вăхăтранпа эпĕ Варнава владыка кĕлтуни мĕнле пулăшнине яланах туятăп.

Варнава митрополит Введени чиркĕвĕнче служба ирттернĕ чухне ăна унăн килĕ умĕнче кĕтсе тăраттăмччĕ, пил илеттĕмччĕ. Ангел кунĕнче тата Иерусалимран таврăнсан Варнава владыка мана пĕчĕкçĕ турăшсем парнелетчĕ. Владыка ку тĕнчерен куçса кайнă хыççăн та эпĕ унăн хӳтлĕхне туятăп, вăл мана пулăшать!

**Егор**

***

Эпĕ Введени соборĕнче Варнава владыка ирттерекен службăсене яланах çӳренĕ. Халĕ те кĕлĕ иртсен унăн вилтăпри çине аннен сывлăхĕшĕн тархаслама каятăп. Ăна, йывăр чирленĕскере, ĕнер больницăна, кардиологи уйрăмне вырттарчĕç. Эпĕ владыка пĕтĕмпех пĕлсе тăнине, пĕтĕмпех илтнине ĕненетĕп. Вăл манăн аннене сывалма пулăшатех.

**Турă чури Ольга**

***Редакцирен:*** *Ольгăн амăшĕ питĕ хăвăрт сывалнинчен тухтăрсем те тĕлĕннĕ, ăна больницăран чиперех киле янă.*

*Варнава владыкăран пулăшу ыйтнă хыççăн чиртен е ытти амакран сывални çинчен ĕнентерекен хутсем тăратнă çынсен адресĕсемпе телефонĕсем кĕнекене пухса хатĕрлекенсенче упранаççĕ.*

*Варнава владыка вилнĕ хыççăн та пулакан тĕлĕнтермĕшсем вăл чăнах та Сăваплă Çын пулнине пире тепĕр хут кăтартса параççĕ.*

## «Христоспа пул!»

Эпĕ Чăваш Енре çуралса ӳснĕ, малтан Шупашкарти пĕр шкулта вĕрентĕм, кайран – университетăн медицина факультетĕнче. Турă ырлăхĕпе хаклă архипастыре чылай вăхăт, тĕрĕсрех, 1991 çултанпа, пĕлнĕ. Çав çул Варнава архиепископăн 60 çулхи юбилейне паллă турĕç. Эпĕ вара çав çулла Введени соборĕнче тĕне кĕрсе чиркӳ пурнăçĕпе пурăнма пуçларăм. Вырсарникунсемпе праçник кунĕсенче унта архиерей хăй службăсем ирттеретчĕ.

Аспирантура пĕтерсе диссертаци хӳтĕленĕ хыççăн эпĕ собортан тата владыка резиденцийĕнчен çĕр метрта вырнаçнă больницăра ĕçлеттĕмччĕ. Эпĕ архиерей патне кайса çӳреме пуçларăм. Вăл вара хăйĕн çыннисемшĕн яланах, юлашки кунччене уçă пулнă. Унăн ĕç пӳлĕмĕ умĕнче черет кĕтсе ларакансен йышĕнче ялти хĕрарăма та, университетри ăсчаха та, тухтăра та, вĕрентекене те курма пулатчĕ – кашнин валлиех ырă сăмахпа ăслă канаш тупăннă.

Тата темиçе çул иртрĕ. Шупашкартан Мускава куçса кайма май пулчĕ. Тĕп хулара эпĕ хамăн ĕçпе çыхăннă ĕмĕте пурнăçа кĕртес тесе шутлаттăмччĕ. Профессипе эпĕ врач-психиатр, психотерапевт, хамăн юратнă ĕçе православи енĕпе малалла аталантарасшăнччĕ.

Кĕçех Мускавра эпир ĕмĕр асăнма тивĕçлĕ Иккĕмĕш Алексий Патриарх пилленипе сектăсенчен тата çын тăн-пуçне арпаштаракан тĕрлĕ вĕрентӳсенчен инкек тӳснĕ, алкоголизмпа наркотиксен серепине çакланнă çынсене пулăшакан хӳтĕлев центрĕ йĕркелерĕмĕр. Владыка мана куçса кайма пиллерĕ. «Килсе çӳретĕн»,– терĕ. Çапла пулчĕ те. Темиçе уйăхра пĕрре эпĕ Шупашкарта аттепе анне патĕнче хăнара пулаттăмччĕ, маншăн çав тери çывăх пулса тăнă хаклă архипастыре курма тăрăшаттăмччĕ.

Пĕррехинче владыка мана Хăватлă ĕçсем тăвакан Николайăн пĕчĕк турăшĕсене пĕр пачка пачĕ, «Сан пата нумай çын çӳрет, вăт валеçсе пар вĕсене»,– терĕ. «Çакна

ăçтан пĕлнĕ-ха вăл?»– тĕлĕнтĕм эпĕ. Пирĕн центрта черет кĕтекенсем чăнах та питĕ нумайччĕ. Вăхăчĕ лăпкă марччĕ, улшăнусем нумай пулса иртетчĕç.  Çынсем «чуна кирлине» чылай чухне пĕр-пĕр сектăра  шыратчĕç. Эпир, Турă пулăшнипе, çухалса кайнисене чăн тĕн ĕненĕвне тупма пулăшаттăмăр.

Мускавра питĕ интереслĕ пулса тухрĕ. Унта пурăнма куçнă çул манăн виçĕ хваттер ылмаштарма тиврĕ. Пурте вĕсем чиркӳсен çывăхĕнчеччĕ. Çакă асамлăх мар-и-ха?  Ун чухне эпĕ хама вĕрентсе тăракан ватă архиерей пиллĕхĕн хăватне туйса илтĕм.

Варнава владыка çумĕнче питĕ çăмăлччĕ, чун савăнатчĕ, чĕрери пăшăрхану çав самантрах иртсе каятчĕ. Владыка эпĕ мĕн йӳтĕмпе килнине тӳрех пĕлетчĕ, мана витĕр куратчĕ. Хăш чухне вăл манăн пурнăçри пĕр Турă тата хам анчах пĕлекен лару-тăрăва уçса паратчĕ.

Чылай вăхăт иртсен, 2014 çулта, манăн иккĕленӳ çуралчĕ: эпĕ суйласа илнĕ çул-йĕр тĕрĕсех-ши? Тен, Турă манран урăххине кĕтет? Эпĕ туса пыракан ĕç çĕнĕ. Çак шухăш мана нумайччен канăç памарĕ. Çапла вара пĕррехинче, калаçса ларнă хыççăн, владыка мана: «Санăн çулу тĕрĕс»,– терĕ. Киле  çитсен, эпĕ хамăн кун кĕнекинче владыка сăмахĕсене тĕплĕн çыртăм та, çак куна палăртса хутăм: 14.09.2014.

Тепрехинче Варнава владыка патне хама пăшăрхантаракан лару-тăру пирки çыру çырса ятăм та, тепĕр куннех хурав илтĕм. Çыру мана шыраса тупни те тĕлĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен эпĕ урăх адреспа пурăнаттăмччĕ ĕнтĕ.

Çак пулăм та аса килет. Пĕррехинче владыка мана хăй патĕнче йышăнсан эпĕ пĕтĕм калаçăва ун умĕнче чĕркуçленсе ирттертĕм. Çĕре çити пуçа тайрăм та çавăн пекех тăтăм.  Эпĕ ун чухне пысăк хурланупа пынăччĕ. Ăна ирттерсе ярас тесен чăтăмлăхпа йăвашлăх кирлĕ, анчах шăпах çак енсем манра пулман. Владыка манран: «Мĕнле

пурӑнатӑн?»– тесе ыйтать. Эпӗ ыйтуран пӑрӑнса апла-капла калаҫма тытӑнтӑм. Вӑл ҫине тӑрсах: «Тӗрӗссине кала»,– терӗ. Эпӗ хевте ҫитерсе лайӑх тесе хуравларӑм. Ҫав самантрах вара хам тӗпрен илсен телейлӗ пулнине ӑнланса илтӗм. Маншӑн ҫакӑ питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулчӗ.

Варнава владыка мана паломниксемпе тата ӗҫлӗ ҫулҫӳревсене Афона, Иерусалима, Кипра, Киева кайма пилленӗччӗ. 2017 ҫулта, сывпуллашнӑ май, владыка мана Тихон святитель иконипе пиллерӗ. Эпир вара унпа тепӗр хут ҫулталӑк иртсен, Аслӑ Шӑматкун (2018 ҫулхи апрелӗн 7-мӗшӗнче) службӑра тӗл пултӑмӑр. Ку шӑпах Тихон святой архиерее асӑнмалли кун пулчӗ. Виҫӑ ҫул маларах вара владыка мана Туррӑн Таса Амӑшӗн Пиҫиххин ячӗпе акафист парнелерӗ, ҫулталӑкран мӑшӑрпа иксӗмӗрӗн хӗрача ҫуралчӗ.

Эпӗ владыка патӗнчен нихӑҫан та пушӑ алӑпа тухман. Вӑл яланах мӗн те пулин – хӗрес, пӗчӗк турӑш, кӗнеке – парнелетчӗ. Ҫакна чун питӗ ыррӑн йышӑнатчӗ, кӑмӑл ҫемҫелетчӗ. Яланах ӑшӑлӑхпа, юратупа, пысӑк пӗлтерӗшпе панӑ парнесен тупсӑмне вара каярахпа тин ӑнланса илеттӗмччӗ.

Ҫакнашкал пӗр тӗлӗнмелле парне ҫинчен тӗплӗнрех каласа кӑтартас килет. Нумай ҫул каялла, хӑш ҫулхине халӗ астумастӑп та, владыка мана Иерусалимра Туррӑн Тупӑкӗ ҫинче сӑвапланӑ кӗмӗл хӗрес пиллесе пачӗ. Хӑй вара, манӑн чун тӗпӗнчи шухӑша пӗлнӗ пекех, ҫак сӑмахсенеаларӗ: «Санӑн хӗресӳ ҫӑмӑлрах пултӑр»,– терӗ. Хӗресе эпӗ пархатарлӑ кӑмӑлпа йышӑнтӑм, владыка умӗнче пуҫа тайрӑм та кайрӑм. Килте хӗресе тӗрлӗ таса япаласем упранакан пӗчӗкҫӗ арчана хутӑм. Унта Турӑ Амӑшӗн Дивеевӑри Таса ҫулӗ ҫинчен илсе килнӗ хӑйӑр, Мускаври телейлӗ сӑвапӑ Матрона вилтӑпри ҫинчи тӑпра, Филарет (Дроздов) тупӑкӗн пӗчӗк пайӗ, Гефсимани пахчинчи оливка ҫулҫисем тата ытти таса япаласем пур. Халӗ, акӑ, архиерей пиллесе панӑ хӗрес хутшӑнчӗ. Тата мӗн калас ӗнтӗ.

Çулсем иртрĕç. 2004 çулта издательство проекчĕсемпе мана Людмила ятлă хĕрарăм пулăшатчĕ. Вăл упăшки тĕне кĕменнишĕн питĕ пăшăрханатчĕ. Çакăн пирки эпир Людмилăпа темиçе хутчен те калаçнăччĕ. Эпĕ вĕсем патне хăнана кайсан унăн упăшкипе паллашрăм. Манăн ăна тĕне кĕме хавхалантаракан пĕр-пĕр япала парнелес килчĕ. Вăл, ман шутпа, çак утăма тума хатĕрленсе çитнĕпе пĕрехчĕ. Эпĕ хама Варнава владыка пиллесе панă хĕресе ăна парнеленинчен лайăхраххи нимĕн те шутласа тупаймарăм. Кунта ним япăххи те çук пек туйăнчĕ мана. Хам кăкăр çинче çакса çӳрекен хĕрес çумрах, ку хĕресĕ вара «ытлашши» тесен те юрать. Владыка мана

 каланă сăмахсене эпĕ аса та илмен. Каланă – тунă. Эпĕ хĕресе парнелерĕм.

Унтанпа темиçе çул иртрĕ. Людмилăпа тата унăн упăшкипе çыхăну темĕнле татăлчĕ. Мускав çынсене час-часах уйăрса ярать çав. Вĕсен телефонĕн номерне те эпĕ, шел пулин те, упраса хăварман. Людмила мана пулăшнине час-часах ырăпа аса илеттĕмччĕ, паллах. Малалла вара пурнăçра çине-çинех йывăр инкексем пулма пуçларĕç. «Христоспа пĕрле пул!»– çапла вĕрентсе калатчĕ мана Варнава владыка яланах. Хăвăн хĕресне йăтса утмалла, Турра савăнăçшăн та, хурлăхшăн та тав тумалла. Хĕрес… Владыка пиллесе панă хĕресе чуптăвас килчĕ, анчах та вăл хаклă арчара çук. Мĕнле-ха эпĕ ватă архиерей пилĕпе çапла çăмăлттайла хăтлантăм?! Эпĕ çак хĕресе час-час аса илме пуçларăм. Вăл мана тĕлĕкре те курăнчĕ. Сасартăк ăна ятарласа мана çавнашкал тарăн пĕлтерĕшлĕ сăмахсем каласа пиллесе панине уççăн ăнланса илтĕм. Манăн çак таса япалана каялла хам пата тавăрас килчĕ. Анчах мĕнле? Адресне-телефонне пĕлместĕп. Тата... эпĕ вăл хĕресе парнеленĕ-çке, апла пулсан вăл текех манăн мар. Çав çулсенче ăна кама та пулин пама, парнелеме, çакса çӳреме те пултарнă. Ун çинчен манса кайма, е, тепĕр тесен, ăна çухатма та пултарнă...

Людмила телефонĕн номерĕ тĕлĕнмелле майпа кивĕ блокнотра тупăнчĕ. Шăнкăравламалла-ши, шăнкăравламалла мар-ши? Темĕнле аван мар пек... Тата астăвать-и-ха вăл мана? Çапах та эпĕ Людмила патне шăнкăравлама хăю çитертĕм. Телее, вăл мана тӳрех палларĕ, эпĕ ун упăшкине панă парне çинчен аса илчĕ, мăшăрĕ халĕ те тĕне кĕменни çинчен салхуллăн каларĕ.

– Сирĕн хĕрес вара тĕрĕс-тĕкелех упранать, эпир ăна тытса та пăхман,– пĕлтерчĕ вăл мана.

– Людмила, вăл ман пата мĕнле майпа лекнине сире пĕлтермеллех,– терĕм эпĕ хыпăнса, вара пĕтĕмпех тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм. – Вăл мана питĕ кирлĕ, май пулсан, тархасшăн, мана ăна каялла парăр-ха. Сирĕн упăшкана вара, вăл тĕне кĕме шухăш тытсан, урăххине туянса паратăп, – тесе эпĕ хамăн хумхануллă калаçăва вĕçлерĕм.

– Паллах, паллах. Эпĕ пĕтĕмпех ăнлантăм. Вăл Сирĕн, ăна Сире пиллесе панă,– тесе шантарчĕ мана Людмила.

Эпĕ ăна тав турăм та телефона хутăм. Тепĕр кун каçхине Людмила хĕресе ман пата ĕçе илсе килсе пачĕ. Эпир вăрахчен мар, анчах питĕ ăшшăн, туслăн калаçса лартăмăр та, сывпуллашрăмăр. Ăшăмра эпĕ ăна чунтан тав турăм. Ĕç пӳлĕмĕнче пĕччен юлсан, чылайччен ХĔРЕС ТАВРĂННИНЕ ĕненмесĕр лартăм. Пит тăрăх савăнăç куççулĕ юхрĕ. Ку тĕлĕнмелле пулăм-çке! Иртсе кайнă çулсем те, аякра пулни те çак пĕчĕкçĕ, анчах та чуна çывăх, маншăн хаклă япалана манран уйăраймарĕç. 2014 çулхи сентябрьте эпĕ çакăн çинчен Варнава владыкăна каласа патăм. Вăл, кăшт палăрмалла кулса илсе, çапла каларĕ: «Хĕресе ăна мар, сана пиллесе панă»,– терĕ.

2006 çулта манăн хурланмалли кунсем нумай пулчĕç. Эпĕ владыка патне кайрăм, вăл манран: «Ну, мĕн лайăххине калатăн-ха?»– тесе ыйтрĕ. Вара хăйех: «А ним лайăххине те каламастăн эсĕ»,– тесе хуравларĕ. Мăк-мак тукаласа 2-3 сăмах анчах каларăм. Владыка вара, манăн пурнăçри

пăтăрмахсене сăнаса пĕтĕмпех пĕлнĕ пек, уççăн та çирĕппĕн мĕн тумаллине каласа ăнлантарчĕ. Çав вăхăтра вăл мана питех те пулăшрĕ. Чуна та лăплантарчĕ, ăс парса вĕрентрĕ. Кайран вара «салам» та ячĕ. Ку акă мĕнле пулчĕ.

Эпĕ хамăн çĕнĕ кĕнекесене яланах владыкăна парнелеттĕмччĕ. Хальхинче те тин çеç пичетрен тухнă «Душевные болезни, православный взгляд» кĕнекене илсе килтĕм. Владыка эпĕ Чăваш митрополийĕн сайтне кулленех пăхса тăнине пĕлнĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, сайта архиерейăн служба вăхăтĕнче е пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕлпулура, е пĕр-пĕр мероприятире ӳкернĕ фотографине лартатчĕç. Хальхинче вара – владыка хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче сĕтел хушшинче темĕнле документсем пăхса ларать. Ун умĕнче пĕр купа кĕнеке, чи çиелти вара – манăн. Питĕ кăмăллă пулчĕ.

Пĕрре владыкăна калатăп, пурăнса çитерсен, тепĕр виçĕ уйăхран 50 тултаратăп тетĕп. Вăл вара: «Ку сахал мар»,– тесе хуравларĕ. Юбилей умĕн вара манăн пуçра: «Владыка мана мĕн те пулин парнелетĕрччĕ»,– текен чăрсăр шухăш вĕçсе иртрĕ. Çавăн пек парнене илтĕм вĕт! Яланхиллех, сывпуллашнă май, эпĕ пил илме пуçа пĕкрĕм. Владыка çав самантра мана хăй çумне пăчăртаса пуçран шăлма пуçларĕ. Ун чухне эпĕ арăмпа пĕрле кайнăччĕ, вăл мана алăран çавăтса тенĕ пек кабинетран илсе тухрĕ. Эпĕ ура айĕнчи çĕре те туймастăп, питĕ хумханса кайрăм. Владыка мана хăйĕн пиллĕхне пачĕ пуль тетĕп. Чунра питĕ лăпкă, çăмăл, лайăх пулса кайрĕ. Вăт çакăн пек парнене тивĕçрĕм эпĕ, çылăхлăскер...

2017 çулта Турă мана йывăр чир ярса пачĕ. Онкологи. Владыка мана сипленме тата операцисем тутарма (пурĕ виçĕ операци пулчĕ) пиллесех тăратчĕ, питĕ хытă кĕлтума хавхалантаратчĕ. Атте пек юратса, анчах çирĕппĕн: «Кĕлтумалла!»– тесе калатчĕ вăл манпа яланах. Лăпкăн, кĕлтуса, Турă пулăшасса шанса кĕтсе илмелле çак йывăрлăхсене тетчĕ. Лару-тăру хăрушăччĕ манăн. Пурнăç

çӳç пӗрчи çинче çакӑнса тӑнӑ пекехчӗ. Владыка манӑн аннерен эпӗ хама мӗнле туйини çинчен кашни кунах пӗлтерсе тӑма ыйтрӗ.

2018 çулхи çулла йывӑр операци хыççӑн эпӗ çемьепе темиçе уйӑхлӑха Тверь облаçне кайрӑм. Атӑл хӗрринче, шӑплӑхра, ӳсен-тӑран сип-симӗс ешернӗ вырӑнта пурӑнаттӑмӑрччӗ. Вырсарникунсерен вырӑнти чиркӗве çӳреттӗмӗрччӗ, шӑматкунсене вара час-часах сиктереттӗмӗрччӗ. Июнӗн 24-мӗшӗнче, владыкӑн Ангел кунӗнче, эпӗ ӑна саламлас тесе ун патне шӑнкӑравларӑм. Нумай калаçрӑмӑр, тем те сӳтсе яврӑмӑр. Сывпуллашас умӗн владыка мана: «Чиркӗве час-часрах çӳре»,– терӗ. Çакна икӗ е виçӗ хутченех каларӗ. Кайран вара мана пиллерӗ те телефона хучӗ. Пирӗн архиерей хӑйӗн чун куçӗпе пӗтӗмпех курса тӑнӑ. Эпӗ вара унпа калаçнӑ хыççӑн каçхи кӗлле те кайма тӑрӑшаттӑмччӗ.

Чӑн-чӑн манах, тӑрӑшса кӗлтӑвакан, хӑйне питӗ чаруллӑ тытакан, ӑслӑ ватӑ. Унӑн сӑн-сӑпачӗ, тыткаларӑшӗ, хусканӑвӗсем, йӑл кулни (вӑл нихӑçан та хыттӑн кулмастчӗ) – – пӗтӗмпех унӑн чун пархатарлӑхне кӑтартса паратчӗ. Вӑл пӗр вӑхӑтрах хастар архипастырь те, чун-чӗререн кӗлтӑвакан манах та пулнӑ. Çакӑ вӑл сайра пулакан ырӑлӑх парни. Хӑйӗн чун кӗтӗвӗшӗн Варанва владыка тӑван ашшӗ пекех пулнӑ. Ӑна таса кӑмӑлтан, чунтан юрататчӗç, хисеплетчӗç. Пулас архиерейӑн ачалӑхӗпе яшлӑхӗ питӗ йывӑр вӑхӑта лекнӗ. «Халӑх тӑшманӗн» ывӑлӗ пулнӑ май, Володя Кедров сахал мар хура-шур тӳснӗ, ытти ачасем унран пӑрӑнса çӳренӗ, унпа выляман.  Анчах вӑл яланах Христоспа пулнӑ. Владыкӑн пурнӑç çулне тишкернӗ май, унта нимӗнле кукӑр-макӑр йӗрсем те курмастӑн. Вӑл çутӑ та тӳрӗ, пӗр мӑнастир тата пӗр архиерей кафедри. Тӑрӑшса кӗлтуни, ӗçлени, чӑтӑмлӑ пулни тата хушнине туса пурӑнни – акӑ мӗн пулӑшса пынӑ пирӗн архипастыре.

Варнава владыка Турӑ сӑмахне чӗререн вӗрентетчӗ. Уҫҫӑн та ӑнланмалла калатчӗ. Сӑмахӗсене вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗн тӗслӗхӗпе, пӗр чарӑнми кӗлтунипе, ӑс-хакӑл пуянлӑхӗпе ҫирӗплететчӗ. Акӑ вӑл вӗрентнин пӗр сыпӑкӗ: «Сире яланах Турӑпа пӗрле пулма, Вӑл пуррине туйма сунатӑп. Пирӗн пурнӑҫ ҫӑмӑл мар, пур чухне те шухӑшланине пурнӑҫа кӗртейместпӗр, ҫылӑха та кӗретпӗр, ӳпкелешетпӗр те. Кӗлтумалла та Турӑ пулӑшасса шанмалла... Хаклӑ тӑвансем! Турӑ пек, хӑвӑра кӳрентерекенсемшӗн те, юратакансемшӗн те кӗлтӑвӑр. Пире кашнинех Турӑ хӑй патне чӗнсе иличчен кӗлтӑвар, ҫылӑхсемшӗн ӳкӗнер, тупӑкра ӳкӗнме пулмасть. Христос ҫынни пек пархатарлӑ пурӑнма тӑрӑшӑр, пурне те юратӑр, никама та ан айӑплӑр, хӑвӑрӑн ҫитменлӗхсене асӑрхӑр. Турӑ пурне те ҫӑлӑнӑҫ патӑр. Сывлӑхлӑ пулӑр, Турӑ сире пулӑштӑр, Ҫӳлти Атте сире хӳтӗлетӗр, ҫӑмӑл мар пурнӑҫра пулӑшса тӑтӑр...»

Владыка 2018 ҫулта Мускавра сипленчӗ, вара тӗп хуларан Мускаври телейлӗ Матронан иконине илсе килчӗ. Хӗрарӑмсен Покровски мӑнастирӗн игуменйи Феофания матушка ӑна (кун пирки мана владыка хӑй каласа пачӗ) ҫак таса сӑна «Ку ятарласа Сире валли»,– тесе панӑ. Анчах та Варнава владыка нихӑҫан та хӑйшӗн пурӑнман. «Сире валли» тесе калани уншӑн чиркӗве ҫӳрекен халӑх валли тенине пӗлтернӗ. Вӑт вара вӑл пурӑнакан ҫурт алӑкӗ ҫумӗнчи пӗчӗк пӳлӗмре аналой турӗҫ те унта таса турӑша вырнаҫтарчӗҫ. Каҫхи служба хыҫҫӑн е апат кӗлли вӗҫленсен прихожансем владыкӑна киле ҫити ӑсататчӗҫ, вӑл вара пурне те кӗрсе турӑша чуптума чӗнетчӗ. Серафима матушка (халӗ – Сергия схимонахиня) пире телейлӗ Матронушкӑн турӑшӗ умӗнчи чечексене пиллесе валеҫсе паратчӗ. Ҫакӑ нихӑҫан та манӑҫа тухас ҫук. Ҫитӗнсе ҫитнисем те, ачасем те – пурте ҫак хумхануллӑ самантсене савӑнса кӗтетчӗҫ.

Вӑхӑт шӑвать. Ҫулсем хӑйӗннех тӑваҫҫӗ. Вӑй-халӗ чаксах пырать пулин те, Варнава митрополит чиркӳ

службисене сиктерместчĕ. Кĕлĕ пуçланас умĕн яланах кафедра çинче тумланатчĕ, кĕлĕ вĕçленсен Турра кĕлтума килнĕ КАШНИ çынна пил паратчĕ. Лаврăра Сергий святой ячĕпе иртекен уявсенчен те юлмастчĕ. Ун ячĕпе никĕсленĕ мăнастирте çирĕм çул ытла тăрăшнă пулас архиерей яланах хăй юратнă аввăна пуççапма каятчĕ.  Варнава владыка отпуск илмен, нихăçан та ахаль тум тăхăнса çӳремен, яланах священник тумĕпе çӳренĕ. Таса Çĕре паломниксемпе кайсан, вăл 12 кун хушшинче 10 апат кĕлли таран ирттернĕ. Таса вырăнсенче пирĕншĕн пĕр чарăнми кĕлтăвасса пĕлсе тăнăран, эпĕ яланах владыка паломниксемпе çулçӳреве каясса кĕтеттĕмччĕ.

2020 çулта Христос хĕресне чиркӳ варрине илсе тухса пуççапмалли эрнере эпĕ Варнава митрополит патĕнче пултăм.  Унăн ĕç пӳлĕмĕнчен тухнă чухне владыка манпа питĕ ăшшăн сывпуллашрĕ. Праçниксемпе саламланăшăн тав турĕ, çул пилĕ пачĕ, Турă пулăшăвне сунчĕ. Вăл чуна пырса тивмелле каланăран куççуле аран чартăм. Кабинетран тухсан, ăшра шикленӳ туйăмĕ çуралчĕ, «Тен, ку пирĕн юлашки тĕлпулу»,– тесе шутласа илтĕм.  Йăнăшман иккен. Тĕрĕсрех, апла мар-ха. Эпĕ митрополит владыка ирттернĕ службăсене тата икĕ хутчен  те кĕлтума кайрăм. Ăна çуралнă кунĕпе саламласа чечек çыххи те парнелерĕм. Анчах çавнашкал калаçу урăх пулмарĕ…

Владыка мана юрататчĕ. Ман шутпа çак сăмахсене пурнăçра Варнава митрополитпа тĕл пулнă нумай-нумай çын калама пултарать. Владыкăн ячĕ - Варнава – «Савăнтаракан ывăл» тенине пĕлтерет. Чăн та вара – ячĕ мĕнле, пурнăçĕ те çавнашкалах. Эпĕ ăна яланах хисеплесе, тав туса аса илетĕп, вăл манăн кĕллĕмсенче, манăн чĕремре. 2020 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче Варнава владыка Турă патне куçрĕ.

Эпĕ чĕрĕк ĕмĕре яхăн Шупашкарта пурăнмастăп. Тен, Турă владыкăна Хăй патне чĕнсе илсен, манăн унпа сывпуллашма та май килмĕ тесе пĕрре мар шутланă. Вата

çыннăн çулĕсем самаяхчĕ. Эпĕ вара яланах таçта та кайса çӳреттĕм, командировкăсем нумайччĕ. Анчах Турă мана хĕрхенчĕ. Манăн хаклă владыкăн тупăкĕ умĕнче кĕлтума, Литургие хутшăнма тата Турă патне куçнă архипастыре кĕлтуса ăсатма май пулчĕ.

Шансах тăратăп, Варнава митрополит çинчен калакансем те, çыракансем те тата нумай пулĕç. Владыкăн ĕмĕрĕ вăрăм пулчĕ. Хĕрĕх тăватă çула яхăн вăл пĕр кафедрăра ĕçлесе пурăнчĕ.

Ман умра Варнава митрополитăн «Турăпа яланах çăмăл» кĕнеки. Эпĕ ăна темиçе хутчен те вуланă. Кашнинчех пĕрре ларса, куççульпе вуласа тухатăп. Çак чаплă кĕнекене мана владыка хăй парнелерĕ. Маншăн уйрăмах асра юлмалли самант пулчĕ ку. Пулас архипастырь мĕн пĕчĕкрен Турăпа пулнă. Турăпа вара ăна, пурнăçĕ тем пек йывăр пулин те, яланах çăмăл пулнă. Ку кĕнеке вăл – мĕнле пурăнмаллине, ĕненмеллине, шанмаллине тата Турра юратмаллине кăтартса паракан тĕслĕх. Чиркĕве çӳрекенсене вăл хăйĕн пурнăçĕпе, хăйĕн тĕслĕхĕпе çăлăнăç çулне кăтартса парать. Пире Турра, Унăн Таса Чиркĕвне юратма, Чăн тĕне тĕрĕс тытса пыма, упрама вĕрентет.

Тата тепĕр пулăм çинчен каласа парас килет. Владыкăна кĕлтуса ăсатнă хыççăн чиркӳре эпĕ унăн секретарĕ патне пытăм та, митрополит пурăннă чухне усă курнă пĕр-пĕр япала асăнмалăх пама ыйтрăм: «Пĕчĕк кашăк е тӳме те пулин...» Çакă ача ыйтнă пекех пулнине те ăнланатăп хам. Владыка пурăннă чухне эп ун патĕнчен кучченеçсĕр нихăçан та кайман. Хальхинче те манăн асăнмалăх мĕн те пулин илес килчĕ. Юлашки хутчен пил илнĕ пек... Секретарь мана итлесе пĕтерчĕ те шăнкăравлама сăмах пачĕ, анчах май килмерĕ пулас...

Çав çулла эпир манăн аттепе анне патĕнче Шупашкарта хăнара пултăмăр. Вара пĕррехинче çуллахи илемлĕ çанталăкра эпир мăшăрпа тата хĕрпе владыкăн

вилтăпри çине кайрăмăр, чунтан кĕлтурăмăр, лития юрларăмăр. Киле кайма пуçтарăнсан Введени чиркĕвне те çитсе килес кăмăл çуралчĕ. Унта нумай çул каялла эпĕ хамăрăн архипастыре пĕрремĕш хут курнăччĕ. Вунă-вунпилĕк минутран эпир собор патне çитрĕмĕр те. Çав самантра Сергия схимонахиньăна тĕл пултăмăр. Вăл нумай çул архиерей çуртĕнче владыкăна пулăшса пурăннă. Сергия матушкăна эпир лайăх пĕлнĕ. Калаçса кайрăмăр унпа. Вара эпĕ ăна хамăн кăмăла пĕлтертĕм. «Айта манпа пĕрле, мĕн те пулин тупса паратăп»,– терĕ матушка.

Утса пыратпăр, куçсем шывланчĕç... Çак çулпа эпир служба хыççăн владыкăна яланах киле ăсататтăмăрччĕ, «Эй, Турра çуратнă Хĕр, савăн!» кĕлле юрлаттăмăрччĕ. Пӳрте кĕтĕмĕр. Матушка арăмпа иксĕмĕр валли кĕлтуса асăнмалăх пĕрер турăш илсе тухрĕ, мана – Çăлаканăнне, арăма – Турă Амăшĕн Иерусалимри таса сăнне пачĕ. Çак иконăсене владыка Таса Çĕртен илсе килнĕ. Эпĕ çаплах лăпланаймастăп. «Матушка, тен, пĕр-пĕр тӳме те пулин юлнă унăн?»– тетĕп. Çав самантра Сергия матушка мана калать: «Эпĕ паян владыка кофти çинчи тӳмесене касса илтĕм, çакна мĕншĕн тунине хам та ăнланмарăм... Акă, ил-ха вĕсене...»,– тет. «Мана пĕрре те çитет»,– тетĕп. «Çук. Пурне те илсе кай». Çак сăмахсемпе Сергия матушка ман ывăçа сакăр тимĕр тӳме хурса пачĕ. Хĕрĕх-аллă çул каялла кăларнă тӳмесем пуль ĕнтĕ вĕсем... Владыка мана çак савăнăççăр хăвармарĕ, эпĕ ыйтнине пурнăçларĕ. Пиллерĕ.

Эй, Турă, Хăвăн вилнĕ чурун, ĕмĕр асăнма тивĕçлĕ Варнава митрополитăн чунне канăçлăх пар, ăна ĕмĕр-ĕмĕрех аслăлама тивĕçлĕ ту!

**Мускаврa пурăнакан врач, публицист,**
**Раççей писателĕсен Союзĕн пайташĕ Дмитрий Авдеев**

# МАЛТАНАХ ПĔЛСЕ ТĂНИ



*«Малтанах пĕлсе тăрасси вăл йăвашлăхран тата Турра шаннинчен килет»*

*Варнава митрополит*

***

Владыка малашне мĕн пулассине пĕлсе тăни çинчен нумай каласа пама пулать. Акă, сăмахран, алтарьте ектения пырать, яланхи йĕркепе иртекен кĕлĕ, священник Турра мухтаса пурте илтмелле каланă хыççăн – «Тĕне кĕмелли çынсем, тухăр!»– тет. Эпĕ: «Çак вăхăтра çынсен чиркӳрен тухмалла»,– тесе ăшра шутласа тăратăп, владыка вара мана сасăпа хуравлать: «Çапла, алăксене те хупмалла».

Литургире владыка кашни кун просфорсенчен пай кăларатчĕ, эпĕ юнашар тăнă та, ăна пулăшатăп. Темшĕн Евдокия ят аса килчĕ, эпĕ манăн вăл ятлă виле çук тесе шутласа илтĕм. Владыка мана сасăпа: «Пĕтĕмпех тĕрĕс!»– тесе хуравларĕ. Служба вĕçленсен чиркӳ картишĕнче ман пата пĕр хĕрарăм пырать те Евдокия канлĕхĕшĕн кĕлтума çак ятпа çырнă хут парать!

Пĕр икĕ çул каялла алтарьте владыка манран: «Эпĕ вилсен халăх нумай пулать-и?»– тесе ыйтрĕ. Эпĕ: «Мĕнле вăхăт пулнинчен килет ĕнтĕ»,– тетĕп. Владыка: «Мĕнле?»– тет. Вара вăл куçĕсене аллипе хупларĕ те, хăйех: «Сахал»,– тесе хуравларĕ. Кăшăлвирус инфекцийĕ сарăлнăран чăнах та çавнашкалах пулса тухрĕ.

**Киприан (Кулаков) игумен**

***

Пĕррехинче эпир Варнава владыка патне Илья Михайлов тус-юлташпа иксĕмĕр ăна авланма пил ыйтма пытăмăр. Ку 1977 çулта пулнăччĕ. Владыка: «Тĕллевне палăрт, хĕр шыра, санăн священник пулма пил илмеллле»,– терĕ. Илья тухсан вара владыка ун пирки вăл пурпĕрех манах пулать терĕ. Çапла пулчĕ те. Илья иероманах, кайран Иларий игумен пулса тăчĕ.

**Михаил Иванов протоиерей**

***

Варнава владыка пилленипе мана Игнатий епископпа пĕрле çулталăк каяллах Мускавран унăн вилтăпри çине лартмалли Хĕрес илсе килме тӳр килчĕ. Вăл урăх тĕнчене куçса кайма малтанах хатĕрленнĕ çав! Халĕ вăл ун айĕнче выртать, пăхатăп та çав Хĕрес çине, чунра ăшă пулса каять, чĕрĕ владыка пирĕн çине пăхнăн туйăнать. Турă ырăлăхĕпе вăл пирĕншĕн пуриншĕн те, çав шутра маншăн та, Турă умĕнче кĕлтунине ĕненетĕп.

Ĕмĕр асăнма пар! Çулти Патшалăх пултăр!

**Апостолсемпе тан святой Валадимир князь ячĕпе Çĕнĕ Шупашкарта лартнă собор старости Алексей Николаев**

***

Владыка чылай чухне кам килессе малтанах пĕлетчĕ. Хăш чухне ларатпăр çапла, апат çиетпĕр, сасартăк вăл алăк уçма хушать, çав-çав çын килчĕ тесе пĕлтерет. Тухатăн та, чăнах та, çав çын килет. Анчах та ăна вăл малтанах пĕлсе тăни çинчен каласан, шӳтлесе ирттерсе яратчĕ, ăнсăртран пулчĕ тетчĕ.

Пĕррехинче Мордовири мăнастирти пĕр архимандрит Улатăрти мăнастиртен Турă Амăшĕн Хусанта курăннă таса сăнне илсе каясшăн пулнă. Владыка патне пынă та, çапла каланă: «Мана тĕлĕкре Вассиан святой манах курăнчĕ, Турă Амăшĕн Казански турăшне илсе кайма хушрĕ»,– тенĕ. Вадыка вара ăна: «Мана тĕлĕкре Турра çуратнă Хĕр курăнчĕ, хăйĕн иконине никама та парса яма каламарĕ»,– тенĕ. Унтан вара иккĕшĕ те кулса янă. Архимандрит çак историе шутласа кăларнине йышăннă. Владыка çакна тавçăрса илнĕ те ăна тĕрĕссине калаттармалли меслет тупнă. Икона Улатăр мăнастирĕнчех юлнă.

**Михаил Степанов протоиерей**

***

Кăçалхи август уйăхĕнче Сароври Серафим святойăн ÿтне Санкт-Петербургран Мускава тата Дивеевăна куçарнăранпа вăтăр çул çитнине паллă турĕç. Халĕ вăтăр çул каялла пулса иртнине аса илсе каласа кăтартас килет, мĕншĕн тесен, телее, мана Варнава владыкăпа пĕрле çак ĕçе хутшăнма тÿр килчĕ.

Варнава владыка хăйĕн çивĕч ăсĕпе тата тĕлĕнмелле пĕлÿлĕхĕпе, малалла мĕн пулассине туйса тăнипе святойăн ÿтне куçарас ĕçе хутшăнакан çынсене «ăса кĕртни» аса килет. Пĕр хулара Преосвященнăй архиерейсем гостиницăран чиркĕве кайма автобуса пуçтарăнчĕç. Владыкăна, çулĕсемпе чи асли тесе, гостиницăран тухнă çĕре лифтпа анма сĕнчĕç, анчах та вăл Патриарх службине кая юлма юрамасть тесе килĕшмерĕ. Эпир вара владыкăпа иксĕмĕр пусма картлашкисемпе антăмăр.

Кулкаласа владыкăн сăмахне хăлхана чикменнисем вара лифт чарăнса ларнипе службăна кая юлса çитрĕç.

**Валерий Краснов протодиакон**

***

Эпĕ 1985 çулта шкул вĕренсе пĕтертĕм. Çав вăхăтра пурте бухгалтерсемпе экономистсем пулма вĕренетчĕç, вара эпĕ те çавăнтах каяс терĕм. Анне мана Варнава архиепископ патне пиллĕх ыйтма илсе кайрĕ. Астăватăп-ха, эпир Водопроводнăй урамĕнчи çуртра кĕтсе ларатпăр, владыка патĕнчен Вениамин атте тухрĕ. Вăл аннепе калаçса илчĕ те эпир владыка патне кĕтĕмĕр. Владыка сĕтел хушшинче ларать, пирĕн çине лăпкăн, тимлĕн пăхать. Эпĕ вара питĕ хытă хумхантăм. Владыкăна экономика факультетне вĕренме кĕме шутлани çинчен каларăм, пил пама ыйтрăм. Владыка вара: «Манăн вара санран врач тăвас килет...»,– тесе хуравларĕ. Çав самантра эпĕ мĕн туйнине эсир пĕлме те

пултараймастăр. Маншăн ку кĕтмен çĕртен пулчĕ, макăрса ятăм, юнран хăратăп тетĕп. Вăл ман çине пăхрĕ, тăчĕ те, çапла каларĕ: «Ну, юрать, сана экономиста вĕренме кĕме кайма пиллетĕп». Çак факультета пĕрремĕш экзамена эпĕ те «тăваттăллăх», те «виççĕллĕх» тытрăм, астумастăп. Çак экзамен хыççăн вĕренӳ çурчĕ тăрăх курса çӳреме шутларăм. Аудиторисем умĕпе иртсе пынă чухне сĕтелсем çинче счетсем ларнине куртăм та, мана питĕ тунсăх пулса кайрĕ.

Тепĕр кунне эпĕ чупса кайса документсене каялла илтĕм, медицина факультетне кĕме кая юлнăран медицина училищине заявлени патăм. Шкулти аттестатра манăн икĕ «тăваттă» анчах пулнă, ыттисем пурте «пиллĕк». Мана вара аттестатсен конкурсĕпе фельдшерсемпе лаборантсен факультетне илчĕç. Икĕ çул вĕренсе хĕрлĕ диплом илсен, эпĕ медицина факультетне кайма шутларăм.

Тĕлĕнмелле, ман пек хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнисене врача вĕренме аттестатсен конкурсĕпе илеççĕ иккен. Çакăн пек эксперимент пĕр икĕ çул пулчĕ пулас (ун чухне медфака кĕме конкурс питĕ пысăкчĕ). **Çапла вара эпĕ, Варнава митрополит шухăшланă пекех, врач пулса тăтăм.** Вăл кĕлтунипе манăн умра пур алăк та уçăлчĕ. Ĕмĕр-ĕмĕрех асра!

**Наталья Щербакова**

***

Виç-ипостаçлĕ Таса Турă уяв кунĕ эпир çемьепе арçынсен Шупашкарти Свято-Троицки мăнастирне кайрăмăр. Службăна архиерей ертсе пычĕ.

Чиркĕве тирпейлесе илемлетнĕ, вăл пĕтĕмпех симĕс çулçăллă туратсемпе чечек ăшĕнче. Урайне ырă шăршăллă çаран курăкĕ сарса хунă. Турăшсем çинче çутă йăлкăшса вылять. Служба хăй йĕркипе пырать. Владыка темиçе хутчен те престол умне чĕркуçленсе ларчĕ. Çакна курса манăн упăшка, тĕлĕнсе те савăнса: «Пăх-ха, владыка мĕнле ватă,

апла пулин те чĕркуçленет, ăна йывăр вĕт-ха»,– терĕ. Эпĕ: «Пирĕншĕн, хăйĕн çылăхлă кĕтĕвĕшĕн кĕлтăвать, чĕркуçленмесĕр Турра мĕнле тархаслăн-ха»,– тесе хуравларăм.

Акă служба та вĕçленчĕ, çынсем кăштах ывăннă пулин те, савăнăçлă. Амвон çине Варнава владыкăпа мăнастир настоятелĕ Василий архимандрит тухрĕç. Василий атте владыкăна тав турĕ, пысăк просфорăпа чаплă чечек çыххи пачĕ. Варнава владыка настоятеле тав турĕ, унăн сăмахĕсем çăмăллăн, анчах тӳрремĕн илтĕнчĕç. Вăл чиркĕве пынă кашни çын валли ятарласа питĕ кирлĕ сăмахсем каланă пек туйăнчĕ. Ăна итлесен эпĕ яланах пире çылăхсемшĕн ятланине те, хӳтĕленине те, пилленине те туяттăмччĕ. Василий аттене вара вăл вĕçне çитиччен арçынсен Свято-Троицки мăнастирĕн настоятелĕ пулса юласси пирки каларĕ.

«Йывăр пулать, – тетчĕ вăл, – анчах Туррăн таса Амăшĕ хăвармасть, яланах хӳтĕлет, кĕлтăвăр кăна».

Кайран вăл чиркĕве çӳрекенсене хăй вĕсене питĕ юратни çинчен каларĕ. Турă ăна пирĕнпе 43 çул пĕрле пулма шаннăшăн тав турĕ. Чăваш Енре пурăнакан халăхăн 80 процентчĕ православи тĕнĕпе пурăннине, анчах вĕсенчен 10 процентчĕ çеç чиркĕве çӳренишĕн хурланнине пĕлтерчĕ. Çав вăхăтрах çак пĕчĕк кĕтӳ те хăйĕн кĕллипе тата тӳрĕ пурнăçĕпе тĕнчене çăлма пултарни çинчен каларĕ.

Ăна итлесе тăнă май, эпĕ шухăшпа владыкăна хама тахçанах хумхантаракан ыйтăва патăм: «Владыка, Эсир пирĕнтен уйрăлса кайсан пирĕн ăçта каймалла, камран кĕлтума ыйтмалла, хӳтлĕх шырамалла?» Владыка тӳрех ман çине çынсен пуçĕсем урлă пăхрĕ те хыттăн хуравларĕ: **«Эп вилсен, манăн вилтăпри çине пыма пуçлатăр, пĕтĕмпех каласа паратăр».** Вăл мана каланă çак сăмахсем хыççăн, владыка пире нихăçан та хăвармасса пĕлсе тăнăран, малалла пурăнма та çăмăлрах!

**Турă чури Фотиния**

***

Варнава владыка пирĕн çемьене Шупашкарта пурăнма юлма пиллерĕ. Хăшпĕр лару-тăрура мĕнле çул суйласа илсен тĕрĕсрех пулать-ши тесе ыйтсан, вăл ку енĕпе Матрона патне пымалла тетчĕ. Телейлĕ Матронăн çĕрмен ӳчĕ çине кайса кĕлтусан çав куннех пĕтĕмпех йĕркеленетчĕ.

Митрополитăн малашне мĕн пулассине пĕлес туйăм лайăх аталаннăччĕ. Пĕррехинче мана Казански Турă Амăшĕн таса сăнне – Ăна ангелсем йăтса пыраканнине – мозаикăран туса пĕтерме пулăшрĕ. «Пĕр йĕркине илсе пăрах, Ангел вара лайăхрах вырнаçĕ»,– терĕ. Вара çак ĕç чăннипех те йĕркеллĕ пулса тухрĕ. Владыка мана мозаикăран иконăсем ăсталама пиллерĕ. «Çакна пурте тăваймаçĕ, тăрăш! Дивеевăра мĕнле ĕçлесе пурăннă, малашне те çавăнтах тăрăш»,– терĕ. Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Галина Кадикина-Вернер**

***

Варнава владыка Иерусалимран килнĕ те, чиркӳре служба хыççăн пурне те Турă Амăшĕн Иерусалимра курăннă таса сăнне парса пиллерĕ. Эпĕ те черетпе владыка патне пил илме пытăм, тата хамăн хĕрачасем валли те иконкăсем ыйтрăм. Вăл ман çине пăхса илчĕ те, виçĕ турăш пачĕ, мана пиллерĕ те çапла каларĕ: «Акă виçĕ турăш, санăн халь виçĕ хĕр вĕт». Эпĕ вĕсене питĕ пысăк савăнăçпа, тав туса алла тытрăм! Хам вара тĕлĕнсе пĕтерейместĕп: манăн халĕ виçĕ хĕр пулнине мĕнле пĕлнĕ-ха вăл? Эпĕ ăна нимĕн те каламарăм-çке, хĕрсем валли иконăсем ыйтрăм çеç. Çапла, манăн икĕ хĕр, ывăл авланса венчете тăчĕ те – халĕ вара манăн виçĕ хĕр пулчĕ!

Пирĕн тĕлĕнмелле, пулассине пĕлсе тăракан Варнава владыка! Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Алевтина**

Мана хамăн пурнăç çулĕнчи улшăнуллă самантсенче икĕ хутчен Варнава владыкăран пил илме телей пулчĕ. Пĕрремĕшне эпĕ хамăн диссертацие хӳтĕлес умĕн илтĕм. Лару-тăру çав тери кăткăсчĕ, анчах Варнава владыка пилленипе эпĕ хама шанса, Святой Сывлăш пулăшассине ĕненсе мĕнпур йывăрлăха тивĕçлипе çĕнтерме пултартăм. Ĕçтешсем пулăшнипе пилĕк çул хушшинче пурнăçланă ĕçе Чăваш Республикинче пирвайхи хут ырласа йышăнчĕç. Варнава владыка малалла мĕн пулассине пĕлекен ватă çын пулнă. Çынсене витĕр курнă тесен те юрать, эпир юлташ хĕрарăмпа хамăр ĕçсене хӳтĕленине туйнă вăл. Унăн пилĕпе эпир çитĕнӳ турăмăр.

Иккĕмĕш хут пил илме манăн кун-çула татса паракан пулăм умĕн – Мускава куçса кайма шухăш тытсан – телей пулчĕ. Астăватăп, владыка эпĕ мĕншĕн унта кайнин сăлтавне тимлĕн итлерĕ, шел пулин те, халĕ нумайăшĕ Мускава каяççĕ терĕ. Çав вăхăтра никама та çăмăл пулман. Владыка мана çапла пиллерĕ: «Сан пек çынсем пире те кирлĕ». Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ пирки эпĕ питĕ нумай шутларăм. Темиçе хутчен те каялла куçса килме тытăнтăм, анчах та мана темĕн чарса тăчĕ. Çаплах Мускавра ĕçлетĕп, пурăнатăп. Халь упăшка та куçса килчĕ, ачасем те вĕренсе тухрĕç, ĕçлеççĕ, пĕтĕм çемье пĕрле пуçтарăнчĕ. Хамăрăн Шупашкар çыннисенчен нумайăшĕпе эпĕ çыхăну тытатăп, пултарнă таран пулăшатăп. Тăван çĕршыва манмастăп, çуралнă кĕтес пурăнма яланах вăй-хал парать. Владыка ырă çул сунса каланă сăмахсен тупсăмне тĕрĕсех ăнлантăм пулĕ тетĕп. Тăрăшса ĕçлемелле, вара пур çĕрте те юрăхлă пулан. Тавах ырă пил панăшăн, юратнă владыка! Унăн ăшă куçĕсемпе лăпкă та кăмăллă сассине эпĕ час-часах аса илетĕп. Çĕр çинчи пурнăçра çакăн пек ырă кăмăллă сăваплă çынпа – Варнава владыкăпа – паллашнăшăн Турра тав тăватăп. Çӳлти Патшалăх пултăр, хаклă владыка!

**Мускав хулинче пурăнакан Алевтина**

2010 çулта, Турă Амăшĕ леш тĕнчене канăçланса куçса кайнă куна паллă тăвас умĕн, эпĕ пĕрремĕш хут Введени соборĕнче Варнава владыка ирттерекен службăра пултăм. 2016 çулта вăл мана стихарь тăхăнма пиллерĕ. Сыпас умĕн владыкăпа паллашнине аса илетĕп, вăл манран савăнăçлăн: «Эс мĕн ятлă?»– тесе ыйтрĕ. Эпĕ Арсений терĕм. 2017 çулта, Шыва кĕртекен Иоанн çуралнă кун, мана подрясник тăхăнма пил пачĕ, «Санăн манах пулас килет-и?»– тесе ыйтрĕ. Эпĕ ăна: «Пулас килет»,– тесе хуравларăм. Вара вăл мана манаха кĕме пиллерĕ. Çӳлти Патшалăх пултăр хаклă Варнава владыкăна!

**Арсений**

***

Успени чиркĕвне кĕлтуса тасатнă кун унта халăх питĕ нумайччĕ. Служба хыççăн владыка яланхиллех чиркĕве çӳрекенсене пиллерĕ. Хальхинче вăл пурне те Турă Амăшĕн пысăк турăшне парса тухрĕ. Эпир йăмăкпа пĕрле кайнăччĕ. Вăл мана калать: «Мана пысăк иконка кирлĕ мар, пĕчĕкки пулсан лайăххах»,– тет. Паллах, владыка пирĕн калаçăва илтме пултарайман, мĕншĕн тесен эпир унран питĕ аякра тăраттăмăрччĕ тата чиркӳре питĕ шавлăччĕ. Хайхи, владыка патне пыратпăр та, мана пысăк икона лекет, йăмăка вара владыка алă тупанĕнчен те пĕчĕкреххине парать. Малалла вара пурне те пысăк иконăсемех пачĕ!

Эпĕ вăл витĕр курса тăни çинчен çынсенчен нумай илтнĕ. Елена ятлă хĕрарăм мана владыка вĕсен чиркĕвĕнче пурне те пĕрер иконка парса пиллени çинчен каласа пачĕ. Вăл: «Хамăр ялти çынсем валли иконăсем ытларах илсе кайсан лайăхчĕ те»,– тесе шутласа тăратăп тет. Ун патне черет çитсен владыка пилленĕ те, ăна те 12, те 15 икона панă. Çакă тĕлĕнтермĕш мар-и вара! Мухтав Турра! Владыченькăна пуриншĕн те тав тăватăп!

**Турă чури Нина**

***

## «Ӳкер, анчах çылăха ан кĕр»

Варнава владыкăпа эпĕ 1981 çулта паллашрăм. Çав çул эпĕ нумай асап тӳсрĕм. Пĕрле вунвиçĕ çул пурăннă упăшка вилсе кайрĕ, кайран хам хăрушă аварине лекрĕм, чылай вăхăт стационарта выртрăм. Больницăра сипленнĕ чухне, тăна кĕнĕ вăхăтсенче, мана темиçе хутчен те Хăватлă ĕçсем тăвакан Николай курăнчĕ. Чиркĕве кайсан эпĕ унăн иконине куртăм, Варнава владыкăпа паллашрăм.

Сывалса çитсен, Николай Чудотворец турăшне ӳкерме шутларăм, святойăн аллине хамăн ывăла вырнаçтартăм. Иконăна тĕрĕсех ӳкертĕм-ши текен шухăш мана питĕ канăçсăрлантарчĕ, вара эпĕ Варнава владыка патне пырса калаçрăм. Владыка мана: «Хăвăн турăшусене ӳкер, анчах çылăха ан кĕр»,– терĕ. Халĕ эпĕ питĕ лăпкăн пурăнатăп, хамăн утăмсене асăрхасах тăратăп.

**Валентина Маслова**

# ÇЫННА СЫХЛАСА УСРАКАН АНГЕЛ



***

Варнава митрополит патӗнче службӑра пулнӑ чухне ун ҫине пӑхаттӑмччӗ те, вӑл мана Христосӑн Ангелӗ евӗр хитре туйӑнатчӗ! Пуҫа ҫакӑн пек танлаштару анчах килетчӗ. Вӑл яланах савӑнӑҫлӑччӗ, уҫӑ кӑмӑллӑччӗ, никама уйӑрмасӑр пурне те ашшӗ пек юрататчӗ. Тӗрӗссипе, вӑл пирӗншӗн халӗ те чӗрӗ, эпир ун патне чӗрӗ ҫын патне пынӑ пекех пулӑшу ыйтма ҫӳретпӗр. Мӗнле-ха вӑл – вилнӗ хыҫҫӑн та ҫынсене лӑплантарма пултарать, вилнӗ хыҫҫӑн та вӗсемшӑн тӑрӑшать! Ҫутӑ сӑнарӗ ӗмӗр-ӗмӗрех асра!

**Наталья Морозова**

***

Пӗрремӗш хут Варнава владыкӑна эпӗ пирӗн «Дети Отчизны – достойная смена» организаци йӗркелекен Гурий святитель вулавӗсенче курнӑччӗ. Ун чухне эпӗ ӑна аякран анчах асӑрхаса юлтӑм. 2018 ҫулта вара эпӗ владыкӑна хамӑр организаци ячӗпе Гурий святитель вулавӗсене йыхравлама тата ҫак вулавсене ирттерме пил ыйтма кайрӑм. Владыкӑна курсан, малтанах питӗ хытӑ хумхантӑм, кӑшт вӑхӑт иртсен майӗпен лӑплантӑм. Ун тавра ӑшӑлӑх, ҫутӑ, ырӑлӑх сарӑлнӑн туйӑнчӗ. Чунра ҫӑмӑл, савӑнӑҫлӑ, кӑмӑллӑ, ирӗклӗ пулса кайрӗ. Пирӗн мероприяти йӗркеллӗ те лӑпкӑ, пӗр тумхахсӑр иртессине ӗненсе, ҫунатланса тухрӑм владыка патӗнчен.

Маншӑн Варнава владыка хамӑра сыхласа усракан Ангел пекех пулса тӑчӗ! Йывӑр самантсенче унӑн куллине аса илетӗп те, пӗтӗмпех йӗркеллӗ пуласса ӑнланатӑп. Варнава владыка халӗ яланах ман асра. Вӑл пулӑшнипе эпӗ хама хам шанма, ӗненме пуҫларӑм.

**Лариса Иванова**

***

Эпир яланах Варнава владыкăран пил илме тăрăшаттăмăр, çавăнпа та Введени соборне ирхине те, каçхине те службăсене çӳреттĕмĕр. Эпĕ владыкăпа çыхăннă пĕр тĕлĕнтермĕш пулăма астăватăп, ăна нихăçан та манас çук, манма май та çук. Пĕррехинче эпĕ владыка Введени соборне службăна килнĕ чухне ун тавра Ангелсен пысăк ушкăнĕ пынине хам куçпа хам куртăм, вĕсен йышĕнче пĕчĕккисем те, Архангел пек пысăккисем те пурччĕ, шучĕ темиçе пине те çитетчĕ пуль! Унччен эпĕ çыннăн ăна сыхласа усракан Ангел пĕрре анчах пулма пултарать тесе шутланă.

Манăн ывăл чирлет, хăйне евĕрлĕ ача, хăш чухне вăл владыка кăкăрĕ çинче çакса çӳрекен пĕчĕкçĕ турăша аллипе тытма хăтланатчĕ. Пĕррехинче владыка ăна çакăншăн хăтăрса илчĕ, капла тума юрамасть терĕ. Кайран вара служба вĕçĕнче чиркӳре пĕтĕм халăх умĕнче ман ывăлран каçару ыйтрĕ, «Каçар мана, Дима»,– терĕ. Мĕн тери йăвашлăх кăтартрĕ вăл пире пурне те! Эпĕ владыка патне хама канăçсăрлантаракан ыйтупа темиçе хутчен те пынă, вăл мана çирĕппĕн: «Санăн кĕлтумалла, кĕлтумалла»,– тетчĕ.

Пире Варнава владыкăна ярса панăшăн, вăл пирĕншĕн кĕлтунăшăн, пурнăçра мĕнпур ĕçре пулăшса пынăшăн, Юратушăн, куççульшĕн Турра тав тăватăп. Варнава владыка чăн-чăн МАНАХ пулнă. Ырă сунса ăс панăшăн ăна тав тăватăп!

**Елена Чугунова**

***

Варнава владыкăпа эпĕ куçа-куçăн нумаях тĕл пулман. Хăнăхнă тăрăх, кирлĕ чухне эпир пĕр-пĕринпе курнăçса калаçнă. Эпĕ ун патне черетлĕ кĕнеке кăларас умĕн пил илме кайнă. Владыка вара мана архив докуменчĕсем пирки консультаци кирлĕ чухне хăй патне чĕнетчĕ. Юлашки тĕлпулусенчен пĕринче эпир Шупашкарти тĕн училищипе (революциччен пулнипе) çыхăннă документсене шырарăмăр.

Пĕр тĕлпулу та çиелтен, ахаль иртсе кайман, малашнехи тĕллевсене сӳтсе явма, пурнăç çинчен калаçма яланах май пулнă.

**Варнава владыка уçă кăмăлĕпе уйрăлса тăратчĕ, çавăнпа унпа калаçма та çăмăлччĕ. Çакă вăл унăн чи ырă енĕсенчен пĕри!**

**Федор Козлов**

***

«Турăпа яланах çăмăл!» – çапла тӳрĕ кăмăлпа калатчĕ Варнава владыка чиркĕве çӳрекенсене. Варнава митрополита çĕре çити пуçа тайса тав тăватăп, вăл канлĕхре пултăр тесе Турра кĕлтăватăп. Чăн ĕненӳпе таса пурнăçăн, типĕ тытса кĕлтунин, ырăлăхпа йăвашлăхăн тĕслĕхĕ вăл пирĕншĕн!

Чĕререн юратакан Варнава владыка пилĕпе кирек епле, чи кăткăс ыйтăва та татса пама пулатчĕ. Ĕмĕр асăнма пар! Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Наталья**

***

Варнава митрополит ман асра ырă кăмăллă, пуян ăс-хакăллă, хастар чунлă, Христос çулĕпе утма тăрăшакан çын

пек тăрса юлчĕ. Вăл пĕтĕм пурнăçĕпе, хăй тĕслĕхĕпе мĕнле кĕлтуса пурăнмаллине, чиркĕве çӳремеллине, ачасене ăса вĕрентмеллине каласа, кăтартса пынă.  Вăл уйрăлса кайни пирĕншĕн питĕ пысăк çухату.

Анчах та эпир унăн чунĕ сăваплă вырăнта канăçлăх тупасса ĕненетпĕр. Пире вăл Чăваш Ен чиркĕвĕсенче анчах мар, Йошкар-Олара та, Дивеевăра та, Мускавра та ирттерекен службăсене хутшăнма май килнĕшĕн эпĕ чăннипех те чунтан савăнатăп. Вăл халăхра ырă ят хăварнă паттăр. Православи тĕнчин паттăрĕ!

**Владимир**

***

Темиçе çул каялла манăн ĕçре пысăк пăтăрмахсем сиксе тухрĕç, вара эпир Варнава владыка патне пирĕншĕн кĕлтума ыйтма кайрăмăр. Владыка пире пиллерĕ, кĕлтăватăп терĕ, ĕçре майĕпен пĕтĕмпех йĕркене кĕрессе шантарчĕ. Вăл пире пиллесе панă пысăк икона – Турă Амăшĕн «Иерусалимская» таса сăнĕ – килте чи лайăх, хисеплĕ вырăнта çакăнса тăрать. Вăл мĕнле каларĕ, чăнах та çавăн пекех пулчĕ.

Эпир хаклă та юратнă Варнава владыкăна пире кĕлтуса пулăшнăшăн чунтан тав тăватпăр. Вăл пире сыхласа усракан Ангел! Ĕмĕр асăнма пар! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Николай**

***

Эпĕ хамăрăн Варнава владыка пирĕншĕн, Чăваш Ен çыннисемшĕн, кĕлтунишĕн савăнатăп, çакăншăн ăна тав тăватăп. Вăл кĕлтунипе эпир, республикăра пурăнакансем, Иисус Христос Туррăмăр патне çывăхлантăмăр, хамăрăн

чунсен вилӗмсӗрлӗхӗ ҫинчен пӗлтӗмӗр.  Вӑл тӑрӑшнипе эпир хӳтлӗхре пурӑнтӑмӑр, ҫылӑх мӗнне ӑнланма, унран хӑрама пуҫларӑмӑр.

Манӑн анне Лидия та, Мухтав Турра, вӑл 94 ҫула ҫитрӗ, владыкӑна вӑл тунӑ ӗҫсемшӗн чӗререн тав тӑвать. Мӗн чухлӗ чиркӳ, пурӗ 200 ытла, юсаса хута янӑ, ҫӗнӗрен тунӑ ҫак тапхӑрта!

Мӗнле тивлетлӗ вӑхӑтра пурӑнатпӑр эпир! Ҫынсем чун ҫинчен ытларах шутлама пуҫларӗҫ, чиркӗве ҫӳреҫҫӗ, Турра ӗненеҫҫӗ. Пирӗн владыка ӗмӗр канлӗхре пултӑр!

**Турӑ чури Любовь**

***

Пирвайхи хут Варнава владыка патӗнче службӑра эпӗ Введени чиркӗвӗнче 1978 ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче – унӑн ячӗллӗ святоя  Варнава апостола  асӑннӑ кун пултӑм. Пил илме пырсан, вӑл мана Турӑ Амӑшӗн Казански пӗчӗк иконипе хӗрес парнелерӗ. Ҫухатасран хӑраса эпӗ хӗресне те, турӑшне те тӳрех аннене патӑм.  Ҫав хӗресе вӑл хӑй виличченех ҫакса ҫӳрерӗ. Эпӗ кайран та владыка кӗлӗ ирттернӗ чухне Введени соборне тата ытти чиркӳсене ҫӳрерӗм.

Проповедь каланӑ чухне унӑн сӑнӗ улшӑнатчӗ, ҫуталса каятчӗ. Варнава владыкӑна мана валли чиркӗве ҫул уҫнӑшӑн чӗререн тав тӑватӑп. Владыка «Турӑпа яланах ҫӑмӑл!»– тетчӗ.   Мухтав Турра пуриншӗн те! Ӗмӗр-ӗмӗрех асра!

**Турӑ чури Надежда**

***

Варнава владыка чи ырӑ чунлӑ, тӑрӑшса кӗлтӑвакан пулнӑ. Эпир ӑна питӗ юрататтӑмӑрччӗ, унӑн чӑтӑмлӑхӗнчен,

йăвашлăхĕнчен, çынна хĕрхенме пĕлнинчен тĕлĕнеттĕмĕрччĕ. Вăл яланах ăшшăн, юратса пиллетчĕ, чунра вара тӳрех лăпкă та ырă пулса каятчĕ. Эпир, ун хӳттинче пурăннă тата вăл вĕрентнипе пурăннăскерсем, яланахуншăн кĕлтăватпăр.

Çӳлти Патшалăхра, ĕмĕр-ĕмĕрех канлĕхре пултăр вăл! Чăваш çĕрĕнче çакăн пек ырă Варнава владыка ĕçлесе пурăннăшăн эпир çав тери савăнатпăр. Ку тĕнчерен куçса кайнă хыççăн та вăл пирĕншĕн Турра кĕлтăватех пулĕ.

**Турă чури Зоя**

***

Манăн хĕрĕн Ольгăн ĕçĕнче пĕр вăхăт лару-тăру питĕ йывăрланса çитрĕ, вара вăл Варнава митрополит патне кĕлтуса пулăшма ыйтма кайрĕ. Владыка питĕ тимлĕн итленĕ, вара суд ыйтăва ăна майлă татса патăр тесе кĕлтума шантарнă, мĕншĕн тесен унăн айăпне курмастăп тенĕ. Чăнах та, пĕтĕмпех йĕркеллĕ иртсе кайрĕ, суд йышăнăвĕ манăн хĕр майлă пулнă. Эпĕ чирлесен вăл маншăн та кĕлтунă. Çакна нихăçан та манма çук. Яланах унăн пулăшăвне, хӳтлĕхне туятăп. Вăл пирĕн çĕр çинчи сыхласа усракан юратнă та хаклă Ангел!

Вăл кашни çыншăнах кĕлтума вăхăт тупатчĕ. Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Людмила**

***

Варнава владыка Турă Сывлăшĕ урлă тĕрĕс пурăнма вĕрентекен пулнă. Вăл чăваш халăхне чылай вăхăт чăн тĕн çулĕпе ертсе пычĕ. Унпа сайра хутра тĕл пулнă самантсенче вăл яланах вашават, ăшпиллĕ, йăваш пулни тĕлĕнтеретчĕ. Христосшăн асапланса вилнĕ Çĕнĕ святойсен ячĕпе Шупашкарта лартнă чиркӳре вăл архиерей служби ирттернĕ

чухне халăх кашнинчех питĕ нумай пухăнатчĕ, владыкăна çав тери хисеплесе, тимлĕн итлетчĕ. Вăл вĕрентсе калани нихăçан та манăçмасть. «Тем пек йывăр пулсан та – Турăпа пулмалла, Турра шанмалла»,– тетчĕ вăл.

Мĕнле йăваш кăмăлпа йăтса пынă вĕт-ха Варнава владыка хăйĕн хĕресне. Çулĕсемпе çамрăк мар пулин те, нумай хутчен Иерусалима чăваш халăхĕшĕн кĕлтума кайнă. Вăл ĕçлесе пынă вăхăтра мĕн чухлĕ чиркӳ туса лартнă тата! Ĕмĕр асăнма пар! Варнава владыка, пирĕншĕн Турра тархасла!

**Елена Малышева**

***

Çак тĕлĕнмелле çынпа юнашар пулма тӳр килнĕшĕн эпĕ савăнатăп. Варнава владыка питĕ сисĕмлĕ те ырă чунлăччĕ. Унпа калаçма интереслĕччĕ, тата вăл кулăша лайăх ăнланатчĕ. Сакăрвун тăхăр çула çитнĕскер, пĕтĕмпех питĕ лайăх астăватчĕ. Чăваш Ен кунçулĕнче палăрмалла йĕр хăварнă чаплă çынпа хутшăнма, юнашар пулма, ăна пулăшма май килнĕшĕн эпĕ мăнаçланатăп, хама телейлĕ тесе шутлатăп.

Асра тытар, хаклар ăна, эпир вăл пурăннă чухне хамăр телее пурте ăнланман та. «Пур чухне хакламастпăр, çухатсан йĕретпĕр»,– теççĕ. Вăл çынсене мĕнле юратнине аса илсе çамрăк ăрăва каласа парар, ВАРНАВА МИТРОПОЛИТ кам пулни çинчен пурте пĕлччĕр!

**Турă чури Димитрий**

***

2013 çулта манăн Варнава владыка патне пулăшу ыйтма каймалла пулчĕ. Упăшкан саккунпа çыхăннă кăткăс ыйтусем сиксе тухрĕç. Владыка уншăн кĕлтăватăп терĕ, мана

вара упăшкана çăлса хăварма адвокат тытма хушрĕ. Çак пиле илсе тухрăм та, адвоката тӳлеме укçа ăçтан тупмаллаши тесе шухăшлама тытăнтăм. Эпĕ Турăпа çыхăннă таса вырăнсене çитсе курма çулçӳревсем йĕркелеттĕмччĕ, вара паломниксенчен ыйтса пăхас терĕм. Вĕсем мана пулăшма килĕшрĕç. Пухăннă укçана шутласа пăхрăм та, шăпах адвоката тӳлеме çитет иккен!

Çакăн пек тĕлĕнтермĕш пулчĕ манпа пирĕн хаклă та хисеплĕ ВАРНАВА владыка пилленипе. Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Людмила Анисимова**

***

Пукравпа Татиана чиркĕвĕнче пĕр проповедьре Варнава владыка çапла каларĕ: «Пĕррехинче манран Сирĕн пурнăçра чи пĕрремĕш вырăнта мĕн тăрать тесе ыйтрĕç. Эп камшăн кĕлтуса пурăнатăп, çавсем Çӳлти Патшалăха лекчĕр, вĕсемсĕр ман унта мĕн тăвас тесе хуравларăм». Варнава митрополит кашни чуншăн çавăн пек тăрăшса кĕлтунă.

**Шупашкарти Пукравпа Татиана соборне çӳрекен Татиана**

***

2000 çулта манăн аттене вĕлерчĕç. Тискер ĕçе тăвакансем укçа тупайман, çавăнпа та пире аннепе иксĕмĕре сыхлама пуçларĕç. Питĕ хăрушăччĕ. Эпир аннепе иксĕмĕр аттен пухăннă укçине чиркĕве пама шутларăмăр, вара Варнава владыка патне кайрăмăр. Владыка укçана тӳрех

илмерĕ. Малтан вăл атте мĕн ĕçпе пурăннине, мĕнле майпа укçа пухнине, налук тӳленипе тӳлеменнине ыйтса пĕлчĕ. Манăн атте тӳрĕ чунпа ĕçлесе илнине пĕлсен çеç укçан пĕр пайне йышăнма килĕшрĕ, ыттине хамăр валли хăварма хушрĕ. Пирĕнтен хăш чиркӳсене пулăшасшăн пулнине ыйтрĕ. Вăл пире тепĕр эрнерен пыма каларĕ, ăçта, хăш чиркĕве мĕн чухлĕ куçарса пани çинчен пĕлтеретĕп терĕ.

Тепĕр эрнерен кайрăмăр та, владыка пире хăш чиркӳсене пулăшни çинчен, пирĕн ятсене ĕмĕр асăнма çырса хуни пирки каларĕ. Варнава владыка çĕр çинче пăхса усракан Ангел пекех пирĕн хута кĕчĕ. Эпир Турра тав тăватпăр тата пирĕн хаклă Варнава владыкăна чунтан тав тăватпăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр! Ĕмĕр асăнма пар!

**Турă чури Татиана**

***

Пирĕн хаклă, хисеплĕ, Турă Çутипе сăвапланнă Варнава митрополит хăйĕн йăвашлăхĕпе, тӳсĕмлĕхĕпе, юратăвĕпе маншăн Çăлакан Христоса хальхи вăхăтра кăтартса паракан тĕслĕх пекех пулнă. Христос Ангелĕ!

**Турă чури Зоя**

***

Варнава владыкăна эпĕ йăваш, ырă кăмăллă, сăпайлă çын пек астуса юлнă. Вăл сĕмсĕрлĕхе, тӳрккеслĕхе, чапшăн çуннине, ытти тасамарлăха юратмастчĕ. Ыттисене тĕксе

ярса, черетсĕр, чирлĕ çынсемпе ватăсенчен малтан пыракансене вăл аллине хăй çумне тытса пиллĕх памасан та пултарнă.

Мана владыка çинчен хамăр чиркĕве çӳрекен Нина Артемьевна нумай каласа панă. Вăл пирĕн районта пурăнатчĕ те, эпир служба хыççăн киле пĕрле каяттăмăрччĕ. Чиркĕве вăл 40 çул ытла çӳренĕ, çавăнпа та епархи пурнăçне, священниксене, манахсене лайăх пĕлнĕ, хăшне-пĕрне ачаранпах палланă. Вениамин владыкăна астăватчĕ, Варнава владыкăна вара питĕ хисеплетчĕ, ун патне архиерейăн малтанхи, кивĕ çуртне кайса çӳретчĕ, вăл мĕнле правило вулама пилленĕ, çавна вулатчĕ, вăл вĕрентсе каланине яланах итлетчĕ. Пурнăçра сиксе тухакан ыйтусемпе вăл ун патне каятчĕ, кайран вара мана вăл мĕн хуравланине, тĕрлĕ лару-тăрура мĕн тума пилленине каласа паратчĕ. Архиерейăн унăн хӳттинче пурăнакан çынсене курмалла тетчĕ, хиротони вăхăтĕнче вара вĕсене çак тивлете параççĕ иккен. Ăна вăл «святой владыко» тесе чĕнетчĕ. Килĕнче унăн вăл питĕ хакласа упракан икĕ япала пурччĕ. Пĕри вăл – Турă Амăшĕн «Час илтекен» ятлă пысăк кивĕ турăшĕ. Çак турăша Киров облаçĕнчи арканнă чиркӳрен илсе тухнă пулнă. Нина çак икона умĕнче çĕрлесерен кĕлтăватчĕ, акафистсем вулатчĕ. Тепĕр хаклă япала вăл – владыка çинчен кăларнă кĕнеке. Вăл пĕчĕк тиражпа анчах тухнăран ăна ниçта та сутман. Нина ăна тĕплĕ упратчĕ, хаклатчĕ, унти сăнӳкерчĕксене пурне те чуптăватчĕ. Мана вулама киле парса яма темĕн чул ыйтсан та, памастчĕ, кил те, ман патра вула тетчĕ. Вăт вара эпĕ ун патне каçсерен кĕреттĕмччĕ те пĕрер глава, пĕрер страница вулаттăмччĕ, вăл мана кайран ăнлантарса паратчĕ. Çак кĕнекене вуланинчен, калаçусенчен эпĕ Варнава владыка çинчен нумай пĕлтĕм, вăл мĕн тери тĕлĕнмелле çын пулнине ăнланма пуçларăм.

Нина Артемьевна 2020 çулхи май уйăхĕнче, владыкăран 3 эрне маларах, вилчĕ. Вĕсем унта, Çӳлти

Патшалăхра, тĕл пулчĕç пулĕ тетĕп. Турă пĕтĕмпех тĕрĕс йĕркелет. Эпир асăннă турăш та акă владыка çумĕнче пулĕ. Нинăн хĕрĕ ăна преподобнăй Сергий Радонежский ячĕпе лартакан чиркÿ валли епархине кайса панă. Ăна вара пурте курма пултарĕç.

Владыка яланах – уявсенче те, хăйне ят панă святоя асăннă кун та – ахаль подрясникпе анчах çÿренĕ. Эпĕ унăн хĕллехи тумтирне, пальто е куртка, нихăçан та курман. Вăл сивĕрен хăрамастчĕ. Хĕлле кирек епле çанталăкра та Серафим Саровский уявне каятчĕ. Нихăçан та службăна кая юлса килместчĕ, кĕлĕ йĕркине вара вăл пăхмасăрах пĕлнĕ пек туйăнатчĕ. Священниксенчен е дьяконсенчен хăшĕ те пулин кăштах тытăнса тăрсан, каласа пулăшатчĕ. Мĕн те пулин тĕрĕс мар каласан, е канонра йăнăш вуласан, е çу сĕрес умĕн урăх икона хурсан, кăмăлсăрланса ятлама та, урипе çĕре таплаттарма та пултаратчĕ. Аслă Кĕçнерникун, Аслă Эрнекун, Турра пытарнин йĕркине туни, Турă Амăшĕ ку тĕнчерен куçса кайни, Хĕрес илсе тухни – çак службăсене вăл, Турă умĕнче тăнă пекех, питĕ тимлĕ, тĕплĕ ирттеретчĕ.

Владыка Турă Амăшне питĕ хисеплетчĕ. Пĕррехинче, хурлăхлă самантра, вăл мана: «Пĕтĕмпех Турă Амăшĕнчен килет»,– терĕ. Çанталăка сăнакансем вăйлă çил-тăвăл пуласси çинчен пĕлтерсен вăл Турă Амăшĕн иконипе Шупашкар тавра машинăпа çавăрннă. Унăн кĕллине илтнĕ, тăвăл Шупашкар айккипе иртсе кайнă, хула лăпкăн çывăрнă. Турă Амăшне хисеплесе ирттерекен уявсенче «Турă Амăшĕ паян сире пурне те пиллерĕ»,– тетчĕ. Хăйне чиркÿрен ăсатса янă чухне «Эй, Турра çуратнă Хĕр, савăн!» кĕлле юрлама калатчĕ. Алăк патне çитсен вара яланах каялла çаврăнса пурне те пиллетчĕ.

Литурги вĕçленсен час-часах: «Уяв ячĕпе, хаклă çыннăмсем, сире пурсăра та Турă сыхлатăр», тата «Турă сирĕн кил-çуртăрсене, çемйĕрсене пиллĕх патăр»,– тетчĕ. Праçниксенче «Паянхи кун вăл уйрăмах паллă» тесе ун

çинчен каласа паратчĕ, вĕçĕнче вара çапла хушса хуратчĕ: «Çак куна Турра юрăхлă ирттерĕр, нушаланакансем, ватăсем, чирлĕ çынсем, тĕрмере ларакансем, больницăра выртакансем патне кайса пулăшăр».

Малтан килекен святой Иоаннăн сылтăм аллин пайне хунă арчана чуптуни, владыка Десница хунă арчапа халăха пиллени асран тухмасть, халĕ те куç умĕнче. Уншăн хăйĕн халăхне Шыва Кĕртекен Иоанн пил пани мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни кашни хусканăвĕнче палăрса тăчĕ. Ун чухне пирĕн пата ытти регионсенчен те килнĕччĕ, Константин Иванов урамĕнче тем вăрăмăш черет тăратчĕ. Андрей Первозванный апостолăн, Шанхайри Иоаннăн, Тримифунтри Спиридон святой архиерейăн, Мускаври телейлĕ Матронăн – пурин çĕрмен ӳчĕсен пайĕсене те вăл хăй кĕтсе илетчĕ. Иркутскри Иннокентий святой архиерейăн çĕрмен ӳтне хăйĕн келйинчен Пукравпа Татиана чиркĕвне парса янă. Мускаври телейлĕ Матронăна питĕ хисеплетчĕ. Покровски мăнастире кайсан Матронăран хăйĕн урисене юсама ыйтсан вĕсем ыратма чарăнни çинчен каласа паратчĕ. Феофания игумения вара Матронан çĕрмен ӳтне хирĕç çакăнса тăнă турăша стена çинчен илсе ăна парнеленĕ. Унтан килсен вăл питĕ хăвăрт утма пуçларĕ, ун хыççăн ĕлкĕрсе пыма çукчĕ. Телейлĕ Матрона турăшĕ унăн килĕнче тăратчĕ, вара ăна службăран ăсатса янă чухне кĕрсе ун умĕнче пуççапма ирĕк паратчĕ. Сергия анне (келейница) чечексем валеçсе паратчĕ.

Юлашки çул хĕлле пĕрре вăл Литурги хыççăн: «Сирĕнпе пĕрле кĕлтума паян мĕнле лайăх, мĕнле кăмăллă пулчĕ. Пурте пĕр сывлăшран кĕлтурăмăр, архиерейăн хăйĕн çыннисемпе çавăн пек пулмалла та!»– терĕ.

Владыка çапла калатчĕ: «Эпĕ вилсен, Турă манран эсĕ хăв хӳтте илнĕ ачусем ăçта тесе ыйтĕ», «...Хурлăх килсен тӳрех Турăран ыйтăр, Вăл пулăшать...», «...Пурнăç çăмăл мар, йывăр, анчах чиркĕве çӳремеллех, ачасене те унта çӳреме вĕрентмелле. Чиркĕве çӳрĕр, чиркĕве ан пăрахăр...»,

«...Аслă типĕре пысăк правило  вулăр, сăмахран, каçхи кĕлĕ çумне «Пирĕн Туррăмăр Иисус Христоса ӳкĕнӳ канонĕ» хушăр, нуша килсе тухсан типĕ тытăр, ытларах кĕлтăвăр...», «...Сире çав тери йывăр пулсан Турăран сирĕн хĕресе çăмăллатма ыйтăр...».

«Малтан Христоса ĕненекенсене çунтарса янă, вĕлернĕ, асаплантарнă, халь шуйттан христиансене тепĕр майлă тапăнать, вĕсене сиен кӳрес, чиркӳрен пистерес тесе тем тĕрлĕ илĕртсе астармалли меслет те шыраса тупать. Суя пачăшкăсене ан ĕненĕр, вĕсем патне отчиткăсене кайса ан çӳрĕр (вĕсен ячĕсене те калатчĕ), шуйттан шуйттана хăваласа кăлараймасть, чиркӳсенче Туррăн Ӳчĕпе Юнне ăша илсен лайăхрах...»– тесе калатчĕ.

Владыка пурне те пулăшнă, пурне те юратнă, пуриншĕн те кĕлтунă. Вăл кашнинех сисĕмлĕ чун куçĕпе курса тăнă, кам мĕнле пурăнать, мĕн шухăшлать, кама мĕнле ыйтусем хумхантарççĕ. Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!  Унта та вăл пирĕншĕн кĕлтунине ĕненетĕп.

**Татьяна Сучкова**

# НА ПОГРЕБЕНИЕ ВЛАДЫКИ ВАРНАВЫ

Спит богатырь, воин Христов,
Пастырь Земли Чувашской.
Стрелы врага встретил с крестом,
Принял болезни тяжки.
Паству свою молитвой хранил
Крепче отца родного,
Сам не ушел, не отступил,
Волю приняв Христову.
Добрый монах, архиерей,
Сын стороны Рязанской,
Всё перенес в жизни своей
С верою христианской!
Труд ли, болезнь, вражий укол,
Черпал в молитве силы.
«С Богом везде будет легко» -
Людям всегда говорил он.
А под конец жизни-пути
Враг объявил сраженье,
Но, коль пришлось крест понести,
 - будет и воскресенье!
Враг посрамлен, душу хранит
Ангел в сияньи Славы!
В Церкви Небесной теперь предстоит
Пастырь Христов ВАРНАВА!

**иерей Георгий Галахов г. Рязань**

**03.06.2020 г.**

# ТУРРА ТАВ ТӐВАТӐП…



*Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ*
*ВАРНАВА*

***

Сакӑрвуннӑмӗш ҫулсен вӗҫӗнче мана Иоанн (Крестьянкин) архимандритпа, Кирилл (Павлов) архимандритпа тата Турра хирӗҫле саманара вырӑс ҫӗрӗнче чӑн тӗн сывлӑшне упраса хӑварма пултарнӑ ытти ҫынсемпе тӗл пулма тӳр килнӗшӗн эпӗ Турра тав тӑватӑп. Анчах чылай вӑхӑт (1990 ҫултан пуҫласа 2020 ҫулччен) шӑпа мана Варнава владыка вӗрентсе, ертсе пынипе пурӑнма пӳрчӗ. Вӑл Турӑ Сывлӑшӗпе пурӑнакан Таса Русьпе ҫыхӑнтаракан тытӑм пулса тӑрать.

**Пукравпа Татиана соборӗнчи**
**Александр Соколов протоиерей**

***

Турӑ пирӗн Чӑваш ҫӗрне Троице-Сергиева Лаврӑран Варнава владыкӑна ярса панӑшӑн Ҫӳлти Аттемӗре тав тӑватӑп. Вӑл килнишӗн пӗтӗм епархи савӑнчӗ! Чӑваш Еншӗн ҫак пулӑм хӑй вӑхӑтӗнче питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ.

Варнава митрополитпа эпир Серафимо-Дивеевски мӑнастирте час-часах тӗл пулаттӑмӑрччӗ. Вӑл Сароври таса пурӑнӑҫлӑ Серафимӑн праҫникӗсенче пирӗн мӑнастире килме тӑрӑшатчӗ.

Владыка пире яланах ӑшшӑн йышӑнатчӗ, пиллетчӗ, «Кусем пирӗннисем!!!»– тетчӗ. Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнмалла пултӑр Варнава митрополита! Ҫӳлти Патшплӑх пултӑр ӑна!

**Турра юратса**
**Михаила (Сорокина) монахиня**

***

Мана Варнава митрополитпа ун пекех çирĕп ĕненнĕ Карлинов Илия атте паллаштарчĕ. Çакă вăл 2005 çулта, мана святой Владимир князь ячĕпе Çĕнĕ Шупашкарта лартнă собор старостине суйласан, пулчĕ.

Мухтав Турра, çав вăхăтран пуçласа Варнава владыкăпа Илия аттен тата Антонов Геннадий аттен асилĕвĕсене, вĕсем чуна çăласси çинчен вĕрентсе каланисене нумай хутчен итлеме тӳр килчĕ. Мĕн тери хăватлă çынсем пулнă вĕсем! Ачалăхпа яшлăх çулĕсем те çăмăл пулман, кайран та, ĕмĕр тăршшĕпех, нуша нумай курнă, совет саманинче чиркӳ çыннисене хĕсĕрленипе хур кăтартнине чăтса ирттернĕ. КГБ пусахланипе хуçăлман вĕсем – пире тĕслĕх кăтартса хăйсен çălăнăç хĕресне йăтса Турă патне утнă. Манăн та, вĕсемпе танлаштарсан ĕненӳ тĕлĕшĕнчен айванскерĕн, вĕсем пек пулас килет. Турă пулăштăрччĕ ĕнтĕ çак енĕпе ӳсĕмсем тума!

Варнава владыка пирĕн чиркĕве, Çĕнĕ Шупашкарти святой Владимир князь соборне, кашни çулах килетчĕ. Çакă йăлана кĕнĕччĕ. Мĕн тери çитмест халĕ пире Варнава владыка!

Вăл Турра пуриншĕн те, çав шутра маншăн та, кĕлтунине пĕрре те иккĕленместĕп. Ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Çĕнĕ Шупашкарти**
**святой Владимир князь соборĕн старости Алексей Николаев**

***

Чăваш çĕршывĕ тата эпир, унăн ачисем, Варнава владыкăна пĕлнĕшĕн Турра тав тăватăп. Вăл ĕçленĕ вăхăтра мĕн чухлĕ чиркӳпе мăнастире юсаса хута янă, çĕнĕрен мĕн чухлĕ туса лартнă. Православи тĕнĕпе пурăнакан Чăваш Ен — çак ятра та унăн тӳпи питĕ пысăк! Вăл Турă ĕçĕсене туса пурăннипе, вăл кĕлтунипе эпир, ун хыççăн пыракансем,

Турăпа çывăхлантăмăр, пирĕн чунсем вилĕмсĕр пулнине ĕненме пуçларăмăр, унăн хӳтлĕхне лекрĕмĕр, пиллĕхне илтĕмĕр. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ – Турра пăхăнса тăнин, çынсемшĕн пурăннин, ăслăлăх, йăвашлăх тата пысăк Юрату тĕслĕхĕ! Пирĕн юратнă Варнава владыка халĕ те Турă ĕçĕсене малалла тăсса пирĕншĕн, çылăхлăскерсемшĕн, кĕлтусах тăнине шанатăп.

Çынсем ăна ĕмĕр-ĕмĕрех тав туса, унăн çутă сăнарне яланах хăйсен чĕрисенче, чунĕсенче упраса пурăнĕç. Тавах Сире, пирĕнпе пĕрле, пирĕн хушăра пулнишĕн. Эсир халĕ те хăвăр ĕçĕре малалла тăсатăр. Çӳлти Патшалăх пултăр Сире, пирĕн владыка!

**Светлана Чечина**

***

Пурнăçра пире Варнава митрополитпа курса калаçма тӳр килнишĕн Турра тав тăватăп. Эпир вăл пире юратнине чунпа туяттăмăрччĕ, вăл пилленипе Таса Çĕре, Синай тăвĕ çине паломниксен çулçӳревĕсене кайса килтĕмĕр. Кирек ăçта кайсан та вăл пирĕншĕн кĕлтунине пĕлсе тăнă.

**Турă чури Татиана, Муркаш районĕнчи Александр Невский мăнастирне çӳрекен**

***

Варнава владыка кĕлтунипе ун хӳттине лекме телей пулнăшăн Турра тав тăватăп. Йывăр лару-тăрура ун патне пулăшу ыйтма кайрăм. Вăл кĕлтунипе чун та лăпланчĕ, укçа-тенкĕ ыйтăвĕсем те йĕркене кĕчĕç.

Ĕмĕр асăнма пар! Çӳлти Патшалăх пултăр, хаклă владыка!

**Турă чури Тамара**

Иисус Христос Туррăмăра çакăн пек митрополитшăн тав тăватăп! Владыка пире яланах ырă кăмăлпа, ăшшăн кĕтсе илнине нихăçан та манмастпăр. Халĕ эпĕ час-часах ун вилтăпри çине тирпейлеме, чечексем шăварма кайса çӳретĕп. Маншăн вăл яланах чĕрĕ, вăл ырă священник пулни яланах асра. Вăл нумай çул ĕçлесе пурăннăшăн Турра тав тăватăп. Эпир вăл халĕ те пирĕншĕн кĕлтăвасса шанатпăр.

**Турă чури Елена**

***

Хамăн пурнăçра мана Варнава владыка пек аслă пачăшкăпа, тĕлĕнмелле ырă чунлă çынпа тĕл пулса унран пиллĕх илме тӳр килнĕшĕн Турра тав тăватăп! Çӳлти Патшалăхра та вăл пирĕншĕн кĕлтутăрччĕ! Ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Вера Александрова**

***

Пире Варнава владыка пек çутă чунлă çынпа, ăслă вĕрентекенпе пĕрле службăсенче пулма тӳр килнишĕн эпир Турра тав тăватпăр! Мухтав Турра пуриншĕн те!

**Ольга, Мария**

***

Çӳлти Аттемĕре пурнишĕн те тав тăватпăр! Пирĕн Варнава митрополит пирĕнпе пĕрле пулнишĕн тав тăватпăр. Вăл пирĕн чĕресенче, пирĕн асра юлĕ. Ĕмĕр канлĕхре пултăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Вера**

Пирĕн çакăн пек архиерей пулнăшăн Турра тав тăватăп! Питĕ ырă кăмăллă, чун-чĕререн кĕлтума пултаракан лайăх владыка пулнă вăл. Пурнăç вĕçне çитичченех хăйĕн ĕçне пăрахмарĕ, кану çинчен шутламарĕ. Варнава владыкăна ĕмĕр асăнса пурăнмалла пултăр!

**Турă чури Сергей**

***

Турра тав тăватăп! Варнава владыка ирттерекен службăра пулма тӳр килнĕшĕн Мухтава Турра! Эпĕ ăна чунтан тав тăватăп, пирĕн чунсене çăлассишĕн тăрăшнăшăн хисеплетĕп. Час-часах унăн вилтăпри çине каятăп, унпа чĕрĕ çынпа калаçнă пекех калаçатăп, Варнва владыка пире илтнине, вăл пирĕншĕн кĕлтунине пĕлсе тăратăп.

**Турă чури Алексий**

***

Мана Варнава митрополитран пиллĕх илме тӳр килнĕшĕн Турра тав тăватăп! Владыкăна маншăн кĕлтунăшăн, çав тери йывăр вăхăтра ĕçри кăткăс ыйтусене татса пама пулăшнăшăн чĕререн тав тăватăп. Çӳлти Патшалăхра пулсамăр, хаклă Варнава владыка! Сирĕн çутă сăнар ĕмĕр-ĕмĕрех асра!

**Санкт-Петербургра пурăнакан**
**Ольга Борисовна**

2000 çулта Варнава владыкăпа паллашнăшăн эпĕ Турра тав тăватăп. Çав вăхăтранпах вăл кĕлтуса хӳтĕлесе тăнипе пурăнтăм. Вăл чун-чĕререн кĕлтунине, вăл Турă ăшĕнче тăнине, хăй пăхса тăракан çынсене юратнине, ырă ĕç тунине курни вăл – пысăк телей!

**Чăваш художникĕсен пĕрлешĕвĕнче тăракан**
**Валентина Ильина**

***

Çӳлти Турра тав тăватăп! Варнава владыка чăваш халăхĕшĕн, Раççейшĕн нумай ырă ĕç турĕ. Вăл çĕр çинчи пурнăçĕ вĕçленичченех хăйĕн таса кĕллисемпе пире вăй-хал парса пурăнчĕ. Совет саманинче вăл пирĕншĕн, çылăхлăскерсемшĕн, нумай асап тӳснĕ, пирĕн чунсене çăлассишĕн тăрăшнă. Вăл яланах пирĕн асра! Ĕмĕрлĕх хисепе тивĕç!

**Антонина**

***

Варнава владыка Чăваш çĕршывĕнче пархатарлă кунçул утса тухнăшăн, пире, çылăхлăскерсене, ăс парса пурăннăшăн Турра тав тăватăп! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Муза**

# ÇУЛÇӐ̆РЕВÇӖСЕНЕ ПИЛЛЕНИ



*Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ*
*ВАРНАВА*

***

Эпĕ Варнава митрополит пилленипе Раççейри тата ытти çĕршывсенчи таса вырăнсене темиçе çул кайса çӳрерĕм. Çулçӳревсем пурте палăртнă йĕркепе пĕр тикĕс иртетчĕç. Анчах кашнинчех мĕн те пулин тĕлĕнмелли тупăнатчĕ. Малтан шутласа хуман чиркӳсене, таса вырăнсене çитсе курма çул уçăлатчĕ.

Галилейăри Кана хулинче гид пире Çăлакан туй пынă вăхăтра пĕрремĕш хут хăват кăтартнă чиркӳ патне илсе пычĕ, çакăнта Иисус шывран эрех туса хунă чухнехи чул савăтсем упранни çинчен каласа пама пуçларĕ. Анчах та пире унта кĕртмеççĕ, пирĕн хушăра священниксем çук, эпир çак чиркĕве тул енчен анчах курма пултаратпăр, терĕ вăл. Ак тĕлĕнтермĕш! Çав вăхăтра настоятель Турă çурчĕн алăкне уçрĕ те пире шала кĕрсе курма чĕнчĕ. Пирĕн гид кайран та вăрахчен тĕлĕнсе çӳрерĕ, хăçантанпа çакăнта пурăнатăп, ку чиркĕве вара пĕрре те кĕрсе курманччĕ терĕ.

Эпир çав тери савăнтăмăр, Турра тав турăмăр, Варнава владыкăна тав турăмăр. Унăн таса кĕллисемпе анчах çакнашкал асамлă, тивлетлĕ чаплă ĕçсем пулса иртетчĕç!

Эпĕ халĕ те владыка вилтăприйĕ çине час-часах кайса çӳретĕп. Вăл пĕтĕмпех курса тăнине, илтнине, пирĕншĕн кĕлтунине ĕненетĕп, шансах тăратăп. Унăн çутă сăнарне ĕмĕр асăнмалла пултăр! Çӳлти Патшалăх сана, хаклă владыка!

**Алексий Токарев**

***

2019 çулта эпĕ Сергиев Посада паломниксемпе çулçӳреве кайма хатĕрлентĕм. Лаврăра унччен темиçе хутчен те пулнă, анчах Сергий Радонежский святойăн çĕрмен ӳтне уçнă вăхăтра ун умĕнче кĕлтуса пуççапма тӳр килменччĕ. Çула тухиччен владыка патне пил илме кайрăм, вăл мана пилленĕ май: «Ну, кайса кил, кайса кил!»– терĕ йăл кулса

Виç-ипостаçлĕ Таса Турă чиркĕвне кĕрсен, пирĕн ушкăн святойăн çĕрмен ӳтне усракан тупăк (рака) патне черет тăчĕ, эпĕ айккинелле пăрăнтăм та хамăн çемьешĕн, пур çыншăн, кашниншĕн, Варнава владыкăшăн пуççапрăм. Кайран черете тăтăм, хам кĕлтăватăп, йĕри-тавра пăхмастăп, ракăна чуптăватăп. Çавăнтах ку ахаль чухнехи пек кантăк мар, парча, бархат пулнине ăнкаратăп. Мĕнле-ха вара, кунта кантăк пулмалла-çке тесе шутлатăп, унтан преподобнăй Сергийĕн пуçне чуптăватăп та, тĕлĕнсе ку святойăн уçса хунă çĕрмен таса ӳчĕ пулнине ăнланса илетĕп! Кайран аялалла антăм та, Серапионова палатăн алăкĕ уçă пулнине куртăм. Эпĕ унта кĕтĕм те хамăрăн паломниксене кĕтсе тăратăп. Унта йĕрке туса тăракан манах мана: «Эсир мана иконăсене тата святойсен çĕрмен ӳчĕсене хунă арчасене, ытти таса япаласене сăтăрса пулăшаймастăр-ши?»– терĕ. Паллах эпĕ савăнсах килĕшрĕм, хумхануллă туйăмпа пур çĕрте те тирпейлесе тасатса тухрăм.

Пирĕн ушкăнри паломниксем унта пырсан вара эп вĕсенчен эсир Сергий Радонежскин уçса хунă çĕрмен таса ӳтне чуптунине ăнлантăр-и тесе ыйтрăм. Вĕсем: «Эсĕ чуптунă хыççăн ракăна хупса хучĕç, кайран пурте кантăк витĕр çеç чуптурĕç»,– терĕç.

Вара эпĕ Варнава владыка пилĕпе вăл кĕлтуни мĕне тăнине ăнлантăм!

**Турă чури Татьяна**

Варнава владыкӑн ҫутӑ сӑнарӗ ӗмӗр-ӗмӗрех асра! Ӗмӗрлӗх канлӗх пултӑр ӑна! Эпӗ чӑн тӗн чиркӗвӗн ҫынни пуласси манӑн ҫемье пурнӑҫӗнчи чи йывӑр ҫулсенче владыка пилленинчен пуҫланчӗ. Пуриншӗн те Турра мухтав! Кирек епле пысӑк ӗҫе пуҫличчен, е Таса Ҫӗре паломниксемпе ҫулҫӳреве кайма хатӗрленсен малтан Варнава владыкӑран пил илеттӗмччӗ. Иерусалима кайни аса килет. Владыка мана пилленӗ чухне: «Эпӗ Иерусалимран илсе килнӗ иконӑна тин ҫеҫ чуптурӑн, халь ак хӑв унта кайма пуҫтарӑнатӑн»,– терӗ шӳтлесе. Ун чухне Израильте лару-тӑру лӑпкӑ марччӗ, апла пулин те пирӗн ҫулҫӳрев ӑнӑҫлӑ иртрӗ, эпир нумай таса вырӑна ҫитсе куртӑмӑр. Манӑн пурнӑҫра кӑткӑс самант сахал мар пулнӑ, анчах Варнава владыка кӗлтуни кашнинчех вӑйхал панӑ, чунпа ҫирӗпленме, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пулӑшнӑ.

Халӗ те, вӑл пирӗнпе пӗрле ҫук пулин те, унӑн хӳттине туйса тӑратӑп. Йывӑр вӑхӑтра вара вилтӑпри ҫине кайса маншӑн кӗлтума тархасласа ыйтатӑп. Вара чунра ҫав самантрах ҫӑмӑл пулса каять. Варнава владыка умӗнче пуҫӑма таятӑп, вӑл ӗмӗр-ӗмӗр асра!

**Надежда Пак**

***

Мана Ялтӑна кайма социаллӑ путевка пачӗҫ. Ҫула тухиччен Михаил Архангел чиркӗвӗнче эпӗ Варнава владыка патне пытӑм та, санаторие кайма пиллеме ыйтрӑм. Вӑл аллине ман пуҫ ҫине хучӗ те, Крыма ӑнӑҫлӑ кайса килме пиллетӗп, терӗ. Кайран ман ҫине пӑхса: «А Ялтӑра халь ҫанталӑк лайӑх!»– тесе хушса хучӗ. Эпӗ вара питӗ хытӑ тӗлӗнтӗм: ӑна Ялта пирки пӗр сӑмах та каламарӑм-ҫке! Чиперех, йӗркеллӗ кайса килтӗм. Пуриншӗн те Турра мухтав! Ӗмӗр-ӗмӗрех асӑнар! Ҫӳлти Патшалӑх пултӑр!

**1955 ҫ.ҫ. Алевтина Валерьянова**

Шăп çулталăк каялла манăн хĕр Питĕрти Тĕн академине вĕренме кĕчĕ. Унта кайиччен эпир Варнава митрополит вилтăпри çине пулăшу ыйтма кĕтĕмĕр. Турă Амăшĕ ку тĕнчерен куçса кайнă кун эпир Александр Невский Лавринче пултăмăр, унти Феодор Новгородский чиркĕвĕнче ĕçлекен хĕрарăм Литурги хыççăн пире Виçĕ Савăнăç чиркĕвне чĕнчĕ. Унта çитсен эпир Иоанн иерейпе паллашрăмăр. Вăл Варнава митрополита лайăх пĕлни, унпа пĕр сĕтел хушшине ларса калаçни çинчен каласа пачĕ. Эпир Иоанн иерее Варнава владыкăран салам каларăмăр. Иоанн иерей пире пĕрле Спиридон Тримифунтский святой архиерей акафистне вулама сĕнчĕ. Эпир çапла турăмăр та. Мĕнле тăрăшнă вĕт-ха пирĕншĕн Варнава митрополит! Эй, Турă, çырлах пире çылăхлăскерсене!

**Маринăпа Мария**

***

Ку 2003 çулта пулса иртрĕ. Эпĕ чиркӳ çывăхĕнчи урампа утса пыраттăм, юнашарах машина чарăнчĕ те унтан владыка тухрĕ. Эпĕ ун патне чупса пытăм та Сергиев Посада кайма пил ыйтрăм. Владыка мана пиллерĕ, вара эпĕ Сергиев Посадра чăн тĕн пурнăçне вĕренсе çур çул пурăнтăм. Унта Фотиния ятлă тухтăрпа паллашрăм. Вăл маншăн тăрăшатчĕ, сывлăха çирĕплетме пулăшрĕ. Çакăн хыççăн вара эпĕ ачасен «Восток» лагерĕнче 6 çул ĕçлесе пурăнтăм. Вăл хупăнсан Шупашкара таврăнтăм, чиркӳсене çӳреме пуçларăм. Владыка кĕлтунипе хам валли пурăнмалли кĕтес туянтăм.

Манăн пурнăç йĕркеленсе кайнишĕн эпĕ Турра тав тăватăп! Варнава владыка пиллĕхĕпе Христос çыннин пурнăçĕпе пурăнма тăрăшатăп.

Варнава владыка маншăн – ĕненӳ патне хывнă Çул. Тавах ăна! Хаклă владыкăна нихăçан та манмастпăр, мĕнле ырă çынччĕ вăл! Ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла пултăр! Çӳлти Патшалăх ăна!

**Надежда Обрубова**

# «АЧАСЕНЕ ЮРАТМАЛЛА...»



*Варнава владыка пилĕ*

***

Варнава владыка ачасене питӗ юрататчӗ. Уйрӑмах ӑна ачасем кӗлтуни, тропарьсем юрлани килӗшетчӗ. Пирӗн ачасем питӗ хитре, таса юрлатчӗҫ. Вӗсене юрлама 2-мӗш номерлӗ музыка шкулӗнчи ӑста педагог Иванова Галина Викторовна вӗрентнӗ.

Кашни ҫул тенӗ пекех эпир пӗтӗм класпа митрополит патне каяттӑмӑрччӗ, ӑна уявпа саламлаттӑмӑрччӗ, тропарьсем юрлаттӑмӑрччӗ. Вӑл тимлӗ итлетчӗ, уйрӑмах килӗшнисене тепӗр хут юрлама ыйтатчӗ. Кайран вара сӗтел хушшинчен вӑраххӑн тухатчӗ те ачасем патне пырса вӗсемпе калаҫатчӗ. Владыка ачасем мӗнле вӗренни ҫинчен, шкул тулашӗнчи ӗҫсем пирки ыйтса пӗлетчӗ. Священниксен ачисене вӑл сӑнран паллатчӗ, вӗсемпе вара ытларах калаҫатчӗ. Ачасем, уйрӑмах пӗрремӗш классем, пӗр-пӗрне пӳлсех хуравлатчӗҫ, ӑна аллисенчен тытатчӗҫ, унӑн тумӗ ҫумне сӗртӗнетчӗҫ, ыйтусем паратчӗҫ. Владыка куҫӗсене кӑштах хӗссе вӗсем ҫине пӑхса кулатчӗ. Кайран вара пиллетчӗ те алӑк патне ҫитиех ӑсататчӗ. Владыка патӗнчен вӑл пире йышӑннӑшӑн тав туса, ҫунат хушса, чунпа лӑпланса тухаттӑмӑрччӗ.

Уяв службисенче пирӗн ачасем яланах алтарь умне тӑрса владыкӑн проповечӗсене тимлӗн итлетчӗҫ. Кашнийӗнчех владыка пиллесе иконӑсем парнелетчӗ. Ачасем вара вӗсене килӗсенче хисеплӗ вырӑнта упратчӗҫ.

Ҫак пиллӗх пирӗн ачасен чӗрисенче упранса юлтӑр, пурнӑҫ тӑршшӗпех ҫул кӑтартса пытӑр!

**Раҫҫейри пӗтӗмӗшле пӗлӗвӗн хисеплӗ ӗҫченӗ,**
**ЧР тава тивӗҫлӗ учителӗ,**
**Преподобнӑй Серафим Саровский фончӗн педагогика премийӗн лауреачӗ Юлия Тумаланова**

Эпĕ ертсе пыракан класс ачисем Варнава владыка пилленипе православи тĕнĕпе çыхăннă Халăхсем хушшинчи илемлĕх конкурсĕсене хутшăнатчĕç. Владыка калатчĕ: «Эпĕ кĕлтăвăп, эсир вара тăрăшăр!»– тетчĕ. Эпир, чăнах та, питĕ тăрăшаттăмăрччĕ. Умлă-хыçлă виçĕ çул (2005, 2006, 2007) малти вырăнсем йышăнтăмăр. Чиркӳ Соборĕсен залĕнче Мускавпа Пĕтĕм Русь Патриархĕ Иккĕмĕш Алексий аллинчен наградăсем илтĕмĕр.

2008 çулта Инçет Хĕвелтухăçĕнчен пуçласа «Турă Амăшĕн çăлтăрĕ айĕнче» ятпа хĕрес çулĕпе утакансене кĕтсе илтĕмĕр. Вĕсем шăпах пирĕн республика витĕр тухса кайнăччĕ. Шупашкарти 1-мĕш ӳнер шкулĕнче ман класра вĕренекенсем Мăнкун ячĕпе пине яхăн йывăç çăмарта сăрласа илемлетсе хĕреспе утакансене парнелерĕç.

Хальхи вăхăтра эпĕ Италире пурăнатăп. Эпĕ çуралнă çĕршывра, Чăваш Енре çавăн пек витĕр курса тăракан ăслă та чаплă ватă – Варнава владыка – ĕçлесе пурăннишĕн Турра тав тăватăп! Ăна çутă туйăмпа аса илетпĕр! Çӳлти Патшалăх Сире, пирĕн хаклă та юратнă владыка!

**Италире пурăнакан Анна Боровкова**

***

2011 çулта эпир Хăватсем тăвакан Николай святой ячĕпе Петриков хулинче лартнă чиркĕвĕн вырсарни шкулĕнче вĕренекенсемпе пĕрле çамрăк богословсен регионсем хушшинчи «Санăн яту хисеплентĕр» пĕлӳлĕх вулавĕсене хутшăнтăмăр. Эпир питĕ тăрăшса хатĕрлентĕмĕр. Вулавсене хутшăннăшăн Шупашкар тата Чăваш митропроличĕ Варнава алă пуснă дипломсем, сувенирсем, чи пахи вара – владыкăн пиллĕхне илтĕмĕр! Эпир çамрăк богословсен тĕлĕнмелле лайăх иртнĕ вулавĕсене хутшăнма пултарнăшăн питĕ савăнатпăр.

**Белоруссири Петриков хулинче пурăнакан**
**Иулия Ткач**

***

Кашни çын пурнăçĕнчех ăшă туйăмпа аса илекен, чĕрере нумайччен упракан курнăçусем пулаççĕ. Варнава владыкăна эпĕ пĕрремĕш хут 2010 çулта Дивеевăра куртăм, унта мана преподобнăй Серафим Саровский фончĕ чĕнсе илнĕччĕ. Владыкăпа тĕл пулни тӳрех манăн кăмăла витерчĕ. Çынсене Серафим Саровскипе танлаштарма юраманнине пĕлетĕп пулин те, мана вăл Серафим атте пекех туйăнатчĕ. Владыка пуриншĕн те ашшĕ пекех тăрăшни сисĕнетчĕ. Тата ун патне чун туртатчĕ, ăна хамăн шухăшсене пĕлтерес, унпа хама пăшăрхантаракан ыйтусене сӳтсе явас, савăнăçа пайлас килетчĕ.  Шăпах Дивеевăра эпĕ Шупашкара владыка патне кайма тĕв турăм. Туррăн ырăлăхĕпе ун патне лекрĕм.

Çав самантра мĕн тери хумханни халĕ те асрах.  Анчах владыка ăшшăн пăхни, вăл йăвашшăн калаçни, мана тимлĕн итлени мана тӳрех лăплантарчĕ.

«Çирĕп ĕненсе кĕлтусан, санăн пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать, мĕншĕн тесен кĕлтуни пур вăхăтра та çĕнтерет»,– тесе вăл мана калани пурнăçри ансат мар вăхăтсенче пулăшса, хавхалантарса тăрать. Çак сăмахсем ман ăша ĕмĕрлĕхе кĕрсе вырнаçрĕç.   Ĕмĕр  асăнса пурăнар!

**Йошкар-Олара пурăнакан**
**Светлана Поздеева вĕрентекен**

***

Пĕррехинче, шăпа черетлĕ йывăрлăх ярсан, эпĕ Турă ятне асăнтăм. Кĕллĕн малтанхи йĕркисене каланипе пĕрле манăн чĕрене Ĕненӳ кĕрсе вырнаçрĕ. Тĕлĕнмелле ĕçсем тăвакан Ĕненӳ... Пурнăç çулĕпе тĕрĕс ертсе пыракан тата пурне те йĕркелесе тăракан Ĕненӳ. Мана шăпа Варнава митрополитпа Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул çитнине уявланă кунсенче, владыкăн черетлĕ 88-мĕш çуралнă кунĕ умĕн пĕрремĕш тĕлпулу парнелерĕ. Вĕренекенсемпе педагогсем тата Шупашкар хула администрацийĕнче ĕçлекенсем ăна ăшшăн саламларĕç. Пĕчĕк ачасем юрă-сăвă урлă чи кирлине – нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх – сунчĕç. Ырă кăмăллă Варнава митрополит хăнасене пурне те чунтан тав тунине вĕсене çутă пурнăç пиллесе каланă сăмахĕнче палăртрĕ: «...Çитĕнĕр, ырă кăмăллă пулăр, аçу-аннӳне итлĕр, çывăх çынсене юратăр, Турра чĕрере тытса пурăнăр...» Çак тĕлпулу кашни хăнана пиллĕхпе пĕрле чун лăпкăлăхĕ, чун ăшши парнелерĕ. Ача садĕнче ĕçлекенсем чĕннине йышăнса, Варнава митрополит хула историйĕнче пĕрремĕш хут çутă Мăнкун уявне 174-мĕш ача садĕнчи тĕлпулура, ачасемпе педагогсен тата ашшĕ-амăшĕн йышĕнче ирттерчĕ, 1945 çулхи асра юлнă Мăнкуна аса илчĕ.

Пухăннă хăнасем вăл вăрçă вăхăтĕнчи çăмăл мар пурнăçĕ çинчен каласа панине тимлĕн итлерĕç. Тата çакна палăртса хăварас килет: Варнава владыка кашни тĕлпулăвах пехил сăмахĕсемпе вĕçлетчĕ. Хальхинче те çаплах пулчĕ: «...Вĕренĕр, туслă пулăр, хамăрăн илемлĕ хулана тата тивлетлĕ Чăваш çĕршывне юратăр»,– терĕ вăл. Туслă калаçусен савăнăçлă саманчĕсене ача сачĕн коллективĕ «Мудрость рядом с нами…» кĕнекере çырса хăварчĕ, ăна эпир хисеплесе владыкăна патăмăр.

Вăхăт иртет. Çухатăва чăтма çăмăл мар.  Анчах эпир çутă малашлăха ĕненсе, халĕ те унăн хӳттине, ăшăлăхне туйса пурăнатпăр.

**174-мĕш ача сачĕн заведующийĕ**
**Светлана Александровна**

***

Эпир Шупашкарпа Чăваш епархийĕ ирттерекен мероприятисенче хаваспах ташлатпăр, çынсене савăнăç парнелетпĕр. Ачасем 20 çул ĕнтĕ Раштав елкине, Мăнкун фестивальне,  ыркăмăллăх концерчĕсене хутшăнаççĕ,  чăн тĕн сывлăшĕпе, чĕрери ĕненӳпе çитĕнеççĕ.

Пирĕн «Савăнăç» халăх ташă ансамбльне çӳрекен ачасем Варнава владыка пилленипе чиркӳ уявĕсенче хăйсен пултарулăхне кăтартма пуçларĕç. Эпир вăл 2000 çулхи пĕрремĕш Раштав елкинче пулнине астăватпăр. Хамăрăн хаклă  Варнава владыкăна нихăçан та манмăпăр!

**Зоя Бачурина**

***

Эпир, класри ачасемпе ашшĕ-амăшĕн ушкăнĕ, Варнава владыкăпа пĕрле арçынсен Каршлăхри Александр Невский мăнастирĕнчи чиркĕве кĕлтуса тасатнă çĕре хутшăнтăмăр. Манăçми асилӳсем! Уяв чаплă та шавлăн иртрĕ пулин те, чунра лăпкă та тӳлек пулчĕ. Мăнастиртен владыка пиллĕхĕпе хăпартланса таврăнтăмăр. Эй Турă, Варнава владыкăна çăлăнăç, канлĕх пар! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Шупашкарти 2-мĕш гимназири пуçламăш классен учителĕ**
**Инесса Семушкина**

***

2000 çулсен пуçламăшĕнче эпĕ Введени соборĕнчи вырсарни шкулĕнче ĕçлеме пуçларăм. Вырсарни шкулĕнче ачасем питĕ нумайччĕ. Эпир юрлама вĕренеттĕмĕрччĕ, костюмсем ăсталаттăмăрччĕ, постановкăсем лартаттăмăрччĕ, Раштав тата Мăнкун фестивалĕсене питĕ тăрăшса хатĕрленеттĕмĕрччĕ. Варнава владыка уявсенче пирĕн пата час-часах пыратчĕ, ачасем лартакан концертсене куратчĕ, яланах пирĕншĕн чунтан савăнатчĕ, пурне те пиллетчĕ. Пĕр уявра владыка çапла каларĕ: «Эсир кунта, вырсарни шкулĕнче, Турра питĕ лайăх мухтатăр, эпĕ вара сире Туррăн çуртĕнче кĕтетĕп. Манăн сире унта час-часрах курас килет». Вырсарни шкулĕнче вĕрентессин пĕлтерĕшне эпĕ çавăн чухне тин ăнланса илтĕм. Апла пулсан, ачасемпе уяв концерчĕсем анчах хатĕрлемелле мар, чи кирли – вĕсене Турăпа çывăхлатмалла, чиркӳри службăсене

хутшăнма хăнăхтармалла. Вара эпĕ Варнава владыка хушăвне пурнăçлама тăрăшрăм.

Вырсарни шкулĕнче эпĕ халĕ те ĕçлетĕп, анчах çитĕннисемпе занятисем ирттеретĕп. Эпир псалтирь тишкеретпĕр, мĕншĕн тесен чиркӳре Турра кĕлтуни пĕтĕмпех унпа çыхăннă. Псалтирь Христос çинчен ăнлантарса вĕрентет. Псаломсем Евангелие тарăнрах ăнланма пулăшаççĕ.  Çакна пĕлни çынсене Христоспа çывăхланма пулăшать, вара вĕсем хăйсемех Турă çуртне час-часрах çӳреме тăрăшаççĕ.

**Турă Амăшĕн Тихвински**
**мăнастирĕн миссионерĕ тата катехизаторĕ**
**Надежда Михайлова**
**Çĕрпӳ хули**

# ХАМĂН ТУРРĂМА ЮРЛАТĂП…



***

1976 çулта эпĕ  Введени соборне архиерей хорĕнче юрлама килтĕм. Малтан манăн юрлас ăсталăха тĕрĕслерĕç, вара Варнава владыка пилленипе Лидия Алексеевна регент сăнаса пăхма вăхăтлăха илчĕ. Тепĕр икĕ уйăхран вара хора йышăнчĕç. Çапла 44 çул эпĕ хамăрăн хаклă та юратнă Варнава владыкăпа пĕрле Турра мухтарăм!

1991 çулта владыка пилленипе эпĕ çичĕ çуллăха çурçĕре ĕçлеме кайрăм. Унти пасар директорне венчет тăма икĕ турăш кирлĕ пулчĕ. Эпĕ владыкăран ыйтрăм та вăл мана укçасăрах питĕ хитре иконăсем пачĕ. Кĕçех эпĕ Шупашкара каялла таврăнтăм, владыкăна мана шаннăшăн чунтан тав турăм та, турăшсемшĕн укçа тӳлесе татăлтăм.

Степанов Михаил атте шăнкăравларĕ те, Варнава владыка пилленипе мана каллех архиерей хорне юрлама чĕнни çинчен пĕлтерчĕ.

Владыка мана хисеплетчĕ, эпĕ юрланипе кăмăллăччĕ, кашни юбилейрах асăнмалăх турăш парнелетчĕ. Çакăншăн эпĕ питĕ савăнаттăмччĕ, яланах ăна тав тăваттăмччĕ. Пирĕн хор каçхи кĕлĕ вăхăтĕнче ун патне çу сĕртерме пырсан вара эпĕ ăна час-часах: «Владыка, Сирĕн уяв тумĕ паян ытла та чаплă, хитре!»– тесе калаттăмччĕ. Вăл йăл кулса илетчĕ те пил паратчĕ.

Хаклă владыкăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче пулĕ! Хамăрăн юратнă, пуян ăс-хакăллă Варнава владыкăшăн кĕлтăвар, ăна асăнсах тăрар, пирĕншĕн кĕлтума ыйтар. Ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Валентина Донцова**

***

Шупашкарти «Классика» муниципаллă капелла Варнава владыка пилленипе Шупашкарпа Чăваш епархийĕ ирттерекен мероприятисене хутшăнма пуçларĕ. Профессиллĕ хор коллективĕшĕн ку пысăк чыс. Хор репертуарĕнче тĕнпе çыхăннă произведенисем яланах нумай пулнă. Çулталăкра икĕ хутчен, Раштав тата Мăнкун уявĕсенче, «Классика» капелла 13 çул ĕнтĕ Шупашкарти чиркӳсенче юрлать. Иисус Христоспа Чăн тĕне мухтаса хайланă чаплă произведенисене, гимнсене, чан сассипе илемлетекен концертсене çынсем куççульпе итлеççĕ. Пире Варнава владыка служба ирттернĕ хыççăн концертсем пама питĕ килĕшетчĕ. Вăл вара ăшшăн кулса «Классика» капелла юрланине итлетчĕ. Варнава владыка пире пултарулăхра

яланах хавхалантарса пынăшăн эпир Турра тав тăватпăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Шупашкарти «Классика» муниципаллă капелла директорĕ**
**Надежда Молошникова**

***

Турра тав тăватăп! «Классика» муниципаллă капеллăна чиркӳсенче юрласа çынсене илемлĕх, чун-чĕре пархатарĕ, таса кăмăл-туйăм парнелеме май туса панăшăн Шупашкарпа Чăваш епархине тав тăватăп. Варнава владыка пиллĕхĕпе Шупашкарпа Чăваш епархийĕн чиркĕвĕсенче пирĕн Турра мухтакан концертсем иртеççĕ. Владыкăна ĕмĕр асăнса пурăнмалла пултăр!

**Шупашкарти «Классика» муниципаллă капеллăн**
**илемлĕх ертӳçи тата тĕп дирижерĕ**
**Александра Васильева**

***

Çӳлти Аттемĕре тав тăватăп! Варнава владыка ĕçленĕ вăхăтра мана тата Шупашкарти 29-мĕш шкулти православи класĕнче вĕренекен ачасене виçĕ çул Введени соборĕн клиросĕ çинче юрлама тӳр килнĕшĕн Турра тав тăватăп. Вăл пире хавхалантарса тăратчĕ. Çӳлти Патшалăхра пултăр! Варнава владыкăна ĕмĕр асăнма пар!

**Галина Иванова**

Варнава владыка ĕçленĕ вăхăтра эпĕ Введени чиркĕвĕн вырсарни шкулĕнче юрлаттăмччĕ. Эпир çӳлти хорта юрлакан Валя асаннепе владыка патне пил илме пырсан вăл час-часах шӳтлетчĕ, асаннерен: «Валя, ку санăн хĕрачу-и?»– тесе кулса ыйтатчĕ. Вăл вара: «Çук, владыка, ку манăн мăнук»,– тесе хуравлатчĕ. Халĕ эпир асаннепе час-часах владыкăн вилтăпри çине каятпăр, кĕлтăватпăр, ăна пирĕншĕн кĕлтума ыйтатпăр.

**Дарья Донцова, 11 çулта**

Владыко наш любимый,
Так любим мы тебя!
И ты нам самый лучший
И с нами навсегда!
Тебя мы любим, ценим
Ты помнишь нас всегда.
Ещё когда ты рядом,
Нам не страшна беда!
Пронзился солнца лучик
Средь тучек серых сквозь,
Посмотрим мы на фото
И вспоминаем вновь:
Как ты за нас молился,
Пред Господом стоял,
Своею благодатью
От бед оберегал.
Храним Ты вечно Богом!
Живи спокойно в Рае,
Владыко, будь и с нами
И нас не забывая!
Тебя мы обожаем,
Тебя мы вспоминаем.
Спокойствия желаем,
За всё благодарим! И преклоняемся пред образом Твоим!
**Дарья Донцова, 11 лет**

# «ЭПĔ ЧĂВАШ ЕНЕ ЮРАТРĂМ» КУРАВА ХАКЛАНИ



*2021 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче, Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава çуралнăранпа 90 çул çитнĕ кун, Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче сăнӳкерчĕксен «Эпĕ Чăваш Ене юратрăм» куравĕ уçăлчĕ. Вăл июнĕн 1-мĕшĕччен, митрополит ку тĕнчерен куçса кайнă кунччен, ĕçлерĕ. Кунта пирĕн хаклă Варнава владыкăн çутă сăнарне аса илсе пуç тайма çынсем нумайăн килчĕç, вĕсем хушшинче священниксем те пулчĕç. Курава хак памалли кĕнекере хăйсен шухăшне пĕлтерсе Чăваш Енĕн тĕрлĕ районĕсенче пурăнакансем çеç мар, Мускавран, Питĕртен, Йошкар-Оларан, Италирен, Белоруссирен килнисем те çырса хăварчĕç. Вĕсен пĕр пайне эпир çак кĕнекене кĕртрĕмĕр.*

***

Çак тĕлĕнмелле вашават архипастырь яланлăхах пирĕн чĕресенче Христос тĕнĕпе пурăнаканăн, сăвапшăн тăрăшакан çыннăн ырă тĕслĕхĕ пулса юлĕ!

**Шупашкарпа Чăваш епархийĕнчи тĕн пĕлĕвĕпе катехизаци пайĕн ертӳçи Димитрий Нестеренко протоиерей**

***

Варнава митрополитăн пурнăçĕ куç умĕнче иртсе кайрĕ. Хамăрăн хаклă владыкăна ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла пултăр!

**Вăрнар районĕнчи Калинино салинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий Моряков протоиерей**

Христос Чĕрĕлнĕ! Ĕмĕр асăнма тивĕçлĕ Варнава митрополит çинчен нихăçан та манма юрамасть. Чăваш митрополине туса хурас ĕçре унăн тӳпи çав тери пысăк! Вăл пирĕн тăрăхри чăн тĕнпе пурăнакан кашни çыншăн хаклă пулнă. Пирĕншĕн кашниншĕн вăл Туррăн аслă вырăнĕ умĕнче кĕлтунă, Турă ун кĕллине илтнĕ. Вăл пирĕншĕн пуриншĕн те тĕслĕх пулнă. Кашнинех ашшĕ пек кĕтсе илсе тимлĕн итлетчĕ. Варнава владыкăн ĕçĕсене, унăн эткерлĕхне упраса хăвармалла. Вăл яланах пирĕн асра, пирĕн чĕресенче пултăр.

**Чантăр салинчи чиркӳ настоятелĕ**
**Павел Александров иерей**

***

Варнава владыкăпа Чăваш епархийĕ 44 çул хушшинче пин-пин çынна чиркĕве явăçтарчĕç, вĕсем тĕрĕслĕхпе пурăнччăр, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеччĕр, пĕр-пĕрне чунтан юратчăр, чăн-чăн Христос çынни пулса тăччăр тесе тăрăшрĕç. Чиркӳре ĕçлекенсем умĕнче çĕре çити пуçăмăрсене таятпăр. Тарăн шывсем пĕр тикĕссĕн юхаççĕ, ăслă çынсем – шăппăн пурăнаççĕ. Пирĕн Чăваш енри священниксем те Чиркӳшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Курав сăнӳкерчĕксемпе, таса турăшсемпе тыткăнлать. Кунта Варнава владыка хăй аллипе тунă митра, вăл юлашки Литурги тунă чухне тăхăннă тум пур. Варнава владыка Иорданра шыва кĕнĕ чухнехи сăнӳкерчĕк чуна хускатать! Владыкăн наградисем савăнтараççĕ! Унăн православи тĕнĕпе пурăнакан халăха ертсе пырас, Чиркĕве аталантарас енĕпе тунă ĕçĕсене патшалăх тата пирĕн республика пысăка хурса хакланă. Вăл пире Юрату парнеленĕ – çакă вăл Христос тĕнĕн тĕп никĕсĕ. Ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Полина Даренкова**

***

Варнава митрополита халалланă курава кăсăкланса, чунри юратупа пăхса тухрăмăр. Унăн келйинче тăнă турăшсене чуптурăмăр.

**Тав туса – Турă чурисем Елена, Ирина, Галина, Ирина, Турă Амăшĕн «Час илтекен» таса сăнĕ ячĕпе лартнă чиркĕве çӳрекенсем**

***

Владыка пурнăçĕнчи хăшпĕр самантсем питĕ тĕлĕнтерчĕç. Вăл яланах пирĕн асра. «Эй Турă, санăн ĕçӳсем тĕлĕнмелле!» Юратнă владыка пурнăçĕ çинчен кăсăкланмалла каласа панăшăн музей ĕçченĕсене тата экскурси ирттерекен Валерий Краснов протодиакона тав тăватпăр.

**Гурий святой архиерей ячĕпе хисепленекен тĕн центрĕнче вĕренекенсем**

***

Çак сăнӳкерчĕксемпе пур приходра та, пур епархире те паллашасса шанас килет, куçса çӳрекен курав йĕркелесен аван пулĕччĕ. Чунри ăшăлăхпа, йăл кулăпа, çутă туйăмпа пăхса çӳрерĕм. Владыка çинчен çĕнни нумай пĕлтĕм, унăн пурнăçне тата ытларах тĕпчес килет. Варнава владыка ирттерекен слуужбăсенче волонтер пулма тӳр килнĕшĕн эпĕ Турра тав тăватăп. Кĕлĕ вĕçленсен вăл çынсене: «Маншăн кĕлтăвăр, эпĕ вара сирĕншĕн кĕлтăватăп»,– тесе чунтан юратса калани нихăçан та асран тухмасть. Çав юратăва

туйнипе, унăн сăмахĕсем кăмăла çемçетнипе пит тăрăх куççуль юхатчĕ.

Ăна халалланӑ «Чăваш Енри сăваплă вырăнсем» фильма хатĕрлес ĕçе хутшăнма тӳр килнĕшĕн эпĕ Турра тав тăватăп. Пирĕншĕн кĕлтунине эпĕ туйсах тăраттăмччĕ, мĕншĕн тесен пур йывăрлăх та тĕлĕнмелле майпа хыçа юлатчĕ.

**Регина Чишкина**

***

Пирĕн хаклă Варнава митрополита пысăк тав! Çак таса пурнăçлă çынпа эпĕ Введени чиркĕвĕнче паллашрăм. Эпĕ ун чухне вăл Варнава митрополит пулнине пĕлмен те. Вăл пире хĕрĕмпе иксĕмĕре пиллерĕ те, чунра лăпкă пулса кайрĕ. Кайран вара вăл архиерей пулнине пĕлтĕм. Турă, Эсĕ Хăвăн ĕçӳсемпе тĕлĕнтеретĕн! Çак Çынран çутă, ăшăлăх, лăпкăлăх сарăлатчĕ! Ыйтакана вăл яланах пулăшнă, уншăн кĕлтунă. Май пулсан, татах та çакăн пек курав йĕркелĕр-ха, тархасшăн. Тавтапуç.

**Марина Николаева**

***

Хамăрăн Варнава владыкăна аса илме интереслĕ те кăмăллă пулчĕ. Сăнӳкерчĕксем вăл ĕçленĕ вăхăта тавăрчĕç. Литурги вĕçленсен чун-чĕре ăшă та лăпкă туйăмпа тулатчĕ. Пирĕн республикăри ĕненекенсемшĕн Варнава владыка çутатса тăракан, пирĕншĕн кĕлтăвакан чи паллă çын пулнă. Çакă унăн ĕçĕ-хĕлĕнчен курăнса тăратчĕ.

**Анна Петрова, 33 çулта**

***

Варнава митрополита халаллană курав văл Чăваш Енре ĕçлесе пурăннă вăхăта уççăн сăнарлать, ырă аса илӳсем çуратать. Кашни кунах, ӳнер музейне ĕçе кайнă чухне, эпĕ Варнава владыкăн вилтăпри çумĕпе иртетĕп, хамăн упăшка Сергий канлĕхре пултăр тесе кĕлтăватăп.

Преподобнăй Сергий Радонежский соборне тунă чухне Сергий чунĕн канлĕхĕшĕн тата пирĕн çемье сывлăхĕшĕн кĕлтуса кирпĕчсем хучĕç. Манăн мăшăр скульптор пулнă, полиартрита пула унăн аллисем ырататчĕç. Анчах ыратнине пăхмасăрах văл мрамортан Спиридон Тримифунтский святой архиерея пуççапмалли хĕрес касса кăларчĕ. Чулхулари айăпсăр вĕлернĕ священниксемпе ахаль çынсене асăнса хытă материалтан – змеевикран – тепĕр хĕрес касса кăларчĕ, халĕ văл Окапа Атăл пĕрлешнĕ вырăнта, Мочальнăй утравĕ çинче тăрать. Манăн упăшка мĕнпур ĕçе Варнава митропролит пиллĕхĕпе пурнăçланă.

**Ӳнер музейĕн ĕçченĕ**
**Людмила Кадикина**

***

Варнава митрополит ĕмĕр канлĕхре пултăр. Văл пирĕншĕн питĕ çывăх çын. Văл кĕлтунипе, văл пилленипе Курнавăш ялĕн çыннисем Анатолий протоиерейпе пĕрле виçĕ хутчен Иерусалима кайса килчĕç.

Эпир службăсенче Варнава митрополитпа пĕрле кĕлтăваттăмăрччĕ, văл ĕмĕрлĕхе пирĕн асра юлĕ!

**Елчĕк районĕнчи Курнавăш ялĕн çыннисем**

Варнава митрополита халалланӑ курава йӗркеленӗшӗн пурне те тав тӑватӑп! Варнава владыкӑна унӑн Пархатарлӑ Ӗҫӗсемшӗн тав тӑватӑп!

**Турӑ чури Ксения**

***

Эпӗ 18 ҫулта. Варнава митрополита халалласа йӗркеленӗ куравра пулса курнишӗн Ҫӳлти Турра тав тӑватӑп. Курав чуна савӑнӑҫпа ырлӑх туйӑмӗ кӳрет. Митрополит ҫемйи: ашшӗ, куккӑшӗ, аслашшӗ – ҫинчен пӗлни уйрӑмах тарӑн йӗр хӑварчӗ. Варнава митрополит Ҫӳлти Патшалӑхра пултӑр!

**Мария Романова**

***

Варнава митрополит ирттерекен службӑра эпӗ пӗрремӗш хут 2010 ҫулхи февральте, хӗрарӑмсен Ҫӗрпӳри Тихвински мӑнастирӗнче пултӑм. Ун чухне шӑпах Харалампий святоя асӑнмалли кунччӗ. Мана чиркӳри службӑсем илӗртме пуҫларӗҫ, унта лӑпкӑн тӑрса кӗлтусан, макӑрсан чун уҫӑлать.

Тепӗр 3-4 ҫултан эпӗ Варнава владыка вӗрентсе каланисене юратса итлеме тытӑнтӑм. Унӑн проповечӗсем яланах ансат та ӑнланмаллаччӗ. Кӗлӗ вӗҫленсен чунра ҫӑмӑл та лӑпкӑ пулса каятчӗ. Варнава митрополит пиллӗхне илме май килни вара мӗнле ырлӑх кӳретчӗ! Вӑл никама та уйӑрса тӑмастчӗ, пурне те пӗр пекех тимлӗх уйӑратчӗ. Ӗмӗр асӑнмалла пултӑр!

**Юлия Тарасова, 53 ҫулта**

# «ПĔР ЙĔРКЕПЕ»
# ЮРАТНĂ АРХИПАСТЫРЬ ÇИНЧЕН



***

Хаклă Варнава митрополита эпир пурте хĕрĕсем ашшĕне юратнă пек юратнине пĕлтеретпĕр, ăна тав сăмахĕ калатпăр!  Унăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче пулĕ!

**Хĕрарăмсен Шупашкарти**
**Спасо-Преображенски мăнастирĕн игуменйи**
**Сергия (Рузавина)**

***

Варнава владыка пирĕн мăнастирте служба ирттернине яланах асра тытатпăр. Пире атте пекех юратнăшăн, яланах пулăшса тăнăшăн чĕререн тав тăватпăр! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Хĕрарăмсен Çĕрпӳри**
**Тихвински мăнастирĕн игуменйи**
**Нина (Волкова)**

***

Варнава владыка яланах пĕтĕмпех курса тăнă, малашне мĕн пулассине пĕлнĕ!

**Сергия схимонахиня**

***

Çап-çутă, ырă чĕреллĕ, манăçми Варнава владыка! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Нина**

***

Варнава владыка мĕн ачаран тарăн ĕненӳпе пурăннă сăваплă çын!

**Турă чури Надежда**

***

Владыкăна службăсенче курсан, пире вăл Христос çыннисен авалхи Чиркĕвĕн священникĕ пек, ку тĕнчерен уйрăлса тăракан çын пек туйăнатчĕ!

**Алексий, Анна**

***

Варнава владыка маншăн тĕрĕс вĕрентсе пурăнакан, çăлăнăç патне илсе пыракан, Чăн тĕн çынни пулма çул кăтартакан священник пулнă. Манра пур ырă енсене пĕтĕмпех вăл, Турă çынни, панă!

**Нумай çылăхлă Нина**

***

Варнава владыка пирĕн чунсене çăлассишĕн тăрăшса, тĕрĕс вĕрентсе пурăнакан чăн-чăн архипастырь пулнă. Вăл пире, çылăхлăскерсене, Христос тĕнĕнчен нихăçан та ан пăрăнăр, чăрмавсене пăхмасăр чиркĕве час-часрах çӳрĕр тесе вĕрентетчĕ.

**Турă чури Любовь**

***

Хаклă Варнава владыка, эпир Сирĕншĕн кĕлтăватпăр, Эсир те пирĕншĕн кĕлтăвăр! Çӳлти Патшалăх пултăр!

**Турă чури Нина**

***

Варнава митрополита асра тытни вăл – Турра юратни тата Ăна ĕненни!

**Лидия Александровна**

***

Пирĕн Варнава владыка нихăçан та манăçмасть, эпир унăн пиллĕхĕпе пурăннă, халĕ те ун пиллĕхĕпе утса çӳретпĕр. Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Турă чури Зинаида**

***

Варнава владыка Турăшăн тата çынсемшĕн чĕререн парăнса ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе эпир те нумай çынна çăлакан тата çураçулăх паракан Турра пĕлме пуçларăмăр.

**Виталий, Татьяна**

***

Варнава владыка – пысăк саспаллинчен пуçланакан Çын! Вăл пурнишĕн те ашшĕ, вĕрентекен, пурнăçра çул кăтартакан пулнă. Çӳлти Патшалăхра пултăр, ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла пултăр!

**Турă чури Людмила**

***

Манăн пĕтĕм пурнăç Варнава владыкăпа çыхăннă! Вăл пилленипе, кĕлтунипе тĕлĕнмелле хăватсем пулчĕç, ачасемпе упăшка йывăр чирсенчен сывалчĕç. Вăл юнашар пулманнине чăтма çав тери йывăр! Ĕмĕр канлĕхре пултăр!

**Турă чури Лидия**

Пирĕн хаклă Варнава владыкăна ĕмĕр асăнса пурăнмалла пултăр! Христос Турă патĕнче халь пирĕншĕн кĕлтăвакан тата пирĕн хута кĕрекен пур! Çӳлти Патшалăхра пултăр!

**Андрей Алексеев**

***

Варнава владыкăна самана çыннипе танлаштарма пулать! Ырă чунлă священнике чиркĕве çӳрекенсем пурте юрататчĕç, ун çумĕнче яланах çутă та ăшăччĕ!

**Турă чури Татиана**

***

Пирĕн çемьешĕн Варнава владыка çывăх çынсене юратнин, ырă суннин, йăваш та тӳсĕмлĕ, çав вăхăтрах çирĕп пулнин тĕслĕхĕ пулнă. Вăл ирттерекен службăсенче чун лăпланатчĕ, ырăлăхпа тулатчĕ, ăшă туйăм çуралатчĕ. Эпир ăна ĕмĕр асăнса пурăнăпăр! Ĕмĕрлĕх канлĕхре пултăр!

**Турă чури Фотиния**

***

Владыка Чăваш Ене килсен пĕрремĕш кунах эпĕ ăна Канашра кĕтсе илтĕм, юлашки çула та ăсатрăм. Маншăн Варнава митрополитран хакли никам та çук! Вăл яланах манăн чĕрере пулĕ!

**Турă чури Галина**

# ВАРНАВА МИТРОПОЛИТĂН «ТУРĂПА ЯЛАНАХ ÇĂМĂЛ» КĔНЕКИНЧЕН



***

«…Мĕн ачаранах манăн манах пулас килетчĕ. Мана никам та кун пек сĕнӳ паман. Эпĕ манахсене курман та, вĕсем пурăнакан вырăнсем те çывăхра çукчĕ. Анчах та мăнастире каяс килет текен шухăш пулнă...»

***

«…Манран пурте пăрăнатчĕç. Эпир священниксен йăхĕнчен пулнă-çке-ха. Ун чухне вара «пупсене» тĕп тума тăрăшакан самана пулнă. Çавăнпа та манăн юлташсем те çукчĕ. Ачасем пурте манран ютшăнатчĕç. Эпир ерекен чирпе чирленĕ пек çынсем пирĕнтен пăрăнса çӳретчĕç. Ман çывăха пыма та юраман. Архиерей патĕнче ĕçлеме пуçличчен эпĕ хамăн тантăшсемпе хутшăнманпа пĕрех. Унта вара манăн туссем тупăнчĕç.

***

«…Эпĕ ача чухне Бахмачеевăри чиркĕве çуран çӳреттĕмччĕ. Сакăр километр утатăн, çул çинче пĕр пĕчĕк ялсăр пуçне урăх ял тавраш пулман. Пĕррехинче çул хĕррине икĕ кашкăр тухрĕç те, икĕ енĕпе хурал тăнă пек тăраççĕ. Мĕн тумалла? Ниçта чупмалли те çук, хăвалаcа çитсен туртса çураççĕ. Эпĕ нимĕн те пулман пек, вĕсене курман пек вĕсен çумĕпе иртсе кайрăм. Хăранипе çӳç вирелле тăнăран çĕлĕк те çĕкленчĕ, паллах. Нимех те мар, иртсе кайрăм. Тивмерĕç. Тĕл пулчĕç, сывлăх сунчĕç те малалла кайрĕç!..»

***

«…Манăн пурнăçри чи лайăх кун Аслă Кĕçнерникун пулчĕ. Эпĕ хам 18-19 çулта чухне Рязаньти Бориспа Глеб чиркĕвне кĕлтума час-часах çӳреттĕмччĕ. Пĕррехинче чиркӳ

алăкĕ умĕнче милиционерсем тăраççĕ. Мана ярса тытрĕç те милици уйрăмне, хулигансемпе ӳсĕрсем, çапăçакансем ларакан «упăтесен пӳлĕмне» (обезьяннике) илсе кайрĕç. Пуçларĕç мана хĕнеме. Халĕ санран катлет тăватпăр теççĕ, пĕвертен тапаççĕ. Эпĕ вара ыратнине те пачах та туймастăп, Çăлакана шăпах çак вăхăтра асаплантарни çинчен çеç шутлатăп. Чĕрере çĕр çинче пулман савăнăç! Сасартăк таçтан кăвак çӳçлĕ, шурă тум тăхăннă ватă килсе тухрĕ. Вĕсене: «Халех кăларса ярăр ăна!» – тесе каларĕ. Вара мана тӳрех ячĕç. Турă килсе пулăшать икккен, эпĕ çакна хам куртăм…»

***

«…Пурнăç нихăçан та çăмăл пулман. Анчах, кирек епле пулсан та, эпĕ нихăçан та аптраса тăман. Эпир начар пурăнатпăр тесе нихăçан та шутламан. Никам çине те кӳренмен. Ман çинчен япăх калаççĕ е кулаççĕ пулсан – эппин çапла пулмалла та. Мĕн кӳренмелли – эпĕ хам айăплă. Анчах та çакă пĕтĕмпех – паттăрлăх мар, кулленхи пурнăç…»

***

«…Манах пурнăçĕпе пурăнма эпĕ тĕпрен илсен хамах вĕреннĕ. Кĕнекесем пулăшатчĕç. Вĕсенче нумай ыйтăвăн хуравне тупма, мĕнле çулпа утсан тĕрĕс пулнине пĕлме пулать. Лаврăра библиотека алăкĕсем яланах уçă пулнă. Тата хăвна тĕрĕс вĕрентсе пыракана итлени питĕ кирлĕ. Вăл – эсĕ виçесĕр хисеплекен священникĕн тĕслĕхĕ. Вĕренӳ валли урăх нимĕн те кирлĕ мар. Манăн питĕ чаплă духовник пулнă. Çирĕп ыйтаканскер!..»

***

«…Эпир Семен ятлă юлташпа Рязаньти телейлĕ ватă Пелагея патне кайса çӳреттĕмĕрччĕ. Пĕррехинче пырса

çитрĕмĕр те, унăн килĕнче хăнасем пурччĕ. Матушка вĕсене: «Пачăшкăсем килчĕç, пил илме пымалла»,– терĕ. Ăна пулăшаканĕ: «Мĕнле пачăшкăсем? Яшсем вĕсем. Эсĕ суккăр, нимĕн те курмастăн»,– терĕ. Пелагея Семена эсĕ пачăшкă пулатăн, терĕ. Мана вара пачăшкă пулатăн, пачăшкăран çӳлерех пуçлăх пулатăн терĕ! Вара пурне те пирĕнтен пил илтерчĕ…»

***

«…Эпĕ ачасене юрататăп, вĕсемпе ачаш пулмалла. Лаврăри пулăм аса килет. Пĕрре çапла ытти манахсемпе пĕрле ирттерекен молебена каятăп. Пăхатăп, Вова тăрать, шкул çулне те çитменскер. Манран пил ыйтать. Эпĕ ăна пĕчĕкçĕ турăш патăм. Вăл ман ята ыйтрĕ. Варнава тетĕп. Вара вăл ача почеркĕпе пичет саспалисемпе «Варнава сывлăхĕшĕн» тесе записка çырчĕ. Çулсем иртрĕç. Çак ача ӳссе çитĕнчĕ, халĕ вăл митрополит ĕнтĕ…»

***

«…Турă пире ертсе пырать. Вăл пире тӳрлетес тесе хурлăх ярса парать, хурлăх хыççăн вара савăнăç пулать. Акă Аслă типĕ питĕ çирĕп, çынсем кĕлтăваççĕ, макăраççĕ. Мăнкун çитет те вара – мĕн тери савăнăç! Çавăнпа та чăтăр, кĕлтăвăр, пуриншĕн те Турра тав тăвăр. Турă пĕтĕмпех йĕркелет …»

***

«… «Эпĕ вĕрентсе пыракан çуккипе çылăха кĕретĕп»,- тесе калама çăмăл. Эс хăв çине яваплăх ил! Тӳрĕ пурнăçпа пурăнса, йăвашланса, Туррăн ӳкĕчĕсене пурнăçласа, чиркӳ уставне пăхăнса тĕслĕх кăтарт! Эсĕ çăлăнăç çулĕпе ут, вара сан таврари çынсем те çăлăнĕç…»

«…Туррăн Пиллĕхĕ тата? Вăл пултăр тесен, ăна илме кăмăл пулмалла. Енчен те ăна хăв патна çывхартмастăн пулсан, вăл сан пата хăй килмест. Малтан мĕнле пулнă? Кĕлтунă, типĕ тытнă, вара Пиллĕх килнĕ. Пурте тăрăшсан, старецсем те пулаççĕ, урăхла пурнăç та пулать!..»

***

«…Ĕненӳ çирĕп пултăр тесен, святойсем пурăннă сăваплă çĕрсене, кашни утăм тасалăхпа çыхăннă вырăнсене кайса çӳремелле. Таса çулçӳревсене кайсан эпĕ яланах хамшăн тата хамăн халăхшăн кĕлтăватăп...»

***

«…Таса Çĕрте тĕлĕнтермĕшсем нумай пулаççĕ. Манпа Иордан шывĕ хĕрринче пулса иртнине нихăçан та манмастăп. Эпир унта священниксен ушкăнĕпе кайрăмăр, пирĕнпе пĕрле паломниксем те таса шыва кĕрсе тухасшăнччĕ. Эпĕ шыв кĕлтуса тасатмалли молебен пуçларăм. Кĕлтăватăп, манпа пĕрле пынисем юрлаççĕ. Кайран Евангели вулама тытăнтăм. Сасартăк шывран пулăсем пуçĕсене кăларчĕç те,ункă пек вырнаçрĕç, итлеççĕ.  Вăрăмскерсем хăйсем, салтаксем пек тăраççĕ, пĕр çирĕмĕн пулĕ. Эпĕ вуласа пĕтертĕм те вĕсем шывра çухалчĕç. Евангели итлерĕç! Пурте тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç, кун пеккине никам та нихăçан та курман!..»

***

«…Чиркӳре тата Турăпа пĕрле яланах çăмăл! Турра юратăр, çывăх çынсене юратăр, Евангели вулама тăрăшăр, Турă вĕрентнĕ пек пурăнăр, никама та ан кӳрентерĕр, сире пурте юратчăр тесен эсир те пурне те юратăр. Вара сирĕн пĕтĕмпех лайăх пулать, Турă сирĕнпе пулать, пулăшать, хӳтĕлет, çăлать…»

«…Пĕтĕмпех Турăран килет! Акă эпĕ Лаврăра хушнине туса пурăнтăм. Статьясем те, проповедьсем те, нимĕн те çырман, вулама вара – вуланă, паллах. Мана архиерее кĕртнĕ чухне эпĕ хам ылмашăннине туйса илтĕм. Ман çине калама çук ырăлăх анчĕ! Нимĕнле тĕн пĕлĕвĕ илмесĕрех проповедьсем, çырусем çырма пуçларăм. Таса Сывлăш мана мĕн тумаллине тата мĕн каламаллине вĕрентсе тăратчĕ…»

***

«…Мĕнпур тĕнче ырлăхпа тулнă. Вăл хăй пулмалли çĕре килсе вырнаçать. Анчах усал-тĕсел пур вырăна ырлăх анмасть.  Çавăнпа та чăн тĕн вĕрентнĕ пек таса пурăнмалла, ыттине вара Турă парать. Эпĕ яланах калатăп: «Турăпа яланах çăмăл...»

***

«…Мĕн пулассине пĕлни вăл — йăваш кăмăл тата Турра шанни. Турă ирĕкĕсĕр çынна сыватма пулать-и вара? Ун пек çыннăн пурнăçĕ те хăйне евĕр пулмалла. Турра кĕлтуса пурăнакан ăсчах ватăсем хăйсене нихăçан та  ăсчах темеççĕ. Эпир çак тивĕçе хамăр йышăнмастпăр, ăна пирĕн тавра пурăнакан çынсем те памаççĕ. Çынна Турă суйласа илет те, ун урлă вара чăнлăх уçăлать…»

***

«…Священникĕн хăйĕн çыннисене Турă патне ертсе пымалла. Унăн çыннисем çăлăнаймасан вăл хурлăх тӳсет. Е, пачах тепĕр майлă, çыннисем çăлăнаççĕ, вăл вара çăлăнаймасть. Унăн хăйĕн пысăк тивĕçне, ятне тӳрре кăлармалла. Ырă кĕтӳçĕ пулмалла.  Хăйĕн кĕтĕвĕшн чунне памалла. Сурăхĕсем те вара ун çумĕнчех пулĕç. Çакăн пек священникĕн вĕрентсе калани те çăмăл пулать…»

«…Священник пулма пилленӗ чухне эпӗ чи малтан ҫакна калатӑп: «Хӗрес тытрӑр пулсан, Турӑран тӗрек ыйтса кӗлтӑвӑр. Эпӗ сире алӑ хунӑ чухне сирӗн шӑпана ӗмӗрлӗхе татса паратӑп». Священник, сан илчӗ пулсан, унӑн Турра тата ҫынсене парӑнмалла…»

***

«…Русе Шыва кӗртнӗренпе 1000 ҫул ҫитнине паллӑ тунӑранпа чиркӗве хӗсӗрлеме пӑрахрӗҫ. Мӑнастирсене чӗртсе тӑратма, чиркӳсне юсама, ҫӗнӗрен хӑпартма ҫул уҫӑлчӗ. Пире Турӑ пулӑшса пычӗ, нумай ӗҫ тума пултартӑмӑр...»

***

«…Шупашкар тата Чӑваш епархийӗн историйӗнчи пӗрремӗш чиркӗве эпир Ҫӗнӗ Шупашкарта туса лартрӑмӑр. Иккӗмӗш Алексий Патриарх чиркӗве кӗлтуса тасатма килсен ӑна собор статусне пачӗ…»

***

«…Манахсен пурнӑҫне ҫӗнӗрен йӗркелесе ярассине арҫынсен Шупашкарти Свято-Троицки мӑнастирӗнчен пуҫларӑмӑр. Патриарх пиллӗхӗпе вӑл аслӑ мӑнастир пулса тӑчӗ…»

***

«…Манаха чи кирли – кӗлӗ. Ман ҫине усалсем тапӑннӑ самантсем те пулнӑ. Манах пурнӑҫӗнче илӗртсе астарни кашни утӑмрах. Тӑрӑшса кӗлтумалла! Кӗлтуни ҫӗнтеретех...»

«…Пирĕн, православи тĕнĕпе пурăнакансен, пĕр çемье пек пулмалла, Турă хыççăн пĕрле утмалла.  Пĕр тĕнпе пурăнатпăр пулсан, мĕнле наци çынни пулнине пăхмалла мар.  Туррăн тивлечĕ наци уйрăмлăхĕпе мар, ĕненĕве кура килет!..»

***

«…Эпир Христоса чунтан парăнмасан пирĕн парнесем ниме те тăманнине асра тытмалла. Çакă Ăна чăн-чăнах, Вăл чĕрĕлсе тăрассине ĕненмеллине, Унăн Православи Таса Чиркĕвĕ тытса пыракан вĕрентĕвне пăхăнмаллине пĕлтерет…»

***

«…Эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех Турă хыççăн утатăп! Хĕрес çинчен анмаççĕ, ун çинчен антараççĕ...»

***

«…Эпĕ архиерей пулнăранпа 40 çул иртрĕ. Унтанпа эпĕ преподобнăй Сергий Радонежкие асăнмалли кунсене, июлĕн 18-мĕшне те, октябрĕн 8-мĕшне те, пĕртте сиктермен, яланах Лаврăра служба ирттеретĕп.

**Сергий Радонежский — мана çак пурнăçра çул кăтартакан çăлтăр, эпĕ унăн кĕллин тивлечĕ Чăваш Ен халăхĕшĕн  хӳтлĕх пултăр тесе кĕлтăватăп. Ун ячĕпе лартакан Собор ĕненекенсемшĕн кĕлтуса лăпланмалли вырăн пулĕ. Сирĕншĕн пуриншĕн те кĕлтăватăп! Пирĕн Çăлакан Иисус Христосăн ырлăхĕ яланах сирĕнпе пĕрле пултăр...»**


Видите братіе
и чудитеся,
каково подава
етъ Богъ возда
яніе терпѣнію,
не забудетъ бо
убогихъ своихъ
до конца, и не
имать николиже

# ВИÇĔ СВЯТОЙ АРХИЕРЕЙ ĔÇНЕ МАЛАЛЛА ТĂСАКАНĔ



*Варнава митрополит Гурий Казанский святитель палăкне кĕлтуса тасатать (2015 ç.)*

Шупашкар – Атăлçи тăрăхĕнчи пĕр харăс виçĕ святитель пилленипе никĕсленĕ пĕртен-пĕр хула. Пулас святойсем Гурий, Герман тата Варсонофий 1555 çулта Мускавран Хусана кайма тухнă. Патшан çав çулхи майăн 26-мĕшĕнчи хушăвĕнче çĕнĕрен туса хунă Хусан епархийĕн пĕрремĕш архиерейне Гурий архиепископа Хусана кайнă чухне Шупашкарта чарăнма хушнă, «Турă ирĕкĕпе унта



*«Виçĕ святитель». Анна Боровкова художник (2019 ç.)*

хула пулмалла», çар пуçĕсемпе канашласа, крепость тата собор чиркĕвĕ хăпартмалли вырăнсене палăртмалла тенĕ.

Гурий святитель хăйĕн çулташĕсемпе Германпа тата Варсонофийпе пĕрле Шупашкарăн пулас крепоçĕ вырăнне 1555 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче килсе çитнĕ. Туррăн Таса Амăшне чиркĕве илсе кĕнĕ ятпа лартнă хальхи собор

вырăнĕнче вăл малтанлăха пир карса чиркӳ тутарнă. Кайран вăл Чăваш çĕрĕнче тата хăйĕн епархийĕнче пĕрремĕш хут Литурги тунă, Шупашкар хулин çыннисене Турă Амăшĕн Владимирская сăнĕпе пилленĕ. Ун çине çапла çырнă пулнă: «Ку таса турăша çак Шупашкар хулине 7063



*«Гурий святитель çынсене Турă Амăшĕн Владимирская таса сăнĕпе пиллет». Анна Боровкова художник ( 2019 ç.)*

(1555) çулхи çулла илсе килнĕ. Ăна илсе килекенĕ тата унпа çак хулана тата унта пурăнакансене пиллекенĕ – чи малтанхи архиерей, Хусан тата Свияжск архиепископĕ преосвященнăй Гурий».

Вăл палăртнă вырăнта Туррăн Таса Амăшне чиркĕве илсе кĕнĕ ячĕпе пĕр престоллă йывăç чиркӳ туса лартнă. Турă Амăшĕн Гурий святитель пиллесе панă «Владимирская» ятлă сăнĕ вара чиркĕвĕн чи сăваплă турăшĕ пулса тăнă. Чăн тĕнпе пурăнакансем хаклакан çак таса япала паянхи кун та Введенски аслă чиркӳре чи хисеплĕ вырăнта тăрать. Çак паллă пулăм хыççăн 460 çул иртсен, Гурий святитель ку тĕнчерен куçса кайнă кун, 2015 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче, Шупашкарта хулана никĕслеме кĕлтуса пиллекене халалланă палăк уçрĕç.

Пулас святитель çамрăклах, кĕвĕçекенсен усал элекне пула тĕрмере ларнă вăхăтра, ачасене пĕлӳ парассишĕн тăрăшса кĕнекесем çырнă, каярахпа Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларакан пулса тăнă. Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава пилленипе Чăваш Енре халĕ кулленех регионсем хушшинче Гурий святитель ячĕпе пĕлӳлĕх вулавĕсем иртеççĕ.

Пĕррехинче конференцин йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче вулавсен палли пирки сăмах пуçарчĕç. Йыхрав хучĕсем тата программăсем çине Гурий святитель сăнне вырнаçтарма сĕнекен пулчĕ. Святоя халалланă уйрăм тематика секцийĕсене пĕр йĕркепе ирттерессине йăлана кĕртме, тата Шупашкар хулине никĕслекен виçĕ святой ячĕпе гимн çырма палăртрĕç.

Çакăн хыççăн ман пурнăçра кĕçех тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ. Чи малтанах ку Турă ирĕкĕпе пулчĕ, паллах, анчах та кунта пирĕн архиерей кĕлтунин тӳпи те пысăк. Эпĕ владыка патне пулас вулавсенче памалли дипломсем çине алă пустарма кайрăм, ăна хамăрăн тĕллевсем çинчен каласа патăм. Вĕçĕнче вара пирĕн вулавсен чи пĕлтерĕшлĕ палли

гимн пулма пултарать тесе хушса хутăм. Владыка мана итлесе пĕтерчĕ те, пĕр вăхăт чĕнмесĕр ларчĕ, шухăшĕсемпе вăл таçта аякра пек туйăнчĕ, вара çирĕппĕн: «Пиллетĕп, çырăр»,– терĕ.

Кабинетран тухсан тин эпĕ владыка гимн çырма шăпах мана пил панине ăнланса илтĕм. Çакна ăнлансан, малтанах питĕ хăраса кайрăм. Мĕн тумалла ĕнтĕ халь ман? Ку йывăр çĕклеме пула кăмăл пусăрăнасран, ĕçе çитрĕм те интернетра тӳрех Гурий святитель акафистне тупса пичетлесе кăлартăм, çак ансат мар ыйтăва татса паричченех Турра тата Гурий святоя кĕлтума хама хам сăмах патăм.

Икĕ кун пĕр чарăнми тенĕ пекех акафист вуларăм. Виççĕмĕш кунне, шăматкун, эпир тăван патне Канаша кайрăмăр. Çул çинче те эпĕ Гурий святитель акафистне вуласа пытăм. Хулана çывхарса пынăçемĕн акафист сăмахĕсенчен Шупашкар хули çинчен, виçĕ святой архиерей çинчен сăвă йĕркисем хăйсене хăйсемех шăрçаланма пуçланине асăрхарăм. Вĕсем çак кĕнеке тытăмне пăхăнмасăр, хăй тĕллĕн çуралнăн туйăнчĕ. Малалла вара сисĕнмесĕрех предложенисем майлашăнма тытăнчĕç, эпĕ вара вĕсене тăватшар йĕркене вырнаçтарма пултартăм. Çакна каламалла: эпĕ нихăçан та сăвă çырман, çырма та пĕлместĕп. Çавăнпа та, çĕнĕрен çуралнă йĕркесене астуса юлас тесе эпĕ юрлама пуçларăм, мĕншĕн тесен çав самантра çумра манăн кăранташ та пулман. Канаша çитсе хваттере вирхĕнсе кĕрсен тӳрех: «Ручка, часрах ручка парăр!»– тесе кăшкăрса янипе эпĕ пурне те аптратса ӳкертĕм. Вĕсем манпа мĕн пулса иртнине ăнкарса иличчен эпĕ акафистăн хыçалти хуплашки çине пулас гимнăн икĕ куплетне çырса та хутăм. Мухтав Турра! Халĕ ĕнтĕ владыкăна икĕ куплет кăтартма пултаратăп вĕт-ха!

Каялла кайнă чухне те эпĕ, хавхаланса кайнăскер, савăнсах акафист вуласа пытăм. Хам вара çумра каллех ручка та, кăранташ та çуккишĕн пăшăрхантăм. Çулĕ вăрăм,

малтан çырнă текста тӳрлетме, хушса çырма пулатчĕ вĕтха... Вара çĕнĕрен çуралнă тепĕр икĕ куплета манăн каллех çул тăршшĕпех юрласа пыма тиврĕ.

Тепĕр эрнере эпĕ священниксемпе тус-юлташсенчен гимн тектсне тĕрĕслесе пама ыйтма тытăнтăм. Сăвва, тĕпрен илсен, пурте ырларĕç, анчах темиçе йĕркине тӳрлетме сĕнчĕç, вара пурте пĕрле тăрăшса ĕçе вĕçне çитертĕмĕр. Варнава владыкăна çак хайлава кăтартма хăюлăх çитмерĕ, çавăнпа та Игнатий епископран пулăшу ыйтрăм. Митрополит патĕнчен тухсан вăл: «Владыка пиллерĕ, пĕтĕмпех лайăх»,– терĕ. Вара эпĕ: «Эсир ăна текста миçе хут вуласа патăр, пĕрре-и?»– тесе ыйтрăм. Вăл: «Виçĕ хутчен вуларăм, пĕтĕмпех йĕркеллĕ, владыкăна гимн питĕ килĕшрĕ, пиллерĕ»,– тесе хуравларĕ. Вара эпĕ тинех лăплантăм, Туррăн аслă ырăлăхĕпе, владыка кĕлтунипе, Гурий святой архиерей пулăшнипе çак çăмăл мар ĕçе тума пултарнине ăнлантăм.

Кĕркунне эпир çемьепе Хусана, Арск çăви çине, Гурий святой архиерейăн çĕрмен ӳчĕ умĕнче пуçа тайса кĕлтума, пулăшушăн тав тума кайрăмăр. Святойăн тупăкĕ умĕнче эпĕ кĕлетке тăрăх ăшă хум чупса кайнине, савăнăç туйса илтĕм! Чунра тулли телей, лăпкăлăх хуçаланчĕ. Шупашкара каялла килнĕ чухне кашни светофор çинчех пире валли симĕс çутă çунчĕ, çакă ахальтен пулмарĕ тесе шутлатăп.

Пирĕн çемьери ырă пулăмсемшĕн эпĕ Турра тав тăватăп! Варнава владыка яланах: «Пире Турă ертсе пырать! Пĕтĕмпех Турăран килет!»– тесе калатчĕ. Мĕнле тĕрĕс çак сăмахсем! 1980 çулта эпĕ качча тухрăм. Упăшка Мускавра ординатура вĕçлесе пыратчĕ, эпĕ, декрет отпускĕ илнĕскер, ун патне кайрăм. Пĕррехинче упăшкана калатăп: «Мускавра питĕ хитре чиркӳсем пур, анчах вĕсенчен нумайăшĕ хупă тăраççĕ, кĕме те май çук». Вăл мана унăн Чăваш республикинчи Куславкка районĕнче пурăнакан Маня кукамăшĕ Загорскра таса пурăнăçлă Сергий Радронежский

ячӗпе никӗсленӗ Лавра пурри ҫинчен каланине пӗлтерчӗ, хулара чиркӳсем нумай, вӗсем пурте уҫӑ, унта кӗртеҫҫӗ терӗ, кайса килме сӗнчӗ. Эпӗ, паллах, хаваспах килӗшрӗм. 1980 ҫулхи октябрь пуҫламӑшӗнче эпир Загорскри Троице-Сергиева Лаврӑна кайрӑмӑр. Ҫапла Турӑ ҫул кӑтартнипе пирӗн ҫемьен пӗрлехи ҫулҫӳревӗ преподобнӑй Сергий Радонежский патне пулчӗ, мӗншӗн тесен ноябрь уйӑхӗнче пирӗн ывӑл ҫуралчӗ. Таса, тӗлӗнмелле Лавра! Пирӗн чӗресем тӳрех савӑнӑҫпа, лӑпкӑлӑхпа тулчӗҫ. Унти манахсем мана мӑнаҫлӑн та сӑваплӑн курӑнчӗҫ! Ҫакӑн хыҫҫӑн эпир Лаврӑна темиҫе хутчен те кайрӑмӑр, ытти мӑнастирсене те ҫитсе куртӑмӑр. Пирӗн Туррӑмӑрӑн Ырӑлӑхӗ вӗҫӗ-хӗррисӗр, иксӗлми!

Турӑ Чӑваш Ен халӑхне юратнӑран пирӗн республикӑра 43 ҫул Варнава митрополит пулчӗ, вӑл халӗ те пирӗнпе пӗрлех! Владыка хӑй Троице-Сергиева Лаврӑра ӗҫлесе пурӑннине аса илсе каласа кӑтартнӑ чух вӑл ҫутӑ сапаланӑн, унран ырӑлӑх сарӑлнӑн туйӑнатчӗ, ҫакӑ курӑнатчӗ, уҫҫӑн сисӗнетчӗ!

2021 ҫулхи апрелӗн 20-мӗшӗнче каҫхине эпӗ тепӗр кун, пирӗн хаклӑ Варнава владыка ҫуралнӑ кун, «Асӑну кӗнеки» пухма тытӑнмаллине чунпа туйса илтӗм.

Ҫак кӗнеке валли материал пуҫтарнӑ чухне эпӗ чиркӳсемпе ытти хуласене нумай кайса ҫӳрерӗм, Троице-Сергиева Лаврӑра, Серафимо-Дивеевски мӑнастирте, Белоруссире пултӑм... Кӗнеке валли пухса суйласа илнӗ текстсене ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен пичетлесе, ҫине-ҫине тӗрӗслесе, вӗсене пӑхмасӑр тенӗ пекех пӗлетӗп. Халӗ те, кӗнекене кирек хӑш страницӑра уҫсан те, савӑнса, тав туса вулама пултаратӑп.  Мӗншӗн тесен эсир уҫҫӑн каласа панисем, сирӗн асаилӳсем урлӑ чӗрӗ Варнава владыкӑпа калаҫнӑн туйӑнать.

Турра тата хамӑрӑн владыкӑна тав туса каланӑ сӑмахсене эпир таса чӗререн ҫыртӑмӑр. Вӑл Ҫӳлти

Патшалӑхра та пирӗн хута кӗни, унӑн вилтӑпри умӗнче кӗлтунипе чирлӗ ҫынсем сывални ҫинчен тепӗр тапхӑр пуҫтарса кӗнекен малалли пайне ҫырмалла пулӗ тесе шутлатӑп.

Тӑрӑшса кӗлтӑвакан, пирӗншӗн, ҫылӑхлӑскерсемшӗн, Ҫӳлти Аттене тархаслакан хаклӑ Варнава митрополитшӑн Турра тав тӑватпӑр, уншӑн Турра кӗлтӑватпӑр! Пире Турӑ Варнава владыкӑпа пӗр вӑхӑтра пурӑнса унӑн халӑхӗ пулма пысӑк телей панӑ!

**Зоя Токарева**



# ГИМН ТРЕМ СВЯТИТЕЛЯМ ГОРОДА ЧЕБОКСАРЫ

Чебоксары, Чебоксары
Город светлый и родной!
Просветитель града - Гурий
Наш Всехвальный и Святой!
Чебоксары, Чебоксарка,
Волга – русская душа
Трех святителей встречали
Величали на века!
Трех святителей встречали,
Величали на века.

Гурий, Герман, Варсонофий,
Заложили храм святой,
Здесь молились, чтобы город
Встал над Волгою рекой!
Гурий, Герман, Варсонофий,
Правды братья во Христе,
Се святые чудотворцы
Свет Христов зажгли во тьме!
Се святые чудотворцы
Свет Христов зажгли во тьме.

От востока Солнца Правды
Благодатью обновленья
Свет любви, Христа знаменье -
Храм Пречистыя Введенья!
Меру правды, веру жизни,
Дал Собор спасенье ближним:
Инородцам, иноземцам,
Просвещенным иноверцам.
Инородцам, иноземцам,
Просвещенным иноверцам.

Чебоксары, Чебоксары,
Что над Волгою рекой,
Город дивный, город древний,
Город, сердцу дорогой!
Город славный, православный,
Город, сердцу дорогой!
Город славный, православный,
Город, сердцу дорогой!





Автор слов Зоя Токарева

# ШУПАШКАР ТАТА ЧӐВАШ ЕПАРХИЙӖН ИСТОРИЙӖНЧЕН




Шупашкар тата Чӑваш епархийӗ 1555 ҫулта Хусанти пӗрремӗш архиепископ Гурий святой Турӑ ҫинчен вӗрентнинчен пуҫланнӑ. Унӑн апостолсенни евӗр ӗҫӗсем Атӑлҫи тӑрӑхӗнчи халӑхсене – тутарсене, чӑвашсене, мордвасене, ҫармӑссемпе удмуртсене – Христос тӗнӗн ӗненӗвӗпе ҫутӑлтарнӑ. XIX ӗмӗр варринче вак халӑхсене ҫутта кӑлараканӗ Николай Ильминский суя тӗнпе пурӑнакансене чӑн Турӑ енне ҫавӑрас юхӑма пуҫарса янӑ. Чи малтанах Евангелие тата Турра кӗлтумалли кӗнекесене тӑван чӗлхесене куҫарнӑ, халӑх шкулӗсем уҫса вырӑнти ҫынсенчен унта вӗрентекенсене хатӗрленӗ. Чӑвашсенчен Н.И.Ильминский тӗллевӗсене паллӑ ӑсчах, вӗрентекен тата ҫутта кӑларакан И.Я.Яковлев пурнӑҫа кӗртнӗ.

Хусан архиерейне пулӑшма 1854 ҫулта Шупашкар викариатстви туса хунӑ, Таса Синод январӗн 29-мӗшӗнче

(февралĕн 11-мĕшĕнче) Ярославльти тĕн семинарийĕн ректорĕ пулнă Никодим (Казанцев) архимандрита Хусан епархийĕн викарийĕ пулма суйланă, Император Патша вара январĕн 30-мĕшĕнче (февралĕн 12-мĕшĕнче) çак йышăнăва çирĕплетнĕ.

Шупашкар викарийĕсен йышĕнче Вырăс Православи Чиркĕвĕн тата Раççей патшалăхĕн пурнăçĕнче палăрмалла йĕр хăварнă преосвященнăй архиерейсем нумай пулнă. Малтанхи çулсенче Пекинра халăха чăн Турă енне çавăрас енĕпе нумай тăрăшнă Гурий (Карпов) пуçарăвĕпе 1867 çулта Хусанта Гурий святитель ячĕпе Тăванлăх туса хунă. 1897 çултан пуçласа 1899 çулччен Шупашкарти викари кафедрине Антоний (Храповицкий) епископ ертсе пынă, вăл çавăн пекех Хусанти тĕн академийĕн ректорĕ те пулнă.  Октябрьти пысăк улшăнусем хыççăн, 1921 çулта, вăл Вырăс Православи Чиркĕвĕн чикĕ леш енчи  иерархине пуçарса янă.

1920 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Хусан тата Чĕмпĕр кĕпĕрнисене кĕрекен çĕрсенчен Чăваш автономи облаçне туса хунă.  Çав вăхăтра чиркӳ çыннисен йышĕнче «Чĕрĕ Чиркӳ» юхăма кĕрекен модернистла ушкăнсем йĕркеленме пуçланă, вĕсем Чиркӳ тытăмне тĕпрен улăштарса çĕнĕрен çирĕплетме чĕнсе каланă. Чиркӳри хирĕçӳпе кĕрешме  Тихон Патриарх Улатăр епископне, Чĕмпĕр епархийĕн викарине преосвященнăй Герман (Кокеле) çирĕплетнĕ.  Çĕнетӳ кĕртес текенсем ОГПУ пулăшнипе Герман епископа Чăваш Енрен кăларса янă, 1937 çулта ăна персе вĕлернĕ.  2001 çулта Герман (Кокель) святой архиерей ятне Раççейри Христосшăн асапланса вилнĕ çĕнĕ святойсен йышне кĕртнĕ.

1925  çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче  Чăваш Автономи облаçĕнчен Чăваш Автономи Республики туса хунă. 1920 çулта суйласа лартнă Шупашкар епископне Афанасий (Малинина) Шупашкар кафедрине ĕçлеме кĕртмен, çавна пула унăн Хусанта пурăнма тивнĕ.    Ун хыççăн килнĕ Аркадий (Ершов) епископа 1931 çулта арестлесе виçĕ çуллăх

ссылкăна янă. Архиерейсен 2000 çулта иртнĕ юбилей соборĕнче Аркадий святой архиерей ятне Раççейри Христосшăн асапланса вилнĕ çĕнĕ святойсен йышне кĕртнĕ.

XX ĕмĕрти 30-40-мĕш çулсем Чăваш çĕрĕнче нумай чиркĕве хупнипе палăрнă. Вырăс Православи Чиркĕвĕ тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçин пĕрремĕш кунĕсенчех тăван çĕршыва парăннине çирĕппĕн кăтартса панă, хăйĕн халăхне тăван çĕре кар тăрса хӳтĕлеме чĕнсе каланă. 1944 çулăн малтанхиултă уйăхĕнче кăна Шупашкарти Введени соборĕнче ĕçлекенсемпе чиркĕве çӳрекенсем Дмитрий Донской ячĕллĕ танк колонни туса хума 100 пин тенкĕ ытла пуçтарса панă.

Вырăс Православи Чиркĕвне тытса тăрассин 1945 çулхи положенийĕпе килĕшӳллĕн, Шупашкар тата Чăваш епархийĕ хăй тĕллĕн ĕçлеме пуçланă. Пĕрремĕш Алексий (Симанский) Патриархăн 1946 çулхи январĕн 3-мĕшĕнчи хушăвĕпе Шупашкарпа Чăваш епархине ертсе пыма Иларий епископа (ахаль пурнăçра – Петр Григорьевич Ильина) шаннă. Ун хыççăн малтан Иов (Кресович) епископ, каярахпа – Мануил (Лемешевский) архиепископ ĕçленĕ. Вĕсен Чиркĕве çĕнĕрен вăйлă тапăннă вăхăта чăтса ирттерме тивнĕ.

1960 çултан пуçласа 1972 çулччен Шупашкар епархине Николай (Феодосьев) архиепископ ертсе пынă, 1972-1973 çулсенче вăхăтлăха кафедра пуçлăхĕ Куйбышев епископĕ Иоанн (Снычев), 1973 çултан пуçласа 1976 çулччен вара Вениамин (Новицкий) архиепископ пулнă.

1976 çулта Турă ирĕкĕпе чиркĕвĕн яваплă ĕçне туса пыма – Шупашкарпа Чăваш кафедрин архиерейĕ пулма – Варнава архимандрита (ахаль пурнăçра Владимир Викторович Кедрова) лартнă. Шупашкар тата Чăваш епископне ăна 1976 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче, Троице-Сергиева Лаврăн Трапезнăй чиркĕвĕнче кĕртнĕ. Хиротоние Пимен (Извеков) Патриарх ертсе пынă.

Шупашкар тата Чăваш епархине 43 çул Высокопреосвященнейший Варнава митрополит ертсе пынă. Кунта ĕçлеме тытăннă чух вăл епископ пулнă, 1984 çулта ăна архиепископ санне панă, Чиркĕве аталантарассишĕн пĕр ывăнми тăрăшнăшăн 2001 çулта митрополит туса хунă.

Варнава владыка Чăваш Ене килнĕ тĕле кунта пурĕ 35 приход анчах пулнă, вăл кафедрăра тăрăшнă вăхăтра икçĕр приход ытла çĕнĕрен уçăлнă, 7 мăнастир (вĕççĕшĕ арçынсен, тăваттăшĕ – хĕрарăмсен) ишĕлчĕкрен çĕкленнĕ, Шупашкарти тĕн училищи вĕрентӳ ĕçне çĕнĕрен йĕркелесе янă. Шупашкарпа Чăваш епархийĕ хăвăрт аталанса пынине чаплă чиркӳсемпе мăнастирсем кăтартса параççĕ, çакă 2005 çулта авалхи Улатăр хулинче викари кафедри туса хума хистенĕ. Вырăс Православи Чиркĕвĕн Таса Синочĕ йышăннипе Шупашкар епархийĕн викарийĕ, Улатăр епископĕ пулма Шупашкарти арçынсен Свято-Троицки мăнастирĕн наместникне Савватий (Антонова) суйланă. Ăна 2005 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче Мускаври Çăлакан Христос чиркĕвĕнче архиерее кĕртнĕ. Епархинче викарий 2009 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕччен тăрăшрĕ, ун хыççăн Таса Синод ăна Улан-Удэ тата Буряти епископне лартрĕ.

Таса Синодăн 2012 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе епархи тытăмĕнчен Улатăр тата Канаш епархийĕсене уйăрса кăларнă, Шупашкар епархийĕпе пĕрле вĕсем Чăваш митрополийĕн тытăмне кĕчĕç. Митрополие Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава ертсе пыма пуçларĕ.

2015 çулхи августăн 1-мĕшĕнче Чăваш митрополине Мускав тата Пĕтĕм Русь Патриархĕ Кирилл килчĕ, таса пурăнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе Шупашкарта тума пуçланă собор никĕсне хунă кирпĕче кĕлтуса тасатрĕ.

2020 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава Турă патне куçрĕ. Тăлăха юлнă кафедра шăпине 2020 çулхи августăн 25-мĕшĕнче татса

пачĕç. Вырăс Православи Чиркĕвĕн Таса Синочĕ Шупашкар тата Чăваш митрополийĕн пуçлăхĕ пулма, малтанхи ĕçĕнчен хăтарса тата архипастырь ĕçне тивĕçлипе пурнăçласа пынăшăн тав туса, Улан-Удэ тата Буряти митрополитне Савватие суйларĕ.

**Сергий Пушков протоиерей**



*Шупашкарти Введени соборӗ*

# ВАРНАВА ВЛАДЫКА ХАЛАЛĔ

Турă çулĕпе çирĕппĕн утмалла! Нимĕнрен те хăрамалла мар, вĕрентмелле!
Христос чĕрере пултăр, Ăна чунра усрамалла.
Пирĕн ăша ырăлăх кĕрсе вырнаçсан вара пире вĕрентме те çăмăл пулать.
Вĕрентсе каланă сăмах та пушă пулмасть.
Çыннăн чунĕнче Турă пулмасан пĕлӳлĕх те нимĕн те памасть.
Вăл никама та нихăçан та ĕненӳ патне илсе пыраймасть, ыттисене нимĕн те памсть.
Çавăнпа та кашниййĕнех Святой Сывлăш ертсе пынипе пурăнма хăнăхмалла.
Çакă уйрăмах священнике кирлĕ.
Ун пек чухне вĕрентсе калани те кĕске, вăйсăр пулма пултарать, анчах Христос çыннин пурнăçĕ хăй пĕтĕмпех çĕнтерсе пырать.
Халăх вара çакăн пек çын хыççăн каять.
Манăн хаклăскерсем, Турă умĕнче уйрăм явап тытăпăр.
Турă патне хамăрăн ĕçсемпе кайăпăр.
Çакăнтан хăтăлаймăпăр эпир.
Пĕтĕмпех, хамăр кĕлеткене те, çĕр çинче хăваратпăр.
Чун вара ăçта каять?
Кунтах хамăра валли Турă çумĕнче вырăн хатĕрлемелле.
Турă пире Хăй патне илтĕр. Пирĕн Çӳлти Патшалăхри пурнăçа юрăхлă пулмалла.
Çухатсан вара…
Эпир ĕмĕрĕпе Турра ĕненсе пурăнтăмăр тесе шутлатпăр, анчах та хамăра валли Çӳлти Патшалăх тупаймастпăр…
Чăн пурнăçпа, Христос тĕнĕпе пурăнмалла, ыттисене те вĕрентмелле.
Никамран та хăрамалла мар, çылăх тăвасран хăрамалла!
Вара Турă пире яланах йышăнать, пире пулăшать.



*Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава*

# Библиография:


1.«Архимандрит Гурий Казанский – просветитель Среднего Поволжья» / отв. ред. П.Н. Матюшин – Чебоксары, 2017 г.–176 с. Издательство Чувашского университета, 2017 г.

2.Альманах «Троица» Чебоксарского Свято-Троицкого мужского монастыря. Выпуск XI. Октябрь 2018 г.

3.«Высокопреосвященнейший Варнава митрополит Чебоксарский и Чувашский». Русская Православная Церковь. Чебоксарско - Чувашская епархия. Чебоксары. 2006 г.

4.Межрегиональные образовательные чтения «Юный богослов». Чебоксары. 2009 г. ИП Белянин Е.В.

5.«Митрополит Земли Чувашской». Русская Православная Церковь. Чебоксарско-Чувашская епархия. Чебоксары. 2011 г.

6.Митрополит Варнава (Кедров). «С Богом всегда легко». Чебоксары: ЗАО «ЦСП «Типография Брындиных». 2016 г.

7.Митрополит Варнава (Кедров). «С Богом всегда легко». Чебоксары. 2020 г. ИП Брындина Н.А., Типография Брындиных.

8.Православный журнал №1 (01) 2013 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

9.Православный журнал №2 (02) 2013 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

10.Православный журнал №4 (10) 2015 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

11.Православный журнал №2 (12) 2016 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

12.Православный журнал №14 (14) 2016 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

13.Православный журнал №4 (18) 2017 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

14.Православный журнал №1 (23) 2019 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

15.Православный журнал №4 (26) 2019 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

16.Православный журнал №1 (27) 2020 г. «БОГ и ЧЕЛОВЕК. Вестник Чувашской митрополии».

17.Сайт Чувашской митрополии. 2006 - 2021 гг.

# ТЫТĂМĔ


Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Савватий: «Маншăн вăл чи хисеплĕ çын, чи ырă тĕслĕх пулнă……………….............. 5
Зинаида Паршагина: «Акă эпĕ тата манăн ачасем»……….........................................................................10
Калуга тата Боровск митрополичĕ Климент: «Пирĕн çемьен вĕрентекенĕ».....…………………………………............ 27
Пирĕн ырă çыннăмăр………………………………............… 34
Николай Федоров: «Чиркӳ патне хывнă çул»……………..........68
Ун пилĕпе ĕненӳ çулĕ çине тăтăмăр……................................72
Владыка кĕлтунипе…………………………………............. 104
Дмитрий Авдеев: «Христоспа пĕрле пул!»…………………...115
Малтанах пĕлсе тăни.....……………………………………….126
Çынна сыхласа усракан ангел………………………….........136
Турра тав тăватăп……………………………………….........151
Çулçӳревçĕсене пиллени................……………………………158
«Ачасене юратмалла…»……………………………….........164
Хамăн Туррăма юрлатăп....…………………………................172
«Эпĕ Чăваш Ене юратрăм» курава хаклани.........................176
«Пĕр йĕркепе» юратнă архипастырь çинчен ......………........183
Варнава митрополитăн «Турăпа яланах çăмăл» кĕнекинчен………………………………………….........................188
Зоя Токарева: «Виçĕ святой архиерей ĕçне малалла тăсаканĕ»…………………………………………………........... 197
Виçĕ святой архиерее мухтаса çырнă юрă...……….......... ..205
Сергий Пушков протоиерей. Шупашкар тата Чăваш епархийĕн историйĕнчен…………………………......................206
Варнава владыка халалĕ………...........................................212
Библиографи ………………………………………...............214
Тытăмĕ................................................………………………215

Вырӑс Православи Чиркӗвӗн Чӑваш Митрополийӗ
Мускав Патриархачӗ

# Чӑваш Ен мана юратрӗ

Пухса хатӗрлекенӗ З. Н. Токарева

Литература редакторӗ З. В. Паршагина

Чӑвашла куҫараканӗ Р. Т. Деменцова

Художникӗ А. Б. Боровкова

Чиркӳ консультанчӗ Гурий (Данилов) архимандрит

Шупашкар епархийӗн тата Петр Николаевӑн архивӗсенчи
сӑнӳкерчӗксемпе усӑ курнӑ

Адрес: 428018, Чӑваш  Республики,  Шупашкар хули,
К. Иванов урамӗ,  21-мӗш ҫурт

Отпечатано ИП Белянин Е.В., ИНН 212902294040.
г.Чебоксары, ул.Мате Залка, 12/2.
Печать оперативная, бумага офсетная,
Формат 60х84/16. Тираж 250 экз.
Подписано в печать 06.07.2022.